~~8744~~
63-17



1963 1

# ТӐВАН АТӐЛ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатс
«11» марта 1963 г.
№ 28

# ПАТТĂРСЕН ЧАПĔ ĔМĔРНЕ ТЕ СЎНМĔ




1943 çулхи февралĕн 3-мĕшĕ ĕмĕрлĕхех историе кĕрсе юлчĕ: шăп çав кунхине ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче Совет Çарĕн чаплăран та чаплă çĕнтерĕвĕ çинчен — вăл Атăл хĕрринче нимĕç фашисчĕсен эшкерĕсене тĕппипех аркатса тăкни çинчен пĕлчĕ.

1942 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче Дон шывĕ çывăхĕнче калама та çук вăйлă çапăçусем тапраннă. Çакă вăл историре унччен нихçан пулман хăватлă çапăçу пуçламăшĕ пулнă. Вăл çапăçăва икĕ миллион çын ытла хутшăннă, унта 26 пин ытла тупăпа миномет, 2 пин танк, 2300 самолет пулнă.

200 талăк пынă çак çапăçу. Темле йывăр пулнă пулин те, паттăр совет воинĕсем Атăл çыранĕсем хĕрринче çирĕп тăнă. «Атăл леш енче пире валли вырăн çук», тенĕ вĕсем. 1943 çулхи январĕн 10-мĕшĕнче, контрнаступлени туса пырса, çирĕп унка çавăрса илнĕ тăшман çарĕсене пуçĕпех пĕтерсе пыма тытăннă. Çирĕм талăк пынă çапăçу хыççăн вара тăшмана парăнтарнă. Совет воинĕсем 91 пин çын тыткăна илнĕ, вăл шутра 2500 офицерпа 24 генерал пулнă. Çапăçу хирĕнче 147 пин тăшман салтакĕпе офицерĕ выртса юлнă.

Çав историллĕ çĕнтерÿ хыççăн 20 çул иртрĕ. Пин-пин бомбăсемпе, снарядсемпе аркатнă Волгоград хули кĕл ăшĕнчен ÿссе тăчĕ, халь вăл малтанхинчен те чаплăрах, илемлĕрех.

Ўкерчĕк çинче эсир çав историлле çапăçăва, Атăл хĕрринчи паттăр хулашăн çапăçса пуçĕсене хунă воинсене асăнса лартнă палăк-монумента куратăр.

8744

# ТĂВАН АТĂЛ

Чăваш
писателĕсен Союзĕ
икĕ уйăхра
пĕрре кăларакан
альманах

1 январь — февраль 1963

Чăваш АССР
кĕнеке издательстви
Шупашкар

# ТУПМАЛЛИ

Стр.

А. И. **Иванов.** Тăван республикă çичĕ çуллăхăн пиллĕкмĕш çулĕнче . . . . 3
**Георгий Ефимов.** Виçĕ сăвă . . . . . . . . . . 7
**Юрий Петров.** Лăпкă шуçăмсем кăна çуталĕç. Сăвă . . . . 8
**Василий Алендей.** Йĕнерчĕк. Калав . . . . . . . . 9
**Геннадий Айхи.** Хăш чух... Сăвă . . . . . . . . 20
**Çĕр номер** . . . . . . . . . . . . . 21
**Александра Лазарева.** Кĕске калавсем . . . . . . . 25
**Мария Волкова.** Çамрăк ткачихăна. Сăвă . . . . . . . 30
**Макар Хури сăввисенчен**
Çĕнĕ юр . . . . . . . . 31
Çил-тăман ачи . . . . . . . —
Ĕмĕт . . . . . . . . —
Пăчăр . . . . . . . . —
**Хветĕр Уяр.** Мемме. Калав . . . . . . . . . . 32
**Куçма Турхан.** Çĕр суранĕ. Роман. (Малалли) . . . . . . 37

ПАЯНХИ ОЧЕРКСЕМ

**Геннадий Сидоров.** Бирлик-Пĕрлĕх . . . . . . . . 64
**Валентина Петрова.** Хитре тĕрĕсен ăсти . . . . . . . 74

ÇĔНĔ СĂВĂСЕМ

**Николай Евстафьев.** Хут купăс . . . . . . . . 78
**Аркадий Лукин.** Куршанак . . . . . . . . . 79

ИСКУССТВĂ

**Фаина Сарри.** К. С. Станиславский . . . . . . . . 81

ПИРĔН КАЛЕНДАРЬ

**А. С. Серафимович.** Икĕ вилĕм. Калав . . . . . . . 86
**Михаил Юрьев.** Çеçпĕл тантăшĕ . . . . . . . . . 89

САТИРĂПА ЮМОР

**Николай Никитин.** Митрахван мучи патшаран тухни. Калав . . . . 94

## РОДНАЯ ВОЛГА

*Литературно-художественный и общественно-политический двухмесячник Союза писателей Чувашии*

1 (100) книга

*На чувашском языке*

**Редактор Л. Я. АГАКОВ.**

**Редколлегия: А. Е. Алга, М. Я. Сироткин, И. С. Максимов-Кошкинский, И. Н. Вашки (отв. секретарь), И. Н. Никифоров, К. С. Турхан, С. А. Шавлы.**

*Художественное оформление Элли Юрьева.*

НТ 00760. Сдано в набор 14-I-1963 г. Подписано к печати 19-II-1963 г.
Бумага 84×108 1/16. Объем 9,84 п. л., 11,37 уч.-изд. лис. Заказ № 198.
Тираж 8000 экз. Цена 30 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
г. Чебоксары ул. Володарского, д. 5.

**А. И. ИВАНОВ,**
КПСС Чăваш обкомĕн секретарĕ

# Тăван республика çичĕ çуллăхăн пиллĕкмĕш çулĕнче

ÇЕНĔ ÇУЛ! Çичĕ çуллăхăн пиллĕкмĕш çулĕ пуçланчĕ.

Совет халăхĕ иртнĕ çула ырă кăмăлпа асăнать. Иртнĕ 1962 çулта совет çыннисем партин XXII съезчĕн хавхалантаракан идейисемпе пурăнчĕç. Коммунизм строительстви хуласемпе ялсенчи миллионшар ĕçченсен тăван ĕçĕ пулса тăчĕ. Çак çул коммунизм строительствин мĕн пур участокĕсенче те паттăрла ĕçсем тунă çул пулчĕ. Ленин туса хунă парти рабочисене, хресченсене, интеллигенцие пĕр çĕнтерӳ хыççăн тепĕр çĕнтерӳ патне илсе пырать. Экономикăна, наукăпа культурăна аталантарас, халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе çĕнĕ çĕнтерӳсем тунă. Тăван çĕршывăн промышленноçĕ пĕр 1962 çул хушшинче кăна вăрçăченхи пилĕк çуллăх вăхăтĕнче пĕтĕмпе туса кăларнинчен те нумайрах продукци туса кăларчĕ. Колхозсемпе совхозсенче ĕçлекенсем те пĕтĕм халăха савăнтарчĕç. Ял хуçалăх ĕçченĕсем тăхăр миллиард пăта яхăн тĕш тырă пухса кĕртрĕç, государствăна пӳлмисене, ытти çулсемпе танлаштарсан, темиçе çĕр миллион пăт ытларах тырă хывса хăварнă. Совет правительстви ăслă политикă тытса пынипе тата вăй хунипе США-ри вăрçăшăн тăракан ушкăнсем Кариб тинĕсĕн районĕнче авантюристла ĕçсем тунипе хăрушлăха кĕрсе ӳкнĕ мире сыхласа хăварнă.

Çавăнпа та совет халăхĕ Çĕнĕ çула савăнăçлă кĕтсе илчĕ. Тăван çĕршыв тăрăх хаваслă юрăсем янăраççĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Чăваш çĕршывĕнчи ĕç çыннисем те çĕнĕ çула хавасланса кĕтсе илчĕç.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ тата пирĕн çĕршыври ытти халăхсем тăванла пулăшнипе Чăваш республикинчи ĕç çыннисем хуçалăхпа культурă строительствин пур отраслĕсенче те пысăк çитĕнӳсем турĕç. «Хăш-пĕр çынсем, уйрăмах чикĕ леш енчисем,— терĕ Никита Сергеевич Хрущев юлташ Андриян Николаев космонавтпа телефон тăрăх калаçнă чух,— Автономиллĕ Чăваш республики пуррине начар пĕлеççĕ. Совет Союзĕнче чăвашсем пуррине халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлет. Чăваш халăхĕ совет халăхĕсен аслă социализмлă çемйинче хисеплĕ вырăн йышăнать, коммунизм тăвас, техникăна аталантарас, тĕнче уçлăхне тĕпчесе вĕренес ĕçе пысăк вăй хурать».

Çавăн пек хак панă Н. С. Хрущев Автономиллĕ Советлă Социализмлă Чăваш республикинчи хуласемпе ялсенчи ĕçченсене.

Октябрьти Аслă революциччен Чăваш çĕршывĕ мĕнлерех пулнă-ха? Сухапуç, хăйчикки тата чăпта çĕршывĕ пулнă вăл. Чăваш çĕршывĕнче çирĕме яхăн пĕчĕк предприяти кăна шутланнă. Пĕлтĕр республикăра 234 предприяти ĕçлерĕ. Хальхи промышленноç 1913-мĕш çулхинчен 113 хут нумайрах продукци туса кăларчĕ. Иртнĕ çулта республикăра промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсем малалла аталанчĕç, çав шутра электротехникă, машиностроени, хими, пир-авăр, чăлхапа трикотаж промышленноç предприятийĕсене чылай пысăклатнă. Чăваш республикинчи промышленноç çулталăк планне срокчен тултарса 17 миллион тенкĕлĕх планран ирттерсе продукци кăларчĕ.

Ял хуçалăх ĕçченĕсем те аван ĕçлерĕç. Вĕсем хисепе тивĕçлĕ пулчĕç. Тыр-пула вăхăтра пуçтарса кĕртрĕç. Колхозсемпе совхозсен тупăшĕ ӳсрĕ, колхозсенче ĕç кунĕсем тăрăх çителĕклĕ таран тĕш тырă, укçа валеçсе пачĕç.

Совет çыннисем 1963 çула хăйсен творчествăллă вăй-халĕ ӳссе çирĕпленнĕ вăхăтра кĕтсе илчĕç. Коммунизм идеалĕсемпе хавхаланса, Тăван çĕршыв шанчăклăн малалла утать. Ĕç çыннисем умĕнче паллă тĕллев, аслă задачăсем тăраççĕ. Çак задачă — çичĕ çуллăхри пиллĕкмĕш çулăн планне тултарасси.

Кăçал Чăваш АССРĕн промышленноçра, ял хуçалăхĕнче, транспортра, культурă ĕçĕнче пысăк программă пурнăçламалла.

Промышленноç енĕпе 1963 çул заданийĕсем çичĕ çуллăх планра кăтартнинчен чылай пысăкрах. Промышленноç продукцийĕн калăпăшĕ пĕлтĕрхинчен 9,2 процент ытларах пулать.

Республикăри предприятисенче питĕ кăткăс электротехникă приборĕсемпе автоматикă хатĕрĕсем, электродвигательсем, тракторпа автомобиль пайĕсем, паха сĕтел-пукан, кĕпе çăвакан машинсем, пианинăсем, тумтир тата ытти нумай тĕрлĕ продукци туса кăларасси ӳссех пырать. Кăçал промышленноç предприятийĕсем кĕпе çăвакан машинсем 200 пин, 1 350 пианинă, 1 млн. 710 пин мăшăр атă-пушмак, 111 млн. метр пиравăр кăлармалла. Чăлхапа трикотаж фабрики 17 миллион мăшăр чăлхапа носки парать. Халăх валли 2 миллион тенкĕлĕх сĕтел-пукан туса кăлармалла. Кăçал Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь кашни кун 4-шар кимĕ туса кăлармалла.

Государствă капитальнăй строительствă валли уйăрса паракан укçапа лайăхрах усă курма тăрăшмалла. Государствă планĕнче уйрăм çирĕплетекен чи кирлĕ стройкăсен шутне пирĕн республикăри 4 стройкăна кĕртнĕ. Республикăра халĕ строительство çав тери анлăн пулса пырать. Шупашкарах илсе пăхар-ха. Кăçал трактор пайĕсем тăвакан тата электроаппаратнăй заводра, пир-авăр комбинатĕнче çĕнĕ цехсем. фабрикăсем, корпуссем ӳссе лармалла. Вара трактор пайĕсем тăвакан заводăн чукун шăратмалли цехĕнче çулталăкра 50 пин тоннă чукун шăратма тытăнĕç, пир-авăр комбинатĕнче çĕнĕрен 125 пин йĕке ĕçе кĕрĕ. Канашра, Улатăрта, Çĕмĕрлере çĕнĕ заводсемпе цехсем ĕçе кĕмелле. Комсомольскинчи консервă комбиначĕ кашни сменăра 10-шар пин банкă консервă кăлармалла. Когуярти торф брикечĕ кăларакан, Шупашкарти хĕрлĕ эрех завочĕсем ĕçлеме тытăнассĕ.

Пурăнмалли çуртсем тăвассине малалла аталантарма тата хуласемпе поселоксен тирпейилемне лайăхлатма палăртнă. Ĕç сыннисем 183 пин тăваткал метр лаптăкăш çĕнĕ хваттерсем илеççĕ, Шупашкарта, Канашра рабочисемпе служащисем пурăнакан 2 000 хваттере газ кĕртеççĕ, унсăр пуçне Канашра газ валеçекен станци ĕçе кĕрет. Шупашкарта 330 вырăнлă çĕнĕ гостиницă туса пĕтереççĕ, Кайбулкă шывĕ урлă çĕнĕ пысăк кĕпер пулать. Вăл хулана илем кӳрсе тăрĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекенсен шучĕ 1963 çулта 230 пине çитет. Кăçал вара 6 000 вĕренекен вырнаçмалăх çĕнĕ шкулсем тăваççĕ. Ача сачĕсемпе яслисем, чир-чĕртен сыватакан, сывлăха çирĕплетекен учрежденисен хисепне малалла ӳстерме палăртнă. Ильинкăри кану çуртне çулталăк тăршшипех ĕçлеттерме май пулать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн ноябрьти Пленумĕ коммунизм строительствин пысăк задачисене кура парти органĕсене çĕнĕлле йĕркелемелли мерăсем йышăнчĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Чăваш республикинче Шупашкар, Канаш, Улатăр хула комитечĕсемпе пĕрле Çĕмĕрле хула комитечĕ тата Сĕнтĕрвăррипе Йĕпреç промышленноç производствă парткомĕ туса хунă. Чăваш экономикă районĕ халĕ Атăл — Вятка экономикă районне кĕрет, унăн центрĕ — Горький хули. Экономикă районĕсене пысăклатни — тĕрĕс те кирлĕ мерă. Çак мерăна республикăри ĕç сыннисем ырлаççĕ. Республикăра нумайăшĕсем 1929—36 çулсенче Чăваш АССРĕ Горький крайне кĕнĕ вăхăта астăваççĕ-ха. Çав çулсенче чăваш халăхĕн хуçалăхĕпе культури хăвăрт аталанчĕ, çĕнĕ пысăк заводсемпе фабрикăсем тунă. Вăйлă аталаннă промышленноç, йышлă рабочи клас тата Горькипе ытти хуласенчи парторганизацисем Чăваш республикине социализмла улăштарса çĕнетме калама çук пысăк пулăшу панă.

Халĕ вара Атăл — Вятка экономикă районĕнче тата вăйлăрах аталаннă нумай тĕрлĕ промышленноç пур, вăл специализаципе кооперацин паха енĕсемпе лайăхрах усă курма май парать. Горький хулин аталаннă промышленноçĕ пире çĕнĕ техникăпа, кадрсемпе, малта пыракан опытпа ытларах пулăшĕ.

Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем умĕнче те çĕнĕ çулта пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ.

Колхозсемпе совхозсенче кăçал акмалли çĕр лаптăкĕн структурине малалла лайăхлатса пымалла, пысăк тухăçлă тĕш тырăсем, уйрăмах пăрса йышши культурăсем, нумайрах акмалла. Пирĕн республикăра пăрçа акакан çĕр лаптăкне 140—150 пин гектара çитерме май пур. Пĕлтĕр республикăра пурĕ 34 миллион пăт тĕш тырă туса илнĕ. Кăçал вара кашни гектартан 12 центнертан кая мар пухса кĕртсе 40 миллион пăт таран тĕш тырă туса илмелле. Çапла тума пирĕн пур майсем те пур. Çĕрпе лайăхрах усă курмалла, тыр-пул тухăçлăхне ӳстермелле. Кукурузă, сахăр кăшманĕ, нимĕç пăрçи тата çĕр улми акса-лартса тăвасси çине те тимлĕн пăхмалла.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç ял сыннисен, партипе совет органĕсен ĕçĕнче ялан тĕп вырăнта тăмалла. Пĕлтĕр чылай совхозсемпе колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата вĕсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре пур майсемпе те усă курмарĕç. Ашкакай хатĕрлемелли государствă планне 1962 çулта пирĕн республикă тултараймарĕ.

Аш-какай нумайрах туса илессишĕн кĕрешесси — республикăри мĕн пур ĕçченсен чыслă тивĕçĕ пулса тăрать. Кăçал кашни колхозăн е совхозăн сухалакан 2—3 гектар пуçне пĕр сысна самăртмалла, выльăх-чĕрлĕхе хăвăрт самăртмалли меслетсемпе усă курмалла.

Ĕнесене пăхса усрас ĕçе нумай лайăхлатмалла, сĕт туса илессине ӳстермелле. Выльăхсене лайăх пăхса хĕл каçармалла. Выльăх пăхакансен паха опычĕпе пур колхозсемпе совхозсенче те усă курмалла, фермăсене механизацилемелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри «маяксем» пирĕн республикăра та сахал мар. 1962 çулта Етĕрне производствă управленийĕнчи «Ленинец» ял хуçалăх артелĕн ĕçченĕсем пысăк çĕнтерӳ турĕç. Вĕсем парти аш-какай туса илес тĕлĕшпе палăртса хунă пĕрремĕш рубежа республикăра чи малтан çĕнсе илчĕç, сухалакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 75 центнер, ытти çĕрсен 100 гектарĕ пуçне 16 центнер аш-какай туса илес задачăна ăнăçлă татса пачĕç.

«Козловский» совхозри малта пыракан О. И. Белова сысна пăхакан иртнĕ çулта 1 005 сысна, Патăръел производствă управленийĕнчи Курнавăш ял Советĕнчи «Россия» колхозри А. К. Генералова 750 сысна самăртнă.

Маларах асăннă тата ытти нумай тĕслĕхсем Чăваш АССРĕнчи колхозсемпе совхозсенче аш-какай, уйрăмах сысна ашĕ туса илессине тата государствăна сутассине хăвăрт ӳстерме пысăк майсем пуррине кăтартса параççĕ. Малта пыракансен опытне тата ял хуçалăх наукин çитĕнĕвĕсене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырса, 1963 çулта кашни колхоз, совхоз, управлени тата пĕтĕм республикă выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене туса илмелли плана ăнăçлă тултарма тивĕçлĕ.

Коммунизм строительствин чи кирлĕ тĕп задачисене пурнăçлас, коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне тăвас ĕçпе çыхăннă ыйтусене татса парас тесе парти органĕсене производствă принципĕпе çĕнĕлле йĕркеленĕ. КПСС обкомĕн ял хуçалăх производствине ертсе пыракан бюровĕ колхозсемпе совхозсен 9 производствă управленине ертсе пырать. Çĕнĕлле йĕркеленĕ парти, совет тата ял хуçалăх органĕсем ял хуçалăхне тĕплĕнрех тата лайăхрах ертсе пыма производствă ыйтăвĕсене тĕп вырăна хурса ĕçлеме пултарĕç.

Чăваш республикинче культурă, литературă тата искусствă ăнăçлă аталанаççĕ. Аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсен шучĕ нумайлансах пырать. Пĕлтĕр Шупашкарта Мускаври энергетикă институчĕн Атăл тăрăхĕнчи филиалĕн кăнтăрла вĕренмелли уйрăмĕ ĕçле пуçларĕ. Халĕ унта 1 700 студент ытла вĕренет. Шупашкарта çĕнĕрен планпа экономикă техникумĕ уçăлчĕ. Ĕлĕк эпир чăваш опери çинчен ĕмĕтленме çеç пултарнă. Халĕ ĕнтĕ музыкăпа драмă театрĕнче ĕç çыннисем чăвашла, вырăсла музыкăллă спектакльсем кураççĕ. Иртнĕ çул пуçламăшĕнче чăваш артисчĕсем «Чапай» оперăна Мускаври Кремль театрĕн сцени çинче ăнăçлă кăтартрĕç.

Чăваш республикин экономикине аталантарас, халăх пурнăçне лайăхлатас ĕçре тунă çитĕнӳсенче социализм стройĕ нумай малта тăни, пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕн вăйĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе унăн Никита Сергеевич Хрущев ертсе пыракан Центральнăй Комитечĕн ленинла политики яр-уççăн курăнать.

Космосра тăванланнă паттăрсем — Юрий Гагарин, Герман Титов, Андриян Николаев, Павел Попович тĕрлĕ наци çыннисен çĕнĕ, историллĕ пĕрлĕхне палăртса тăраççĕ. Вĕсем пурте — совет халăхĕн ывăлĕсем. Совет космонавчĕсем хушшинче вырăссем те, чăваш та, украинец та пур. Çав тăватă паттăр ячĕсем пирĕн çĕршывра пурăнакан социализмлă нацисем ӳссе чечекленнине, вĕсен тăванла çирĕп туслăхне витĕмлĕн кăтартаççĕ.

Космос паттăрĕсем тĕнче уçлăхĕнче вĕçсе çӳрени мĕн пур совет çыннисене савăнтарать. Пирĕн халăхăн чаплă кăмăл-туйăмне Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай хăйĕн сăввинче лайăх палăртрĕ:

Капла ман чунăм çĕкленменччĕ:
Колумб пек вырăс хыçĕнчен
Хастар чăваш ачи çĕкленчĕ,—
Вĕçет тĕнче уçлăхĕнче!

Мирпе прогрес интересĕсемшĕн, пĕтĕм этемлĕх телейĕшĕн пирĕн çĕршыври халăхсем космоса пĕрле штурмлаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн РСФСР енĕпе ĕçлекен бюровĕ пĕлтĕрхи сентябрь уйăхĕнче КПСС Чăваш обкомĕн ĕçĕсем çинчен постановлени йышăнчĕ. Çак постановлени КПСС Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви пирĕн республикăн экономикипе культурине малалла вăйлатса ӳстерессишĕн тăрăшнине тата тепĕр хут кăтартса парать. Вăл Чăваш республикинчи коммунистсемпе мĕн пур ĕç çыннисене тата ытларах тăрăшса, çине тăрса, ĕçлеме хавхалантарать.

Совет çыннисен хăйсем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларас йăла çук. Пирĕн мĕн пур работниксем çитменлĕхсемпе пĕр килĕшмесĕр кĕрешнĕ пулсан, хуçалăха тытса пырас ĕçри социализмла системăн лайăх енĕсемпе тата çак системăн питех те нумай резервĕсемпе туллин усă курнă пулсан, республикă çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç.

Промышленноçах илер. Унăн çитĕнĕвĕсем пуриншĕн те паллă. Анчах та малта пыракан предприятисемпе юнашарах юлса пыраканнисем те çук мар-ха. Малта пыракан предприятисенче те юлса пыракан цехсем пур. Чылай предприятисем, пĕтĕмĕшле продукци туса кăлармалли плана тултарнă пулин те, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана тултарайман. Мухтава

тухнă новаторсен опытне мĕн пур рабочисем вĕренсе çитсен, продукци туса кăларасси тата мĕн чухлĕ ӳснĕ пулĕччĕ-ши!

Чăваш АССРĕнчи çĕр ĕçченĕсем пархатарлă, чаплă çитĕнӳ турĕç. Пирĕн республикă Тăван çĕршыва 5 миллион та 200 пин пăт тырă хатĕрлесе пачĕ. Савăнăçлă çĕнтерӳ! Анчах ялта тата пысăкрах резервсем çук-и-ха? Эпир пур майсемпе те усă курнă-и-ха? Паллах, çук. 1962 çул Чăваш АССРĕнче тĕш-тырă, аш-какай, сĕт тата ытти продуктсем туса илессине тата ытларах ӳстерме май пуррине ĕнентерӳллĕ кăтартса пачĕ.

КПСС Программи çĕнĕ çынна воспитани парса ӳстерес задачăна коммунизм строительствин тĕп задачисемпе — коммунизмăн пурлăхпа техникă никĕсне тăвас тата çынсем хушшинчи коммунизмла хутшăнусене йĕркелес задачăсемпе пĕр рете лартрĕ.

Коммунизмла воспитани парасси вăл — чăнчăн ăнланулла, дисциплинăллă, кивĕ пурнăç юлашкисенчен хăтăлнă, çĕнĕ обществăн пур енĕпе те аталаннă, хăйĕнче ăс-тăн пуянлăхне, мораль пахалăхне тата ӳт-пӳ илемне килĕшӳллĕн пĕтĕçтерсе тăракан çынна йĕркелесе çитересси.

Халĕ коммунизмла обществă çыннине воспитани парасси паянхи кун задачи пулса тăрать. Пирĕн парти çĕнĕ çыннăн КПСС Программинче çырса хунă нравственноç паллисене кашни совет çынни таран ăнланса илтĕр, çав паллăсем унăн кулленхи йăлине кĕччĕр, тесе тăрăшать. Çĕнĕ çынна воспитани парасси совет çыннисен ăс-тăнĕнчи кивĕ пурнăç юлашкийĕсене, тăшманла буржуалла идеологин влиянине хирĕç кĕрешнипе пĕрле пулса пырать.

Совет çыннисен ăнланулăхĕ, характерĕ, йăлисем вĕсене коммунизмла чаплă пуласлăхшăн çине тăрса кĕрешме пулăшчăр.

Культурă деятелĕсем пирĕн интеллигенцин малта пыракан отрячĕ пулса тăраççĕ, вĕсен халăха воспитани парас ĕçри вырăнĕ питех те пысăк.

Халĕ, коммунизмла обществă тунă вăхăтра, çĕнĕ, ирĕклĕ те телейлĕ тĕнче çуралнă тапхăрта, тĕрĕслĕхĕн пĕлтерĕшне уйрăмах хытă туятăн. Кивĕ пурнăç юлашкисене питлекен тĕрĕслĕх, çĕнĕ çутă пурнăç патне, ĕçлеме, кĕрешме, çынна юратма чĕнекен тĕрĕслĕх искусствăн кирек мĕнле произведенийĕсенче те тĕп герой пулса тăрать. Литературăпа искусствăра ĕçлекенсен çакна пурин те асра тытмалла, ун çинчен пĕр минутлăха та манмалла мар.

Хальхи вăхăтпа, паянхи пурнăçпа тан утакан хăюллă шухăш пирĕн пьесăсен, спектакльсен, кĕнекесен, картинăсен никĕсĕ пулса тăмалла. Произведенире малта пыракан шухăшпа ăна усă паракан художествăллă формă тачă çыхăнса тăни творчествăллă ĕçе пархатарлă, усăллă, пурнăç кĕвви тăвать. Кунсăр искусствă та пулма пултараймасть.

Халăха воспитани парас ĕçре парти совет литературине пысăка хурса хаклани писательсене хăйсен пĕтĕм творчествăллă вăйне, пултарулăхне парса ĕçлеме, халăхшăн чи кирлĕ произведенисем çырма хушать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсем декабрĕн 17-мĕшĕнче культурă деятелĕсемпе тĕл пулса усăмлăн калаçни, çав тĕл пулура Н. С. Хрущев тухса калани тата партин Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Л. Ф. Ильичев каланă сăмахсем писательсене, художниксене, композиторсене тата лайăхрах ĕçлеме вăй параççĕ.

Парти литературăпа искусствă умне лартакан задачăсем — вĕсем халăх интересĕсенчен тухса тăракан задачăсем. Вĕсене творчествăлла работниксем хăйсен ĕçĕнчи тĕп тĕллев вырăнне хурса йышăнаççĕ.

Çитес кунсенчех Чăваш писателĕсен VI съезчĕ пухăнмалла. Çав съездра, паллах, пирĕн писательсем парти литературăпа искусствă умне лартнă пысăк задачăсене чун-чĕререн, тĕплĕн сӳтсе явĕç, халăх валли çĕнĕрен çĕнĕ паха произведенисем çырма тата ытларах хавхаланĕç, хăйсем партин шанчăклă помощникĕсем пулнине асра тытса ĕçлесе пырĕç.

Пурнăçпа, çынсемпе тата вĕсен пархатарлă ĕçĕсемпе тачă çыхăну тытни писательсене, поэтсене, драматургсене пирĕн хушăмăрти калама çук хăвăрт пулса пыракан улшăнусене тĕрĕс çутатма пулăшать.

Партипе правительствă писательсем умне лартнă аслă задачăсене реализмла искусствă кăна ăнăçлă татса пама пултарать.

* * *

Парти çĕршыва коммунизм строительствин аслă задачисене ăнăçлă татса памалли чи кĕске çул кăтартать: пирĕн пуян резервсемпе туллин усă курмалла. Çичĕ çуллăхăн пиллĕкмĕш çулĕн заданийĕсене — промышленноç производствин планне, капитальнăй строительствăпа пурăнмалли çуртсем тумалли плана, ял хуçалăхне аталантармалли, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илмелли плана пурнăçа ăнăçлă кĕртме пирĕн пур майсем те пур. Çак плансене кашни ĕç вырăнĕнче, кашни предприятире, кашни колхозпа совхозра тултармалла. Хуçалăхпа культурă строительствинче, халăх пурнăçне лайăхлатас ĕçре 1963 çул çĕнĕ çитĕнӳсем кӳресси пирки эпир иккĕленместпĕр. Партин XXII съезчĕн тата КПСС Центральнăй Комитечĕн ноябрьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçласа, Чăваш АССРĕнчи ĕç çыннисем кăçал хуçалăхпа культурă строительствин мĕн пур участокĕсенче мухтавлă çĕнтерӳсем тăвĕç.

Георгий ЕФИМОВ

# Вицĕ сăвă

* * *

Атя, çул умĕн кăшт ларса илер,
Атте-аннемĕрсен йăлипеле.
Пĕрне-пĕри савса кусран пăхар,
Хальччен илтмен ачаш сăмахсене,
Хальччен пĕлмен кăвар туйăмсене
Сăмахсăр-мĕнсĕр пĕр-пĕрне калар.
Çук, хăнăхман эпир пĕр вырăнта —
Çĕнĕ инçет чĕнет пире татах:
Унта каллех-мĕн никĕс хывмалла,
Чун кĕртмелле-çке чунсăр таврана.
Упа çури çухрашнă вырăна
Ача сăпки пĕр шиксĕр çакмалла.
Çапла, юлташ, эпир — çул çыннисем.
Пĕлетĕн-и,
Кĕсле хĕлĕхĕсем
Ăста алсем хăйне сĕртĕнессе
Кĕте-кĕте аптăраса çитсен,
Кăшт сывлăш хумĕ вăй вылянипех
Сасă парса илет-çке ерипе
Тунсăхласа хăватлă янăравшăн.
Пирĕн чунсем те, тусăм, çавăн пек —
Хĕрӳ ĕç хумĕнче тек ярăнасшăн.
Юлташ, атя,
Ĕçчен ална парсам,
Йывăрлăха
Тӳрех кусран пăхар.

Эппин,
Çул умĕн, кил, пĕрле ларар,
Пĕрне-пĕри чунтан пăхар савса:
Юлар эпир çул çыннисем пулсах!

* * *

Эп çăлтăрăн куратăп этеме...
Çĕн çăлтăр çуралать-и —
Ун çути,
Тен, вăтăр-хĕрĕх çулсăр çитеймест
Çак çĕр çине...
Çитсессĕн йăлтăрти
Кусĕпеле çиçе-çиçе чĕнет
Астронома часрах тупма хăйне.
Кайран вара,
Паллах,
Ăна тупаççĕ,
Пĕр ăна çеç тивĕçлĕ ят параççĕ...

Тата кайран —
Кам пĕлĕ çул шутне!—
Вăхăт çитет те —
Çăлтăр çав сӳнет.

Анчах çути ун çав-çавах тасан
Килет,
Килет асамлă уçлăхран.

Этем те ятлă паттăр ĕçĕпе.
Вилет-и — пурпĕр ĕмĕрсен тусанĕ
Ăна хуплаймĕ, ячĕ чаплăланĕ...

...Чăн-чăн этем, чăнах та, çăлтăр пек.

* * *

Кунта кăна эп çуралма пултарнă,
Çак шыв кăна ман ăшăма кантарнă.
Кунта кăна, çак çĕр çине кăна
Ура эп ярса пуснă пуçласа.
Кĕççе пек курăк çепĕç урана
Чиктерес мар тесе, кăтăкласа,
Утма хистенĕ малалла мана.
Эп ӳкнĕ, ыраттарнă çамкана:
«Пи-пи пуль çав... ĕф-ĕф»,— тесе анне
Сахал-и шăлнă ман куççульсене.

Пĕлтерĕшĕ те çук çав сăмахсен,
Анчах та ыратни иртет часах.
Мĕн-ма анне аллийĕ сĕртĕнсен,
Суран çинчен каятăн-ха манса!..

Хĕл кунĕнче сахал-и тăм илтернĕ,
Йĕре-йĕре хур çăвĕпе сĕртернĕ.
Чарусăр пулнă пулĕ! Мĕн тăвас!!
Çавах та асăнмашкăн халь хавас...

**...Вун виççĕре суха тыттарчĕ вăрçă,**
**Пире, айвансене, хытарчĕ, пăрчĕ,**
**Ваттисемпе тăратрĕ юнашар,—**
**Çапла эпир — текех вĕт-шакăр мар.**
**Çĕр çывăрми выраттăмăрччĕ тырă,**
**Шартламара çапаттăмăрччĕ авăн.**
**Çавах пĕри те каламастчĕ:— Ырнă...**
**Çăмах çисен те чунсем пулнă савăк.**
**Çавăн чухне пуль çав çамка çине**
**Хăварчĕ йывăрлăх хăй паллине...**

**Эпир çĕнтерне...**
**Тен, иртнисене**
**Аса илме те кирлĕ мар паян!**
**Умра курсан тăван вырăнсене,**
**Кам аса илмĕ иртнине чунтан!!**
**Аса илÿсĕр пурнакан этемĕн**
**Çук мар-ши пулассин чăн-чăн илемĕ!**

**Тăван тавралăх!..**
**Улăх...**
**Хир...**
**Вăрман...**
**Эп — сирĕн,**
**Эсир, пĕлĕр,— пурте ман!**
**Çак çĕр çинче космонавтсем ÿсеççĕ,**
**Çĕртен вăй-хал илсе çирĕпленеççĕ.**

**Тăван тавралăх, эп кунта кăна**
**Пултарнă çуралмашкăн...**
**Тав сана...**

●

**Юрий ПЕТРОВ**

# ЛĂПКĂ ШУÇĂМСЕМ КĂНА ÇУТАЛĔÇ

Пальмă та тростник, банан çĕршывĕ
Пин те улт çĕр вак утрав çинче.
Кубă, эс инçе те чуншăн çывăх,
Санпала паян кашни ĕçчен.
Эсĕ тунă ÿсĕм, паттăрла ĕç
Пирĕншĕн çĕн савăнăç, телей.
Лăпкă шуçăмсем кăна çуталĕç
Малашне сан çийĕн ирпеле.
Ирĕклĕх хĕвелĕ хăватне те,
Ăшшине те сапнă чух çĕре,
Эс тем анлăш сулхăн континентăн
Сĕмлĕхне çут факел пек сирен.

Пурлăх, мул, романтикă çĕршывĕ
Кам чунне-ши илĕртсе тăман.
«Кăранташ ÿксен — хăпарĕ йывăç»,—
Ун çĕрне ахаль-тĕр ăмсанман.
Пусмăрçă, хурах...
Мĕн чул асап-хĕн...
Хупăрланă ĕлĕкрен çынна!
Антăхнă укçашăн мул ăçтахĕ,
Сăвăс евĕр кÿпĕннĕ магнат.
Тав сана, хастарлă Фидель Кастро!
Прометей пек, эс чĕресенче
Чăнлăхăн вутне чĕртсе çутатрăн
Хăтăлма хĕн-хур танатинчен.
Кубă — ырлăхпа телей çĕршывĕ,
Çĕнтерÿллĕ анлă çул çинче
Малалла утсан маттуррăн, сыввăн
Туслăх, мир ялавĕ айĕнче.
Тăшмансем урсан та, юнасан та
Хăратаймĕç харсăр халăха
Хурăнташ та, ĕмĕрлĕх тăван та
Пур çĕрте те санăн йышлă халь.
Савăк пурнăçăн сÿнми вăй-халĕ
Вĕресе тăрать утрав çинче.
«Венсеремос!»— тет хаваслă халăх,
«Вива Кубă!»— саламлать тĕнче.

●

Василий **АЛЕНДЕЙ**

# Йĕнерчĕк

*Калав*

Эпир хуларан кăнтăрла иртсен иксĕвĕ сехет тĕлĕнче тухрăмăр. «Москвич» такăр çулпа çăмăллăн вĕçтерет. Чĕрере хаваслăх, савăнăç. Кăшт уçнă кантăкран уçă çил вăркăшса кĕрет. Çул икĕ енĕпе те шап-шурă хурăнсем. Вĕсем шухăшлăн чашкăрса юлаççĕ. Çак çул çинчи кашни хурăн, кашни ăвăс, йĕлме чĕрене çывăх. Кашниех ăшă, ырă туйăм çуратаççĕ...

Нумаях та кайманччĕ. Çул хĕрринче пĕр хĕрарăм, хăйне лартса кайма ыйтса, ал тăратнине куртăмăр. Машинă çинче — шоферпа иксĕмĕрех. Мĕнле калас, çул хаваслăрах пултăр тесе, çак хĕрарăма лартма шутларăмăр. Вăл ман çумах вырнаçрĕ. Тĕреклĕ, мăнтăрланма пуçланă хĕрарăм. Пичĕ хĕп-хĕрлĕ, çутă. Сарăрах куç харшине илемлетсе тикĕсленĕ. Вăрăм та кăмăллă куç хăрпăкĕ айĕнчен шупка чакăр куçсем ăшшăн пăхаççĕ. Вĕсем мана тем аса илтернĕ пек, систернĕ пек туйăнчĕç. Анчах ниепле те йĕркеллĕ тавçăрса илме, пĕлме пултараймарăм. Эпĕ ун çине татах тинкеререх пăхрăм. Вăл тутине çыртнă пек тукаласа ларать.

— Эппин, Çăлпуçне каятăр?— терĕм эп юриех ӳсĕркелесе.

Хĕрарăм пуçĕпе кăна сĕлтсе илчĕ, çавăнта каятăп тени пулчĕ ĕнтĕ ку.

— Сирĕн унта тăвансем пур-и?

— Тăвансем.

— Халĕ хăнана каятăр пуль эппин?

— Хăнана.

Çапла, çак хĕрарăмпа пĕр-ик сăмах çеç калаçкалама тӳр килчĕ пулин те, эпĕ вăл вырăс сăмахĕсене украинкăсем пек çемçен каланине сисрĕм. Вара шухăша кайрăм. Мана тахçанхи, хам çамрăк чухнехи шавлă кунсем аса килчĕç. Шупашкарти строительствă техникумĕнче вĕреннĕ чухне пĕр çапçамрăк та тулли питлĕ-куçлă, сап-сарă çӳçлĕ хĕрпе тĕл пулнăччĕ. Вăл тир-сăран заводĕнче ĕçлетчĕ, çав заводри çамрăксен общежитинче пурăнатчĕ. Ленă! Ленă Полищук ятлăччĕ çав хĕр. Унтанпа шывсем нумай юхрĕç ĕнтĕ. Нумай çилсем вĕрчĕç. Йывăçсем темиçе хут çулçă сарса тăкрĕç. Эпир хамăр та пин тĕрлĕ савăнăç, пин тĕрлĕ хуйхă-суйхă куртăмăр унтанпа.

Машинă çаплах тап-такăр çулпа хавассăн шăхăрса, уласа пырать. Шофер та хаваслă. Çул хĕрринчи хурăнсем кăна халĕ те тунсăхлăн чашкăра-чашкăра юлаççĕ. Мĕншĕн тунсăхлаççĕ-ха вĕсем? Мĕншĕн ялан чашкăраççĕ? Вĕсем пире хăйсем патĕнче чарăнса тăрса, пĕр-ик сăмах та пулин, ăшă сăмах, калама йыхăраççĕ пуль. Анчах эпир каламастпăр, эпир яланах васкатпăр, васкатпăр. Эпир çĕнĕ илемсем курасшăн, çĕнĕ çынсемпе паллашасшăн, çĕнĕ телей тупасшăн.

Кайсан-кайсан, каллех сăмах-юмах хускатса ятăмăр. Ман çумри хĕрарăм Çăлпуçне упăшкин тăванĕсем патне каять иккен. Вĕсен унта çитес вырсарникун ака туй пулмалла. Çак сăмахсене илтсен, каллех тӳсеймерĕм:

— Эсир уява мĕнле пĕччен каятăр вара? Упăшку епле хăрамарĕ пĕчченех яма?— шӳтлерех ыйтрăм эпĕ.

Хĕрарăм вара ассăн сывларĕ те:

— Упăшкам çук çав манăн. Хветĕр вилни икĕ çул иртрĕ,— терĕ.

Хветĕр! Чим-ха, манпа пĕрле вĕреннĕ Хветĕрех пулман-и унăн упăшки? Эпир Ленă Полищук патне лăп та шай иксĕмĕр пĕрле каяттăмăр, общежитинче пĕрле шўт туса, кулса лараттăмăр. Эпĕ çумри хĕрарăм çине татах тинкертĕм. Неушлĕ çамрăк, питĕ çамрăк хурăн пек яштака хĕр çакăн пек улшăнма пултарать? Неушлĕ пурнăç, вăхăт çав териех улăштарать çынна? Çук, ку хĕрарăм ниепле те Ленă Полищук пулас çук. Ку урăх хĕрарăм, эп курман, пĕлмен хĕрарăм. Анчах, темле ĕненмесен те, манăн чунчĕре иккĕленет.

— Эсĕ мана темле паллана çын пек туйăнатăн,— терĕм ăна.

Хĕрарăм нимĕн чухлĕ те пăлханмарĕ, хускалса та илмерĕ. Вăл халичченхи пекех лăпкăн:

— Эпĕ те сана паллатăп,— терĕ.

— Эсир Ленă Полищук вĕт. Çапла-и?

— Çапла.

— Астăватăр-и, эпир сирĕн пата çўреттĕмĕр. Общежитине.

— Астумасăр.

— Пĕррехинче, епле-ха, санпа калаçнăшăн сирĕнпе пĕрле пурăнакан Пашă, вăрăмскер, хирĕçсе кайрĕ. Килĕнчен пĕр хутаç мăйăр илсе килнĕччĕ. Çав мăйăра ывăçла-ывăçла илет те урайне шапăр-р! шапăр-р! тăкать...

— Пулнăччĕ çав. Эй, ун чухне тем те пулнă пуль.

Канашран иртсен, пирĕн шоссе çулĕнчен пăрăнмалла пулчĕ. Эпир çырмасен хĕррипе, ĕшнесен варрипе, кукăр-макăр çулпа кайрăмăр. Кайнăçем çул пылчăкланса, йывăрланса пычĕ. Шыв кўлленчĕкĕсем курăна пуçларĕç.

— Кунта паян кăна вăйлă çумăр çунă пулас. Малалла мĕнле кайăпăр? Кăрлăк Михали кулмĕ-ши, тусăмсем?— пăшăрханса калаçрĕ шофер.

Ларса пыракан çыннăн, паллах, çитес çĕре машинăпах çитес килет, шофер епле те пулин илсе çитерессе шанас килет. Çавăнпа эпир, чылай иккĕленетпĕр пулин те:

— Илсе çитерĕн-ха. Аптрамăпăр,— терĕмĕр.— Ак çакăнтан, çул хĕррипе, çеремлĕрех тĕлтен, ямăн-и?

Машинă çул хĕррипе йынăша-йынăша пыма пуçларĕ. Ун çине йывăç турачĕсем çăт-çат, çăт-çат туса перĕнеççĕ. Йĕплĕ çырла тĕмĕсем вĕтĕ те хаяр турачĕсемпе чĕтренкелесе юлаççĕ. Вĕсем шупка кĕрен чечеке ларнă. Йĕплĕ хулă чечекне тытма йывăр пулин те, темшĕн, юратса, савса пăхатăп. Вăл хитре те чăрсăр, шухă, кăра çилĕллĕ хĕре аса илтерет. Çавăн пек хĕре, вăл хаяр пулсан та, чĕререн килĕштеретĕн. Хăй хирĕçлет пулин те, ун еннелле вăйпах туртăнатăн, уншăн çунатăн. Çак Ленă та маншăн çамрăк чухне йĕплĕ хулă чечекĕ пекех пулнăччĕ. Унăн илемĕ мана антăхтарсах, пуçа çавăрсах янăччĕ. Анчах унăн йĕпписем пĕр хĕрхенмесĕр чикрĕç мана. Алăран кăна мар, тўрех чĕререн...

Унччен те пулмарĕ, тĕнче те сасартăк тĕксĕмленчĕ, хуралчĕ. Машинă кабининче, каç пулас умĕнхи пекех, тĕттĕмленчĕ. Кантăкран пăхрăм та, эпир йăвă ўснĕ ватă вăрмана пырса кĕнине пĕлтĕм. Шофер руле пĕр канмасăр унталла-кунталла пăрчĕ, машинă пĕр енчен тепĕр енне сулăнчĕ, шывлă ланкашкасене ана-ана хăй корпусне темле катăртаттарса, хыртарса тухрĕ. Вара шофер тўсеймерĕ, пĕр ватă юман тĕлне çитсен машинине чарчĕ, çул мĕнлине пĕлме малалла кайса пăхрĕ. Кăшт тăхтасан «Москвич» патне таврăнчĕ те:

— Ним тума та çук. Тек малалла кайма пултараймастăп. Аминь,— терĕ.

— Тен, кунтан иртсен юсанмĕ-ши?

— Çу-ук, кунти тавралăха пĕлетĕп эпĕ. Ку шуйттан вăрманĕнче пĕр-пĕччен çĕр каçса та курнă. Авă, çитменнине хура пĕлĕтсем тата хăпараççĕ. Ну, эсир каялла хулана пыратăр-и? Е кунтах, çуллахи лагерьте, юлатăр?

— Хам аптрамăп-ха. Çурран та утăп. Ленă мĕнле-ши?— кабинăран пылчăк çине тухма хăраса ларакан Ленă еннелле пуçа султăм эпĕ.

— Мĕн тăвас тетĕн ĕнтĕ. Юлташ пур чухне манăн та çурран утас пуль.— Пĕтнĕ пуç пĕтнех, кулам пекки турĕ Ленă.

Шофер машинине чакарса-чакарса кайрĕ те, типĕрех тĕле çитсен каялла çавăрчĕ, йывăççем хушшинче курăнми пулчĕ. Тĕттĕм вăрман варрине Ленăпа иксĕмĕрех тăрса юлтăмăр. Капмар, çўлĕ юмансем ним те шарламаççĕ. Вĕренесем сарлака çулçисене пĕр хускатмасăр тĕлĕреççĕ. Сывлăш нўрлĕрех те уçă. Вăрман тăпринчен, ўкнĕ йывăççенчен, туратсенчен, пĕлтĕрхи çулçăсенчен, кăмпасенчен, йўçенкĕ те кăмăллă, ырă шăршă сарăлнă.

Эпĕ Ленăн чăматанне хам алла илтĕм.

— Атя, вăрман тротуарĕ тăрăх утăмлар пуль.

Эпир çул хĕрринчи çўлĕ курăк тăрăх кайрăмăр. Пирĕн калаçу малтан çыпăççах пымарĕ. Çапах та манăн Ленă пурнăçĕ çинчен тĕплĕрех, лайăхрах пĕлес килчĕ. Мĕнле ка-

лас, çамрăк чухне чун-чĕре уншăн ахалех ыратман ĕнтĕ, ахалех пуç çаврăнман.

— Эппин, сан çемье пурнăçĕ ăнăçлах пулмарĕ?— сăмах тапратрăм эпĕ.

— Ăнăçлă пулмарĕ çав. Ан та кала...

— Мĕн, Хветĕр чирлесе вилчĕ-и?

— Чирлесе. Ӳпкери снаряд ванчăкĕ тепĕр хут аптратрĕ ăна.

Ленă кусĕсем хурлăхлăн тĕксĕмленчĕç. Вăл калаçăва урăххи çине куçарма васкарĕ.

— Çăлпуç тени инçе-и кунтан?

— Пĕр тăхăр çухрăм.

— Эсĕ ху ăçта каятăн?

— Çăкалăха.

Çăкалăхпа Çăлпуç ялĕсем юнашарах. Çавăнпа пирĕн çул тăршшĕпех пĕрле утас пулать. Утасса вара яла çитиччченех çакăн пек вăрманлă çырма-çатраллă çулпа утмалла. Ватă, кичем вăрман тăрăх çапла ик-виçĕ çухрăм танккарăмăр. Упа саррисĕр пуçне ку вăрманта курăкĕ те çук темелле. Тунсăхлă та йывăр шăршлă çав упа сарри. Çак курăк, чăвашсен юмах-халапĕ тăрăх, çимĕк каçĕ, пĕр самантлăха çеç чечеке ларать иккен. Лăп та шай çур çĕр тĕлĕнче. Анчах унăн чечекне ку таранччен никам та курман. Çамрăк чухне ун чечекне курас тесе хĕрсемпе юриех вăрмана килеттĕмĕр. Тĕттĕмччĕ вăрман. Хĕрсем хăранипе каччăсем çумне тĕршĕнетчĕç, алăран та ямастчĕç. Пире вара, йĕкĕтсене, çавă çеç кирлĕ. Пире упа сарри чечекĕ мар, çумри хитре чечек ытларах илĕртнĕ.

Мише çине çитсен, эпĕ чăтлăхалла пĕр çеремленнĕ, ансăр сукмак кĕнине куртăм.

— Ленă, атя, çакăнтан каятпăр. Кунтан çул тӳрĕрех пулаканччĕ. Ку сукмака эп пĕлетĕп. Ку манăн ача чухнехи сукмак.

Эпир халь вĕрене ĕшни тăрăх пыратпăр. Сукмакĕ ансăр, питĕ ансăр. Ун çинчи курăк хăш-пĕр тĕлте чĕркуççи тĕлнех çитет. Шăлавар çине курăк вăррисем, çулçисем çыпçăнчĕç. Вĕрене хунавĕсен сарлака çулçисенчен тĕллĕн-тĕллĕн сивĕ тумламсем шăпăртатса тăкăнаççĕ. Ленăн тĕрĕллĕ-тĕрĕллĕ кăвак кофти те, крепдешин кĕпи те йĕп-йĕпе пулчĕç. Эпĕ хам та йĕпе шăши пекех. Тинех çак ансăр сукмак çине пăрăнса йăнăш тунине ăнлантăм эпĕ. Аслă çулпа ним йĕпенмесĕр утас вырăнне халь, шывран тин тухнă пек кӳтсе, çӳçенсе пырас пулать. Ленă мана кӳренчĕ пулас, чĕнмест. Акă, эпир пĕр уçланкăрах выранă çитрĕмĕр. Кунта талккишпех шупка кĕрен чечек. Йĕплĕ хулă чечекĕ. Вĕсен çинче çумăр шывĕ те типсе çитмен-ха. Вĕсем куççуллĕ. Çапах та вĕсем патне çывăха та ан пыр. Турачĕсем чикеççĕ, çулçисем йĕпетеççĕ. Эпĕ алла чиктере-чиктерех Ленă валли чи хитре чечеклĕ турата хуçрăм.

— Тĕл пулнă ятпа парне парам сана. Тархçанхи туслăхшăн.

Ленă манран çав хитре чечеклĕ турата илчĕ.

— Чăнах, тĕлĕнмелле илемлĕ!— терĕ вăл ăшшăн кулса.

— Эсĕ те маншăн çав чечек пекех пулнă. Кăмăллă, ырă. Çапла-и?— ăна кăвак куçĕсенчен тинкертĕм эпĕ.

— Пĕлместĕп.

— Анчах эпĕ çав хитре чечек патне пыраймарăм. Мана çав туратăн хурçă йĕпписем чикрĕç. Халĕ вăл чикнĕ сурансем тӳрленнĕ ĕнтĕ. Çапах та сана курсан, темле вăркăш çил ăшшăн вĕрсе иртнĕ пекех туйăнчĕ. Эх, калаçма кирлĕ-ши ун çинчен халь...

Умра кĕтмен çĕртенех çутăрах пек курăнса кайрĕ. Эпир уя тухатпăр иккен. Пирĕн кунта пĕр-ик çухрăм хир тăрăх утмалла та каллех вăрмана кĕмелле.

Хире тухсан акă мĕн куртăмăр. Леш енчи вăрман çинчен аялта хура пĕлĕтсем шуса килеççĕ. Сăрт çинче, инçех те мар, тем вăрăмăш шап-шурă вите, çĕнĕ йывăç пӳрт, пĕчĕк сарай ларни курăнчĕ. Хура пĕлĕт чаршавĕнче вĕсем ытла та уçăмлăн, çуттăн курăнаççĕ. Мĕнле хуралтăсем-ха кусем? Халиччен ним те çукчĕ-çке. Тем кала та, колхоз пĕр-пĕр фермă тунă ĕнтĕ кунта. Юнашарах тем пысăкăш пĕве. Лăпкăн, пĕр шарламасăр чуна илĕртсе выртакан юхан шыв. Эпир çумăр çума тытăниччен епле те пулин çав хуралтăсем патне çитме васкарăмăр. Акă, юхан шыв хĕррине анатпăр. Пĕвере туллиех шап-шурă Пекин кăвакалĕсем. Эппин, кăвакал ферми тунă пирĕн колхозра. Çумăр ӳкни чи малтан пĕве çинче паллă пулчĕ. Ун хыççăн пит çине пăт-пат тумламсем леккелеме пуçларĕç. Эпир чупа-чупах вите çумне çитсе тăтăмăр.

Вите алăкĕ айĕнчен темĕн чухлĕ кăвакал пуçĕсене кăлара-кăлара ирĕке тухма тапалаççĕ. Пурте вĕçĕ-хĕррисĕр нартлатаççĕ, лапчăк сăмсисемпе улăма чăшăл-чăшăл тутарса хускатаççĕ.

Унччен те пулмарĕ, пĕве таппинчен, çирĕксем, хăвасем хушшинчен, такам хыттăн кăшкăрни илтĕнчĕ.

— Тытăр ăна, тытăр шуйттан чĕппине!— терĕ темле арçын.

Ăна хирĕç хĕрарăм сасси чанкăлтатрĕ:

— Этем тытайрать-и ăна?!. Каллех пĕвене кĕрсе кайрĕ.

Çумăр вăйлăрах та вăйлăрах ӳкме пуçларĕ, унтан шарлаттарсах çума тытăнчĕ. Çывăхри вăрман та, пĕве те тĕтреленчĕç. Çумăр витĕр йывăççем аран курăнаççĕ. Хăвалăхран тинех хайхи çынсем васкаса тухрĕç. Анчах вĕсене нихăшне те паллама çук. Хыттăн çапса çава-

кан хирĕçле çумăртан хÿтĕленес тесе, малти арçын питне çÿхе пиншакĕпе, хĕрарăмсем иккĕшĕ те саппунĕсемпе хупăрланă.

Вите алăкĕ патне çитсен, хайхи арçын леш алăк айĕнчен сăмсисене кăларса ĕштеленекен кăвакалсене курчĕ те:

— Кăш! Кăш-ш! Вăт эсреметсем, каллех ашкăнса çÿресшĕн. Ахаль те ултă кăвакала шыв айне туса вĕлертĕр. Кăш-ша!— терĕ. Вара сасартăк пире, Ленăпа иксĕмĕре, курчĕ те тăпах чарăнса тăчĕ. Пиншакне пуç çинчен антарчĕ.

— Ара, çак путсĕрсемпе аппаланса çынсем килнине те асăрхама çук. Антăхтарса çитерчĕç мурсем. Эпĕ тĕнчере кăвакал аçисем пек ухмах чĕрчун курман. «Хĕрарăммисене» нимĕн чухлĕ те хисеплемеççĕ. Ухмахла аташнипе темиçе кăвакала шыв ăшне туса вĕлерчĕç,— терĕ хайхи çын, ним калама аптранă енне. Вăл пире районтан килнĕ çынсем тесе шутларĕ пулас.

Вăйланнă, асса кайнă шухă çумăр вите çумĕнчи çынсене те шывпа пĕрĕхме, мăшкăллама тытăнчĕ. Арçын пире пÿрте кĕме васкатрĕ:

— Атьăр, мĕн кунта шăнса тăратăр?

Эпир пÿрте кĕтĕмĕр. Пÿрт ăш-чикĕ типтерлĕ. Стена çумĕнче сехет харсăррăн шаккать. Тĕпелти сĕтел çинче хулăн кантăк листи. Ун айĕнче плансем, обязательствăсем, темле списоксем, районтан ярса панă хут таткисем. Кунсăр пуçне... темле гимнасткăн сăн ÿкерчĕкĕ. Унăн пĕвĕ тĕлĕнмелле йăрăс. Кăкăрĕ якатнă чул пек çаврака, урисем тĕреклĕ. Ăна, ахăртнех, пĕр-пĕр журналтан касса илнĕ пулас.

Пире çак пÿрте ертсе кĕнĕ çын кăвакал фермин заведующийĕ иккен. Ăна эпĕ аван пĕлетĕп. Вăл, хамăр ялти пек каласан, Йĕнерчĕк Нихвачĕ. Ăçтан тупнă вĕсем çак хушамата? Хăçан? Никамшăн та паллă мар. Анчах темшĕн «Йĕнерчĕк» тени уншăн чи вырăнлă, чи тĕрĕс ят пек туйăнатчĕ пире.

Нихват мана халĕ те палласа илеймерĕ-ха. Вăл ман çине пăхмасть те темелле; Ленăна тĕпелерех иртме, кăмака çумне, ăшăрах çĕре, ларма ÿкĕтлет. Вăл Ленăн кофтипе тутăрне вăйпах тенĕ пек хывса-салтса илсе, кăмака умĕнчи йывăç каштаран çакса ячĕ. Халĕ унăн пушмакне типтерлĕрех çĕре лартасшăн тĕпĕртетет.

Каярахпа кăна Нихват ман еннелле сăнаса пăхрĕ.

— Ак тамаша! Эсĕ-çке ку, Энтип! Ăçтан килсе тухрăн? Эпĕ сана палламан та. Хальхи çынсене кам паллатăр? Йăлтах улшăнаççĕ. Ялтан пĕр тĕрлĕ тухса каяççĕ те хуларан тепĕр тĕрлĕ улшăнса килеççĕ. Вăхăчĕ те, эй, вăхăчĕ те чылай иртрĕ çав. Шуйттан пек хăвăрт иртет кун-çул. Рысью. Çапла васкасах пĕве таппине çитетпĕр пуль,— хыттăн силлерĕ вăл ман аллăма.

— Ничево. Алăсем çирĕп-ха санăн. Пĕве таппине халех çитмĕн.

Нихват манпа килнĕ хĕрарăм еннелле чеен куç хĕссе илчĕ те:

— Ку кам вара? Сан иккĕмĕш мăшăру пулать-и?— терĕ.

— Çук-çке. Эпĕ ăна çул çинче тĕл пултăм.

— Маттурскер, шеремет,— каллех Ленă еннелле тинкерчĕ фермă заведующийĕ.

Эпĕ, Нихватпа çамрăк чухне пит çывăх пулман пулин те, ăна час-часах куркаланă. Ача чухне, пĕррехинче, тем пирки, эп вĕсем патне кайнăччĕ. Нихват çав вăхăтра 6—7 çулхи ача кăначчĕ-ха. Эп пырса кĕнĕ чухне вăл кăмака çинче: «Анне, уйран! Анне, уйран!»— тесе кăшкăрса ларатчĕ. Амăшĕ çур курка уйран пачĕ те, хайхи ача каллех кăшкăрма пуçларĕ: «Шыв хушса пар! Шыв хушса пар!» Ун хыççăн амăшĕ куркана илчĕ те унта вĕретнĕ шыв хушса тыттарчĕ. Йăлăхтармăш Нихват çав-çавах чарăнмарĕ. Хальхинче: «Уйăрса пар! Уйăрса пар!»— теме тытăнчĕ.

Кайран çамрăк чухне, комсомолецсен звени тунăччĕ эпир. Тĕлĕнмелле чаплă тулă ÿстерме шутлаттăмăр. Нихвата звеньевой турĕç. «Пуçлăх» пулма çирĕплетрĕç кăна, çак этем пирĕнпе хăр-хар каласма пуçларĕ, кашнинех вĕрентет, ăс парать. Хăй вара, асли-çке-ха, тислĕк салатма та, минераллă удобренисем йăтма та пăрахрĕ. Велосипедпа кăна чăрлаттарса çÿрет. Ялтан хире тухать, хиртен — яла.

Кунсăр пуçне мĕн асра юлнă-ха унран? Акă тата мĕн: эпир допризывник чухне салтак вăйии вĕренме унпа пĕрлех çÿрерĕмĕр. Мăнсырмара вĕренеттĕмĕр. Командирсем пире ял тăрăх уйрăммăнах чаплăн юрлаттарса иртме тăрăшатчĕç. Нихват манпа юнашарах утса пыратчĕ. Анчах вăл нихăш юрă сăмахне те пĕлместчĕ, хăй вара (юрă кĕввине килĕштерем пекки туса) пĕтĕм вăйпа кăшкăратчĕ, тÿсме çук тарăхтаратчĕ. «И на тихом ой-яй-яй-я, ой-яй-яй-яй ой-яй-я» — тетчĕ.

Вăрçă пуçланнă вăхăтра Нихват çарта пулнă. 1942-мĕш çулхи кĕркунне, госпитальтен сывалса çитме киле ячĕç тесе, яла таврăннă. Вара хайхи пурăннă та пурăннă. Пĕр уйăх иртнĕ, ик уйăх, виç уйăх. Çапла вара пилĕк уйăх таранах çитнĕ. Çартан килнĕ салтак ĕçке-çике çÿренĕ, тепĕр чухне колхозра ĕçлеме те тухнă. Анчах фронта каясси çинчен аса та илмен. «Повесткă çук-ха»,— тенĕ вăл ял çыннисене. Çапах та Нихват дезертир иккен-

не, вăл военкоматра учета та тăманнине сиснĕ-сиснех. Ăна çыхса пăрахсах района ăсатнă. Çар трибуналĕ ăна вунă çуллăха хупма приговор йышăннă. Хăвăрах пĕлетĕр, ун пек çынсене вăрçă вăхăтĕнче приговор йышăнсан та хупса лартман, фронта, чи йывăр çĕре, янă. Айăпне тăшмансене хирĕç çапăçса тӳрре кăлартăр, тенĕ. Нихват фронта çитсенех (амак пĕлет, темле пулнă унăн) тыткăна лекет. Вăрçă чарăнсан, службăри салтаксем киле таврăнипченех яла персе çитет. Пĕррехинче колхоз амбарĕ умĕнче çынсене ахăртса ларнине курнăччĕ эп ăна. «Ах, Голландире куртăм-çке тĕнче! Пĕр хуçа патĕнче ĕçлесе пурăнтăм. Голланди хĕрсем кăпăк пекçке»,— тесе ларатчĕ вăл.

Тепĕр пĕр-ик çултан эпир унпа химизаторсен курсĕнче вĕрентĕмĕр. Унта та Нихват ăс-пуçпа палăрсах каймастчĕ. Анчах вĕреннĕ чухне çынсем пурте çара пуç лараççĕ пулин те, вăл салтак картузĕ тăхăнса ларатчĕ, нихçан та хывмастчĕ ăна, хывсан пуç ыратать, тетчĕ.

— Ну, тăван яла çитсе курас тетĕн-и?— ыйтрĕ Нихват.

— Килменни улт-çич çул çитрĕ ĕнтĕ. Тунсăхларăм. Тантăшсене, тăвансене, хам лартнă йăмрасене курас килет.

— Мана, ак, кăвакалсемпе çыхса хучĕç. Ялтан инçетре тесе, килес килместчĕ те... мĕн тăвас тетĕн, килмеллех пулчĕ. Пирĕн, ответлă çынсен, пурнăçĕ çапла ĕнтĕ. Ялан кускăç çинче. Пĕрне çĕкле те тепĕрне ура çине тăрат.

— Мĕнле, çĕнĕ фермăри ĕç-пуç аванах-и?

— Аптрасах каймасть. Анчах çав кăвакал аçисемпе чун тухать. Кунта ĕçлеме пуçланăранпах çавсемпе çапăçатăп. Нимĕнле канăç та çук. Çуначĕсене мунчалапа çыхса та пăхрăм. Наччасрах татса пăрахаççĕ. Вăйлă, мурсем. Ун хыççăн шухăшларăм-шухăшларăм та урисене тăлласа ятăм. Яхвунь мучи пек, уринчен урине аран ирттеркелесе утаççĕ. Кулса вилмелле. Анчах шыва кĕрсен йăр-яр шукаласа çеç каяççĕ. Кăвакалсене наччасрах хăваласа çитеççĕ. Каллех иртĕхме пуçлаççĕ. Пĕтмен пуççене çыран хĕрринчен хăть карланку татăличчен çухăр, внимани те илмеççĕ. Халĕ витене уйăрса хăварма пуçларăмăр. Айăпа кĕнĕшĕн ăса вĕрентес пулать. Асапланччăр, тăччăр кунĕпе. Çапах, ку меслетпе дисциплинăна хытарсан та, хăш-пĕрисем чееленме пуçларĕç. Витерен амисене кăларнă чухне ним шарламасăр, чĕлхисене çыртса тăраççĕ. Шуйттан пĕлет-и вĕсене: те аçи, те аçи мар. Çапла вăрттăн тухса каяççĕ те пĕвене кĕнĕ-кĕменех, хамран мăшкăлланă пек, нарт! нарт! тесе кăшкăрса яраççĕ. Çуначĕсемпе шыва çат-çат! çапса сирпĕтсе малалла ыткăнаççĕ. Тарăхнипе çамка çине мăйăр пек сивĕ тар тухать. Мел пулсан, çапса вĕлерĕттĕмччĕ хăш-пĕрне. Çук, çиленнĕ чухне яхăнне те ямаççĕ. Тарăхнипе правление докладной çырас тетĕп. Пăхса тухчăр çав кăвакал аçисем çинчен...

Фермă заведующийĕ манпа шӳт туса каласмасть-ши тесе, эпĕ ун çине сăнарах пăхрăм. Çук, ун пек юптарни, шӳт туни сисĕнмест. Нихват хăй çине сăнаса пăхнине, эпĕ кăшт кичемрех итленине сисрĕ пулас. Пукан çинчен сиксе тăчĕ те кантăкран тинкерчĕ. «Килчĕç-ши çав хĕрсем? Витере мĕн мурĕ туса тăраççĕ-ха?»— чылай çилĕллĕн мăкăртатрĕ заведующи. Вара çенĕхре такам уткаласа çӳренине, калаçнине илтрĕ те, унталла вăркăнчĕ. Алăка уçсанах: «Эсир кунтах-çке»,— терĕ. Ун хыççăн, алăка лайăх хупса хучĕ пулас, мĕн çинчен калаçни вуçех илтĕнмерĕ.

Часах пӳрте Нихват туллашса, çиленсе кĕчĕ.

— Кала, кала вĕсене! Ниепле те ăса кĕртме çук!

— Камсене?

— Пур-çке кунта. Кăвакал пăхакансене.

— Мĕн, пăхма пĕлмеççĕ-и?

— Пăхма пĕлмеççĕ çав,— темле куларах, юптарнă чухнехи евĕрлĕ каларĕ заведующи.

Пасăр курнă хĕрлĕ саппунлă хĕрсем халĕ иккĕшĕ те çумăр витĕрех сарай патнелле чупса кайрĕç. Эпĕ вĕсене чӳречерен аванах курса юлтăм. Сарай юхан шыв хĕрринчех, хăвасем хушшинче. Мĕн ĕç хушрĕ-ши хĕрсене Нихват? Мĕн тума çумăр витĕрех хăваласа ячĕ-ши вĕсене?

Пĕвере кăвакалсем халĕ те ярăнса çӳреççĕ. Ку кайăксене çумăр çуни ним те мар.

— Эсир кунта чылайранпа-и?— ыйтрăм эп Нихватран.

— Мĕн чылайранпи унта. Сакăр уйăх çитет пуль ĕнтĕ. Пĕлтĕр, кĕркуннехи ратил умĕн çеç ячĕç мана.

— Унччен ăçта ĕçлерĕн?

— Унччен-и? Таçта та çитнĕ. Ĕне ферми заведующийĕ пулса икĕ çул лартăм. Унтан строительсен бригадирĕ турĕç. Тепĕр çиччсакăр уйăх çитрĕ-и, çитмерĕ-и, правленине чĕнтерчĕç те, сăмах хушма та ĕлкĕреймерĕм, хăмла типĕтекен авăн директорĕ туса хучĕç. Вара пĕр çулталăк пушар начальникĕнче тăтăм. Кăçал хайхи ун¬ан бац! кăвакал фермине ячĕç. Пурăнатăп çапла.

— Мĕнле, кашниччех пĕр-пĕр сăлтав тупса кăлараççĕ-и е ахалех?

— Кам пĕлет вĕсенне. Сăлтавĕ те пур, те çук. Тепĕр чухне, хамăр хушăра каласан, тупкалам пекки тăваççĕ. Сăмахран, ĕне ферминчен мĕншĕн кăларчĕç-ха мана? Правлени

ларăвĕнче (ху пĕлетĕн ĕнтĕ, ун пек пухусенче сăлтавне майлаштарассĕ вара. Çав сăлтавсене епле «ловкă» тупнинчен ху тĕлĕнсе ларатăн). Мана сĕт тухăçне ÿстерменшĕн тустарчĕç. Тĕлĕнмелле. Как будто эп сĕт нумайрах илсен лайăххине пĕлместĕп пулать. Апачĕ лайăх пулсан, сĕтне параççĕ ăна. Унта заведующи нипричом. Тĕрĕссипе, сăлтавĕ урăххинче пулнă. Ман вырана колхоз председателĕ тепĕр çынна лартма шутланă. Çав кăна. Хăй вара мана зоотехникăна, экономикăна вĕренместĕн эсĕ, тетчĕ. Вăт, Екким Романчă. Зоотехникă, экономикă текеннине, тĕрĕссипех калатăп, ытлашши пĕлме те кирлĕ мар ăна. Пустуй сăмах вăл. Пуçлăхсемпе тус, тăван пулни çеç кирлĕ. Кум туни кирлĕ.

— Çу-ук, вĕренни кирлех ĕнтĕ.

— Эй! Мĕскер калаçатăн эс!

— Строительсен бригадинчен ма тухрăн тата?

— Строительсен бригдирĕнчен тухни сăлтавĕ те лăп та шай çакăн пекех, çак сăмахпах пулчĕ. Чертеж «вулама» та пĕлместĕн, теççĕ. Чертежа мĕн тума вулан-ха ăна? Пĕрпĕр хитре юмах-и вăл, калав-и? Чертежа вуличчен эп, ак, хаçат пăхкаласа ларам. Хăмла типĕтнĕ чухне вара хамах подкачать турăм пулас. Пĕтмен хăмли, сип-симĕс типес вырăнне хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе тухрĕ. Хитрине хитре те — сорчĕ виççĕмĕш кăна. Ун хыççăн самай вăхăт килте пурăнтăм. Хам валли нÿхреп чаврăм. Мунча пурарăм. Колхоза ни-ни, пĕр пусăм та тумарăм. Уя тухса тусан çинче мекĕрленме, тĕрĕссипе калатăп, ухмах-им эп! Фермă заведующинче ик-виç çул ĕçлеп те кайран, ме сана, хире мих йăтма тух. Çу-ук, мана улталаймĕç. Ун пек хăтланса хам чыса ямастăп.

Эпĕ Нихват çине паçăрхи пекех тинкерсе пăхрăм. Чăнах юптарса, ахаль кăна калаçмасть-ши ку çын? Çук, сăн-пичĕ пĕрре те юптаракан çыннăнни пек мар. Фермă заведующийĕ чăнласах, чунтанах калаçать.

Çумăр чарăнчĕ. Кантăк çине тумламсем ÿксе шуса анми пулчĕç. Вăрман çинче хальхаль анса ларма шутлакан хĕвел хĕрелсе шыçăннă куçĕсемпе таврана юлашки хут пăхать. Хирсем, вăрмансем, пĕлĕтсем хăмач тĕслĕ курăнаççĕ. Ку ахаль хĕвел мар — çумăр хĕвелĕ, кутăнла пăхакан хĕвел. Ыран каллех ырă çанталăк пуласса ан кĕт ĕнтĕ... Вăрман çинче икĕ хурчка касхи сунара тухнă пулас, хуллен ярăнса çÿреççĕ. Эпĕ тÿсеймерĕм. Пĕве хĕрне тухса, çумăр хыççăнхи уçă сывлăша сывласа киленес терĕм.

— Атя, Ленă. Хĕвел аннине тухса курар. Мĕн тери илемлĕ тĕнче. Юмахри пек курăнать,— чĕнтĕм паçăртанпах «Таня Соломаха» кĕнекене пĕр шарламасăр вуласа ларакан хĕрарăма.

— Çук-ха, ан чăрмантар. Вулам-ха эпĕ,— пуçне те çĕклесшĕн пулмарĕ Ленă.

Эпĕ пĕве хĕррипе утса пыратăп. Кăвакалсем çаплах нартлатаççĕ. Сывлăш калама çук тутлă. Шыв хĕрринчи хăвасем кăшт силленкелесе илеççĕ те каллех лăпкăн тĕлĕрме пуçлаççĕ. Ватă тайлăк çÿçе сывăрмаллипех сывăрать, вăл хуллен харлаттарни, тĕлĕк курнă майăн шăппăн кула-кула илни аванах илтĕнет. Çÿçе леш енче хайхи сарай. Ун тăрринчен шĕвĕ симĕс тĕтĕм сăрхăнса тухать. Мĕнле тĕтĕм-ха ку?

Майĕпен хайхи сарай патне çывхарма пуçланăччĕ эпĕ. Унти хĕрсем (çурăкран пăхса-и, темле) сăнасах тăнă пулас. Эп çите пуçласанах унтан вăш-ваш тухрĕç те алăка çăрапах питĕрсе илчĕç. Хăйсем тĕтĕм çинче, вут умĕнче ларнипе хĕрелнĕ.

— Мĕн, нихçан та канма пĕлместĕр эсир? Хĕвел анать ĕнтĕ, вĕсем çаплах ĕçлеççĕ,— терĕм эпĕ, вĕсемпе кăмăллăрах пулма тăрăшса.

— Ĕçлес пулать, ĕçлемесен çитермеççĕ,— кăшт хăюсăртараххăн чĕнчĕ хĕрсенчен пĕри, чăп-чăмăр та йăрăскер. Унăн пичĕ çине чĕкеç шатри тухнă. Тепĕр хĕрĕ калаçма юраттсах каймасть курăнать. Васкам пекки туса, тÿрех вите еннелле яртлаттарчĕ. Ун урисем вăрăм, пĕвĕ самаях яштака.

— Кăвакалсем валли апат хатĕрлетĕр-и? Тутлă çитеретĕр пуль-ха вĕсене,— тата сăмах вакласшăн пултăм эп хĕрсемпе.

— Тутлă çитеретпĕр.

— Мĕн пĕçеретĕр вара?

— Тем те пĕçеретпĕр пуль.

— Мĕнле апла «пуль» тетĕн-ха эсĕ? Ху мĕн пĕçернине пĕлетĕнех ĕнтĕ,— çаплах ăшшăн калаçрăм унпа.

— «Пуль» терĕм-и вара эпĕ? Эх, ухмах!— ахăлтатсах кулса ячĕ хĕр.— Çапла çав, кун пек чухне сăмах тытăнатех...

— Мĕнле «кун пек чухне»?

— Ара, пĕчĕк кăвакалсемсĕр пуçне пысăк кăвакал пур-çке пирĕн. Ха-ха-ха!— татах кулчĕ чĕкеç шатриллĕ хĕр.

Унăн кулли темле çăмăл та янравлă. Кулнă чухне хĕрĕн шап-шурă та тикĕс шăлĕсем хитрен курăнаççĕ, куçĕсем чеен те ăшшăн çуталса илеççĕ. Манăн вăл кулнине малалла та илтес килчĕ. Кунсăр пуçне «пысăк кăвакал» тени те тĕлĕнтерчĕ. Мĕн пирки апла калать-ха вăл? Кам çинчен ку сăмах?

— Итле-ха, йăмăкăм, пысăк кăвакалĕ ытти кăвакалсем пекех шурă тĕклĕ-и? Вĕсем пекех нартлатать-и? Пĕвере ишсе çÿрет-и?

— Тĕкĕ шурă мар, хура-ха унăн. Нартла-

тасса пĕрре те нартлатмасть. Пĕвере ишет вара. Хи-хи-хи!

— Эпĕ сирĕн пĕвере ун пек хура кăвакал курмарăм-çке?

— Курăн-ха. Курăн. Хи-хи-хи!

— Ăçта вăл? Кăтартсам. Пĕлесчĕ ман ăна.

— Э-э, пурне те пĕлсен, час ваталăн.

Чĕкеç шатриллĕ, чăп-чăмăр хĕр кула-кулах юлташĕ патнелле чупрĕ. Манăн унпа тек калаçма та май килмерĕ. Сарай тăрринчен тухакан шĕвĕ симĕс тĕтĕм, çил çапнипе, ман патах вăркăшса килчĕ. Ытла та йӳçĕ иккен ку тĕтĕм. Эпĕ чыхăнса кайрăм, сарай патĕнчен аяккарах пăрăнма васкарăм.

Хĕвел анчĕ. Инçех те мар, пĕве леш енчи хăвасем хушшинче, шăпчăк юрлама пуçларĕ. Чап-чап-чап тутарать, савăнтарать, çĕклентерет шăпчăк. Çăмăрпа çăвăнса тасалнă улăх çийĕн, ем-ешĕл хирсем çийĕн унăн сасси аякках илтĕнет. Эпĕ юхан шыв хĕррипе çаплах утатăп, утатăп. Акă умра шĕшкĕсем, юман тункатисем. Кăвак-хĕрлĕ çеçпĕл чечекĕсем курăнса кайрĕç. Серте ем-ешĕл ӳсет. Чим-ха, ку тăрăсăр вĕрене çинче мĕн ларать тата? Мĕнле кайăк ку? Хăй вуçех хускалмасть. Çывăхарах пырсан тин паллă пулчĕ: иртерех çула тухнă тăмана иккен. Унччен те пулмарĕ çамрăк хăяхсем сасартăк пăлханчĕç. Вĕсен çийĕн пĕр касă çил вĕрсе иртрĕ. Сисмен те, пĕве таппине çамрăк уйăх анма ĕлкĕрнĕ иккен. Пĕчченех шыва кĕрет.

Эпĕ çак илемлĕ сăнсене курса татах çӳреттĕм пуль. Мана Нихват кăшкăрса чĕнчĕ.

— Энти-ип! Энтип, тетĕп! Ăçта эсĕ?

— Кунтах-çке.

— Унта-и? Атя, çавăр туртуна.

— Мĕн тетĕн?

— Çавăр туртуна, тетĕп. Пӳрте кĕр. Шлĕмлă Шемеккей килчĕ кунта. Сана чĕнет.

Мĕн япала-ха ку «Шлемлă Шемеккей»? Мĕн шухăшласа кăларчĕ-ха Нихват? Эпĕ, ăна кӳрентерес мар тесе, пӳрт еннелле утрăм. Заведующи мана алăк уçсах кĕтсе илчĕ.

— Атя, пиншакне хывсах хур. Кил, акă çакăнтан, çекĕлтен çак.

Эпĕ картуспа пиншака çакса хутăм. Нихват мана хулран тытсах тăчĕ. Вара тĕпелелле уттарса кайрĕ.

— Акă, кур,— терĕ вăл сĕтел çине тĕллесе кăтартса.— Акă, кур. Епле ларать вăл Шлĕмлă Шемеккей! Ха-ха-ха! Епле куштан ларать. Епле каçăрăлса ларать!

Эпĕ сĕтел çинче пĕр четвĕрт сип-симĕс эрех ларнине куртăм. Ман пуça тӳрех шухăш пырса кĕчĕ. «Ара, ку Йĕнерчĕк эрехне те кунтах тутарать-çке. Кăвакал пăхакансенех тутарать. Паçăр леш чĕкеç шатриллĕ хĕр: «хура кăвакал»,— тесе тĕрĕсех каларĕ иккен. Акă ман умрах çав хура кăвакал. Нихватăн тĕм хура çӳçĕ (хĕрĕхрен иртнĕ пулин те, унăн кăвакарнă çӳç пĕр пĕрчĕ те çук) чăннипех те кăвакал тĕкĕ пекех курăнчĕ. Унăн шалпар хура саттин кĕпи те хăпартланнă кăвакал тĕкĕ евĕрлех.

— Ну, пĕвене пĕрер хут пӳ ярса илер-и? Эсĕ манăн тантăшăм-çке. Эпир санпа пĕрле ӳснĕ. Эсĕ мана шкулта задачăсем те шутласа панă. Çавăнпа сыпмах тивет. Унсăрăн Шлемлă Шемеккей çиленĕ. Пăх-ха, шлемĕ епле шĕвĕр тăрăллă унăн,— четвĕрт кĕленчине шĕвĕр майĕнчен ярса тытрĕ Нихват. Вара стакансем çине тăп-тулли симĕс шыв тултарчĕ. Чĕкеç шатриллĕ хĕр сĕтел çине тин пĕçернĕ рак, кăмпа, хура çăкăр пырса лартрĕ. Заведующи Ленăна та сĕтел хушшине вырнаçма сĕнчĕ. Ленă эрехе курчĕ те йĕрĕннĕ пек тутине пăркаласа илчĕ.

— Çук, лармастăп. Эрех таврашне куç хӳрипе те пăхас килмест манăн.

— Утса килнĕ çинчен тивме́-çке. Çумăрпа йĕпеннĕ, шăннă. Унсăрăн чирлĕн акă. Саншăн ответ тытмалла пулĕ.

— Çук, çук.

— Эй, калаçать тата. Эрехне ĕçмесен, апатне те пулин тутанса пăх. Çăкăр-тăвартан аслă пулма хушмаççĕ ăна,— Ленăна тăпкалантарса-сĕтĕрсех сĕтел хушшине лартрĕ Нихват.

— Ну, кайрăмăр,—терĕ те заведующи, кашнин умнех эрехлĕ стакансем шутарса лартрĕ, вĕсене хăй стаканĕпе чăнк-чанк шаккаса илчĕ. Вара аллинчи «телей шĕвекне» тепрех ĕçрĕ те хыттăн ахлатрĕ, çăкăр татки илсе шăршларĕ.

— Вăт Шемеккей!— терĕ вăл аран-аран сывласа.— Эсир мĕн туса ларатăр çаплах? Мĕн, çавартан тытса ямалла-и?

Ленă стакана алла та илмере́, кăмпа хыпкаласа ларчĕ. Эпĕ ним тума аптранипе çур стакана яхăн ĕçрĕм. Унсăрăн, мĕнле калас, Нихватăн кăмăл тулас çук. Тепĕр енчен тата. ырса, йĕпенсе килнипе çан-çурăм та тапхăр-тапхăр сăрлатса илетчĕ.

Кăштах пуç хĕрнĕ заведующи каллех калаçма пуçларĕ.

— Паçăр эп сана хам пурнăç çинчен веçех каласа параймарăм,— терĕ вăл, чи пысăк рака хăй умне илсе хурса.— Нумай курнă эп пурнăç тенине. Пайтах. Çапла, значăт, хире тухмасăр тăтăм-тăтăм та, каллех правление чĕнтерчĕç. Амбарсем патне хурала тух, теççĕ.

Эпĕ юриех:

— Ма, хуралçă ĕçĕ начар мар-çке. Чыслă, хисеплĕ ĕç,— терĕм.

Нихват ман ҫине ăнланаймасăр пăхрĕ:

— Эх, ухмах тетĕн пуль мана. Ним пĕлмен тăм писмен тетĕн пуль! Мĕн, хурала кĕрсе, уйăхне вăтăр тенкĕпе пурăнас-и ман? Ай, тупнă япала. Эпĕ вара строительствă бригадирĕнчен хурала каятăп пуль. Мĕнле япала ку? Ҫынсем пысăкрах та пысăкрах вырăна хăпараҫҫĕ пулать те,— манăн бац! хурала. Вĕлерсен те каймарăм. Вара хăйсемех пушар начальникĕ турĕҫ. Пурнăҫ тикĕтленĕ урапа пек йăкăр-йăкăр шуса ҫеҫ пырать. Эрне хыҫҫăн эрне иртет. Кĕске кĕрĕклĕ кун хуралҫăпа иксĕмĕр Шлĕмлă Шемеккейпе пуплешсе ларатпăр.

— Мĕнле «кĕске кĕрĕклĕ кун»?— ыйтрăм эп ăна пӳлсех.

— Э-э, ҫавна та пĕлместĕн-и? Шăматкуна эпир «кĕске кĕрĕклĕ кун» тетпĕр. Ҫав кун иртерех ĕҫ пĕтет-ҫке. Ҫавăнпа ĕнтĕ. Ҫапла, пĕррехинче ҫав кĕске кĕрĕклĕ кун эпир хуралҫăпа чылаях лартăмăр. Шемеккейпе ытлашши ашкăннă теме ҫук. Ара, ҫавăн чухне шăпах пушар ҫĕкленнĕ ялта. Эпир, мурсем, тухкаласа пăхсах тăраттăмăр. Ҫавах сисмен. Ҫынсем пырса кăшкăрсан ҫеҫ ахлатса ӳкрĕмĕр. Вара мунча ҫунса пĕтсен акт ҫырма кăна ҫитрĕм эпĕ. Эсремет япали, ҫав ҫĕрĕк мунчашăн кăларса ҫапрĕҫ ĕҫрен. Справедливоҫ пур-и ҫынсен?! Ҫук, справедливоҫ тенине пĕлмеҫҫĕ вĕсем.

— Халĕ кунта аван ĕнтĕ.

— Чаплă! Тӳрех калатăп: чаплă! Мĕн пурĕ те лешсем ҫеҫ канăҫ памаҫҫĕ.

— Кăвакал аҫисем-и?

— Ҫавсем ҫав. Ыран хăмаран ҫапса вĕсем валли карцер тăватăп-ха. По всем правилам. Ларччăр унта. Эсĕ ма ĕҫместĕн, Ленă? Кăштах та пулин антар. Унсăрăн пире хисеплемен пек пулать.

Ленă пурпĕрех пĕр тумлам та тутанса пăхмарĕ.

— Манăн упăшка та юлашки ҫулсенче кăштах ҫак путсĕре сыпкаларĕ ҫав. Ҫавăнпах чирĕ те вăйланчĕ пуль. Вилессе те, тен, ҫавăнпа хăвăртрах вилчĕ пуль. Эпĕ кураймастăп эрехе. Тӳсме пултараймастăп. Илсе лартăр ку стакана ман умран,— тарăхсах кларĕ хĕрарăм. Унăн кăвак куҫĕсем самаях хаяррăн ҫиҫсе илчĕҫ. Ним тума та ҫук, Нихватăн ун умĕнчи стакана аяккарах илсе лартмалла пулчĕ. Заведующи, апла пулин те, тулли питлĕ, чылаях мăнтăр Ленă ҫине ăшшăн-ăшшăн тинкерчĕ, унăн кашни хусканăвнех сăнарĕ, унпа ĕнле те пулин кăмăллă, таравăт пулма тăрашрĕ. Ленă хăй упăшки ҫинчен каласа кăтартнă хыҫҫăн ҫав таравातлăх татах ӳсрĕ.

— Украинă хĕрарăмĕсем шуйттан пек хитре вĕсем. Тĕреклĕ. Эпĕ вĕсене салтакра чухне чылай тĕл пулнă. Пĕрне, Оксана ятлăскерне, питĕ юрататтăм. Анчах хушамачĕ килĕшмерĕ. Яла илсе килсен, йĕкĕлтесе кулĕҫ терĕм.

— Ун хушамачĕ мĕнлеччĕ вара?— кулса ыйтрĕ Ленă.

— Прибейголова.

— Эппин, хушаматĕнчен хăрарăн?— эпĕ те тӳсеймерĕм, кулса ятăм.

Каҫ тĕттĕмленсех пырать. Чӳречерен ҫĕнĕ уйăх, ҫăлтăрсем аванах курăнаҫҫĕ. Вăрăм уралла хĕр кăвакалсене витене йыхăрса кĕртрĕ. Шăпчăк темшĕн ҫывăхарах та ҫывăхарах килнĕ пек туйăнать, ун юрри уҫăраххăн, хальчченхинчен чылай хитререххĕн илтĕнет. Нихват лампă ҫутрĕ, вара тĕпелти шкап, сунтăхсем аванах курăнчĕҫ. Шкапăн виҫĕ сентри ҫинче те тăп-тулли кĕнеке. Вĕсене типтерлĕн ретлесе хунă. «Акă, пирĕн Нихват кĕнекесене юратать пулас»,— шухăшларăм эпĕ. Вара:

— Мефодий Матвеевич, эс вулатăн-и ку кĕнекесене?— терĕм.

— Э-э, эпĕ пулмасăр! Эпех,— темле ӳркевлĕн те шăппăн каларĕ заведующи.

Хуллен шкап патне пытăм. Унта мĕнле кĕнекесем пурри кантăк витĕр аванах курăнать: «Основы птицеводства», «Пекин кăвакалĕсем пысăк тупăш параҫҫĕ», «Кăвакалсене тăрантарса усрасси», «Фермă заведующийĕн справочникĕ» тата ытти те. Манăн юриех ҫав кĕнекесене тыткаласа пăхас килчĕ: Нихват, чăнахах та, вулать-ши вĕсене, вуламасть-ши?

— Итле-ха, Нихват. Хăвăн библиотекуна курма ирĕк пар мана. Юрать-и?— терĕм эпĕ.

— Юрамасăр! Юрать, юрать,— кăмăлласах килĕшрĕ заведующи. Анчах кĕсйисене чиксе, хыпашласа пăхрĕ: ҫăраҫҫи ҫук. Вара алăк патне ҫакнă пиншакĕ еннелле чупса кайрĕ. Ак тамаша! Унта та ҫăраҫҫи тупăнмарĕ иккен. Хайхи Нихват сĕтел ещĕкне ухтарма пуҫларĕ. Кайран хĕрсем ҫав тутăхса кайнă ҫăраҫҫине пĕрене ҫуракĕнчен аранах тупса пачĕҫ. Ҫав ҫуракра вăл сахалтан та виҫ-тăват уйăх выртнă. Унпа шкапа, чылай асапланса, аран уҫрăмăр. Тыткаласа пăхрăм кĕнекесене. Вĕсем магазинран мĕнле илнĕ, ҫавăн пекех тăраҫҫĕ. Никам та вуламан, тытса та курман вĕсене. Эпĕ хуллен шкапа хупрăм та паҫăрхи вырăнах пырса лартăм.

— Вулатăн эппин...

— Вулатăп. Анчах мĕн тума кирлĕ вĕсем мана? Эсĕ ют ҫын мар, тĕрĕссинех калатăп, пустуй вăхăта ирттерни ҫеҫ вĕсемпе. Мана мĕн, кĕнеке вуланăшăн укҫа хушса параҫҫĕ-и? Мĕн, кĕнекепе хырăм тăранать-и ман?

— Ма тăранмасть пултăр? Малта пыракансен опычĕпе паллашатăр та фермăна татах çĕклетĕр. Колхоз тĕрекленет, патварланать. Вара хăвăра та ырă, лайăх.

— Малта пыракансен опычĕ тетĕн-и? Эй, çăвар тутине ытлашши яма та кирлĕ мар. Пирĕн колхозра пула пĕлмест вăл. Пустуй!

— Мĕншĕн пула пĕлмест? Мĕншĕн пустуй!

— Эх, çавна та пĕлместĕн-и? Ăна услови урăхларах кирлĕ. Чăн-чăн услови.

— Условине хăвăрăн тумалла пуль. Кӳршĕ колхозри Мĕтрипе Матрӳне килсе туса памаççĕ вĕт-ха ăна.

— Эй, пирĕн колхозра!— алне сулчĕ Нихват, вара пасăр Ленăна панă стакана ярса тытрĕ те пĕр самантрах ĕçсе ячĕ. Унтан тата хĕрӳллĕрех сӳпĕлтетме пуçларĕ.

— Малта пыракансем тенине эс веçех ĕненетĕн-и? Пурне те тĕрĕс тетĕн-и? Эх, хулара пурăнатăр та, ним те пĕлейместĕр эсир. Чисти тăм писменех. Малта пырать тени вăл тепĕр чухне чĕпĕтсе те илет. Авă, тĕслĕхрен, пĕлтĕр «Заря» колхоз аш-какай енĕпе яланах малта ĕрĕхтерсе пычĕ. Рысак-лаша пекех. Ыттисем çине тăпра, грави сирпĕтсе кăна вĕçтерет. Хайхи кăçал пăхаççĕ, витисем пушах-мĕн шереметсен. Пĕлтĕр выльăхсене веçех сутса пĕтернĕ. Куртăн-и, епле пырса тапрĕ леш урхамах. Ун чухне, пĕлетĕр, «Заря» колхозра Фрол Филиппович председательте ларчĕ. Мĕнле калас, чап илчĕ, мухтава тухрĕ, хĕле кĕрсен вара вăшик! вĕренме вĕçтере пачĕ. Хальхи председателĕ пĕр кун варне аллипе тытнă, аран уткаласа пырать.

— Малта пыракансем кашниех ун пек мар-çке. Эсĕ картне сиктерсе лартатăн.

— Эй, пурте çавах!— парăнмарĕ Нихват.

— Пирĕн чăннипех малтисенчен вĕренес пулать. Вĕсен хыççăн утмалла. Анчах суккăр-паттăрла танкăлтатса пымалла мар. Маллаллине курса утмалла. Вĕренмеллех!

— Ну, камран? Кала-ха, камран?— мана хулран аллипе хытах тĕксе илчĕ заведующи.

— Сăмахран, «Победа» колхозран.

— Эй, каларĕ тата. Вĕсен çĕрĕ мĕнле, пĕлетĕн-и эсĕ? Вĕсен çĕрĕ хуп-хура. Тĕрĕссипе каласан, пирĕн мăрье хăрăмланă чухне те ун пек хура хăрăм тухмасть. Ну, тек тавлашатăн-и манпа? Ан тавлаш!— хăйĕн сарлака ал тупанĕпе мана сăмса тăрăх сăтăрса илчĕ Нихват.

— Çу-ук, санпа килĕшместĕп эпĕ. Мĕнле, Кольцовкăри колхоз пирки те çаплах шутлатăн-и?

— Эх-хе-хе! Вăл колхоза мĕн кирлине пурне те параççĕ-çке. Ăна çăвартан хыптараççĕ. Кунсăр пуçне, пĕлетĕн-и? Вĕсене, Еким Романчă, кам пырса тĕрĕслейрет? Вĕсем пурне те хаçатри пек тăваççĕ тетĕн-и? Вĕсем, кирлĕ пулсан, 350 гектар кукурус акаççĕ те, сана ме, 300 тесе кăтартаççĕ. Вара, кур, тухăç гектартан 1000—1100 центнер. Пĕлетпĕр ăна. Даром, вĕренмен пулсан та чухлатпăр.

Эпĕ хальхинче тарăхмаллипех тарăхрăм. Нихват çакăн пек сӳпĕлтетни калама çук çилентерчĕ мана. Тӳсейменнипе ура çине тăтăм.

— Пустуй палкатăн, юлташăм! Йăлтах пустуй! Пирĕн пурнăçа ĕненмелле. Çирĕп ĕненмелле!

Нихват ман сăмаха хăлхине чикрĕ-ши, чикмерĕ-ши — пĕлеймерĕм. Çапах та хăй ытлашши шаларах кĕрсе кайнине туйрĕ пулас. Вара çĕкленчĕ те, мана хулран чăмăртаса тытса, хулăн сасăпа юрласа ячĕ:

Эп халиччен юман, ай, касманччĕ,—
Ывăнтарать иккен алсене.
Эп халиччен ĕçкĕ, ай, ĕçменччĕ —
Пăтраштарать иккен чĕлхене.

Сартункаран илнĕ сар алсатуль,
Ик аллăма çапрĕ саррисем.
Тăвансем, пирĕн хăватлă ĕçкĕ —
Пите тухрĕ хĕрлисем.

Юрласа пĕтерсен, заведующи, урисене урай тăрăх йăкăш-йăкăш тутаркаласа, Ленă умне пырса тăчĕ.

— Мĕнле, чăваш юррисем килĕшеççĕ-и сана? Аван пек-и, тăванăм, чипер пике, майра патша?— терĕ вăл çепĕççĕн.

— Аван юрларăр. Килĕшет,— мухтарĕ ăна Ленă.

Чăнах, юрлас енĕпе Нихват кăшт малалла кайнă пек туйăнать. Салтак вăйĕи вĕреннĕ чухнехи пек ахаль çеç кăшкăрашмасть, сăмахĕсене те пĕлет. Анчах çак юрă Нихватăн пĕртен-пĕр юрри иккен. Урăх вăл хăй ĕмĕрĕ тăршшинче нимĕнле юрă та вĕренмен. Ун çинчен кайран хăех пĕлтерчĕ.

— Тек нимĕнле юрă та пĕлместĕп эпĕ. Тĕрĕссипе, кирлĕ те мар мана. Эпĕ пĕр юрă юрласах савăнатăп. Çав юрра юрласах кулянатăп, макăратăп. Çав юрăпах телейлĕ те, хурлăхлă та. Манăн пĕр юрăпах кулă та, куççулĕ те тухать,— терĕ вăл.

Çĕр нумая кайрĕ пулас. Манăн ыйхă киле пуçларĕ, Ленă та анаслать. Çакна Нихват, хĕрĕнкĕрех пулин те, сисрĕ.

— Ну,— терĕ вăл, ман пата, алăк патне, пырса.— Пӳртре хăнкăла пур пирĕн. Ют çынсене хытах ĕрселеççĕ. Çавăнпа сана усăрах çĕре, çенĕхе, вырăн сарса парăпăр. Юрать-и? А, леш майри, атя, пӳртре те аптрамĕ. Вăл мăнтăр-ха. Унăн юнĕ пирĕн хăнкăласем çыртнипех пĕтес çук.

— Апла аван мар-çке.

— Эй, мĕн аван марри! Халь ывăнса килнĕскер — туймасть те вăл.

— Тен, хĕрсемпе вырттармалла мар-и ăна?

— Ан аташ. Хĕрсем вите тăрринче çывăраççĕ. Унта ку майра хăпараймĕ те. Çĕрле анмалла-мĕн пулсан, тӳрех çĕре лаплатĕ. Пусми чăрик-чарик çеç. Ик-виç патакки тухса ӳкнĕ.

Манăн ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ. Эпĕ, Ленăна ырă каç сунса, çенĕхе тухрăм. Унта вырăн сарсах хунă иккен. Ăшă вырăн çине кĕрсе выртрăм та паянхи ĕçсем, тĕл пулусем çинчен шухăшларăм. «Эх, ытла та тĕлĕнмелле çынсем пур иккен тĕнчере! Çав çынсем хамăр хушăрах, хамăр çумрах пурăнаççĕ. Вĕсем совет панă телейпех киленеççĕ, совет çăкрине çиеççĕ. Вĕсем совет саманинче çуралса ӳснĕ. Анчах чăн-чăн çын пулса çитмен-ха. Вĕсен чун-чĕри тасалса, юсанса, çирĕпленсе çитмен. Ара, кам шутланă-ха Нихват çакăн пек пуласса? Авă, куратăр-и, вăл ниме те вĕренме, пĕлме тăрăшмасть. Вăл пурнăçра ахаль тӳнклетекен хăвăл çăка каски евĕрлех. Кирек мĕнле пулсан та, унпа йĕркеллĕ, куçа-куçăн каласса пăхмалла. «Ан шарли» пирки те çирĕп сăмах каламалла. Вĕсем ăна кăвакалсене памалли тырăран юхтараççĕ пулас. Чăннипех те çаплах. Анчах мĕн тума ĕçрĕм-ха эп ăна? Çур стакан ĕçрĕм. Лăп та шай çур стакан. Хам та ухмах эпĕ, айван...»

Шăпчăк халĕ те пĕр канмасăр юрлать. Çывăхрах шыв шăнкăртатса юхни илтĕнет. Пӳрт çумĕнчи пĕчĕк çырмаран юхса анать ĕнтĕ çак шыв. Çав çырма вĕçĕнче çăлкуç пулаканччĕ.

Пӳртре ура сассисем илтĕнми пулчĕç. Алăк патĕнчен кăшт çутă курăнатчĕ. Халь çук иккен. Ах, кăмăллă-çке çакăн пек вăрман çывăхĕнчи, улах вырăнти пĕр-пĕччен çуртра çывăрма. Хăвна ху темле канлĕреххĕн, ирĕкреххĕн туятăн. Тĕнче сана хăйĕн сăпкинче ярăнтарнă пекех сисĕнет. Сикетĕн вара сасăнса. Сикетĕн. Акă, эпĕ, чăнахах та, çенĕхре мар. Эпĕ сăпкара. Эпĕ — пĕчĕкçĕ те хавасла ача. Мĕнле пĕчĕклентĕм-ха эпĕ? Хамăн тăн-пуç халичченхи майлах-çке. Пысăк чухнехи майлах.

Эпĕ çапла нумай çывăрнă-и, çывăрман-и, пĕлместĕп — сасартăк хыттăн шăкăр-шакăр! кĕрĕс! тутарнипе вăрантăм. Мĕн амакĕ пулчĕ-ши ку? Пӳрт патĕнчен йытă-мĕн иртсе кайрĕ-ши? Е кам та пулин картишне тухса кĕчĕ-ши? Итлекелесе выртрăм-выртрăм та, нимне те пĕлеймесĕр, каллех ыйхăлама пуçларăм. Анчах çывăрса кайма ĕлкĕреймерĕм, иккĕмĕш хут шăкăр-шакăр! шăкăр-шакăр! тутарни илтĕнчĕ. Халĕ тинех пĕлтĕм: пӳртре темскер куçараççĕ иккен. Унта мăкăртатаççĕ, калаçаççĕ. Çав вăхăтра виççĕмĕш хут шăкăр-шакăр! тутарни илтĕнчĕ те, çенĕхе такам вăркăнса тухрĕ. Сĕм тĕттĕм пирки эпĕ ăна вуçех курмастăп. Тухнă çын ним шарламасăр тăрать, вăл хашкаса, пăлханса сывлани çеç сисĕнет.

— Кам тухрĕ унта?— чĕнтĕм эп хуллен.

Хайхи çын ман çывăхарах килчĕ пулас — урай хăмисем чĕриклетрĕç. Вара Ленă тытăнчăклă сасăпа, çилĕллĕн:

— Мĕн тума илсе кĕтĕн эс мана çак çурта? Мĕн, манран кулма шухăш тытрăр-и? Эпĕ сана кун пек çын тесе шутламанччĕ,— терĕ.

— Мĕншĕн апла калатăн? Мĕн пулчĕ? Хăнкăласем канăç памаççĕ-и?— ыйтрăм эп пăшăрханса.

— Хăнкăла мар-ха. Леш ӳсĕр супъях аташса çӳрет. Вăт, путсĕр! Мана вăл ун пек-кун пек хĕрарăм тесе шутлать пулас. Пĕр чĕптĕм те çывраймарăм.

Эпĕ Нихват аплах аташасса аса та илменччĕ. Хамăр ял çынни, хампа пĕрле ӳснĕ тантăш ун пек хăтланни чăтма çук кӳрентерчĕ. Мĕнле хăюлăх çитнĕ-ха унăн Ленă çумне пырса тĕкĕнме? Намăс-çке ку, чăтма çук намăс! Çакна Нихват хăй чухлать-ши, чухлаймасть-ши? Е унăн чулланнă, пăнтăхнă пуç миминче нимĕнле ырă, пархатарлă, шухăш та çуралмасть? Е вăл хăйĕн намăсне тахçанах кĕленчери шăршлă шывпа çăтса янă? Ленă çаплах чĕтрет, ассăн сывлать.

— Вăт, мĕнле сан тусусем, Энтип. Каçах тухса каймаллаччĕ кунтан. Ахалех юлтăмăр. Сана пула-çке.

— Ара, эс, Ленă, ытлашши ан çилен-ха, каçар. Кайнă пулсан, вăрманта аташса çӳреме тиветчĕ. Каçĕ тĕттĕм, çулĕ пылчăклă.

Çак вăхăтра пӳртрен, кăптăр-каптăр тутарса, Нихват та тухрĕ. Çенĕх алăкĕ патне çитсен, чарăнса тăчĕ. Шăрпăк çутрĕ. Çунакан шăрпăклă аллине çӳле çĕклесе çенĕх ăш-чиккине пăхрĕ. Ленăна курсан:

— Кĕрсе çывăр. Эпĕ кăшт хĕрĕнкĕрен çеç аташнă,— терĕ.

— Сан пата кĕме-и? Ухмах мар-ха эп,— сиввĕн каласа хучĕ Ленă. Ун хыççăн ман çумах пырса ларчĕ. Нихватăн текех каласса тăма май килмерĕ, вăл хуллен пӳрте кĕчĕ.

— Пĕрре лайăхрах çатлаттарса ямаллаччĕ сан ăна. Вут-хĕм тухтăр пулатчĕ куçĕнчен,— куларах каларăм эпĕ.

— Лекрĕ-ха ăна. Аванах лекрĕ. Хăй тата, мур этемми, вăйлă. Кăвакал ашĕ çисе мăнтăрланнă вăл. Сысна! Мана акă мĕн каларĕ: «Пĕрре чуп ту, пĕрре чуп тунăшăн пĕр кăвакал ашĕ паратăп. Эпĕ кăвакал ашĕнчен ап-

трамастăп. Савалиç вăл ман. Аçисем шыва путарса вĕлерчĕç, тесе акт çыратăп та, ĕçĕ те пĕтнĕ. Шито-крытă»,— тет.

Ленă тек пӳрте кĕмерĕ. Эпĕ ăна кравать çине вырттартăм, хам вара, пиншаксем пăрахкаласа, урайĕнче çĕр каçрăм. «Эй, тĕнче!— чылайччен шухăшласа выртрăм эпĕ,— коммунизм тăвас пулсан, нумай кĕрешмелле, нумай тăрăшмалла, ахаль кăна мар, чунчĕререн тăрăшмалла пирĕн. Пирĕн чăннипех çĕнĕ этемшĕн, çутă, ырă, сăпайлă, ĕçчен этемшĕн кĕрешмелле. Пирĕн пĕр минут та, пĕр секунт та лăпланса пурăнма юрамасть. Пирен коммунизма Программăра кăтартнă вăхăтра çитмеллех. Эпир унта çитетпĕрех. Пирĕн Нихват пек йĕксĕксене ăса вĕрентмелле. Ленă! Çуркуннехи шупка кĕрен-чечек. Йĕплĕ хулă чечекĕ. Сана кӳрентерекен çынсене уйрăмах, уйрăмах тарăхатăп эпĕ. Мĕншĕн тесен... мĕншĕн тесен эпĕ сана тахçан юратнă-çке. Эсĕ хĕр чухне, хам каччă чухне. Çав юрату, паçăрах каланăччĕ, мана чĕререн хурçă йĕппе чикнĕ пекех чикнĕ».

Ирхине манăн Нихватпа хыттăн калаçас килетчĕ. Анчах калаçма май килмерĕ: вăл мухмăр уçнă та каллех хĕрĕнкĕ çӳрет. Эпир тухса кайнă чухне заведующи, хăрах аллине пуртă тытнăскер, икĕ вăрăм хăма сĕтĕрсе пыратчĕ.

— Ну, чипер кайăр. Манăн васкамалла-ха. Хайхи лешсем валли карцер тăватăп,— терĕ вăл, пирĕн тĕлте чарăнса тăмасăрах. Чарăнса тăма, тен, намăс пек туйăнчĕ пулас. Пичĕ çинче кăн-кăвак мăкăльсем пурччĕ.

Эпир малтан пĕве çумĕпе утрăмăр. Унта каллех шап-шурă кăвакалсем ишеççĕ. Çатăлтатаççĕ, нартлатаççĕ. Тӳпе паян та тĕксĕм-ха. Пĕлĕтсем çĕр çине анса курас тенĕ пекех аялтан-аялтан, çӳлĕ йывăç тăррисене лекелеке шăваççĕ. Пирĕн çул каллех вăрмана кĕчĕ. Каллех çӳлĕ юмансем, хурамасем, йĕлмесем. Каллех йӳçенкĕ нӳрлĕ сывлăш. Каллех упа сарри. Каллех хурăн çырли тĕмĕсем, шурă чечексем. Нихватран уйрăлсан, мана уçăрах та хаваслăрах пек туйăнчĕ. Эх, Нихват! Икĕ çыншăн, виçĕ çĕр кăвакалшăн заведующи туса янă ăна кунта. Ĕçĕ пулмасан та, пуçлăх. «Пысăк» пуçлăх. Колхоз правленине çитсенех ун пирки сăмах хускатма тивет. Паянах. Çийĕнчех.

Çакăн çинчен Ленăпа калаçса пăхма шутларăм.

— Ленă,— терĕм эпĕ,— ку Нихвата ахалех хăварма юрамасть.

— Мĕн тăвас тетĕн вара?

— Правленинче тĕпĕ-йĕрĕпе каласа паратăп.

— Эй, мĕн çыхланатăн çав йӳçĕ çынпа,— килĕшмерĕ Ленă,— Ун пирки тарăхса, нервăна пăсса çӳре-ха тата? Правленире ларакансем пĕлĕç-ха хăйсенне хăйсем. Колхозниксем хăйсем те суккăр мар. Сисĕç, ăнланĕç. Кашни ухмахшăн, лăп-лапшăн, путсĕршĕн, хыркăçшăн эпир ответ тытма тивĕç мар.

— Çук, апла юрамасть, Ленă. Çитменлĕхе, киревсĕрлĕхе курсан, нихçан та, нихçан та ахаль иртсе кайма, пĕлмиш пулма юрамасть. Эпĕ илтекен хăлхапах клуххуй пуласшăн мар. Эпĕ калаçакан чĕлхепех нимуй пуласшăн мар. Эпĕ таса куçпах суккăр пуласшăн мар.

— Тепĕр чухне суккăр пулни те юрать.

— Çук, юрамасть. Пурăннă чухне юрамасть. Вилсен кăна куçа хупмалла, суккăр пулмалла. Вилнĕ çын куçне уçса выртни илемсĕр.

Кайсан-кайсан, ĕнерхи пекех, çамрăк вăрмана кĕтĕмĕр. Пĕр тĕлте, ĕнерхи пекех, йĕплĕ çырла тĕмĕсем. Вĕсем çеçкере. Шупка кĕрен чечексем, çепĕç, хаваслă, ырă чечексем. Анчах çак чечексен тĕлĕнче манăн Ленăран уйрăлмалла пулчĕ. Вăл Çăлпуçне — сылтăмалла пăрăнчĕ. Эпĕ Çăкалăха — тӳрĕ çулпа утрăм.

Çăкалăх ялĕ вăрман хĕрринчех ларать. Ун урамĕсенче ем-ешĕл йăмра, хурăн. Кашни килĕн тенĕ пекех сад. Çавăнпа, аякран пăхсан, Çăкалăх хăй те ката пек, вăрман пек курăнать. Кунта вăрманти пекех эмеллĕ сывлăш, вăрманти пекех шăпчăк туйĕ кĕрлет, вăрманти пекех куккук тунсăхласа авăтать. Çаксем кăна-и? Çук, çаксем кăна мар. Çăкалăхра ӳхĕ те ӳхĕрет, кĕпшĕл те курăнкалать. Тепĕр чухне пăшисем те кунти аслă урамсем тăрăх канлĕн утса çӳреççĕ.

Колхоза пысăклатнă хыççăн правлени çуртне, ытти ялсенчен килекен колхозниксене çывăхрах пултăр тесе, тепĕр енне куçарса лартнă иккен. Эпĕ тӳрех унта кайма шутларăм. Чун-чĕрери хĕрӳллĕх, тарăху сĕврĕличчен калаçу лайăхрах пулакан.

Акă, правлени çурчĕ патне çитрĕм. Унтан мана хирĕç тулли халăх кĕпĕрленсе тухрĕ. Пурте тем çинчен калаçаççĕ, тавлашаççĕ, кулаççĕ. Вĕсем бригадирсем, механизаторсем, фермăсенче ĕçлекенсем. Кашниннех сăн-пичĕ хĕвелпе пиçнĕ, хĕрелнĕ. Кашниех хаваслă, шухăшлă, çилĕллĕ, васкавлă. Кашниех тарăхать, савăнать, çунатланать Кусем, пĕрре пăхсах паллă, Нихват пек пăнтăхнă çынсем мар. Кусем йăлт урăх çынсем. Вĕсенчен хăшпĕрисем мана палласа сывлăх сунчĕç, алă пачĕç. Нумайăшĕ асăрхамасăрах иртсе кайрĕç.

Колхоз председателĕ — Фрол Иванович хăй пӳлĕмĕнче пĕчченех. Вăл, пуçне сĕтел çине

кунăскер, ман еннелле аран-аран пăхса илчĕ, вара каллех тайăнса выртрĕ. Эпĕ ним калама та аптрарăм, алăк патĕнче тăтăм. Кăшт вăхăт иртсен, председатель пукан çине тӳрленсе ларчĕ. Ун хыççăн хуллен:

— Темскер чĕре чиксе кайрĕ-ха ман. Аран лăпланчĕ пулас. Ĕçĕ путсĕр-çке пирĕн. Ним канăç та çук,— терĕ вăл.

— Йывăр та кирлĕ, ответлă ĕç,—терĕм эпĕ, тинех ăна алă парса.

Сăмах çине сăмах. Эпир унпа аванах калаçса кайрăмăр. Юлашкинчен ăна хам кăвакал ферминче пулни çинчен, унтах çĕр касма тивни çинчен пĕлтертĕм. Нихват çинчен те йăлтах каласа патăм. Элеклесе мар, тĕрĕссине. Фрол Иванович ман сăмахран питех тĕлĕнмерĕ. Ахăртнех председатель çав фермă заведующийĕн йăли-йĕркисем çинчен тахçантанпах аван пĕлет пулмалла.

— Ĕненетĕп эсĕ каланине,— терĕ Фрол Иванович.— Паян, акă, ирех правлени ларăвĕ ирттертĕм. Унта Нихват пирки хытах çунтарчĕç. Вĕренмен аристократ вăл, теççĕ. Вăтăрмĕш çулхи çын, теççĕ. Нимĕн те вуламастьçке, амак пуçĕ. Кăвакал ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан «Знамя» клхоза семинара кайсан, хамах куртăм, çынсем мĕн каланине итлес-пĕлес вырăнне, яланах печени çисе çӳрерĕ. Печенине пы-ысăк пакетпах илнĕ. Пăхма та аван мар. Эй, мĕн каласси пур ун çинчен. Хама çурри çавах чире ячĕ пуль. Çĕртен, ял-йышран ютшăннă çын вăл. Тăпран хăракан çын. Яланах пуçлăх пулас килет унăн. Çерçи сăмсинчен пĕчĕкçĕ пулсан та, пуçлăх пулас килет. Хăть вĕренпе çыхса пăрах эс ăна, çавах пуçлăха туртăнать. Пуçлăх чирĕ унăн. Вĕренмен аристократ чирĕ. Диагнозĕ пуриншĕн те паллă.

— Диагнозне пĕлнĕ пулсан, юсамалла пулнă ăна. Диагнозне пĕлсен, юсама çăмăл, теççĕ.

— Тĕрлĕ чир тĕрлĕрен пуль çав.

— Мĕн, эсир ун чирĕ юсанман чир тесшĕн-и?

— Çук, халĕ апла каласшăн мар. Эпир ăна малтан, чăнах та, юсанман чир тесе шутланă. Халĕ апла шутламастпăр. Нихват ĕçĕ çинчен тепĕр ларура тĕплĕн сӳтсе яватпăр. Ун пек вĕренмен аристократсене текех хĕрхенӳ çук. Хĕртнĕ çатма çуллаттаратпăр вĕсене.

Çак ялта эпĕ лăп та шай пĕр эрне пурăнтăм. Нумай çынсене тĕл пулма, вĕсемпе калаçма тӳр килчĕ манăн. Йĕнерчĕк Нихвачĕ пирки вĕсем пурте йĕрĕнсе, тарăхса пуплерĕç. «Шлемлă Шемеккей» пуçани вăл, çĕр çинче пуçхĕрлĕ пурăнать вăл, терĕç ун çинчен. Амбарсем патĕнчи хуралçă, Лавруш мучи, хĕвел ăшшинче кăшт ыйхăласа ларатчĕ пулин те, ун ятне илтсен, якăлт сиксе тăчĕ.

— Йĕнерчĕк Нихвачĕ-и?— терĕ вăл шăлне шатăрт! тутарса.— Йĕнерчĕк Нихвачĕ вăл — ял-йыш çинчи, халăх çинчи йĕнерчĕк. Çурăма суран кăларакан йĕнерчĕк.

**Геннадий АЙХИ**

* * *

*Хăш чух мĕскершĕн тĕплĕн çыраймастпăр?*
*Çынсемшĕн ӳстересчĕ кăмăла!*
*Тен, тантăшсем, шухăшласах каймастпăр?*
*Хавхалану та çук çакна пула.*

*Поэзи вăл — кун-çул та ĕмĕр ĕçĕ,*
*Çăмăлттайсем çуйхăшмалли çурт мар.*
*Çĕршыв вăйне ун вăйĕпе виçеççĕ,*
*Епле, туссем, çакна эпир манар?*

*Ĕмĕрпеле пĕр тан пулас тесессĕн,*
*Ялан тан пул эс ĕç этемĕпе,*
*Ун шанчăкĕн вăйне ăнкарăн эсĕ*
*Чи сисĕмлĕ поэзи чунĕпе.*

*Тен, çакăншăн çеç кирлĕ пулĕ эпĕр.*
*Çак шухăшсем йĕркеленсе çитсен,*
*Ĕç халăхĕн йышне эпир кĕретпĕр,*
*Чуна çирĕплетсе, тен, çĕнĕрен.*

# Çĕр номер

ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНĂМĂР, эсĕ халь алла тытнă «Тăван Атăл» альманахăн çĕнĕ кĕнеки — 1963 çулшăн тухнă пĕрремĕш номерĕ кăна мар. Вăл — унăн çĕрмĕш номерĕ...

Çапла, юлташсем, çĕрмĕш номер! Çĕр номер — çĕр кĕнеке. Кашни кĕнекине вăтамран вуншар пичетлĕ лист тесе шутласан (вăл чăнах та çапла) — пин пичетлĕ лист е пысăк форматлă вунă пин страницă пулать.

Сахал-и вăл, нумай-и? Пирĕн шутпа — чылай... Çав вунă пин страницă çинче сахал мар произведени çапăнса тухнă — чăваш писателĕсем хăйсем çырнисем те, вырăсларан тата ытти чĕлхесенчен куçарнисем те; жанр енĕпе илсен, çав йышлă произведенисем хушшинче пысăк романсемпе анлă повеçсем те, кулленхи пурнăçа кăтартакан калавсемпе повеçсем те, пысăк поэмăсемпе лирикăллă сăвăсем те, драмăсемпе комедисем те, тĕрлĕ-тĕрлĕ ыйтусемпе çырнă статьясем те, çĕнĕ кĕнекесем çинчен каласа паракан критикăллă обзорсемпе рецензисем те пайтах пулнă.

Енчен те эсир альманахăн пур кĕнекисене те страницăн-страницăн уçса тухас пулсан, хăвăрах курнă пулăттăр: чăваш совет литературин ылтăн фондне кĕрсе юлнă паллă произведенисем пурте тенĕ пекех «Тăван Атăлта» пичетленнĕ, вулакансем патне чăн малтан унăн страницисем урлă çитнĕ, кайран тин уйрăм кĕнекен тухнă.

Альманахăн хăйне майлă «юбилей» килсе çитнине шута илсе, эпир хамăрăн вулакансене унăн кун-çулĕ çинчен, унта мĕнле паллăрах произведенисем пичетленни, вăл мĕнле ӳссе, халăх хушшинче ытларах та ытларах сарăлса пыни çинчен кĕскен те пулин каласа кăтартасшăн.

Çĕрмĕш номер тухнă ятпа çаксем çинчен калаçса илни вырăнсăр пулмĕ, тетпĕр.

I

Тĕп-тĕрĕссипе каласан, пирĕн альманах çĕр номер мар, унтан ытларах тухнă — пурĕ 115 номер, анчах пĕр хушă, 1937—1939 çулсенче пачах тухман пирки, пĕтĕмĕшлĕ нумерацине 1940 çултанпа, альманах çĕнĕрен тухма тытăннă вăхăтранпа шутласа пыма тытăннă. Анчах эпир унăн малтанхи номерĕсене те асăнмасăр хăварма пултараймастпăр.




Чăн малтан пирĕн альманах «Трактор» ятлă пулнă. Унăн пĕрремĕш номерĕ 1931 çулта тухнă. Хальхи пекех, альманаха ун чухне те икĕ уйăхра пĕрре кăларма шутланă курăнать, пĕрремĕш номерĕн хуплашки çине «Январь-февраль» тесе çырнă, анчах 1931 çулта пĕтĕмпе те пĕр номер кăна тухнă, иккĕмĕш номерĕн хуплашки çинче «1932» цифрă тăрать. Ку çулта икĕ номер тухнă, 1933 çулта вара пилĕк номер таранах кăларма вăй çитернĕ, 1934 çулта — каллех иккĕ, 1935-мĕшĕнче — пĕрре кăна.

Ун чухне альманах халăх хушшине хальхи пек подпискă тăрăх саланман, ăна кĕнеке магазинĕсемпе киосксенче ахаль кĕнеке пек сутнă, çавăнпа та вăл календарьти срoксенче мар, пичетленме юрăхлă материал пухăннăçемĕн тухса пынă.

1936 çулта альманах ятне улăштарнă, «Трактор» вырăнне вăл «Илемлĕ литературă» пулса тăнă. Çав çулхине ăна тăватă номер кăларнă — кашни кварталта пĕрер кĕнеке. Унтан вара тухма чарăннă, виçĕ çул хушши вуçех тухман. Чăваш литературишĕн ку çулсем — питĕ йывăр, ăна нумай сиен кӳнĕ çулсем пулнă. Ун чухне ним айăпсăр çынсене, вĕсем çинчен элеклесе, репресси тунă, пĕр сăлтавсăр тĕрмене хупса лартнă çынсем хушшинче чăвашсен паллă писателĕсем те сахал мар пулнă. Вĕсенчен хăшĕсем таврăнмаймарĕç те. Тен, харăсах икĕ литературă органĕ («Сунтал», «Илемлĕ литературă») кăларса тăма писательсен организацийĕн вăйĕ те юлман пулĕ...

1940 çулта альманаха каллех кăларма тытăннă. 1936 çулти пекех, ăна «Илемлĕ литературă» ятпа кăларнă. Çак ятпа вăл виçĕ çул çурă тухса тăнă, 1944 çулхи август уйăхĕнче вара унăн ятне «Тăван Атăл» туса хунă та, çавăнтанпа çак ятпа тухса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр кунсенче пирĕн пур журналсем те («Сунтал» — хальхи «Ялав», «Капкăн» т. ыт. те) укçа-тенкĕ çитменнипе, пуринчен те ытларах тата хут çуккипе тухма чарăннă. Ун чухне республикăри парти

хаçачĕсем те — «Красная Чувашия», «Чăваш Коммуни» икшер страницăллă çеç пулнă. Анчах альманах тухма пăрахман, ытла тĕрĕс-тĕкелех мар пулин те, çулталăкра икшер-виçшер номер тухнă-тухнах. Тăван литературă аталанăвĕшĕн ку çав тери аван пулнă. Альманах тухман пулсан, чăваш писателĕсен вăрçă вăхăтĕнче çырнă паха произведенийĕсем — совет çыннисен иксĕлми патриотизмĕ çинчен, вĕсен хаяр çапăçусенчи хастарлăхĕпе хăюлăхĕ çинчен каласа паракан повеçĕсемпе калавĕсем, сăввисемпе поэмисем, очеркĕсем, пьесисем вулакансем патне часах çитеймен пулĕччĕç. Çавăнпа та вăрçă вăхăтĕнче альманах ĕçĕ питĕ пархатарлă пулнă. Ун çинчен эпир каярахпа тĕплĕнрех калăпăр-ха.

II

Чăваш писателĕсен Союзĕ — вăл çулсенче ЧППА (Чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕ), вырăсла — ЧАПП, вăтăрмĕш çулсенчех, «Сунтал» (хальхи «Ялав») журналсăр пуçне хулăн альманах кăларма тытăнасси мĕнрен килнĕ-ха!

Сăлтавĕ кунта пĕрре: вăтăрмĕш çулсенче, пĕрремĕш пилĕкçуллăх вăхăтĕнче, çĕршывра индустриализаци тата коллективизаци анлăн сарăлнă чух, пирĕн литературă унччен малтанхи çулсенхинчен нумай вăйлăрах та хăвăртрах аталанса кайрĕ. Шăп та çавăн чух ĕнтĕ пирĕн пирвайхи романсем çуралса тухрĕç. Литературăна пултаруллă çамрăксем пĕр харăсах йышлăн хутшăнчĕç. Ухсай Яккăвĕ, Андрей Петтоки, Митта Васлейĕ, Илпе Тукташ, Уйăп Мишши, Нестер Янгас, Алакер Васлейĕ, Леонид Агаков, Кусма Пайраш, В. Хутар-Долгов, Михаил Сироткин, Айзман Микули, Е. Эллиев, кăшт каярахпа Аркадий Эсхель, Иван Ивник, Александр Алга, Стихван Шавлы, Кусма Чулкаç, Илпек Микулайĕ тата ытти нумай ятсем пирĕн литературăра шăп та ĕнтĕ çав хĕрӳллĕ строительствă пуçланнă çулсенче палăрнă.

Каламасăрах паллă — çавăн пек пысăк ушкăн тĕрлĕ жанрсемпе çыракан çĕнĕрен çĕнĕ произведенисене «Сунтал» — вăтăр икĕ страницăллă çӳхе журнал — «çăтса яма» пултарайман. Çавăнпа та писательсене тепĕр журнал, пысăкраххи кирлĕ пулнă.

Çавăн пек «хулăн» журнал вырăнне «Трактор» альманах пулса тăнă. Унăн редколлегине ун чухнехи паллă писательсене кĕртнĕ — Аркадий Золотова, В. Краснов-Аслине, Н. Васанккана тата Иван Мучие. Çамрăккисенчен редколлегие Мĕтри Васлейĕ кĕнĕ.

«Тракторăн» малтанхи номерĕ А. Золотов çырнă «Çӳлĕрех сыпăка» ятлă умстатьяпа уçăлать. Ку статьяра мĕн çырни унăн ятĕнченех паллă. Автор писательсене хăйсен творчествинче çӳлĕрен çӳлерех пусăма çĕкленме, социализм строительствинче халăха хавхалантаракан тарăн идейăллă, илемлĕ произведенисем çырма чĕнет.

Малтанхи номерте В. Краснов-Аслин «Тăвалла» романĕн пирвайхи сыпăкĕсем, Н. Патманăн «Воблă çинчен» ятлă повеçĕ, Андрей Петтокин граждан вăрçи паттăрĕсем çинчен çырнă «Çирĕм иккĕ» поэми, Алакер Васлейĕ, Ехрем Иванĕ, Н. Пиктемир, К. Наманган сăввисем тата Н. Васанкка Çеçпĕл Мишши çинчен аса илсе çырнисем пичетленсе тухнă.

Иккĕмĕш номерте (вăл 1932 çулта тухнă, терĕмĕр) Илле Тукташăн «Вăкăр çырми» повеçĕ (колхозсем тума тытăннă вăхăтри кĕрешӳ çинчен, К. Пайрашăн «Йывăр кунсем» калавĕ, С. Эльгерĕн «Хуçисемпе лакейĕсем» ятлă инсценировки, А. Петтокки, Уйăп Мишши, Ухсай Яккăвĕн сăввисем, М. Калайăн малтанхи колхозсен пурнăçне кăтартакан очеркĕ тата В. Хутар-Долгов критикăн «Пролетарилле-колхозла очеркизм ыйтăвĕсем» ятлă статьи çапăннă. Ку статья ячĕ пире хальхи вăхăтра тĕлĕнмеллерех пек туйăнать, ун пек терминологи тахçанах пăрахăçа тухнă ĕнтĕ, анчах статйинчи шухăшсем паянхи куншăн та тĕп-тĕрĕссипех юлнă. Автор çав çулсенче çĕнĕ стройкăсем, колхозсем çинчен çырнă очерксене тишкерсе тухать те, писательсене пурнăç çине витĕмлĕрех пăхма, хулара та, ялта та çĕнĕ пурнăç тăвакансем çинчен çиелтен шăйăрттарса мар, тĕплĕнрех, илемлĕрех çырма, вĕсен ăш-чиккине уçса пама чĕнет.

«Тракторăн» пирвайхи номерĕсем çинче эпир юри ытларах чарăнса тăтăмăр, мĕншĕн тесен вĕсем питех те кăтартуллă, альманаха пуçарса яракансем ăна чăннипех лайăх, сулăмлă содержанилле, халăхăн культурăллă пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăракан орган тăвас ĕмĕтпе ĕçленине палăртса тăраççĕ. Ахальтен мар альманах ун чухнех 4 пинлĕ тиражпа тухнă. Ун чухне республикăри хаçатсен тиражĕсем те 7—8 пинрен иртмен.

Малалли номерĕсенче ку альманахра М. Данилов-Чалдунăн «Вут ăшĕнчен», «Шахтăра», «Партизансем», М. Трубинан «Мучар», С. Эльгерĕн «Тĕнче вăрçи кунĕсем» (кайран «Вутпа çулăм витĕр» ят панă), Е. Элиевăн «Çаран çинче», М. Кипекĕн «Темаль» калавĕсем, И. Максимов-Кошкинскин «Атăл кĕввисем», «Çĕр çĕкленет», В. Алакерăн «Ураса», П. Осиповăн «Çĕнĕ хум», Н. Мранькан «Аван пурăнатпăр» пьесисем çапăннă, чăваш художникĕсен живописĕ, классиксен произведенийĕсене чăвашла куçарасси, кулăш литератури т. ыт. теорипе критикăллă статьясем тухнă.

1934 çулта, Пĕтĕм Союзри совет писателĕсен пĕрремĕш съезчĕ пулса иртнĕ хыççăн, «Тракторта» Алексей Максимович Горький çав съездра тунă доклада пĕтĕмпех куçарса кăларнă. Поэзи жанрне илсе пăхас пулсан, «Тракторта» вăл çулсенче çамрăксен сăввисем ытларах тухнă — Ухсай Яккăвĕн, И. Ивникĕн, А. Эсхелĕн, Уйăп Мишшин.

1936 çулта «Трактор» вырăнне «Илемлĕ литературă» тухма тытăнать. Ăна виçĕ уйăхра пĕрре,— çулталăкра тăватă хут кăларма палăртнă пулмалла. 1936 çулта вăл чăнах та тăваттă тухнă. Çав номерсенче эпир пачах та çĕнĕ ятсене тĕл пулатпăр. Пĕрремĕш номертех К. Сергеевăн «Тăван ял» ятлă самаях пысăк повеçĕ пур. Ку автор — хальхи паллă прозаик Кусма Турхан пулнă иккен. Иккĕмĕшĕнче Ал. Бачковăн икĕ сăвви тухнă. Ку вăл — Александр Алган ун чухнехи хушамачĕ пулнă. Н. Илпек, Г. Савгай ячĕсем пĕрремĕш хут палăраççĕ. Аслăраххисенчен Н. В. Шупуççынни, П. Хусанкай сăввисем пур.

Темрен килнĕ ку, пĕлсех çитерейместпĕр, анчах çав 1936 çулта кăларнă «Илемлĕ литературă» номерĕсенче чăваш писателĕсем çырнă оригиналлă произведенисенчен ытларах — вырăсларан куçарнисем пичетленсе пынă. Ытларах та мар, ытлашшипех темелле. Тăватă номерте эпир А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романне (П. Хусанкай куçарнă пĕрремĕш редакци), авалхи Греци драматургĕ Аристофан çырнă «Мул» комедине, В. Г. Белинский Пушкин пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясене, Короленко, Зощенко калавĕсене т. ыт. куратпăр. Оригиналлă произведенисем вара пит сахал пулнă — В. Краснов-Аслин «Тымар» ятлă пĕчĕк повеçĕ, Чалдунпа Паймен калавĕсем, темиçе сăвă.

Чи интереслĕ те паллă вырăн йышăнакан материал — Франци халăхĕн чаплă писателĕ, Совет Союзĕн шанчăклă тусĕ пулнă Ромен Роллан 1936 çулхи майăн 26-мĕшĕнче чăваш халăх поэчĕ Николай Иванович Шелеби патне янă çыру пулса тăрать. Ăна альманахăн çав çулхи виççĕмĕш номерĕнче кăларнă.

III

1940 çулта — виçĕ çул тухмасăр тăнă хыççăн — «Илемлĕ литературă» каллех тухма тытăнать. (Малтанах каларăмăр, эпир альманахăн пĕтĕмĕшлĕ нумерацине çавăнтан пуçласа лартса пыратпăр). Альманаха малтанхинчен хитре, кĕнеке пек хытă хуплашкапа кăларнă.

Пĕрремĕш номере Трубина Марфин «Хӳтĕ вырăнта» повеçĕпе уçнă. Ватă писательница ырламалла тĕллевпе ĕçлеме тытăннă, сектант-баптистсен суялăхĕпе ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларса питлесшĕн пулнă, анчах творчествă меслечĕ йăнăш пулнипе, пурнăçри пулăмсене çав те-

ри натурализмла кăтартнипе, унăн ěçě ăнăçлă пулайман. Çавăн пиркиех ку повеç кайран уйрăм кěнекен те тухаймарě.

Ку номерте Ухсай Яккăвěн «Ěмěт» поэми, Уйăп Мишши, И. Ивник, А. Алга сăввисем тата Н. Дедушкин А. Алга пултарулăхě çинчен çырнă критикăлла статья пысăк вырăн йышăннă.

Иккěмěш номер 1941 çулта тин тухнă. Анчах çав çулхинех тата пилěк номер кăларнă,— альманах пулман çулсенче халăх патне çитерме тивěçлě материалсем самаях пухăнса кайнă пулас.

Çав номерсенче эпир Ухсай Яккăвěн «Тутимěр» трагедине, Стихван Шавлин «Çисěм çисет» поэмине, Тихăн Петěрккин «Тапрану» пьесине, М. Кипекěн «Студентсем» повеçне, К. Сергеев (Турхан) çырнă «Политрук калавěсене» (Финляндире пулнă вăрçăри эпизодсем), Е. Эллиев, Ф. Уяр, А. Медведев калавěсене, вырăсларан куçарнисенчен — А. Н. Островскин «Василиса Мелентьева» драмине, М. Ю. Лермонтовăн «Мцырине», А. П. Чехов калавěсене, урăх çěршывсенчи чаплă писательсен произведенийěсенчен — Рабиндранат Тагор, Шандор Гергель, О. Генри калавěсене куратпăр. Альманах валли материалсене пěлсе, лайăх пухса вырнаçтарнă, ăна вулакансемшěн интереслěрех тума тăрăшнă. (Малтанхи номерсен редакторě И. С. Тукташ пулнă).

1941 çул варринче Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланать. Чăваш писателěсенчен çирěм çын ытла хаяр вăрçа тухса каяççě. Паллах, альманахăн та хăй пичетлекен материалсен тематикине тěпренех улăштармалла, чăн малтан тата пуринчен ытларах вăрçă паттăрěсем çинчен, совет çыннисен хěрÿллě патриотизмě çинчен çырмалла, фашизма, Гитлер хурахěсене хирěç пěтěм вăя хурса çапăçма, вěсене çапса аркатма чěнсе хавхалантаракан произведенисем пичетлемелле пулнă. Ун чухнехи вăхăчě шăп та ěнтě «перона штыкпа танаштармалли» вăхăт пулнă.

Вăрçăн малтанхи уйăхěсенче альманахра пуринчен ытларах Мускаври хаçатсенчен илсе куçарнă пысăках мар очерксем пичетленнě — уйрăм салтаксемпе офицерсен çапăçусенчи паттăрлăхě çинчен. Анчах вěсемпе пěрлех хамăр писательсем çырнă произведенисем те пулнă. Трубина Марфи колхоз ěçченěсен вăрçă вăхăтěнчи патриотизмне кăтартакан «Кип-йыш» ятлă калав пичетленě, Совет Çарěн Инçет Хěвелтухăçěнчи часěсенчен пěринче службăра тăнă Н. Евстафьев аслă сержант «Полксем васкаççě çапăçу хирне» текен сăвă кăларнă, М. Данилов-Чалдун çирěмěш çулсенчи Çěпěрти партизансем çинчен «Каллех фронта» ятлă калав панă.

Анчах вăрçă пуçланнăранпа пěр тăват-пилěк уйăх иртсен, альманахра вăрçă çинчен чăваш писателěсем çырнă произведенисем тěп вырăн йышăнаççě. Фронтри писательсем уйрăм очерксем кăна мар, пысăкрах калавсемпе повеçсем, хěрÿллě сăвăсем янă. 1942 çулта тухнă номерсенче, сăмахран, альманахра П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш» поэмин сыпăкěсемпе «Таня» поэми, Леонид Агаковăн «Партизан Мурат» повеçě, Н. Мранькан «Юнăн юн» пьеси, Уйăп Мишшин «Умра выртан çул — çěнтерÿ çулě пулě» ятлă сăввисем тухнă.

Çавăн чухнех Михаил Шолоховăн «Курайманлăх науки» ятлă калавне куçарса пичетленě.

1943 çулта «Илемлě литературăра» Степан Аслан партизансем çинчен çырнă «Аслати» повеç, Ухсай Яккăвě «Н-ски дивизири чăваш боецěсемпе командирěсем чăваш халăхне янă çыру», М. Данилов-Чалдунпа Леонид Агаков фронтран ярса панă очерксемпе калавсем, К. Турханăн «Чăваш халăхěн мухтавлă ывăлěсем» тенě очеркěсем, Аркадий Эсхель Совет Союзěн Геройě Ф. Н. Орлов çинчен çырнă «Ăмăрткайăк» поэмă, Уйăп Мишшин «Салтак амăшě» поэми тухнă. Кусем ěнтě репортерла васкаса çырнă «ÿкерчěксем» мар, чăн-чăн литературă произведенийěсем пулнă.

Тепěр çулхине пичетленнě произведенисенчен уйрăмах Александр Алган вăрçăран ярса панă «Хăрушлăхпа хаярлăх» ятлă сăвăсен ярăмне («Ырлăхпа шухăш», «Тăван тантăш тăпри çинче», «Хăюлăх», «Ырă ят»), фронтри чăваш журналисчěсем — гварди майорě Ф. Ситта, М. Якимов капитан («Коммунизм ялавě» хаçатăн хальхи редакторě), В. Долгов çапăçури паттăрсем çинчен çырнă очерксене, Л. Агаков калавěсене («Салтак чунě», «Медаль»), И. Тукташ Совет Союзěн Геройě — чăваш ачи Иван Поляков çинчен çырнă пысăк очерка палăртмалла. Вырăс писателěсем çырнисенчен ку вăхăтра В. Кожевниковăн «Март—апрель» повеçне (тăшман тылěнче çÿренě разведчиксем çинчен) куçарса кăларнă.

Вăрçă пěтсессěн те çак темă альманахра чылай хушă тěп вырăн йышăнса тăрать. Унта А. Алган «Атăл каччи» тата герой-панфиловецсем çинчен çырнă «Вěсем çирěм саккăрăн пулнă» поэмисем, Ухсай Яккăвěн «Шăпчăк», «Вырăс хирěнче» поэмисем, Куçма Турханăн вăрçă вăхăтěнче колхоз ěçченěсем фронт валли ырми-канми ěçленине кăтартакан «Йăмраллă ял» романě, А. Эсхелěн Совет Союзěн Геройě Петров генерал çинчен çырнă очеркě, В. Садайăн «Летчиксем» романě, И. Вашкин «Пăрлă пěлěт айěнче» пьеси т. ыт. тухнă.

Аллăмěш çулсенче çакăн пек паллăрах произведенисем пичетленнě: Ухсайăн «Çул» ятлă сăвăллă романě, Хусанкайăн «Горкăри çурт», А. Алган «Юратсан» поэмисем, В. Ржановăн «Энтип», П. Осиповăн «Юханшыв хěрринче», А. Эсхелěн «Висě туй» пьесисем, Н. Илпекěн «Тăвата кун» повеçě, С. Асланăн «Аслă çул», Ф. Уярăн «Пăлхав» романěсем т. ыт. те. Вырăс писателěсем çырнисенчен И. Поповăн «Кил-йыш» пьесине (В. И. Ленинăн çамрăк чухнехи пурнăçě çинчен), С. Щипачевăн «Павлик Морозов» поэмине, Н. Погодинăн «Пăшаллă çын» тата А. Н. Островскин «Шухă вырăнта» пьесисене куçарса кăларнă. Кунсăр пуçне, ытти тăванла халăхсен (украинецсен, тутарсен т. ыт.) литературинчен илнě произведенисем те тухнă.

Çав çулсенче «Тăван Атăлта» тухнă оригиналлă произведенисенчен уйрăмах Трубина Марфин «Ача чухнехи» ятлă повеçне палăртас пулать. Вăл 1954—1956 çулсенче сыпăкăн-сыпăкăн пичетленсе пынă. Питě паха, тарăн шухăшлă, пысăк ăсталăхпа çырнă япала вăл. Ачасене, çамрăк ăрăва чухăнсен патша вăхăтěнчи асаплă та тертлě пурнăçě çинчен çак повеçри пек лайăх каласа пани унччен пулман. Чăвашсен ача-пăча литературинче ку повеçе эпир чăннипех классикла произведени тесе шутлатпăр.

Пěр хушă альманахăн пысăк çитменлěх пулнă — унта хальхи пурнăçпа паянхи çынсем çинчен мар, историллě темăсемпе ěлěкхи пурнăç, тахçан авал пулса иртнě ěçсем çинчен çырнă произведенисем ытларах пичетленсе пынă. Паллах, çакă вăл вулакансен кăмăлне тултарма пултарайман. Совет литературин тěп задачи — паянхи пурнăçа туллин çутатса парасси, хальхи çынсен, хамăр çěршывра коммунизм тăвакансен çутă сăнарěсене кăтартасси. Пирěн литературă çынсене савăнăç кÿмелле, коммунизм çěнтерěвěшěн хастаррăн кěрешме хавхалантармалла.

Çакна асра тытса, «Тăван Атăл» редколлегийě юлашки çулсенче чăн малтан тата пуринчен ытларах хальхи пурнăç темисемпе çырнă произведенисем суйласа илсе пичетлеме тăрăшать, вěсен пахалăхěшěн кěрешет.

1960—1962 çулсенче альманахра кăларнă произведенисенчен хăйсен содержанийěпе тата илемěпе Александр Алган «Хурама та хурăн», Владимир Садайăн «Çирěклěхри тăватпилěк кун», Мěтри Кипекěн «Уйăх витěр çул курăнать», Александр Артемьевăн «Алтăр çăлтăр», Василий Алендейăн «Пилеш пăхма пит хитре» повеçěсем, Куçма Турханăн тин çеç пичетленсе пěтекен «Çěр суранě» ятлă романě, Петěр Хусанкайăн И. Я. Яковлев çинчен çырнă «Аслă чěре», Стихван Шавлин «Симěс палăк» поэмисем, Герасим Харлампьевăн «Ăшă сăмах», Константин Ивановăн «Ытарайми хěрача», Алексей Афанасьевăн «Тиркекене тирěк тěпě», тутар драматургě Хай Вахит

çырнă «Малтанхи юрату» ятлă пьесисем, пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă паттăр совет космонавчĕсем — Андриян Николаевпа Павел Попович çинчен çырнă очерксем пирĕн вулакансене килĕшнĕ. Эпир куна ним пысăклатмасăр калатпăр, мĕншĕн тесен вĕсем çинчен вулакансен конференцийĕсенче те ыр кăмăлпа калаçаççĕ, çырусенче те çыраççĕ. Альманахăн тиражĕ çултан çулах ӳссе пыни те вулакансем ăна ытларах кăмăлланине кăтартать. Виçĕ цифрă çеç илĕпĕр: 1960 çулхи пĕрремĕш номер 3650 экземпляр пичетленнĕ, 1962 çулхи пĕрремĕш номер— 5000 тухнă, кăçалхи — 1963 çулхи çак номер 8000 экземпляр пичетленчĕ. Виçĕ çул хушшинче альманах тиражĕ икĕ хут ытларах хăпарчĕ!

Анчах та ку редакцине те, альманаха кăларса тăракан чăваш писателĕсен Союзне те ним чухлĕ те лăплантарма пултараймасть. Альманахăн çитменлĕхĕсем нумай-ха. Хăш чух шупкарах, вулакансен чĕри патне çитеймен произведенисем те кĕрсе каяççĕ. Хальхи çынсен, коммунизм строителĕсен пархатарлă ĕçĕсене лайăххăн кăтартса паракан очерксем сахал. Хамăрăн хуласем, тĕрлĕ предприятисем, унти çынсем мĕнле ӳссе пыни çинчен çителĕксĕр çыратпăр. Критикăпа библиографи пайĕпе те мухтанмалли çук,— çĕнĕ кĕнекесем нумай тухаççĕ, анчах вĕсем çинчен эпир пăч-пач кăна çыратпăр, критиксен ĕçне кирлĕ пек чĕртсе яраймастпăр. Чăн та, кунта вĕсем хăйсем те айăплă. Литературăсăр пуçне пирĕн республикăра ытти искусствăсем те çулсеренех аталанса пыраççĕ — музыкă, театр, живопиç. Вĕсем çинчен эпир тĕрлĕ юбилейсем вăхăтĕнче çеç аса илкелетпĕр. Халăх çав тери юрататакан жанр — сатирăпа юмор альманахра çаплах-ха вырăн сахал йышăнать. РСФСРти писательсен Союзĕ кăларакан «Октябрь» журналта, авă, сатирăпа юмора пысăк романсемпе повеçсем хушшинчех пĕр тан вырăн параççĕ.

— Халăх пурнăçĕпе çирĕп çыхăнса тăни, социализмлă пурнăçăн пуянлăхĕпе нумай тĕрлĕ енĕсене тĕрĕс, пысăк ăсталăхпа кăтартса пани, çĕннине, чăн-чăн коммунизмлă пурнăçа хавхаланса, илемлĕн сăнласа пани, обществăна малалла кайма чаракан чăрмавсене пурне те питлени литературăпа искусствă аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕ пулса тăрать,— тенĕ КПСС Программинче.

Литературăпа искусствăра ĕçлекенсем умĕнче тăракан задачăсене кунта çав тери ăнланмалла, татăклă кăтартса панă. Иртнĕ çулхи декабрьте партипе правительствă руководителĕсем литературăпа искусствă деятелĕсемпе тĕл пулнă чух та çав задачăсем çинченех тепĕр хут калаçнă. Декабрĕн 26-мĕшĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕ çумĕнчи Идеологи комиссийĕн çамрăк писательсемпе, художниксемпе, композиторсемпе тата кинопа театрта ĕçлекенсемпе пĕрле пулнă ларăвĕнче те литературăпа искусствăн хальхи тĕллевĕсемпе задачисене пит лайăх çутатса панă.

— Литературăпа искусствă — хăватлă хĕç-пăшал, коммунизмла воспитани памалли пит те паллă вăй,— тенĕ çав ларура КПСС Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Л. Ф. Ильичев юлташ.— Вăл яланах юсавлă та çивĕч пулмалла, ăна кирлĕ çĕрелле тĕллемелле, вăл пĕр тытăнса тăмасăр ĕçлеме тивĕç. Пирĕн искусствăн халăха коммунизмшăн ĕçлеме хавхалантармалла, унăн пирĕн ĕçри çитменлĕхсене çапмалла, хамăрăн туссене пулăшмалла тата коммунизм тăшманĕсене тĕп-тĕрĕс пырса лексе аркатмалла.

Çак витĕмлĕ сăмахсем литературă журналĕсемшĕн те закон пулса тăраççĕ. Шăп та çавăн пек произведенисем, коммунизмшăн кĕрешес ĕçре чăннипех çивĕч хĕç-пăшал пулма пултаракан романсемпе повеçсем, сăвăсемпе поэмăсем, пьесăсемпе очерксем пичетлемелле пирĕн. Хăйĕн малашнехи ĕçĕнче «Тăван Атăл» альманахăн редакцийĕ, унăн редколлегийĕ çавсене асра тытса ĕçлесе пырĕ.

Альманаха пур енчен те лайăхлатса пыма пире писательсем кăна мар, вулакансем те хăйсен ырă канашĕсемпе, çитменлĕхсене кăтартса панипе кулленех пулăшса пырĕç, тесе шанатпăр.

Александра ЛАЗАРЕВА

# Кĕске калавсем

## Пирвайхи шăнкăрав

Кĕркунне пуçламăшĕ. Çанталăк янкăр уяр та ăшă тăрать. Ирхи хĕвел тӳпенелле çăмхаланса хăпарнă май унăн ылтăн пайăркисем пушшех хаваслăн çиçме тытăнаççĕ, пин-пин шевлеллĕн йăлтăртатса чĕтренеççĕ.

Паян — сентябрĕн пĕрремĕшĕ, вĕренӳ çулĕ пуçланмалли кун. Тем тĕрлĕ те капăрлатса пĕтернĕ çĕнĕ шкул умĕнче таса та пĕрешкел хӳхĕм тумланнă вĕтĕр-шакăрсем шăкăлтатса калаçаççĕ: пĕр-пĕрне хăйсен çуллахи ирĕк кунĕсене мĕнле ирттерни çинчен каласа параççĕ ĕнтĕ!..

Чи кĕçĕннисем, кăçал пирвайхи хут шкула каяканнисем, аллисенче хитре чечексем тытса, малти ретре ушкăнланса тăраççĕ.

Кĕçех пĕтĕм шăв-шав лăпланать: шкул карнизĕ çинчен çывăхри хурăн çине çерçи пăрăлтатса вĕçсе кайни те аван илтĕнсе юлать. Линейкă... Чĕрене çĕклентерекен савăнăçлă музыкă... Вĕрентекенсем пĕрин хыççăн тепри вĕренӳ çулне ăнăçлăн пуçлама ырă сунса сăмах калаççĕ. Юлашкинчен чи мала пĕр пĕчĕк хĕрача тухса тăрать. Вăл шкул директорне пысăк чечек çыххи тыттарать те хыççăр пукан çине хăюллăн хăпарса тăрать. Унтан хăйĕн пĕчĕкçĕ шăнкăрав пек уçă сассипе калама пуçлать.

«...Пире Ленин партийĕ ӳстерет. Партипе правительствă пире лайăх вĕренме мĕн кирлине пурне те туса параççĕ, тăван атте-аннесем пек тăрăшаççĕ. Эпир яланах лайăх вĕренме сăмах паратпăр!..» — тет вăл.

Ачасене хирĕçех, тепĕр енче, ăсатма килнĕ ашшĕсемпе амăшĕсем тăраççĕ. Вĕсем пурте савăнăçлă, пурте, чĕререн хумханса, алă сулаççĕ.

Акă, шкул кил хушшинче шăнкăрав сасси янраса каять. Кĕçех — командă:

— Школа, напра-во! По классам, в школу шагом марш!

Музыкă марш кĕввине выляса ярать. Ачасем пĕр харăс утса шкул алăкĕ патнелле пыраççĕ. Аслăраххисем хыççăн, чăн юлашкинчен, чи кĕçĕннисем пирвайхи хут шкула кĕрсе каяççĕ.

Эпĕ хамăн хĕрачана тепĕр хут курса юлассăн пăхатăп. Вăл мана курчĕ те, йăл кулса илсе, хăйĕн пĕчĕкçĕ аллисемпе сулса хăварчĕ. Çав самантра, темшĕн-çке, вăл манран ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнăн туйăнчĕ: чĕре пĕр сисмен çĕртен кăрт сиксе илчĕ. Чăн та, ку çаплах: вăл ĕнтĕ халь, манран уйрăлса, пурнăçăн аслă çулĕ çине тухма пуçлать. Паянтан пуçласа унăн тăршшĕпех çав çулпа каймалла...

— Çулу телейлĕ пултăр эппин, пĕчĕкçĕ хĕрĕм! — терĕм эпĕ ăшăмра.

Чĕрем патне темĕн капланса тулчĕ: те савăнтăм, те пăлханнипе çавăн пек пулчĕ, — хам та пĕлеймерĕм çак самантра. Сасартăках куçăмсенчен çутă куççуль тумламĕсем пăчăртанса тухрĕç те, эпĕ, çынсем курасран именсе, вĕсене хăвăрт шăла-шăла илтĕм.

# Çĕнĕ çын

Нумай пулмасть Яткасси ялĕнчи колхоз шоферне качча тухнă Нина халĕ те çĕнĕ çын шутланать... Вăл ку ялта ниçтах та тухса çӳремен-ха, нимĕнех те пĕлмест, темелле. Анчах та пĕр касхине Нина хăйсен кӳршисем патне пĕр кĕтмен çĕртен хашкаса чупса пычĕ.

— Настаç инке, атя-ха манпа пĕрле, пĕр ĕç пур,— терĕ вăл вĕткеленсе ӳкнĕ саспа.

Нина ку таранччен Настаçсем патĕнче пĕрре те пулманччĕ. Çавăнпа та Настаç аппа çĕнĕ çынна тĕпелерех иртсе ларма чĕнчĕ.

— Çук-çук, ларса тăраймастăп халĕ. Тархасшăн, атя хăвăртрах!— çине тăрса, тепĕр хут каларĕ Нина.

Вĕсем урама тухрĕç.

Нина, хĕрача пек çăмăл кĕлеткеллĕскер, çав тери хăвăрт утать, Настаç аппа ун хыççăн аран-аран ĕлкĕрсе пырать. Колхоз гаражĕ тĕлне çитсен, Нина тăпах чарăнса тăчĕ.

— Акă, пăх,— терĕ вăл, гараж алăкĕнчен кĕрсенех аллипе машина çинелле тĕллесе.

Пĕр тĕлте мачман темиçе хăмине кăларса илнĕ те, унта яр уçă хушăк пулса юлнă. Çумăр çусан, çав тĕлтен машинăсем çине шарлаттарсах шыв юхмалла туса хăварнă.

— Куратăн-и, мĕн хăтланаççĕ? Ĕнер эпĕ Çеркуша хулана ăсатнă чух пĕр хушăк та çукчĕ. Кам ун пек хăтланма хăять пуль?— терĕ Нина.

— Э-э, ку... ку нимĕнех те мар-ха!.. Эпĕ пĕр-пĕр машинине вăрласа кайнă пуль тесе хăранăччĕ,— терĕ Настаç аппа.

— Пĕчĕкрен пысăкки пуçланать! Ку вăл — колхоз пурлăхĕ-çке-ха. Ăна куç умĕнчех çаратаççĕ пулсан, епле-ха «нимех те мар» пултăр?

— Тăхта-ха, пĕлетĕн-и эсĕ? Çук, паллах, пĕлместĕн ĕнтĕ... Икĕ кунтан пирĕн ялта туй пулать, леш енчи Кириле Иванĕн хĕрĕ качча каять. Ку хăмасене шилĕк валли кăларса кайнă. Туй хыççăн вĕсем каллех ăна вырăннех килсе хураççĕ. Çавăнпа та айăпĕ-мĕн çук кунта...

— Колхоз пурлăхне çĕмĕрме юрать-и-ха вара? Мĕнле айăп çук пултăр? Куншăн суда памалла!— хĕрсе кайрĕ Нина.

— Хĕрĕм, эсĕ ху качча килнĕ чух та Çеркушсен кил хушшинчи шилĕке çав хăмасенченех тунăччĕ. Мĕнех вара уншăн, хăмисене хуçса вакламан вĕт?

Ку сăмахсене илтсен, Нина темрен хăранă пек шуралса кайрĕ, текех пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Кăшт тăхтасан çеç «пĕлнĕ пулсан...» терĕ те, пуçне усса кил еннелле утрĕ.

Çеркуш хуларан таврăнасса вăл тем пекех кĕтрĕ. Унăн чĕри вырăнтан хускалчĕ, ăшĕ çунма тытăнчĕ. Неушлĕ унăн Çеркушĕ те çавăн пекех, «ку нимĕнех те мар» тейĕ?

Тулта шăпăртатса çумăр çăва пуçларĕ.

— Акă, гаража шыв тулать ĕнтĕ, колхоз пурлăхĕ япăха тухать... Эх, халăх!..— шухăшласа пăшăрханчĕ Нина.

Çеркуш тĕттĕм пулса çитсен тин киле таврăнчĕ. Арăмĕ хăйĕнпе çăвар уçса та калаçасшăн пулманнине тӳрех сиссе илчĕ вăл.

— Мĕн пулнă сана, Нина? Эпĕ час таврăнманшăн кӳренмерĕн пулĕ?— терĕ вăл.

— Эсĕ мĕншĕн колхоз пурлăхне тиветĕн?!— тӳркессĕн каласа хучĕ те Нина, хăй çавăнтах йĕрсе ячĕ.

— Мĕн эсĕ, Нина? Хăçан, мĕнле колхоз пурлăхне тивнĕ эпĕ?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Çеркуш.

— Пирĕн туй пулнă кун эсир гараж çинчи мачча хăмисенчен шилĕк тунă, акă мĕн!

— Тунă... Ара, эпĕ кăна мар-çке-ха, пурте çавăн пек...— мăкăртатса илчĕ Çеркуш ним калама аптраса.

— Эсĕ пурин хыççăн та ан кай, ху ыттисене чар! Халĕ, ав, каллех хăмасене шилĕк валли илсе кайнă, тулта — çумăр!.. Эх, маларах пĕлнĕ пулсан, тем тусан та эпĕ сана...

— Юрĕ-çке, пĕррелĕхе каçарсам ĕнтĕ, Нина. Тек авланас çук вĕт эпĕ!— айăплăн персе ячĕ Çеркуш.

— Çакăн пек киревсĕр ĕçе халех чармастăр пулсан — каçармастăп! Гараж хăмисем ыранах хăйсен вырăнĕнче пулччăр!

— Юрать, Нина, ыранах...

— Асту, Çеркуш, колхоз пурлăхĕ вăл — халăх пурлăхĕ. Ун çине кашниех çавăн пек киревсĕррĕн пăхас пулсан, мĕн пулса тухать вара? Мăшкăл-çке-ха!

— Тĕрĕс, ăнлантăм сана, Нина. Хăмасем пирки çеç темле шутлама пĕлеймерĕм,— терĕ Çеркуш, хăйĕн савнă мăшăрĕ çине ытараймиле куçĕсемпе ăшшăн пăхса.

# Хуралçăсем

Эпир ял патне çывхарса çитнĕ чух тавралана тĕксĕм сăн çапрĕ. Ял хушшинче унта та кунта электричествă çутисем йăлтăртатма пуçларĕç.

Кăнтăрлахи шăрăх хыççăн каçхи сулхăнра калама çук канлĕ, лайăх. Уçă сывлăшра чуна çав тери уçă, кăмăллă. Халех киле кĕрес те килмест пирĕн. Çул хĕрринчи тикĕс вăрман хĕррине канма лартăмăр. Тĕттĕмленсе çитиччен яла çитнĕрен пулас, пирĕн кăмăлсем ытла та аван, хаваслансах калаçатпăр, кулатпăр...

Кĕтмен çĕртен, пирĕн ума виçĕ енчен виçĕ хĕрарăм тухса тăчĕç. Пĕри кĕреçе çĕкленĕ те пирĕн çинеллех пырать.

— Камсем эсир, мĕн туса ларатăр кунта?— терĕ вăл кĕç-вĕç хăтăрса тăкас пек сасăпа.

Эпир тӳрех ура çине сиксе тăтăмăр та пĕр вăхăт нимĕн калама та пĕлеймерĕмĕр.

— Ну, камсем?— татах кăшкăрчĕ хĕрарăм.

— Хуларан килетпĕр-ха, хамăр тăвансем патне,— терĕ юлташ.

— Эй ара, хамăр ял кĕрӳшĕ пулчĕ-иç ку?! Лисук та пĕрле-мĕн, аван пурăнатăр-и?— алă пачĕç хĕрарăмсем пире.

— Сире кĕтсе те ывăнчĕç ĕнтĕ тăванусем. Сăра туса лартнăччĕ, така та пусрĕç... Ма час килеймерĕр?

— Май пулмарĕ, отпуска тин çеç ячĕç,— пĕлтертĕмĕр эпир.

— Эсир кунта пурне те çакăн пек хаярпа кĕтсе илетĕр-и?— шӳтлесе ыйтрĕ юлташ.

— Паллах, пурне те мар... Ăçтан сиссе çитеретĕн пур чух?! Халĕ эпир урамра ларттăмăр та, такамсем мăкăртатса калаçнă пек илтĕнчĕ. Çавна илтсе килтĕмĕр. Эсир пулнă иккен. Ав, куратăр-и, юнашарах — тырă кăшăлĕсем. Тем пулас-килес пур, терĕмĕр. Эрхип хуралçă киле апат çиме кайнăччĕ те... Ара, пĕр ун çине шаннипе ăçтан çиттĕр: хăй ватă, куçĕсем те витĕрех мар. Тырă—хамăр пурлăх-çке-ха, колхоз пурлăхĕ!— терĕç вĕсем.

Ял хушшине пурте пĕрле кĕтĕмĕр. Хĕрарăмсем пире хамăр тăвансем патне çитиех ăсатса ячĕç, ырă каç сунса уйрăлчĕç.

# Ирĕкре

Тап-таса çутă кăвак тӳпере ылтăн хĕвел йăлкăшса çунать. Калама çук лăпкă та илемлĕ тăраççĕ çуллахи кунсем!

Таруç Атăл хĕрринчи çӳллĕ сăрт тайлăмĕнче тĕрĕ тĕрлесе ларать. Ун хыçĕнче — йăлăм, вĕçĕ-хĕррисĕр хыр-чăрăш вăрманĕ. Çав вăрман хĕрринчи пысăках мар уçланкăра пĕрешкел самăр пăрусем çăвар тулли курăк çиеççĕ. Таруçăн вĕсене çу каçичченех кунта пăхса пурăнмалла. Кĕркунне, пăрусем ӳссе мăнтăрланса çитсен тин, вăл хăйсен колхозне таврăнать.

Çулла кунта пачах та кичем мар; вăл куçпа виçейми ирĕк выраăнта, тӳлек çанталăкăн капăр ытамĕнче пурăнать.

Ун умĕнче — мăнаçлă та аслă Атăл; вăл катаран темле калама çук пысăк кĕмĕл çатма тĕпĕ майлах çуттăн та якан йăлтăртатса курăнать. Ăнсăртран варкăш çил вĕрсе ярас пулсан, ун çийĕпе шултра хумсем чĕтренсе юхма пуçлаççĕ. Темиçе хутлă пысăк пăрахутсем иртсе кайнă чух та çавăн пек хумсем çыран хĕррине пыра-пыра çапăнаççĕ. Халиччен никам курман чаплă акăшсем пек илемлĕ «Ракетăсем»[1] хăвăрттăн ярăнса иртнĕ чухне вĕсем хыçĕнчен сарлака Атăл икĕ еннелле çурăлса юлать темелле. Вăрăм баржăсем вара, вĕсемпе танлаштарсан, ерипен кăна шăваççĕ... Акă, анатран «Мир» ятлă баржă тăсăлса хăпарать. Таруç, куçĕсене хĕвелтен аллипе картланă та, тинкерсех ун çинелле пăхать. Баржă çинче сын тăрать, аллинче — бинокль. Вăл пикенсех çыран хĕрринелле сăнаса пăхать. Таруç темшĕн-çке, хăй те кĕтмен çĕртен, ун çинелле чышкипе юнаса илчĕ. Вара лешĕ, Таруç хăйне асăрханăшăн савăнса пулĕ тен, вăрахчен ун еннелле аллипе сулса тăчĕ.

Тепĕр эрнерен «Мир» каялла таврăнчĕ. Баржă çинче каллех пĕркунхи çын курăнчĕ. Темшĕн хăй çине ытла та ăшшăн, куç илме пĕлмесĕр савса пăхнă пек туйăнчĕ хĕре çав çын. Таруç ăна майĕпен шăвакан баржă куçран çĕтиччен кăмăллăн алă сулса ăсатса ячĕ.

---

[1] Шыв айĕнчи çунатлă пĕчĕк теплоходсем.

# Ăшă кĕтес

Кĕркунне, вĕренӳ çулĕ пуçлансан, институтри секретарь пӳлĕмне пĕр çамрăк студентка хăюсăррăн кĕрсе тăчĕ.

— Эпĕ хамăн документсене каялла илме кĕтĕм,— пĕлтерчĕ шăппăн.

— Мĕн тесе? Сире илнĕ пулĕ-çке? Е хăвăр вĕренес теместĕр-и?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Калерия Петровна.

— Çук, уншăн мар,— именсе çĕрелле пăхрĕ студентка.

— Хушаматăр мĕнлеччĕ-ха сирĕн?

— Карпова... Надежда.

— Савăнас пулать сирĕн, Надя. Сире биологи факультетне илнĕ.

— Пĕлетĕп, çапах та вĕренесси пулмасть ман.

— Качча тухмарăр пулĕ-çке?..

Карпова хĕрелсе кайса пуçне пăркаларĕ.

— Ăнланма çук иккен сире, хăш-пĕр çамрăксене: пĕрре кĕреççĕ, унтан пăрахса каяссăн çӳреççĕ. Директор патне кĕрсе тухам-ха эппин, вăл мĕн калать...

Калерия Петровна директор кабинетĕнчен часах тухрĕ.

— Паллах, вăтам шкул пĕтернĕ çынна ирĕксĕр вĕрентме çук. Вырăн та пушă пулас çук, условнă илнисем те пур. Вĕсем хаваслансах вĕренме тытăнĕç,— терĕ вăл, Карпова документсене шырама тытăнса.

Çав вăхăтра Надежда пичĕ тăрăх çине-çине юхса анакан куççуль тумламĕсене шăлчĕ, пӳлĕнчĕклĕн хашлатса сывларĕ.

Калерия Петровна çамрăк çын мар, вăл ĕнтĕ темиçе çул институтра ĕçлет. Çавăнпа та студентсен пурнăçне лайăх пĕлет, вĕсен чунне-кăмăлне хăвăрт ăнланса илет. «Вăл çынна витĕр курма пĕлет», теççĕ вара студентсем ун пирки. Çапла, халĕ те вăл Карпова темшĕн ытла та кулянса пăшăрханнине самантрах сиссе илчĕ.

— Эсĕ, хĕрĕм, инçетрен килнĕ иккен..! Мĕнле, сирĕн тăвансем пур-и кунта?— ыйтрĕ вăл.

— Çук... Пулнă пулсан тем пекчĕ те... Килте те никам та çук. Çавăн пирки вĕренеймесĕр юлатăп. Нимĕнрен ытла — хваттер пирки... Уйрăм пӳлĕм илсе пурăнаймастăп, ытла хаклă. Выртса тăма пĕр-пĕр кĕтес пулнă пулсан, пăрахса каяс çукчĕ те...

— Сире мĕншĕн-ха апла общежитине яман? Чи малтан ашшĕ-амăшĕсĕррисене вырнаçтараканччĕ-çке.

— Тăлăхĕ тăлăх мар эпĕ: манăн атте те, анне те пур. Анчах эпĕ çав вăхăтрах тăлăх та... Кăна никам та ăнланас çук.

— Чăн та, йывăр иккен ăнланма. Мĕнле-ха апла?

— Аттепе анне ман тахçанах уйрăлнă. Атте урăх кил-йышпа пурăнать. Иртнĕ çул анне те теприне качча тухрĕ. «Эсĕ тек пĕчĕк мар, хăвах пурăнма пултаратăн», терĕ вăл мана. Ун чухне эпĕ заводра ĕçлеттĕм. Ĕçлес пулсан, паллах, хам тĕллĕнех пурăнма пултаратăп. Анчах вĕренме май çук, йывăр...

Калерия Петровна Карпова докуменчĕсене каялла шкапа питĕрсе хучĕ.

— Акă мĕн, Надя. Эсĕ халь лекцине кайса лар та, заняти пĕтсен тӳрех кунта кĕр. Эпĕ сана... пӳлĕмех мар ĕнтĕ, кĕтес те пулин тупса пама тăрăшăп,— терĕ вăл.

— Тавтапуç, анчах укçи-тенки те ман çавнашкалтарах та...

— Çук, çук. Ун пирки ан калаç эсĕ. Эпĕ сана... ахалех усрăп! Хам ача выранне...

Вара Надя Карпова студентка хĕлĕпех Калерия Петровна патĕнче пурăнчĕ. Иккĕмĕш курса куççан, тепĕр çулне ăна общежитине вырнаçтарчĕç.

Хăйне тăван амăшĕ выранне вĕренме пулăшнă, йывăртарах самантсенче хăйне ĕç укçинчен катса тăрантарса-тумлантарса усранă ырă кăмăллă çынна, Калерия Петровнăна, Надя нихçан та, ĕмĕрне те манас çук.

# Инçетри тăвансем

Мускава çитсен эпĕ пĕрле килнĕ пассажирпа сывпуллашса уйрăлтăм та тӳрех гостиницăна вырнаçрăм. Командировкăна пынă çыннăн ĕçĕ-хĕлĕ те, чăрмавĕ те нумай — унта-кунта чупкаласа çӳресех вăхăта ирттертĕм. Юлашкинчен, Мускав курмалла тенĕ пек, магазинсем тăрăх пăхса çӳреме тытăнтăм...

Мĕн чухлĕ лайăх таварсем! Суйла, ил, савăн! Эпĕ хамăн хĕрĕм валли чăпар тĕрĕллĕ кĕрĕк суйласа хутăм. Кассă патне пыратăп та хайхискер, ик-виçĕ хутчен шутласа пăхатăп: укçа çитмест манăн! Ирхине, хыпаланнипе ĕнтĕ, гостиницăрах манса хăварнă. Васкаса магазинран тухрăм та таксисем тăнă вырăна чупнă пек хашкаса пыратăп.

Çав вăхăтра хама тахăшĕ хыçалтан чĕннине илтрĕм.

— Мария Григорьевна, ăҫта васкатăр каплах?— тĕлĕнсе ыйтрĕ хĕрарăм.

Эпĕ ăна тӳрех палласа илтĕм. Эпир унпа Мускава пĕр вакунра килтĕмĕр. Хăй вăл Мускаврах пурăнать, тахăш журналта ĕҫлетĕп, терĕ пулас. Ун чухне вăл командировкăран таврăнатчĕ.

— Ой, Елена Матвеевна, каҫарăр та, питĕ васкатăп эпĕ! Пĕр япала илме укҫа ҫитеймерĕ те, хăвăртрах гостиницăна ҫитес, тетĕп. Ирхине ҫума илме маннă кайнă...— терĕм.

— Нумай ҫитмест-и?

— Сахал мар ҫав, ҫирĕм тенке яхăн.

— Ун пекех хыпаланса ҫӳриччен, ил хамăнне. Эпĕ тин кăна ĕҫ укҫи илсе тухрăм. Кайран кĕртсе парăн. Акă, адресне ҫырса паратăп, сирĕн гостиницăран аякра та мар,— терĕ вăл, блокнот листи ҫине адрес ҫырса.

Эпĕ ăна пĕтĕм чунтан тав туса уйрăлтăм. Вара магазина пĕр хыпаланмасăр таврăнса кĕрĕке туянтăм та, татах хула урамĕсем тăрăх курса ҫӳрерĕм.

Каҫхине, гостиницăна таврăнсан, Елена Матвеевна патне укҫа леҫме кайрăм.

Вĕсем ҫĕнĕ ҫуртра, икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнаҫҫĕ. Елена Матвеевнăн икĕ ачи те вăтам шкулта вĕренеҫҫĕ, упăшки заводра ĕҫлет.

Мана вĕсем хаклă хăна выраннех йышăнчĕҫ. Хăйсемпе пĕрле ҫавракa сĕтел хушшине вăйпах апат ҫиме лартрĕҫ, сывăх тăванне курнă пек шăкăлтатса каласрĕҫ. Ҫав тери кăмăллă кил-йыш! Ӳлĕм Мускава пырас-тăвас пулсан, тӳрех хăйсем патне кĕме хушрĕҫ.

Эпĕ вĕсене пĕтĕм чĕререн тав туса тухрăм. Маншăн вĕсем инҫетри чи сывăх тăвансем пекех туйăнчĕҫ.

# Ҫил-тăвăл

Вăхăт каҫ еннелле сулăнсан, Атăл енчен хура пĕлĕтсем капланса тухрĕҫ. Кашласа ҫил вĕрсе ячĕ, унтан вăл вăйланнăҫемĕн вăйланса пычĕ те, куҫ-пуҫ курми ҫавăрттарма пуҫларĕ. Йывăҫ тăррисем ҫĕре ҫити авăнаҫҫĕ, тураттисем шатăрах хуҫăла-хуҫăла ӳкеҫҫĕ. Улăм витнĕ сарай тăррисем вырăнĕ-вырăнĕпе пăхмалла мар тăрмаланса пĕтрĕҫ. Хăш-пĕр кивĕ картасем тӳнсе кайрĕҫ, ҫамрăк садсенчи йывăҫсем, вăйлă ҫиле парăнса, пурте пĕр еннелле сулăнчĕҫ.

Юрать, ҫил-тăвăл нумая пымарĕ. Тепĕр кунне ирхине ҫав тери уяр та лăпкă ҫанталăк пуҫланчĕ.

Хветуҫ выльăхсене кĕтĕве ăсатсанах хăмла пахчине тухрĕ. Хăмла—ҫĕнĕ культурă-ха вĕсен колхозĕнче. Иртнĕ ҫул ҫеҫ ăна виҫĕ гектар ҫине лартса хăварчĕҫ. Хветуҫ чи малтанхи кунран пуҫласах кунта ĕҫлет.

Хăйне уйăрса панă участок тĕлне ҫитрĕ те, вăл хăранипе тăпах чарăнса тăчĕ. Вăрман пек ҫĕкленнĕ ешĕл хăмла, таврара ҫил-тăвăл ашкăннипе, пăхма ҫук йĕркерен тухнă. Ретĕн-ретĕн лартса тухнă шăчăсем тӳне-тӳне кайнă, хăшĕ-пĕрисем хуҫăлсах ӳкнĕ. Ҫавăнпа та хăмла аврисем ҫуррине яхăн ҫĕр ҫинче выртаҫҫĕ.

Хăҫан тӳрлетсе йĕркене кĕртĕ Хветуҫ ку хăмлана? Халех ĕҫе тытăнас пулать. Вăл хуралҫă пӳрчĕ патне кайса пуртăпа кĕреҫе илсе килчĕ те хăмла аврисене тӳрлетсе лартма тытăнчĕ. Хуҫăлса ӳкнĕ шăчăсене тепĕр хут пуртăпа чутласа шĕвĕртрĕ, унтан шăчăсем тăрăх явăнса ӳсекен хăмлана типтеррĕн курăспа майласа ҫыхса, шăчисене ҫĕр ăшне чиксе таптарĕ. Кун каҫах лăш курмасăр аппаланчĕ вăл хăйĕн хăмлипе.

Унăн участокĕ ĕнтĕ йĕркеллĕ. Ретсем тăрăх пĕр хĕрринчен кĕрсе тепĕр вĕҫне ҫитиех утса тухма пулать. Ав, Анюк участокĕ пачах урăхла. Шăчăсем рет урлă ӳксе пĕтнĕ те, ҫаплипех армак-чармакăн сапаланса выртаҫҫĕ. Мĕншĕн юсама тухмасть-ха вĕсене Анюк?

Хветуҫ килне таврăннă чух, ҫула май тенĕ пек, Анюксем патне кĕчĕ. Килĕнче Анюк ачисемпе вĕсен ватă асламăшĕ ҫеҫ юлнă.

— Анюк хулана хĕрĕ патне кайрĕ-ха. Кăштах ĕҫрен пушаннă пек чух курса килем, терĕ,— ыйтмасăрах каласма тытăнчĕ карчăк.

— Ҫил-тăвăлпа пĕтĕм хăмла ӳксе пĕтнĕ. Эпĕ хамăн участока тӳрлетсе ҫитертĕм. Ҫынсем халĕ те унта ĕҫлеҫҫĕ,— пĕлтерчĕ Хветуҫ.

— Ара, хулара ҫил-тăвăл пулман пулĕ ĕнтĕ ҫав... пĕлмест-тĕр. Килсенех... тӳрлетсе тухать те-ха...

Хветуҫ вĕсем патĕнчен тухсан килне кайса апатланчĕ те, каҫ пулса килнине пăхмасăрах хăмла пахчине таврăнчĕ. Ҫĕрĕпех ĕҫлерĕ вăл унта, тепĕр кун, ирхи шуҫăма сирсе, хĕвел хăпарса тухма пуҫласан тин Анюк участокне юсаса ҫитерчĕ. Шăп киле кайма хатĕрленнĕ тĕле бригадир мотоциклпа кĕрлеттерсе ҫитрĕ. Вăл сăран сумкинчен блокнот кăларчĕ те кам мĕнле ĕҫленине ҫырма тытăнчĕ.

— Ҫитес ҫулах кун пек пулмасть те-ха,— терĕ вăл хăй тĕллĕн мăкăртатса.— Пĕтĕм пахчине юпасем лартса пралуксем каратпăр та нимĕнле ҫил-тăвăл та сиен кӳреймĕ...

Юлашкинчен тин вӑл пахча хӗррипе утса пыракан Хветуҫа курчӗ.

— Мӗн эсӗ никамран та ир килнӗ паян? Выльӑхусене кам кӗтӗве хӑвалать?

— Ёлкӗрӗп-ха... Килсе курмасӑр чун чӑтмарӗ те,— суйрӗ Хветуҫ, ёшенчӗклӗн кулса илсе.

— Ырӑ чӗреллӗ ҫын эсӗ, Хветуҫ. Сан участокна пӑхрӑм та, чун савӑнса кайрӗ. Анюк та лайӑх ӗҫленӗ, хӑхӗм.

Бригадир ырласа каланӑ сӑмахсем пӗр талӑк лӑш курмасӑр ӗҫлесе ывӑннине йӑлтах сирсе ячӗҫ. Нихҫанхинчен те савӑнӑҫлӑ та телейлӗ Хветуҫ тӑван укӑлча еннелле вӗҫнӗ пек ҫӑмӑллӑн утса кайрӗ.

# Вӑкӑр

Верук уй хапхинчен кӗрсе симӗс курӑк витнӗ анлӑ урампа анаталла утрӗ. Хӑйсен пралукӗ тӗлне ҫитнӗ-ҫитменех карта ҫумӗнчи йӑмра тӑрринчен ачасем кӑшкӑрса яни илтӗнчӗ:

— Верук инке, хӑвӑртрах карта ҫине хӑпар, лекетӗн! Фермӑран Булан тухса тарнӑ, ял тӑрӑх мӗкӗрсе ҫӳрет!

Верук чарӑнса тӑрса йӑмра ҫинелле пӑхрӗ.

— Ёненместӗн-и эс? Халь анчах радиоузелтан пӗлтерчӗҫ! Асту, хирӗҫ пулсан тарса хӑтӑлаймастӑн, Верук инке!

Верук вӑкӑра тӗл пулсан тӳрех карта урлӑ каҫса тарӑп тесе, васкасах малалла утрӗ. Хӑйсен урамне тухсан, чӑнах та, сывӑхрах пуҫне унталла-кунталла ывӑткаласа килекен хура вӑкӑра курчӗ. Тин ҫеҫ каялла ҫаврӑнса тарма шутланӑччӗ вӑл — урамӑн тепӗр енче кӳршӗсен пӗчӗк ачисем ҫерем ҫинче выляса ларнине курах кайрӗ.

Верук нимӗн шухӑшласа тӑмасӑр хӑйсен килӗ еннелле чупрӗ. Самантрах кил хушши алӑкне яр уҫса ячӗ те, сарай ҫумне типӗтме хунӑ симӗс курӑка пӗр ҫӗклем ҫупӑрласа илсе, урама чупса тухрӗ.

Колхозӑн ӑратлӑ вӑкӑрӗ вӗсен тӗлне ҫитнӗ те, «кӗрес-ши, кӗрес мар-ши?» тенӗ пек, кил хушши еннелле пӑхса тӑрать.

— Килех кунта, Булан, кил!— терӗ Верук йӑвашшӑн, аллинчи утта кӑнтарса.

Вӑкӑр Верук хыҫҫӑн кил хушшине кӗрсе кайрӗ, унтан, сарай ҫумӗнчи курӑк купи патне пырса, шӑршлама пуҫларӗ. Ҫав самантра Верук пахчана чупса кӗчӗ те вӗренленӗ ӗнине хӑвӑрт кӑна кил хушшине ҫавӑтса кӗртрӗ. Вӑкӑр ҫавӑнтах ӗне ҫумне пырса тӑчӗ.

Верук тинех пӑртак лӑпланчӗ, хӑй вара самантрах урама чупса тухрӗ те кӳршӗ ачисене киле тарса кӗме хушрӗ, вӑкӑрпа хӑратрӗ.

Ачасем кил хушшине кӗрсе пӗтсенех Верук ӗнине ҫавӑтса урама тухрӗ. Вӑкӑр та вӗсенчен юлмарӗ, вӑл вӗсем хыҫҫӑн фермӑ картишне ҫитсе кӗриччененех пӗр юлмасӑр утса пычӗ.

●

**Мария ВОЛКОВА**

# ҪАМРӐК ТКАЧИХӐНА

*Ҫип ӑсисем кумса чӳхеннӗҫем*
*Ӗҫ умӗнче эс шухӑшлӑн тӑратӑн,*
*Чун туртнӑ, чун юратнӑ хӑв ӗҫе*
*Ыр киленӳ хавалӗпе тӑватӑн.*

*Сан аллуна иленнӗ станоксем*
*Пӗр музыкӑ шавне куҫса кӗрлеҫҫӗ.*
*Ун юхӑмне ҫӑп-ҫӑмӑл алӑсем*
*Пӗр тикӗссӗн тытса пыма пӗлеҫҫӗ.*

*Ҫак сарлака, хӑватлӑ юхӑмра*
*Хумсен шавне илтсе, эс йӑл кулатӑн.*
*Пиррӳ питне сӑнанӑ май вӑрах*
*Ху мӗн тери чиперрине туймастӑн.*

*Шур мамӑксем вӗҫеҫҫӗ сан тавра,*
*Хулсем ҫине ҫемҫен килсе лараҫҫӗ.*
*Мӑнкӑмӑллӑн, кӑшт тӳррӗн пӑхнӑран*
*Сан куҫусем чуна вут хыптараҫҫӗ...*

*Ӗҫ халатне хыватӑн та самант,*
*Тӗкӗр умне пырса кӑшт юсанатӑн,—*
*Вара чупса тухатӑн урама —*
*Нихҫанхинчен те ҫӑмӑллӑн туятӑн!*

*Ытарайми пӑхатӑн таврана*
*(Пуҫра ҫаплах тӑрать-ха станок шавӗ),*
*Ҫуртсем илемлӗрех пек халь сана,*
*Хулан — хӑватлӑрах пек чыс-мухтавӗ.*

*Саппун ҫыхан вӑтанчӑк хӗрӗсем,*
*Сӑмах хушса, пӗрле кайма чӗнеҫҫӗ.*
*Утатӑн эс, вӗсен йышне кӗрсе,*
*Кашни сасса итлетӗн тӳсеймесӗр.*

*Хула каять сасартӑк ҫуталса,*
*Вӗҫеҫҫӗ чап ялавӗсем ӗретӗн.*
*Унта сан чыс та пуррине туйса,*
*Сывлатӑн ирӗк, ирӗккӗн ҫӳретӗн.*

# Макар Хури сăввисенчен

## Çĕнĕ юр

Шурăмпуç килес чухне, ирпе,
Ерипен тумлантăм та, эп тухрăм.
Çĕнĕ юр çинчен утса иртеп.
Эп çапла, тен, кайрăм пуль пĕр çухрăм.

Урамра пушмак йĕрри кăна.
Чĕнтĕрленĕ пек йĕрсем выртаççĕ.
Çăпата, тăла сыракана
Пĕрре çеç пулсассăн та курасчĕ.

Урампа вăрахăн иртнĕ чух
Çăпата йĕрне темччен шырарăм.
Кураймарăм, те пачах та çук.
Хăй йĕрне çухатнă-мĕн, мăнтарăн.

Юрĕ шурă, сахăр пек таса.
Уйрăмах тĕреклĕ йĕр куратăп:
Сирĕппĕн, сатур ярса пусса,
Иртсе кайнă таканлатнă атă.

Иртнĕ те çын, паттăр улăп пек,
Çĕн юра çĕре çити шăтарнă.
Таканлатнă йывăр атгипе
Хăй йĕрне лартса хăварнă тарăн.

Лăпкă ял, хуларан инçе.
Мĕн калатăн — çăпаталлă ялччĕ.
Çавăнпа та çĕнĕ юр çинче
Çĕн йĕрсем курассине сунманччĕ.

## Çил-тăман ачи

Шупашкарăн çĕн урамĕнче
Çил-тăман ачи йĕрсе çӳрерĕ.
Ăмăшне çухатнăскер, пĕччен
Уялла тухма вăл çул пĕлмерĕ.

Хăть ăçта пырсан та, уп çулне
Çӳлĕ çурт ĕречĕ кансĕрлерĕ.
Тарăхса вара: «Хӳме çумне
Тăсăлса выртас пуль манăн», терĕ.

Çил ачи вара, йĕре-йĕре,
Ăмăшĕсĕр, килсĕр-çуртсăр, тăлăх,
Машинсем, çынсем иртес çĕре
Тăсăлчĕ те выртрĕ урам тăрăх.

Çакăнта эс, çунатна сарса,
Ăмăрт кайăк пек вĕçсе çӳреттĕн.
Инкекне эс илеймен аса,
«Чарайместь мана никам та», теттĕн.

Ĕлĕкхи пек çунатна сарма
Халь сана çуртсем памарĕç ирĕк.



*Кăçалхи январĕн 19-мĕшĕнче чăвашсен талантлă поэчĕ Макар Хури (Макар Гордеевич Ильин) çуралнăранпа 50 çул тултарчĕ. Хăйĕн çур ĕмĕрне кĕтсе илеймерĕ поэт, 48 çул тултарчĕ те, чĕре тытса пăрахнипе сасартăках вилсе выртрĕ... М. Хури поэзи ĕçне кая юлса хутшăнчĕ, 38 çулта вăл Мускава литературăн аслă шкулне вĕренме кайрĕ, хĕрĕхре малтанхи кĕнеки пичетленсе тухрĕ. М. Хури хăй пурăннă чухне виçĕ кĕнеке кăларса хăварчĕ: «Сăвăсем» (1953), «Çул парни» (1956), «Çăкăр» поэмă (1959).*

*Юлашки вăхăтра поэт çынсен ăс-тăнĕнчи капитализм юлашкине критиклекен «Чĕн саламат йăхĕ» ятлă сăвăллă роман тата «Иван Кадыков» ятлă драмăллă поэмă çыратчĕ. Романне çырса пĕтереймерĕ.*

*Ĕçлес планĕсем М. Хурин пысăкчĕ, хăй ĕмĕтне пурнăçласа ĕлкĕреймерĕ пулин те, вăл тăван чăваш поэзийĕнче палăрса тăракан йĕр хăварчĕ, хăйне пӳрнĕ пурнăçăн çулне пархатарлă утса тухрĕ.*

*Кăçал Чăваш кĕнеке издательствинче М. Хурин «Çул парни» ятлă пысăках мар томĕ тухмалла.*

*Кунта эпир вулакансене поэтăн халиччен пичетленмен хăшпĕр сăввисемпе паллаштаратпăр.*

Стихван ШАВЛЫ.

Çавăнпа эс аслă урама
Вĕçĕмсĕр куматăн каçăн-ирĕн.

Ăмăрт кайăк читлĕхне лексен,
Тимĕрне сăмсипеле такканăн,
Çурт çумне пыран та перĕнен,
Ирĕке тухас килет-мĕн санăн.

Çапăнан та чул степасене,
Сăмсунтан хĕп-хĕрлĕ юн тăкатăн.
Çул тупаймăн. Вырт урам варне,
Тен, выртсан уя тухса куратăн.

## Ĕмĕт

Мĕн кăна курмарăм ĕмĕрте,
Начарри те пулчĕ, лайăххи те.
Ӳлĕмрен начаррине пĕртте
Курас марччĕ манăн яхăнне те.

Пĕчĕк чух эп, çăкăр шыраса,
Хăш тĕле кăна çитсе курмарăм.
Çав самант килет те халь аса,
Вĕркĕч евĕр хашлататăп тарăн.

Халь пĕлетĕп: харама кайман,
Эп совет çĕршывĕнче пурнатăп.
Ĕçлемешкĕн ирĕк пур халь ман,
Мĕн тăвас килет, çавна тăватăп.

Нумаях пурнаймăп эпĕ, тен,
Аллăсем патне кун-çул çывхарчĕ.
Пурнăçăм хĕвелĕ аниччен
Коммунизм килнине курасчĕ.

Çав телей çывхарнă вăхăта
Йк куçпах курма çырман пулсассăн,
Курăттăм хăрах куçпа кăштах,—
Вилес марччĕ ман ăна курмасăр.

## Пăчăр

Пăчăра сунарçă ăнсăртран
Йĕтрепе хырăмĕнчен шăтарнă.
Пăчăр-пăчăр юн тумлать ăшран,
Хăй çапах вĕçет иккен, мăнтарăн,

Пурпĕрех шутлать хăй ăшĕнче:
«Мĕн телейччĕ вăрмана çитсессĕн!
Ман унта çăка хăвăлĕнче
Чĕппĕмсем хăй амăшне кĕтеççĕ.

Çавсене парасчĕ ман апат,
Савăнса юрланине курасчĕ».
Пăчăр-пăчăр юн тумлать, çапах
Усăнмасть мăнтарăнăн çуначĕ.

**Хветĕр УЯР**

# Мемме

*Калав*

— Чĕрем çунать, юлташăм. Вутпа çуннă пек çунать! Майĕ пулсан, шыв сапса сӳнтерĕттĕмччĕ,— сӳнтерме çук. Пĕр самантa лăшт яринччĕ хăть, мăнтарăн! Çут тĕнчене асăрхами пулса çитрĕм, паллакан çынсене палламасăр иртсе каятăп. Хăш-пĕрисем ман пирки: ухмаха ернĕ, тесе те сăмах кăларса пăхрĕç ĕнтĕ. Тепĕр чух эп хама хам ăçтан та пулин суран тума та хатĕр. Тен, ура е алă ыратма тытăнсан, чĕре çуннине манса кайăттăм. Е пĕрер эрнелĕхе çывăрса каясчĕ...

Манпа халĕ сад тенкелĕ çинче çапла калаçса ларакан çынна эпĕ пĕр сехет каялла район центрĕнчи чайнăйра асăрхарăм. Чайнăйра та мар-ха, чайнăй умĕнчех асăрхарăм эп ăна. Унтан эпир чайнăя кĕтĕмĕр. Тĕрĕсрех: малтан — вăл, вара эпĕ кĕтĕм.

Йĕркипе каласа парам. Ирхине, сакăр сехетсем иртсен, эпĕ, командировкăна килнĕскер, апат çиес тесе, чайнăй патне пытăм. Пăхатăп — хупă. Алăкĕ çине — «тăхăр сехетре уçăлать», тесе çырса хунă. Мĕншĕн тăххăрта тин — çиес пеккисем ирхи апат çисен, ĕçе каймаллисем — ĕçе кайса пĕтсен тин уçăлать — эпĕ ун пирки ун чухне аса та илмерĕм. Атă çĕлесе пурăнаканăн атти çĕтĕк, тенĕ пек, çитменнине тата чайнăйра чейĕ те пулмарĕ: эрех те купăста шӳрпи çеç...

Ку район центрĕ вăрман варринче ларать те, ун урлă мăн çулпа вĕçĕ-хĕррисĕрех машинсем иртсе çӳреççĕ. Пушăлла килеççĕ те вăрман турттарса каяççĕ. Чăвашла, вырăсла, мăкшăлла, тутар-мишерле калаçни илтĕнет. Чăвашсем те тĕрлĕ вырăнтан: «аре» текеннисем Елчĕк тăрăхĕнчи, «ами» текеннисем («ку эсĕ мар-и, ами?») Тутар республикинчен. Ульяновск облаçĕнчи машинсем те курăнкалаççĕ.

Чайнăй уçăласса кĕтсе, аслă çул çинчи тĕркĕшĕве сăнаса тăнă май, эпĕ пĕр темле çынна асăрхарăм. Вăл халĕ çеç машин çинчен анса юлнă пулас, çул хĕрринерех пăрăнса тăнă та тусанлă картусне алли çине пĕр-иккĕ шаккарĕ. Çул çинчи типĕ тăпра тĕслех пулса кайнă хура картусĕ унăн пĕртте тасалмарĕ, пăхсах курăнать, çапах вăл ăна урăх çапмарĕ, арпашса кайнă çӳçне пӳрнисемпе пĕрре каялла сăтăрса илчĕ те — пуçне тăхăнчĕ. Вара унталла пăхрĕ, кунталла пăхрĕ те хуллен чайнăй еннелле утрĕ. Утти те унăн хăйне евĕр: тĕрексĕр урисемпе иккĕленсе тенĕ пек утать: те ăçталла та пулин кайсан лайăх, те — вырăнтах тăмалла. Ăна темĕнле курăнман япала туртать тейĕн. Вăл каяс мар тесе туртăнкаласа тăрать, çапах леш вăя парăнса, ирĕксĕрех малалла танккать... Хăй вăтам кĕлеткеллĕ, ырхан, кăшт курпунтарах (тен, вăл пуçне чиксе çӳренипе çапла курăнать пулĕ). Хупă алăк патне пырса тăрсан, вăл пуçне çĕклерĕ те, эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Пичĕ ун, чĕр кĕмĕл пек, кашни самантрах хускалса улшăнса тăрать. Унта тем кĕтни те, хăйĕн вăйне шанми пулни те, тарăхни те, вăтаннипе хуйхă та пур. Пичĕн тĕсĕ те хăрамалла: темле тĕксĕм сарăрах. Те ăна тусан витнĕ, те сывмаррипе çĕр тĕсĕ çапнă. Куçĕсем... вырăсларан куçарнă чухне ун пек куça сапаланчăк, теççĕ. Пĕтĕм пăлханнă кăмăл, тăвăнса çитнĕ чун курăнса кайрĕ вăл алчăранă пек ниçта чарăнса тăрайман куçсенче.

Çын ман çине пĕрре йăлт пăхса илчĕ те куçне тартрĕ. Пире иксĕмĕре те ыра мар пулса кайрĕ: мана — пĕлмелле мар, курмалла мар япалана ăнсăртран курса ăнланнăшăн, ăна — хăйĕн чунне пытарма пултарайманшăн. Ун пек çынсем музыкă инструменчĕ пекех: тĕкĕннипе мар, сывлăш хускалнипех сас парса тăраççĕ. Ытла та хӳтлевсĕр, ытла та мĕскĕн вăл çынсем! Пурнăçĕнче вара ăша çил кăна мар, сив-

ви те касса вĕрет, тăм та ӳкет, юр та çуса лартать...

Çын палт пăрăнчĕ те, ĕçлĕ çын пек курăнма тăрăшса, аяккалла васкаса утса кайрĕ. Анчах пурпĕрех вăл хăйне хăй сăнаса пыни, кăмăлне çеç мар, алли-урине те «алла илме» хăтланни сисĕнчĕ. Часах унăн утăмĕ хулленлене пуçларĕ, тĕрексĕрленчĕ, тĕлли-паллисĕр пулса кайрĕ. Вăл темшĕн çул урлă каçрĕ, каялла çаврăнчĕ, çынсем патĕнче чарăнма хăтланчĕ те чарăнмарĕ. Пахча карти çумне пырса таянса пирус чĕртнĕскер, вăл унта та нумай тăмарĕ...

Чайнăй уçăлсан, эп ăна апат çыртарса илекен çынсем хушшинче куртăм. Вăл черетре те çав тери канăçсăррăн тăратчĕ. Такама шыранă пек, йĕри-тавра пăхкалать, çынсем калаçнине итлет. Вăл пĕр вăхăтрах пурне те курать те, илтет те, чĕре çывăхне те илет пулас. Анчах шалти туйăмĕ те ăна пĕр саманта та мантармасть.

Черет çитес чухне вăл пĕрре урама тухса кайса та пăхрĕ. Унтан вăтанкаласа каялла пырса кĕчĕ, каллех çĕнĕ черет йышăнчĕ. Вара çĕр аллă грам шур эрех илсе шалт тутарчĕ те урамалла утрĕ.

Апата çисе пĕтермесĕрех эпĕ те ун хыççăн тухрăм.

Çур сехетрен эпир сад варринчи сулхăн тенкел çине çитсе лартăмăр. (Тĕрĕссипе каласан, малтан вăл, унтан эпĕ пырса лартăм). Çумăр пуласса систерсе, пуççем çинче кураксем шавлатчĕç. Сывлăш пăчăччĕ... Çын малтанах манран ютшăннă пек пулчĕ, унтан сасартăк шанса пăрахрĕ. (Кунашкал çынсен пурте сасартăкрах пулса иртет — юратасси те, курайми пуласси те. Ытлашши хурлама та кирлĕ мар вĕсене: кăмăлĕсене тупма пĕлсен, вĕсем хăйсене ĕмĕр-ĕмĕр парăмлă тесе шутласа пурăнаççĕ, пĕр пĕчĕк ырă ĕçшĕн çĕр те пĕр ырă ĕç туса параççĕ.)

Юнашар ларсан, эпĕ тата акă мĕскер асăрхарăм. Ăшĕ лăпкă маррипе вăл питне яланах асаплăн пĕркелентерсе çӳрет пулас; хăй вăтăр иккĕ — вăтăр пиллĕксенче çеç пулсан та, ăна халех ватă сăн çапма ĕлкĕрнĕ. Пичĕ хĕвелпе те çилпе куштăркаса хуралнă та, кăшт лăпланнă пек самантсенче тӳрленнĕ пĕркеленчĕк йĕрĕсем хĕвел лекменнипе шап-шуррăн курăнаççĕ. Вара унăн куç таврашĕсем, çамки, пит çăмартийĕсем темле шурă тымарсемпе витĕннĕ пек пулса тăраççĕ, сăнĕ хитремарланать.

Малтанах вăл пăтрашăнса калаçкаласа ларчĕ, хĕреле-хĕреле кайрĕ, унтан урăх çын çинчен каласа панă пек калама хăтланса пăхрĕ. Юлашкинчен вăл ман еннелле тепĕр хут чăрр пăхса илчĕ те аллине сулчĕ:

— Юрĕ, ку калав ман пирки пултăр эппин... «Пултăр» та мар-ха, вăл шăп кăна ман çинчен...

— Туятăп,— терĕм эпĕ кĕскен. Ман сăнра хута кĕни сисĕнчĕ пулас, палламан çын çывăхарах куçса ларчĕ те туртса пĕтереймен пирусне пăрахса çĕннине чĕртрĕ.

— Эпĕ такама айăпласа та, хам тӳрре тухас тесе те калаçмастăп, мĕншĕн тесен эпир пĕрне-пĕри пĕлместпĕр: тĕл пулнă — иртсе кайнă.— Çапла пуçласа ячĕ вăл хăйĕн калавне.— Эпĕ халь сире курман пулсан, Чехов калавĕнчи этем пек, тен, хам хуйха-суйха лашана та пулин каласа парса чуна пусараттăмччĕ пуль. Халь ак сире куртăм.

Тен, ман калавăм сирĕншĕн интереслĕ пек туйăнĕ, тен, вăл ниме те тăмĕ. Апла та, капла та эсир ман сăмахăма йывăра ан илĕр. Кашни çыннăнах хăйĕн пурнăçĕ, хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ. Тата çитменнине çын çинчи çапах йывăç çинчи япала.

Савăнăçпа телей яланах пĕр евĕрлĕрех, теççĕ, хуйхă-суйхă çеç кашнин — хăйне майлă. Эпĕ сире хамăн инкекĕме каласа парам.

Ятăм-шывăма шарламăп, вăл кунта кирлех те мар. Тепĕр тесен, капла калаçма та çăмăлтарах. Паллакан çын умĕнче сасартăках чĕрене уçма йывăр. Кайран намăс пуласси çинчен шухăшлатăн, юлташу умĕнче хăвна куçран ӳкересрен те шиклĕ. Вара ирĕксĕрех суйма, илемлĕрех каласа пама тытăнатăп. Капла халь — ик айкки те тăвайкки, тенĕ пек. Калаçнă — уйрăлса кайнă...

Йывăр мана, юлташăм. Ах, йывăр-çке, мăнтарăн! Выртсан та ыйăх килмест, кăнтăрла та ларма-тăма вырăн тупаймастăп. Ĕçленĕ чухне те, утса çӳренĕ вăхăтра та, килте те, хăнана кайсан та — пĕр шухăш, пĕр сăнар, пĕр курăну канăç памасть, çĕçĕпе каснă пек касать — çунтарать. Ниçта кайса кĕреймен енне хирелле тухса утатăп. Анчах унта та канăçлăх çук. Куç умĕнче яланах — вĕсем пĕрле ларни, тен, пĕрне-пĕри ыталанисем!.. Куçăма чавса кăларăттăм,— куççăр та куратăп эпĕ вĕсене...

Итленĕçем мана ку çын темшĕн ытла та актерла калаçнă пек туйăна пуçларĕ. Мĕншĕнне малтанах хам та ăнланаймарăм-ха. Сăмахĕсем те чĕререн тухаççĕ пек ĕнтĕ. Çын асапланнине те сисетĕн. Анчах темшĕн ăшра ырă мар туйăм вăранчĕ. Темĕнле ултава лекнĕ пек, темелле-ши ăна? Калаçасса та нумай калаçать... Артист хăйĕн ролĕ мĕнле пулнине халăх хушшинче тĕрĕслет, тейĕн çав. Эсĕ «халăх» вырăнĕнче хăв пĕччен итлесе ларнишĕн вăтанма тытăнатăн. Çапах итлетĕн-ха. Вара... кĕтмен метаморфоза çуралать. Эсĕ «артиста»

итлетӗн, вӑл каланине «курма» тӑрӑшатӑн, куҫ умне «артистӑн» хӑйӗн сӑнарӗ тухса тӑрать...

Қалавҫӑ вӑтанса тенкел ҫинчен ҫӗкленчӗ.

— Сирӗн пирус ҫук пуль?— терӗ вӑл, малтанах «ҫук», тесе каласса кӗтсе.

Эпӗ унпа килӗшрӗм.

— Туртмастӑп ҫав эпӗ.

— Эп халех...— терӗ те калавҫӑ чайнӑй еннелле вирхӗнчӗ. Пӗр вунӑ минутран вӑл каялла таврӑнчӗ, ман ҫума васкамасӑр пырса ларчӗ. Куҫӗ чӗррӗн йӑлтӑртатса пӑхнинченех, тутине шӑлса илнинченех сисрӗм: калавҫӑ каллех эрех ӗҫсе килчӗ.

— Чи йывӑрри маншӑн — чӗре суранӗ,— терӗ вӑл малалла, кӗнеке вуланӑ пек.— Алура ыратсан,— сиплеме пулать. Ватӑлса вилекенӗн те чӗри вырӑнта. Ӗнтӗ пурӑнтӑм, ачасене ӳстертӗм, халӗ вилсен те пырать, тет вӑл. Сӑрт витӗр шӑтарса тухма хушсан, ӑна та тытӑнса пӑхма пулать. Чӗре сурнине ҫеҫ — нимпе пусарма ҫук.

Юратнӑ чухне ҫын кирек хӑҫан та кӑштах эгоист. Вӑл иртни ҫинчен те, пуласси пирки те шухӑшламасть-ха, мӗншӗн тесен ӑна юратаҫҫӗ! Вӑл такамран та аслӑ, улӑпран та вӑйлӑ. Пурнӑҫ пурнасси ӑна уй урлӑ утса каҫассинчен те ҫӑмӑл пек туйӑнать. Шухӑшламасӑр ярса пуснӑ пусӑмран, ҫӑмӑлттай хӑтланнинчен хайхискер сисмен ҫӗртенех инкек сиксе тухать. Қайран чавса ҫывӑх та — ҫыртма ҫук...

Эпӗ хам инкекӗме ӑнланма тӑрӑшатӑп. Мӗнрен пуҫланчӗ вӑл? Аҫтан килсе тухрӑм эпӗ ҫӗмрӗк курите патне?

Пулас арӑмпа эпӗ вӗреннӗ вӑхӑтра паллашрӑм. Вӑл пӗр киоскра ӗҫлетчӗ, эпӗ шоферсен курсӗнче вӗренеттӗм. «Хунькассисем» турӑ шутлӗрех ҫынсемччӗ те ӗнтӗ, мӗне пӗлтертӗр вӑл ку чухне! Эпӗ вӗсемпе пурӑнас ҫук вӗт! Пулас арӑм ман хура, пӗчӗккӗ, ҫинҫешкеччӗ. Паллашнӑ каҫхине тата хӑйӗн сӑнне килӗшмен шурӑ костюм тӑхӑнннӑччӗ, ҫапах вӑл мана пуринчен те хитре пек туйӑнчӗ. Иккӗмӗш каҫӗнче эп ӑна хам юратни ҫинчен каласа патӑм. Тепӗр икӗ уйӑхран эпир ЗАГСа кайса ҫырӑнтӑмӑр. Тата виҫ уйӑх ҫурӑран, эпӗ хваттер тупсан — пӗрлешрӗмӗр.

Пысӑк хӑват — юрату! Ҫунатсӑррине вӑл ҫунат парать, ваттине — ҫамрӑклатать, халтан кайса ӳкнине — пурнӑҫ ҫулӗпе малалла утма пулӑшать. Тата вӑлах, ҫав юратӑвах, ҫӳлӗ ту тӑррине хӑпарса ҫитнине те каялла ҫапса ӳкерет.

Укҫа пек, кашни япалах пурнӑҫра — икӗ енлӗ: ӑшӑ — сивӗ, шурӑ — хура... юрату — курайманлӑх. Майӗ пулсан, чухӑн студентӑн улӑштармалли ҫухине виҫ-тӑват енлӗ те тӑвӗччӗҫ те, мая килместь: вӑл та икӗ енлӗ кӑна...— Ҫын йӑл кулма хӑтланчӗ те — кулаймарӗ, питне ҫеҫ тата ытларах пӗркелентерчӗ. Пичӗ ҫинчи шурӑ йӗрсем курӑнми пулчӗҫ.— Хӗре пӗрре курсах юратса пӑрахнинчен ан тӗлӗнӗр эсир. Ҫамрӑклӑх мӗн иккенне пӗлместӗп эпӗ. Вун виҫҫӗре аттесӗр тӑрса юлнӑ та, пӗтӗм пурнӑҫ ыйтӑвӗ — апат-ҫимӗҫ, тумтир, пурӑнмалли кӗтес тупасси, вӗренӳ нушисем — йӑлтах хам ҫине тиеннӗччӗ. Малта аякра-аякра пӗр пӑнчӑ палӑртса хунӑ та эпӗ, ни айккинелле, ни хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхмасӑр, пӗрмаях малалла туртӑннӑ. Выҫӑ-и, тутӑ-и, тумтир ҫӗтӗк-и е ура айне пӑхманнипе ҫӗре персе анатӑп-и — малти ҫутӑ пӑнча эпӗ нихҫан та куҫран ҫухатман. Хӗрсемпе калаҫма вӑхӑт та, кӑмӑл та ҫукчӗ. Шоферсен курсӗнче вӗреннӗ чух пӑхрӑм та — эпӗ ҫирӗм икке ҫитсе тухнӑ! Вара пулас арӑма тӗл пултӑм, юратса пӑрахрӑм, пӗрлешрӗмӗр. Анчах, ытти хӑш-пӗр ҫынсем пек, эпӗ йӑнӑшмарӑм. Халӗ эпӗ — икӗ ача ашшӗ ӗнтӗ, арӑмпа та пӗр чӗлхе тупаймастӑп, ҫапах калатӑп — ҫук, йӑнӑшманччӗ эпӗ ӑна илсе.

Хура, пӗчӗккӗ, тенӗрен, тен, эсир ман арӑма хитре мар, тетӗр пуль? Ӑна эсир кӑна мар, ыттисем те хӑш-пӗрисем ҫапла шухӑшлаҫҫӗ. Эпӗ тавлашмастӑп, хитре тесе ӗнентерме те тӑрӑшмастӑп. Анчах ҫынсем ҫапла шутланӑшӑн хам ӑшра савӑнатӑп та. Эгоизм? Ара, пулин. Арӑмӗпе упӑшки хушшинче тепӗр чухне эгоист пулмасан та юрамасть.

Эпӗ курсран вӗренсе тухсан, ӗҫе кӳлӗнтӗмӗр. Эпӗ автобус шоферӗ пулса тӑтӑм. Пӗр каҫ килте, тепӗр каҫ юнашар хулара ҫӗр каҫаттӑм. Арӑм пуринчен ир тӑратчӗ те пуринчен кайран ҫывӑрма выртатчӗ. Ним мар япаласемпех пӳрт ӑш-чиккине капӑрлатса ячӗ. Урасене ҫумасӑр е шыва кӗрсе тухмасӑр каҫхине вырӑн патне ҫывхартмастчӗ. Мӗнле юрататчӗ вӑл мана, пӗлесчӗ сирӗн! Хӑвӑрах куратӑр, эпӗ хитре ҫын мар. Вунӑ ҫул каялла та кунтан чаплах пулман пулӗ. Ну, мӗн ӗнтӗ, кӑштах ҫамрӑкрах пулнӑ, вӑй та ытларахчӗ...

— Эрехне эсир ун чухнех сыпкаланӑ-и?— ыйтрӑм эпӗ.

Қалавҫӑ шартах сикрӗ, ман ҫине чӑрр пӑхса илчӗ.

— Эрехе-и? Ма апла ыйтатӑр? Ара ӗнтӗ... ӗҫ хыҫҫӑн кам ӗҫмест пуль ӑна? Ӗҫкеленӗ ҫав ӗнтӗ...

— Юратсах ӗҫеттӗрччӗ-и?

— Малтан — ашкӑнса ҫеҫ, ҫынтан юличчен муртан юл, тенӗ пек. Қам юраттӑр вӑл пакӑҫа?

— Халӗ мӗнле?

Қалавҫӑ ман ҫине каллех хӑраса пӑхса илчӗ те хӗрелсе кайрӗ.

— Халĕ ман чĕре çунать,— терĕ вăл, пуçне чиксе.

Пĕр хушă эпир чĕнмесĕр лартăмăр. Қалавçă пирус пачкине кăларса аллинче çавăркаларĕ те ăна каллех кĕсйине чикрĕ.

— Қалас-и малалла?

— Қаламасăр! Пуçланă сăмаха пĕтересех пулать,— терĕм эпĕ.

— Таçта çитнĕччĕ-çке эпĕ?

— Хăвăра хитре çын мар, терĕр.

— Э-э, вăл чанах ĕнтĕ. Ман пек арçын — тĕнче тулли. Пурнăç пирĕн пеккисем çинче тытăнса тăрать, тесçĕ. Арăмшăн эпĕ пурпĕрех чи хитри, чи ăсличчĕ. «Тĕнчере эпĕ сансăр пуçне пĕр арçын та курмастăп», тетчĕ вăл. Нихçан та улталаман, нихçан та суйман вăл мана. Эп ăна кантăк витĕр курнă пек курса тăраттăм, унăн кашни сăмахне ĕненеттĕм.

Малтанах эпĕ те унран нимĕн те пытарман. Арăмпа иксĕмĕр хăнара-мĕнре чухне пĕр-пĕр хитре хĕрсе кураттăм та вара куçа илмесĕр пăхма тытăнаттăм. Тепĕр чухне тата, арăм юриех курмăш пулса ларнине асăрхасан, ăна айккинчен тĕксе илеттĕм. «Қур-халĕ, мĕнле хитре хĕр!» Ку ĕнтĕ уççăн мăшкăлланиех пулнă пуль те, ун чухне эпĕ ăна-кăна шутламан. Ара, эпĕ чи лайăх арçын-çке-ха, ăна кирек мĕн хăтлансан та пырать, ăна юратаççĕ, тенĕ ĕнтĕ эпĕ.

Çапла пĕр çул иртсе кайрĕ, иккĕ те иртрĕ. Виççĕнтен тăваттăна çитрĕмĕр: анне, эпир иккĕн, ывăл. Арăмăн ĕçĕ тата та хутшăнчĕ. Çапах пур çĕрте те ĕлкĕрсе пыратчĕ вăл, пӳрт ăшчикки те тасаччĕ, ĕçĕнче те çынсенчен кая юлман. Юлма мар, мухтатчĕç ăна.

Пĕррехинче вăл мана киоска ревизи тума пынă çын хăй çумне çыпăçма хăтланни çинчен тарăхса каласа пачĕ. Вăл çынна хулара нумайăшĕ пĕлеççĕ. Теменрен хăранă пек, яланах алчăраса пăхса çӳрет. Пысăк портфеллĕ, йĕкĕр хушаматлă. Баптистсен сăвăçи теççĕ-и çавна, темĕн-и. Тата ревизорта та ĕçлет иккен. Эпĕ çинçе уралла шĕвĕре аса илтĕм те ун çинчен çав самантрах манса кайрăм. Кĕвĕçни ахаль те ырă мар туйăм, теççĕ. Ун пек çын çумне хушни вара икĕ хут ырă мар пулнă пулĕччĕ. Тепрехинче арăм çав айванăн вăрттăн çыруне кăтартрĕ. «Сана курмасăр иртнĕ кун маншăн çухалнă кунпа пĕрех. Эрне курмасан, çулталăк курман пек туйăнать». Пĕр сăмахпа каласан, çын юратса пăрахнине сисрĕм.

— Хăй авланнăскер-и вара?— ыйтрăм эпĕ.

— Э-э, вăл ним те пĕлтермест,— терĕ те, калавçă пирус тĕпне чĕрни вĕçне хурса аяккалла сирпĕтсе ячĕ. Унтан ирĕксĕртерехҫĕн кăна çапла хушса хучĕ:— Авланнă, икĕ ачи пур. Арăмĕ хырăм пăраха-пăрарах чирлесе кайнă. Ку вара — турă кĕллисем çырса ларать...

Сахал иртет-и, нумай-и, ман арăмăн икĕ пин тенкĕ растратă пулчĕ, терĕç. Тӳлерĕмĕр. Тепĕр виçĕ пинне çав ревизор — сăвăç хуплама пулăшнă-мĕн.

Килте час-часах урлă-пирлĕсем пула пуçларĕç. Ку вăхăтра ĕнтĕ пирĕн икĕ ывăла çитнĕччĕ. Анне хĕне кайрĕ те, вăл тумалли ĕçсем те арăм çине тиенчĕç.

Ачаш ача вăрă тунă, тет-и-ха? Çапла эпĕ те вăрă турăм та — çаклантăм çав. «Вăррине» каясси те ытла усал шухăшпах кайман та-ха. Простă пĕр хĕре курнă та тӳсеймен... калаçкаланă, мĕнех вара уншăн? Арăма пăрахма шутламан вĕт эпĕ. Тата мĕнле арçын юталла пăхманни пур?

Хĕрарăм психологине сăнанă-и эсир? Калăпăр, пĕр хитре мар арçын пурăнать, тейĕпĕр. Вăл тăр-пĕччен пулсан та, унпа никамах та калаçасшăн мар-ха. Çав усал арçынах арăмĕпе çав тери килĕштерсе пурăнма тытăнсан, пурте кĕпĕрех ун еннелле çаврăнса пăхаççĕ. Мĕнпе илĕртет-ши вăл арăмне?— теççĕ пулас. Эпĕ те çавăнпа çеç чапа тухрăм. Ахаль пулсан, ман еннелле пĕр хĕрарăм та çаврăнса пăхас çук.

Арăм ман макăрать — пӳрте те пырса кĕрес килмест. Ĕçĕнче те ырри çук. Қаллех растратă сапларăмăр. Унпа улшăнса ĕçлекен продавщицă Надежда Кирилловна ырă ят илсе ларать. Ĕçлессе те ĕнтĕ хăй ытларах чĕлхипе ĕçлет, çапах вăл ырă, унăн ятне потребсоюзри «Хисеп хăми» çине çырса хунă, ăна премисем параççĕ. Ман арăм кĕç-вĕçех ĕçрен тухса ӳкес пек тăрать. Пуçлăх кăмăлне туманни хамăр кăмăла хăварчĕ.

Пирĕн пата Натюк йăрккамя тытăнчĕ. (Тепĕр продавщицине эпир çапла чĕнеттĕмĕр). Çулĕпе вăл ман арăмран кĕçĕнрехчĕ, чеелĕхĕпе вара такамран та аслăччĕ пулмалла. Пирĕн икĕ ачана çитрĕ, вăл пĕрре çуратрĕ те тухтăра кайса темĕнле порошок ĕçрĕ-и, мĕн-и — вуçех ача тума пăрахрĕ. Мĕнле ӳкерсе парам-ши сире унăн сăнарне. Вăл çӳлех мар, хытанкарах. Ытти хĕрарăмсен кĕлетки чăмăр пулать, кунăн вара тем пирки лапчăк. Мĕн пирки лапчăк пулнă вăл, хăçан лапчăннă, эп ăна сире пуссан та каласа параймастăп. Қалаçасса вăл темĕнле ачашланса та тăсса, хăй хитре калаçнинчен хăй тĕлĕнсе, сăмсапарах калаçать. Пирĕн анне ун пеккине сĕтĕрсе калаçать, тет. Ун пеккисем кăшт-кашт вĕренкеленисем хушшинче тĕл пулаççĕ. Ахаль çыннăн курнăçланса çӳреме вăхăт çук. Ку вăл яланах арçынсем хушшинче явкаланса çӳреме юратать. Қайăк пуçĕ пек пĕчĕк пуçне сылтăмалла пăрса хурать те вара пĕр арçын

çумне пырса сĕртĕнет, теприн патĕнчен кушак пек мăрăлтатса иртсе каять. Чăн-чăн сĕлекех ĕнтĕ. Эс ăна çăкăр ан пар, арçынсем хушшинче тĕккелешсе çÿреме çеç ан чар. Ун пек хĕрарăмсем хулара, пĕр квартал çеç каймалла пулсан та, тăвăр автобуса чăмаççĕ...

Çак Натюк çÿреме тытăнчĕ пирĕн пата. Пырать те тÿрех пăш-пăш-пăш-пăш-пăш, пăш-пăш-пăш-пăш. (Вăл хирте иккĕн çеç пулсан та, пăшăлтатмасăр калаçаймасть.) Мĕн çинчен калаçаççĕ вĕсем — эпĕ илтместĕп. Илтесшĕнех те мар, мĕншĕн тесен упăшкине ултавлакан арăмсене кураймастăп эпĕ.

Ман арăм куç умĕнчех улшăнма пуçларĕ. Кинона, театрсене çÿреми пулчĕ. Хăнана та пымасть. Е пуç ыратать, тет, е вăхăчĕ çукки çине перет. Хуп-хура тăхăнать, тутăрне антарса çыхать. Каçхине Натюкпа таçта тухса каяççĕ те, çур çĕр иртсен тин киле таврăнать. Унччентерех, эп ятлаççан, арăм та хирĕç тавлашаканччĕ, халĕ — нимĕн те шарламасть! Аптранă енне çапкаласа пăхрăм, шурса кайрĕ те çав-çавах нимĕн те чĕнмерĕ.

Килти ĕçсем юхăнса çитрĕç, пĕр ачи чирлесе ÿкрĕ,— арăм куç хÿрипе те çаврăнса пăхмасть.

«Ну, ку ахаль мар, путех юратса пăрахнă»,— терĕм. Пĕр-пĕр çыру таврашĕ тупмăп-и тесе, пĕтĕм япалине тĕрĕслерĕм. Тинех вара йĕр çине ÿкрĕм. Вырăнĕ айĕнчен... евангели сиксе тухрĕ. Илсе пытарса хутăм,— тепĕр кун урăххине тупса килчĕ. Ĕненмесĕр хыçалтан кайса пăхрăм. Пĕр пÿрте пуçтарăнчĕç те — тытăнчĕç айкашма! Турра кĕлтăваканни турра кĕлтăвать, макăраканни макăрать... Леш йĕкĕр хушаматлă шĕвĕрĕ те пур. Натюк сасси пуринчен хурлăхлă янăрать.

Пĕтĕм ĕçе, хваттере, юлташсене пăрахса, çемйипех яла таврăнтăмăр. Хăйĕн йышшисем арăма кунта та часах шыраса тупрĕç.

Халь ĕнтĕ уйрăласси кăна юлчĕ. Урăхла май килмест: ачасене те арăм çав «ĕçе» явăçтара пуçларĕ. Каланине хăлхана та чикмест.

Кур-ха эсĕ, юлташăм: тăп-тăр кăнтăр кунĕнчех çынна вăрларĕç вĕт! Арăм пурччĕ — ăна эпĕ паян кун та юрататăп,— ăна туртса илчĕç, ачасене амăшĕсĕр тăратса хăварчĕç,— терĕ те калавçă тенкел çинчен сиксе тăчĕ.— Çук-и сирĕн пирус?

— Çук!— терĕм эпĕ тарăхса.

Калавçă-неврастеник çавна çеç кĕтнĕ-мĕн. Чайнăялла вăл чупнă пекех утрĕ. Тек килмест пуль тенĕччĕ эп ăна. Е, килес пулсан та, ÿсĕрĕлсе килет тенĕччĕ. Вăл çаплипех таврăнчĕ. Те киле кайма хатĕрленнĕ вара, хул хушшине хаçатпа пукане чĕркесе чикнĕ. Хăй кăштах лăпланнă темелле. Куçĕсем çеç унăн ăш вĕçнĕ çынăнни пек.

— Эсир темĕн каласшăнччĕ мар-и?— терĕ вăл, хăй вырăнне ларса.

— Каласси-качки... Ятласа илесшĕнччĕ эп сире.

— Ятласа?— Этем пуканине арки çине илсе хучĕ.— Ятлăр, палламан юлташăм. Эп сирĕнпе кăшт калаçнипех лăплана пуçларăм. Тен, ятлани те усса пырĕ.

— Ăна пĕлместĕп те, тарăхнă енне вăрçасшăн эпĕ. Хама пусарма. Эсир — мемме.

— Мемме?— тесе варт çаврăнчĕ ман еннелле калавçă.— Мĕншĕн... Ун пек... сăмах?

— Мĕншĕн эсир арăмăра ун пекех çăмăллăн сутатăр?

— «Сутатăр»?— тесе йăлтах аптраса ÿкрĕ çын.— Кам суттăр ăна? Вăл хăй сутăнчĕ!

— Эсир ăна каялла туртса илес тесе мĕн турăр?

— Ну, ĕнтĕ, уйрăлма суда патăм. Хурланнипе хамăн ăш çунса тухать, пурпĕрех патăм суда. Урăхла май çук.

— Ну, ку чи çăмăлли вăл. Суда панă — уйрăлнă... Тата мĕн турăр?

— Тата... халĕ милицие кĕрсе калаçрăм.

— Милици валли ĕç çукрах-ха унта.

— Вĕсем те çапла калаççĕ çав.

— Юлташăрсене, хăвăр ĕçленĕ çĕрти çынсене каларăр-и? Пулăшма ыйтрăр-и вĕсене? Хăвăр мĕн турăр?

— Çынсене пĕлтерме ырă мар-çке. Намăс пек. Шухăшлăр-ха эсир: космос саманинче çын сектантсемпе çыхланса каять, çĕрĕ-çĕрĕпе çук турра пăчăх пÿртре кĕлтуса ларать... Тепри каласа ĕненмĕ. Тьфу!..

— Çынсене пĕлтерме намăс иккен. Чĕрĕ амăшĕ пур çинче ачусене амăшĕсĕр тăратса хăварни намăс мар-и? Çук, мемме эсир.

Çиленес-и, çиленес мар-и, тенĕ пек ларчĕ-ларчĕ те калавçă çапла каласа хучĕ:

— Тарăхнă чух мана анне те çапла калать,— терĕ.

— Чăнах ара,— терĕм эпĕ те хавхаланса.— Арăмĕ сектантсем еннелле сулăннине сиснĕ те йăлт аптраса ÿкнĕ, кĕселленсех кайнă, эрех ĕçет. Кĕреш эсĕ уншăн, ăнлантар ăна! Юлташусене пулăшма ыйт. Кур-ха эсĕ: çак тĕлĕнмелле саманара çĕрлехи кайăксем унран арăмне туртса илнĕ. Вăл пур — сĕлекине юхтарса ларать.

Кăшт та пулин хускатрăм-ши эпĕ унăн чĕрине, пĕлместĕп, калавçă сасартăк сиксе тăчĕ те, те тав туса, те сывпуллашса, хăйĕн вĕри аллипе ман алла тĕксе илчĕ. Тепĕр самантран вăл йывăçсем хушшинче курăнми пулчĕ. Урăх таврăнмарĕ вăл. Столовăйĕнче те курмарăм эп ăна.

**Кұçма ТУРХАН**

# Çĕр суранĕ

*Роман**

## ВУН ПĔРМĔШ СЫПĂК

ПАЯН ШЕВЛЕ СТАРИК хăйĕн кинне тĕрленĕ çухаллă, вăрăм аркăллă шурă кĕпи пирки сăмах тĕртрĕ.

— Çав Хĕветĕр парни те тасахчĕ манăн, кин?— терĕ вăл.

— Тасахчĕ-ха, арчарах тăратчĕ,— яланхи пекех ăшпиллĕн хуравларĕ кинĕ. Старик алăкран тухсанах вара вăл тĕпелте ларакан çӳпçине вăр-вар уçрĕ те унта «Хĕветĕр парнине» шыраса тупрĕ. Кĕпи кăшт пĕркеленнĕ те иккен, тем тесен те çĕнĕрен якатмалла пулать.

Пӳртре арçынсем çуккине кура, кинĕ тĕрлĕ ăпăр-тапăрне аларан пăрахмасăрах сак çине пырса тĕшĕрĕлчĕ, пĕр вăхăт шухăша кайнă пек пулчĕ. Çак асăнмалăх юлнă япалана тытсанах упăшки аса килет-çке, яланах чун хурланать. Ун упăшки вăрçа каяс умĕн çĕлеттернĕччĕ ку кĕпене Архип Лукич валли. Юри чăваш кĕпи хатĕрлеттерчĕ вăл арăмне, ашшĕне систермесĕр тĕрлеме хушрĕ. Ак тĕрри нимĕн чухлĕ те кивелмен, шупкаланман унтанпа, ĕлĕкхи пекех куçа çисе тăрать. Халь тытăнас пулсан, ун пек ăсталăх çитерес çук Никодим амăшĕ, çамрăк чух мелне пĕлнĕ ав, тӳсĕм çитернĕ. Юратнă пулĕ çав упăшкине, ун кăмăлне каймалла хайлас тенĕ ĕнтĕ.

«Эппин, паян-ыран тырă вырма тухмалла пулать,— вĕçрĕ пуçра шухăш.— Пăятам шур кĕпе пирки асăнтарчĕ-тĕк, кĕтсех тăр, ĕççийĕ пуçланать». Вăл хăй çак кунсенче тыр вырма тухасси çинчен пачах шутламан тейĕн çав, питĕ кирлĕ япалана манăçа хăварнă пек хыпăнса ӳкрĕ, ларнă çĕртен хăвăрттăн хускалса, пӳртрен пăлтăра, пăлтăртан пӳрте çамрăк хĕр пек чупкалама тапратрĕ. Ĕçĕ нумай пуçтарăннă иккен тата, никам та килсе ан кĕтĕрех,— Шевле кинĕ тыр вырма тухма нимĕн чухлĕ те хатĕр мар, тейĕç.

Çав кунах вăл картишĕнчи пусă умĕнче арçынсен мĕн пур кĕпи-йĕммине çуса тасатрĕ, хĕвел çинче наччас типĕтнĕ хыççăн ăна, якатса, чăланти кашта çине çакса тухрĕ. Унтан вăл лавккаран кĕрпе-çăнăх ытларах илсе килчĕ, ир-ирех ĕçе кайнă чух васкаварлă тинкĕле пĕçермелле пултăр тесе, пĕр чĕрес хуратул тӳсе хатĕрлерĕ. Ку çеç мар, арçынсем аса илессине шанмасăр, кĕлетре çакăнса тăракан виçĕ çурлана шăллаттарма тимĕрç лаççине леçсе пачĕ.

Шевле старик пĕр çумăрлă кун кунĕпе çавасемпе тăрмашрĕ — вĕсен çивĕччĕшне хурçă туптавпа сарса, якатса тухрĕ. Çурласене шăллаттармасăр хăвармастчĕ пулĕ-ха ватă çын, анчах вĕсене кĕлетре тупаймарĕ те алă сулчĕ, тахăшĕ манран маларах алă çитернĕ, терĕ пулмалла. Тепĕр тесен, çурлапа вырма ун пилĕкĕ те хытарах панă ĕнтĕ, старикшĕн çаваран ырри нимĕн те пулас çук. Çависем те мăка марччĕ-ха Шевлен, вĕсене утă çулма тухас умĕн çеç туптанăччĕ, анчах Архип Лукич унпа çырлахать-и? Вăл тепĕр кун иртен пуçласа касчен ĕçлеме те ӳркенмерĕ. Çав кун вара хăйсенне çеç мар, кӳршĕсен темиçе çавине те туптаса, çивĕчлетсе хучĕ.

Никодим вара тыр вырма тухас умĕн ялан куçлăхĕ пирки пăшăрханса пурăнчĕ. Ăна çурла та, çава та, тинкĕле те кирлĕ мар, куçлăх кирлĕ. Лайăх астăвать-ха вăл пĕлтĕрхи пăтăрмаха. Иртнĕ çул агроном чи хĕрсе ĕç-

---

* Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ çулхи 3—6 номерсенче.

ленӗ вăхăтра куçлăхне çӗмӗрсе пăрахнăччӗ. Ик эрнене яхăн урлă-пирлӗ çурăлса пӗтнӗ куçлăхпа çӳрерӗ мӗскӗн. Кăçал вăл йăнăша тума юрамасть, запаслăх тепӗр куçлăх илсе хумалла. Унсăрăн хӗрсем кăçал та Никодимран çӗмрӗк куçлăхлă агроном тесе кулӗç. Пӗр кунхине вăл, пушă вăхăт тупса, больницăна пырса кӗчӗ те Николай Ивановича рецепт çырса пама хушрӗ.

— Мӗнле диоптри сирӗн?— терӗ врач.— Икӗ куçăн та пӗр пек-и?

— Пӗр пек. Минус виççӗ çурă.

— Атьăр-ха, тӗрӗслесе пăхар.

— Вăхăт çук-çке манăн, хăвăртрах май çук-и, Николай Иванч,— турткалашма тăчӗ çамрăк агроном.

— Пӗр тӗрӗслемесӗр никама та рецепт памастăп, Никодим Федорович.

Никодимăн ирӗксӗрех тенкел çине лармалла, врач хыççăн вăл кăтартакан саспаллисене каласа пымалла пулчӗ.

Тепӗр кунах хăйӗн ӗçӗпе хулана кайнă Элтюкка ăна ылтăн тӗсӗпе сăрласа тунă харшăллă куçлăх илсе килсе пачӗ.

— Тăхăнса кăтарт-ха, килӗшет-и?—терӗ хӗрача çавăнтах.

— Саншăн пурпӗрех мар-и?

— Пурпӗрех мар çав. Эс ман каччă-çке-ха.

— Ан кул, юратуран кулмаççӗ,— те шӳт туса, те чăнласах каларӗ Никодим.— Сана çавăрасшăнччӗ те, пултараймарăм курăнать çав...

— Эпӗ качча кайман-çке-ха, ма ун пек калатăн, Никодим Федорович?

— Качча кайнипе кайманни вăл ниме те пӗлтермест.

— Эппин, мӗн кансӗрлет сана манпа туслă пулма?

— Эс кансӗрлетӗн. Сан Володю кансӗрлет.

— Володьă ман каччă-и вара? Ан тӗлӗнтер-ха, Никодим Федорович!

— Кам тата?

— Эп унпа ахаль çеç çӳретӗп. Савни çукран. Ху акăш-макăш ӗçлӗ çын пулса кайрăн та, мӗн тăвас-ха манăн? Каçсерен ташлама ирӗксӗрех пӗр каччă тупмалла пулчӗ. Волейболла вылякалатпăр тепӗр чухне. Володьă лайăх йӗкӗт, анчах ман савни мар, ӗнентерсе калатăп, ман савни мар!

Никодима кун пек пуш сăмах йăлăхтарчӗ пулас, вăл Элтюкка çине «ну, чееленме, курнăçланма пултаратăр та эсир, хӗрсем!»—тенӗ пек куç хӗссе пăхса илчӗ те унран пачах урăххи пирки ыйтрӗ:

— Тыр вырма тухатни эс кăçал, Яштайкина?— терӗ.

— Эп Яштайкина мар — Пигенешова, Никодим Федорович! Эсир, калаçса татăлнă пекех, мана кăçал пурте Яштайкина та Яштайкина тесе чӗнме тапратрăр. Мӗн, атте яла таврăннăран çапла ят хутăр-и?

— Ан тӗлӗнтер... Элтюкка,— аран-аран сăмах хушма пултарчӗ Никодим.— Эсир унпа килӗштернӗ вӗт-ха. Чиперех калаçатăн аçупа.

— Çук, калаçмастăп. Нумай пулмасть теп-ре вăрçса кайрăмăр. Эп Яштайкина мар — Пигенешова, ăнлантăн-и, Лукошин юлташ?

— Ăнлантăм. Каçар, эп сана çилентерес теменччӗ...

— Эп çиленместӗп. Анчах ӳлӗмрен ун пек ан чӗн. Тырă вырма тухатăп, ун пирки ан иккӗлен. Тепӗр тесен, хăçан юлнă вара эпӗ уйхир ӗçӗнчен? Нихçан та сулхăнта ларман. Кăçал пушшех çын çитмест пулӗ-ха сирӗн, тухмасан май та килмест, çапла-и?

— Çитмест, Элтюкка, çитмест. Темле пуçтарса кӗртетпӗр ӗнтӗ тыр-пула. Машини нумай-ха пирӗн, ним мар вырса тăкаттăмăрччӗ, анчах çанталăкӗ усал-çке, çав пӗтерет.

— Эсир пурне те каçалăк умне тăратăр,— ăс пачӗ Элтюкка.— Ял Совет çыннисене, фермă çыннисене, учительсене — пурне те. Начальник арăмӗсене те çурла тыттарăр.

— Çавăн пек тăвасшăн çав. Ну, куçлăх илсе килсе панăшăн чӗререн тав сана. Парăмра юлмăп. Ак кӗркунне туй тăватăн та, мӗнле те пулин парне йăтса пырăп сан валли. Юрать-и?

— Васкамастăп-ха,— пӗр сăмахпа çеç тавăрчӗ Элтюкка. Уйрăлнă чух алă сулчӗ тата, ахах пек шăлӗсене кăтартса, кулса илчӗ.

Никодим чӗринче ӗлӗкхи ăшă туйăм хускалнă пек пулчӗ. Ăна темшӗн халь вăл шăл йӗрен Элтюккапа мар, тахçанхи савнийӗпе уйрăлнăн туйăнса кайрӗ. Эх, Элтюкка, Элтюкка, мӗншӗн çавăн пек вылянчăк кăмăллă хӗрача-ши эсӗ? Уйăхшарăн сивӗнсе пурăннă хыççăн вăхăтăн-вăхăтăн мӗн тума астарса илетӗн-ши çав-çавах хăвна юратса пурăнакан Никодима? Ан тив ăна, тархасшăн, ан йӗкӗлте, чӗрине те ан хускат унăнне. Пӗр тытăннă япала чипер кăна ӗçлетӗр колхозра. Унăн халӗ çӗрле йӗркеллӗ выртса канма та вăхăчӗ çук. Хӗрхен ăна, Элтюкка!

Чăнах, çуракине тухнăранпа каççем питӗ кӗскелчӗç çамрăк агрономшăн. Вăл тӗттӗм пулсан киле таврăнать те ирхине тул çутăлнă-çутăлман хире бригадăсене тухса чупать. Тăватă ялтан тăракан колхоза ытлашши пысăк тесе те шутлама çук ӗнтӗ, анчах пурпӗр пӗччен ӗлкӗрме кансӗр. Бригадирсем çамрăк-

ха, тата ытлашши вĕреннĕ çынсемех те мар, кашни вак-тĕвек пирки агрономран ыйтаççĕ. Правленире е районра тĕрлĕ канашлусенче ларма та тӳсĕм кирлĕ. Унтан тата... Мархва. Пĕр-ик каç каймасан, ӳпкелешме пăхать тăлăх арăм. Хĕрарăмсем пурте çавăн пек кĕвĕç пулаççĕ-ши? Ку вара упăшки килсе кĕресрен те хăрамасть. «Ан кай, ирхине каятăн. Эп сана çутăлас умĕн вăхăтлă văрататăп. Мĕнле вăл килнĕ-килмен тухса тарма тăрăшмалла хĕрарăм патĕнчен? Мĕн, йăлăхтартăм-и эп сана, Никодим? Ним çинчен те калаçса юлма çук санпала, тупата туршăн...» Мархва патĕнче ыйхи те килтинчен тутлăрах тата, виç сехет çывăрни вун сехете тăрать. Анчах та ирхине киле пырса кĕме çав тери намăс-çке, амăшĕн куçне курăнма çав тери йывăр. Ман ывăл пачах пăсăлса кайрĕ, тесе пăшăрханать пулĕ ĕнтĕ.

Никодим колхозри ĕçсене хăйне евĕр хаклама вĕреннĕ. Çуркунне вăл çапла шутлатчĕ: çураки пирĕншĕн — чи йывăрри, чи тертлĕ вăхăт, тетчĕ; чипер акса хăварсан, ыттине тума мĕнле те пулин вăй çитерĕпĕр унта; ун чухне вăл ваттисен «çурхи кун çулталăк тăрантать» текен сăмахне те, аслашшĕ çурхи телей — çулталăклăх тесе каланине те — пурне те, пурне те аса илетчĕ. Вăрлăхсем асаппа шăтрĕç пулин те, çураки чиперех иртсе кайрĕ. Ун хыççăн тата йывăртарах вăхăт çитрĕ — шăтнă калчана çăлса хăвармалла пулчĕ: им-çампа апатлантармалла ăна, çум курăксенчен тасатса тăмалла. Миçе эрне тăрăшрĕç-ши вĕсем кăçал калчана çăлса хăварас тесе? Хĕрарăмсем агронома хăйсен чĕрре кĕрсе, суранланса пĕтнĕ аллисене тăсса кăтартатчĕç, сана пула чăлаха юлатпăр акă, тетчĕç. Миçе гектар тыр-пула çум курăкĕнчен тасатмарĕç-ши хĕрарăмсем тăвată ялĕпе? Шутласа кăлармa та йывăр. Çĕр улми çеçкене ларчĕ, кукурузă ӳссе вăй илчĕ, сахăр кăшманĕ хăйĕн хăватлă çулçисене сарма пикенчĕ — Никодим ирĕккĕн сывласа ячĕ; ĕнтĕ ăна чи канăссăр кунсем кая тăрса юлнă пек туйăнчĕç. Тыр вырма тухнă хыççăн тепĕр кунхех агроном çакна ăнланса илчĕ: чи йывăрри тин пуçланать иккен. Халь ĕçлемелле-тĕк ĕçлемелле! Çак йăтăнса пулнă тыр-пула сая ярсан, вĕсене вара, председательпе иккĕшне, этем тесе хисеплеме те кирлĕ мар.

Яштайкин хăйне пур енĕпе те алла илни сисĕнет. Нумай калаçмасть вăл халь, çар çынни пек, темиçе сăмахлă командăсем çеç парать. Ăçта та пулин йĕркесĕрлĕх палăрсан, атя-ха, кайса куратпăр тесе, тӳрех бригадăна тухса вĕçтерет.

Малтанхи кунтан пуçласах вăл, бригадирсем сĕннĕ тăрăх, çакăн пек йĕрке туса хучĕ: тырă вырнă вăхăтра тунă ĕç кунĕсемшĕн уйрăммăн, гарантиллĕ йĕркепе тӳлемелле, тирпейлĕ ĕçлекенсене тырă хушса парса хавхалантармалла.

— Çĕрле те, кăнтăрла та тырă вырмалла, юлташсем,— терĕ вăл пур бригадăри пухăва та хăй çитсе курса.— Комбайнсене çеç мар, лафетлă жаткăсене те икĕ сменăпа ĕçлеттермелле. Çак вăйлă тырă вăл — колхоз пурлăхĕ, сирĕн пурлăх. Уйра е çул çинче тăкса та сапаласа пĕтерер мар ăна, тăвансем, пĕтĕмпех хамăр валли пуçтарса кĕртер. Тăрăшăр, юлташсем, тар юхтарса ĕçлени харама каймĕ...

Халь ĕнтĕ вĕсем уя çатан урапа çине агрономпа юнашар ларса тухмарĕç, пĕчченшерĕн ялтан яла, бригадăран бригадăна çӳрерĕç. Никодим иккĕмĕш кунĕнче территориллĕ производствă управленийĕн çыннипе, ĕлĕк райкомра ĕçленĕ ватă коммунистпа, Нестеровпа, Çирĕклĕх ялне тухса кайрĕ.

Мотоциклпа кĕмсĕртеттерсе ыраш пусине çитсе ӳксен, вĕсем тĕлĕнмелле картинă курчĕç: уйра тыр выраксем пачах çук. Ĕнер кунĕпе вырса çапнă комбайнсем паян ĕççĕр тăраççĕ. Никодим производствă управленийĕн çыннипе çывăхри комбайн патне пычĕ те комбайнерпа калаçма пикенчĕ.

— Мĕн пулнă сирĕн? Ма вырмастăр?— ыйтрĕ вăл.

— Ара, паян вырсарникун. Канатпăр.
— Лери пусăра та вырмаççĕ-и?
— Çук.
— Мĕншĕн?
— Бригадир хушмасть,— чăннине каларĕ комбайнер.
— Ирхине килсе пăхрĕç, симĕсрех терĕç.
— Çак ыраш симĕс-и?
— Эп те калап, вырма юрать, тетĕп. Вĕсем итлемерĕç.

Часах вĕсем бригадира та шыраса тупрĕç. Вăрçса мар, йĕркеллĕ ăнлантарчĕç ăна: ыраш пулса çитнĕ, тăхтама юрамасть, паянхи пек лайăх çанталăкра вырмасан, хăçан вырмалла ăна? Бригадир питех ӳкĕте кĕрсе каймарĕ-ха.

— Ăçта васкамалла, агроном, çунмасть вĕт-ха!— терĕ вăл лăпкăн.

— Эс çунасса кĕтетне, тăванăм? Кур-ха, тупса каларĕ сăмахне, çунмасть вĕт-ха, тет. Асту, бригадир, вăл вăхăт килсе тухма пултарать. Ав пĕлĕтсем йăсăрланса тăраççĕ. Эрни-эрнипе çумăр çума пуçласан, сан ырашу йăлт çунса каять. Халех илсе тух çыннусене, Ильин юлташ. Ыраша кăçал пур çĕрте те çулса кушăхтармалли меслетпе вы-

раҫҫӗ. Ешӗл пек курӑнакан тырӑ паккусра йӑлтах пулса ҫитет.

Куна производствӑ управленийӗнчен килнӗ ватӑ специалист каларӗ.

Бригадир вара парӑнчӗ, хӑйӗн ҫыннисене чӗнме яла чупрӗ. Каҫ кӳлӗм машинсем те, ҫурлапа выракансем те ӗҫе тытӑнчӗҫ. Темиҫе ҫӗре ҫитсе тӗрӗслесе пӑхрӗ агроном вырса пӑрахнӑ ыраша, ешӗл пучах ниҫта та курӑнмарӗ. Такам сӑмахне итлесе, ҫур куна ахалех сая ячӗ кутӑн бригадир!

Самуков бригадинче, Вӑрманкасра, агрономпа Нестеров тепӗр кӑлтӑк асӑрхарӗҫ. Кӑнтӑрла комбайнерсемпе машиноведсем апат ҫиме киле ҫӳреҫҫӗ иккен, вӑл вӑхӑтра вара машинӑсем ӗҫсӗр тӑраҫҫӗ.

— Ҫук, ун пек юрамасть,— терӗ Нестеров.— Машинӑсене ҫапла ахаль лартмалла-и, Самуков юлташ? Апата хире илсе тухма хуш. Кунтах ҫиччӗр, усӑ сывлӑшра тутлӑрах пулакан.

— Вӗсем апатшӑн ҫеҫ кӗмеҫҫӗ-ҫке-ха яла, арӑмӗсене, савнийӗсене курма кӗреҫҫӗ!— кулма пӑхрӗ бригадир.

— Савнийӗсем ҫурла йӑтса хире тухчӑр. Чипер хӗрарӑм халь килте ларма пултараймасть. Ҫук, тем тесен те, сирӗн йӑнӑш ку. Эсир ӑна малтан шута илмен. Ҫапла-и, агроном?

— Вӑл та тӗрӗс,— хуравларӗ Никодим Федорович.— Тем ҫинчен те шутларӑмӑр, ӑна аса та илмен. Ырантан пуҫласа комбайнерсемпе машиноведсене пур бригадӑра та уйра ҫитермелле тӑватпӑр...

Ҫӗр те пӗр ҫынна тӗл пулатӑн тыр вырнӑ чух хирте; каҫалӑк умӗнче, машин патӗнче, тырӑ тиенӗ ҫӗрте, ҫул ҫинче ҫӗр те пӗр калаҫу пулса иртет; кулмалли те, пӑшӑрханмалли те, вӑрҫмалли те тупӑнать кунта. Ҫапах та савӑнмалли ытларах. Вӑрманкас хирӗнче вӗсем халӑх кӗпӗрленсе тӑракан вырӑна пычӗҫ те халиччен курман япала курчӗҫ. Володьӑ Иварбеев «С-6» комбайна ыраша паккуссене ҫулса пӑрахмалла туса майлаштарнӑ. Ҫынсем ун ӗҫне пӑхса тӑранаймаҫҫӗ. Агрономпа Нестеров та ҫур сухрӑм утрӗҫ пуль комбайн хыҫҫӑн. Машинӑ хӑй ҫулнӑ ыраша айккинелле питӗ хитре ывӑтса пырать, тыт та пӗр ҫӗклем ывӑҫласа ил, кӗлте ҫыххи ту та хыттӑн пусса ҫыхса ларт. Ҫурла кирлӗ те мар ҫынсене — вырса илмелли «сухалсем» пачах юлмаҫҫӗ.

Ял патне ҫывхарса пынӑ чухне ҫӳлӗ пӑрҫа ӑшӗнчен вӗсене хирӗҫ пӗр хӗрарӑм сиксе тухрӗ. Вӑл аллисемпе хӑлаҫланнине курсан, Никодимӑн мотоциклне ирӗксӗрех чармалла пулчӗ.

— Эс мӗн туса ҫӳретӗн кунта, Кӗтерук?— терӗ агроном, хӗрарӑма палласа илсе.—Ҫынсем тырӑ выраҫҫӗ, эсӗ пӑрҫа вӑрлама килнӗ-и?

— Эпӗ сана кӗтетӗп,— терӗ Кӗтерук, нимӗн чухлӗ те именмесӗр.

— Мана ҫакӑнта кӗтеҫҫӗ-и вара? Саваттийу сиссен, парать-ха сана!

— Правление пӗрре пытӑм, иккӗ пытӑм, сире нихӑшне те тупма ҫук. Эпӗ ҫак пӑрҫа пирки каласса тӑтӑласшӑнччӗ. Пӑрҫа улӑмне ҫӑнӑхлӑх авӑртмалла, Никодим Федорович. Паян-ыран ӑна ҫулма пуҫлаҫҫӗ, эс каласа хур вара. Унсӑрӑн Туймедова вӑл мана итлемест...

— Пӑрҫа улӑмӗнчен ҫӑнӑх тӑвасшӑн апла эс...— шухӑша кайнӑ пек пулчӗ агроном.— Таҫта вуланӑччӗ эп ун пирки, анчах хам куҫпа курман...

— Эп курнӑ, эп курнӑ!— пӗчӗк ача пек, хыттӑн кӑшкӑрса каларӗ Кӗтерук.— Питӗ лайӑх пулать. Сысна ҫурисемпе пӑрусем каҫса кайса ҫиеҫҫӗ. Ытти выльӑх та тиркемест ӑна. Эс асту, мӗн чухлӗ тырӑ перекетлетпӗр ӑна авӑртсан. Хӑмӑлӗ вӑйлӑ ав, кӗрсе лартӑм та, мана никам та курмасть.

— Нумайранпа ларатни вара эс?— кулчӗ агроном.

— Тӗрӗссипе каласан, нумайранпа,—йышӑнчӗ Кӗтерук.— Ҫур сехет те ытла пулӗ. Ав мӗн чухлӗ пӑрҫа пуҫтартӑм. Ҫиетӗр-и?— Кӗтерук агрономпа Нестерова пӗрер ывӑҫ пӑрҫа пачӗ.— Ҫапах та санӑн культурӑ ҫитмест, Никодим Федорович. Ма паллаштармарӑн-ха ку юлташпа?

Никодим Федоровичӑн вӗсенчен иккӗшӗнчен те каҫару ыйтмалла пулчӗ.

— Ху пӑрҫа ӑшӗнчен вӑрӑ пек сиксе тухрӑн та, эп чухласа та илеймерӗм пуль,— терӗ вӑл юлашкинчен.— Пӑрҫа улӑмне авӑртатпӑр, Кӗтерук. Анчах ку ӗҫе эс ху ҫине ил. Ман вӑхӑт ҫук. Мархва та авӑртса параймӗ сана. Пӑрҫа улӑмне типӗтекенни, авӑртаканни хӑвӑр пулатӑр. Тен, сарай та кирлӗ пулать-ха ӑна хума. Эс ӗнтӗ виҫӗ михӗ авӑртасшӑн мар пулӗ-ха, ытларах авӑртасшӑн. Ҫапла-и?

— Виҫӗ михӗшӗн варланса ҫӳретӗп-и!— хуравларӗ фермӑ пуҫлӑхӗ.— Хатӗрлес-тӗк хатӗрлес ӑна. Сарай пирки те эп хамӑра кирлӗ ҫынпа калаҫса пӑхнӑ ӗнтӗ. Хушсан туса паратӑп, терӗ.

Агрономӑн ӑна ӗҫре маттур пулнӑшӑн ырласа илесси ҫеҫ юлчӗ. Никодим Федорович Нестерова колхоз правленине леҫсе хӑварчӗ те киле апат ҫиме таврӑнчӗ. Амӑшӗ килте ҫукчӗ. Аслашшӗ ун пекех тин ҫитнӗ пулмалла, сӗтел хушшинче сивӗ апат ҫисе ларать.

— Кӗрлеттерсе ҫӳретӗн?— терӗ вӑл, янах

шăммисене вылятса апатне чăмланă май мăнукĕ еннелле çаврăнса.

— Çӳретĕп, асатте.

— Нумай çĕре çитрĕн-и паян?

— Пур бригадăна та çитрĕм пек туйăнать,— аслашшĕне кусран тинкерсе пăхрĕ Никодим. Вăл сисрĕ ĕнтĕ, аслашшĕ ăна тем каласшăн. Шевле старик çакăн пек çине-çине ыйтусем пама тытăнчĕ пулсан, пĕлсех тăр вара: ку ум сăмах кăна, малалла чи кирли пуçланать. Никодим, аллине çуса, аслашшĕне хирĕç сĕтел тепĕр енне пырса вырнаçрĕ.

— Ак ăш турăх çи,— терĕ аслашшĕ, ывăс витсе лартнă тирĕке ун умнелле шутарса. Капла кăмăллă каланинчен мăнукĕ çакна ăнланчĕ: апла пысăк инкекех пулман-ха хирте, аслашшĕ питех çиленнĕ пек туйăнмасть.

— Мĕн куртăн-ха паян тырă вырнă çĕрте, асатте? Мĕншĕн вăрçасшăн эсĕ пире?— чăтăмсăррăн ыйтрĕ Никодим.

— Вырма пĕлместĕр, çавăншăн ятламалла,— терĕ Шевле старик, сĕтел хушшинчен тăрса.— Лашапа ĕçлекен жнейкăсем мĕнле выраççĕ сирĕн?

— Чиперех пек, асатте.

— Кайса пăх-ха, чипер-и. Эс хăвăн мотоциклу çинчен çеç курнă пулмалла, çавăнпа сана пурте лайăх пек туйăннă. Халапсин ывăлĕ мĕнле кастарать унта! Чĕркуççи çӳллĕш хăмăл хăварать. Кукурузă пур, ĕнтĕ ыраш уламĕ кирлĕ те мар тетĕр пуль. Кирлĕ пулать, ан хăрăр!

— Каларăн-и эс ăна, асатте?

— Калама мар, жнейкине хам алăпа аялах антарса патăм. Ак çакăн пек кастар, терĕм.

— Тата мĕн куртăн паян?

— Мĕн куртăм? Шоферсемпе калаçса пăхрăм. Миçеччен ĕçлеме хушнă сире?— тетĕп.—Тĕттĕм пуличчен,—теççĕ.—Тĕттĕм пулсан кам турттарать?— тетĕп.— Эпир кăнтăрла та ĕлкĕретпĕр,— теççĕ. Юрамасть ун пек Никодим. Шоферсене те икĕ сменă ĕçлеттермелле тăвас пулать. Кĕтсех тăрăр, паян-ыран çумăрлă кунсем пуçланаççĕ ак, ун чухне ниçта кайса кĕрейместĕр. Кăçал çăвĕ çавăн пек. Кĕркуннечен çумăртан хăтăлса пулмасть пуль. Эппин, çав тери васкамалла, мĕн пур тыр-пула темиçе кун хушшинче пухса кĕртмелле.

«Чăнах та, эпир Нестеровпа таçта та çитрĕмĕр, жнейкăсем мĕнле ĕçленине асăрхамарăмăр,— шутларĕ Никодим.— Асатте курнă ав. Жнейкăсем пирки те, шоферсем пирки те тĕрĕс калать. Кĕçĕр касхи летучкă вăхăтĕнче систерес пулать бригадирсене».

Вăл хапха çумне таянтарнă мотоциклне урама çавăтса тухрĕ те, ăна хускатса ярса, пӳртсен умĕпе иртекен сукмакпа правлени еннелле вĕçтерчĕ. Пĕр такăрлăк тĕлне çитсен, машинине чарса итлесе пăхрĕ: çакăнта, ял çывăхĕнче, выракан комбайн чарăнса ларман-и? Хăлхана хыттăн çатăртатса ӳленĕ сасă килсе кĕчĕ — мотор кĕрлет унта, барабан шатăртатать, вĕсен сасси, пĕр шавлă кĕвĕ пулса, таврана саланать.

— Чиперех ĕçлетĕн апла, хĕрача-комбайнер?— ун патĕнче никам çук пулсан та, сасăпах ыйтрĕ агроном.— Сан аллусем çемçе те çыпăçуллă пулĕ-ха, эс, тирпейлĕ хĕрача, машинăна çĕмĕрĕлме парас çук...

Хир енчен каллех комбайн кĕрлени хыттăн илтĕнсе кайрĕ. Ку кĕрленĕ сасса Никодим Федорович этем чĕлхи çине кусарчĕ.

— Илтетĕн-и, агроном, мĕн тет сана комбайн?— мăкăртатрĕ вăл.— Чиперех-ха, чиперех-ха, чиперех-ха, тет. Эс маншăн ан пăшăрхан, хăвăн ĕçне ту, хăвăн ĕçне ту, тет. Илтетĕн-и?

## 2

ХĂШ ВĂХĂТРА иртсе кайрĕç кăçал çу кунĕсем — Никодим сиссе те юлаймарĕ. Тата мĕнле пулчĕç вĕсем — хитре-и, хитре мар-и, савăнăçлă-и, кичем-и — ăна та туймарĕ каччă. Ак ачасем лавккасенче кĕнекесем ыйтма пуçларĕç, вĕсем ялан шкула каясси çинчен сăмахлаççĕ, апла кĕркунне те çывхарса килет пулмалла.

Уйсем самаях çаралнă ĕнтĕ. Татти-сыпписĕр çумăр çунăран хăмăл, тахçанхи хыт-хура евĕр, хуралса ларнă. Кураксемпе чакаксемсĕр пуçне, хирте тата вăрманта кайăксене сахал курма пулать. Чĕпписене ӳстерсе çитĕнтернĕ, мăнтăрланнă та вĕсем, мăнкăмăлланнă пек пулнă — юрă та юрламаççĕ.

Çу кунĕсем иртнине Никодим хăйсен картишĕнче те туять. Çĕр улми кăларма тытăнсан паян-ыран кирлĕ пулаççĕ тенĕ пек, амăшĕ пĕлтĕрхи карçинккасене кĕлет умне купаласа хунă. Мунча кĕтессинче çуркуннерен пех вăлта хуллисем тăратчĕç, ку таранччен вĕсем никама та кансĕрлеместчĕç-ха, халь ав вăл хулăсене тахăшĕ хапха тăррине ывăтнă. Путексем пурте пысăкланнă, ĕлĕкхи йăлапа амăшĕсене лăскама пырсан, лешсем вĕсенчен пăрăнса çеç каяççĕ. Чăх чĕпписем каççерен амăшĕн çунатти айне пытанмаççĕ ĕнтĕ, мăн чăхсемпе пĕрле каштана лараççĕ.

Садра кунсерен пан улми нумай тăкăнать. Аслашшĕ ӳкнĕ пек пан улмие хăйĕн пĕчĕк кунтăкĕпе чăлана йăтать, май килнĕ чух ăна карта урлă кӳршĕсене валеçет.

Юлашки вăхăтра Шевле старик, звено ĕçĕнчен кăшт пушаннăран пулас, хăйĕн Новосильне час-часах аса илме тапратрĕ. Нико-

димран «Каяс-и ман ҫавӑнта, каяс мар-и?»— тесе ыйтмасть-ха, ун пек ыйтни мӑнукне ытлашши пысӑк ҫын выранне хуни пулӗччӗ, ҫапах та ун кӑмӑлне пӗлесшӗнех аслашшӗ.

Паян касҫхи апат вӑхӑтӗнче Архип Лукич хӑй систерчӗ: ҫак кунсенче вӑл Яштайкинпа тепре хыттӑн тавлашса илнӗ иккен. Шевле старик тахҫантанпах ӗнтӗ колхоза бульдозер туянтарасшӑн. Вӑл шутланӑ тӑрӑх, ҫав машинӑ колхоза калама ҫук пысӑк усӑ пама тивӗҫ, унпа тӑватӑ ял хирӗнчи тип варсене йӑлтах тикӗслесе тухма май пур имӗш. Ун пирки иккӗленмелли ҫук-ха, бульдозерпа чӑнах та темӗн те тума пулатчӗ. Анчах Яштайкин урӑхларах шутлать-ҫке ку тӗлӗшрен.

— Ну, мӗн терӗ-ха Аристарх Петрович сана, асатте?— хускатнӑ сӑмаха йӑлтах калаттарасшӑн пулчӗ Никодим.

— Вӑл хӑйӗн юрринех юрлать. Кирлӗ мар пире ун пек машинӑ, тет.

— Манпа вӑл пӗркун урӑхларах пуплерӗ, асатте.

— Илетӗп терӗ-и?

— Куҫ курать унта, терӗ.

— Эккей, Яштайкин чеелӗхне пӗлместӗн эсӗ!—хӑтӑрнӑ евӗр каларӗ аслашшӗ.—Сӑмахпа вӑл килӗшет те пек. Шантарать сана, йӑпатса илет. Анчах ӗҫ тума тӑр-ха — пӗр пус укҫа памасть. Эп пӑртак ӑнланакан пултӑм ӗнтӗ Аристарх Петровича. Кансӗр унпа, питӗ кансӗр пӗрле пӑтӑ пӗҫерсе ҫиме! Ҫапах та бульдозер илетпӗр кӗркунне. Председатель тем пек хирӗҫ пултӑр, пурӗ пӗрех илетпӗр. Правлени йышӑнсан, вӗсем Халапсинпа иккӗшӗ нимӗн те тӑваймаҫҫӗ.

— Новосиль пирки мӗнле ӗнтӗ, асатте?— сӑмах тӗртрӗ Никодим.— Каяс тетӗн пулсан, хальтерех кай унта. Кӗркунне вӗсен патӗнче нимӗн те кураймастӑн.

— Кукурузӑна мансӑр тирпейлесе пӗтерет-ри?— терӗ аслашшӗ.

— Тирпейлетпӗр, паллах. Унта ҫулманни нумай та юлман ӗнтӗ. Тепӗр тесен, сана кайса килме вӑхӑт темӗн чул кирлӗ мар, пӗр эрне хушшинче ҫаврӑнса та ҫитетӗн.

— Ҫук, эрне сахал. Эп Орел облаҫне Мускав урлӑ каясшӑн, Мускав курманни нумай пулать, Никодим.

— Ну, Мускава та кӗрсе тух, эппин.

Ҫак калаҫу хыҫҫӑн тепӗр ирхине Шевле старик ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа председатель пӳлӗмне пырса кӗчӗ. Ват ҫын йӑлипе вӑл Яштайкинпа тӗрлӗ вак-тӗвек ӗҫсем ҫинчен калаҫкаларӗ, унтан, пӗтӗм вӑйне пуҫтарса, ӑна ыйту пачӗ:

— Эс мана пӗр ҫӗре командировкӑна ятратни, председатель?— терӗ.

— Ӑҫта каясшӑн эс?— хыпӑнса ӳкнӗ пек пулчӗ Аристарх Петрович.

— Новосиле. Астӑватни, эп сана Орел облаҫӗнчи пӗр станци ҫинчен каласа кӑтартнӑччӗ. Вӑхӑт пур чух ҫитсе курас тетӗп ҫавӑнта.

— Эс хӑвӑн ҫырму-ҫатрусене халӗ те манман-и, Архип Лукич?

— Манман. Тӗлӗкре те куратӑп вӗсене. Виличчен манасси пулмасть те пуль...

— Кама мӗскер вӗт, Архип Лукич. Пӗри кулач ҫиме юратать, тепри хытӑ ҫӑкӑр. Пӗри ҫинҫе кӑна сукмак шырать, унӑн канавсем урлӑ сикесси килет, тепри аслӑ ҫулваррипе ярӑнса утма юратать. Мана ак тӳрем ҫӗрсем ытларах кирлӗ, эп вӗсем ҫинче кӑҫалхи пек вӑйлӑ тыр-пул ӳстернӗ пулӑттӑм. Эс ав хӑвӑн ҫырму-ҫатрусемпе аташатӑн...

— Эп ку сӑмаха илтнӗ ӗнтӗ, Аристарх Петрович,—терӗ Шевле, ӑна чарасшӑн пулнӑ пек.— Нумай ҫынпа тавлашса курнӑ эп хам ӗмӗрте ҫырма-ҫатра пирки. Ӑслӑ ҫынсемпе те калаҫнӑ, айваннисене те чылай курнӑ. Эс мана ӳкӗте кӗртес ҫук. Ятлас сана — ӑнланакан ҫын эсӗ, вӗрентес — эс манран та ытларах пӗлетӗн. Сан чунна эп улӑштарас ҫук, Аристарх Петрович...

— Чунран килет-и ку япала?

— Чунран килет, Аристарх Петрович.

— Ав мӗнле иккен! Халь ӑнлантӑм, халь куҫ уҫӑлчӗ,— тӑрӑхласшӑн пулчӗ Яштайкин.— Эп хыт чунлӑ апла, ҫутҫанталӑк илемне курмастӑп. Эсир, стариксем, поэтсем ӗнтӗ. Ҫӗр питне илемлететӗр, ҫырма-ҫатрасемпе кӗрешетӗр.

— Эс камран кулатӑн? Эс мӗнрен кулатӑн!— ура ҫине сиксе тӑрса хыттӑн кӑшкӑрчӗ Шевле.— Мӗнле хӑятӑн эс манпа ҫапла калаҫма?

— Ахалех ҫиленетӗн, Архип Лукич,— терӗ Яштайкин паҫӑрхи пекех лӑпкӑн.— Чӑн сӑмахшӑн ҫиленмеҫҫӗ. Кирек мӗн ту, эп хам задачӑна тӗрӗс ӑнланатӑп. Пирӗн вӑйлӑ тыр-пулшӑн кӗрешмелле. Чечек лартасси, ҫырмаҫатрапа кӗрешесси вӑл йӑлтах стариксен ӗҫӗ. Кӗреш, ара, эп чармастӑп. Анчах пӗр пытармасӑр калатӑп, Архип Лукич, йӑлӑхтартӑн эс мана хӑвӑн ҫырму-ҫатрупа...

— Эп сан сӑмахна тек итлесе тӑма пултараймастӑп,— терӗ Шевле чӗтрекен сасӑпа.— Тӳрккес ҫын эсӗ, Аристарх Петрович, этемпе этемле калаҫма пӗлместӗн...

— Каҫар, тӑванӑм. Тӳрккеслӗх пур манӑн. Сӑмаха тӳрӗ пеме юрататӑп. Ак командировкӑ пирки те тӳрӗ калама тивет. Кайса кил Новосиле, хут туса паратпӑр. Укҫа ҫук. Ыран шоферсене Горькине ямалла, вӗсем валли те аран-аран тупрӑмӑр...

— Тавтапуç, ырӑ председатель. Хутне ӑна сансӑр та туса парӗç-ха мана. Сывӑ пул, эппин. Новосиле эп хам укçапах кайса килетӗп. Ун пекех мӗскӗн çын пулакан марччӗ-ха, эсир пулӑшмасӑрах кайса килетӗп...

Урама тухсан Шевле хӑйне хӑй вӑрçса илчӗ: мӗн тума укçа пирки пакӑлтатрӗ вӑл председательпе? Кунта вӑл укçашӑн килнӗччӗ-и вара? Çук, вӑл Яштайкин патне урӑххишӗн килнӗччӗ. Халь курать ӗнтӗ — йӑнӑшрӗ. Шевле старике ӑнланас çын мар Яштайкин. Малашне мӗнле ӗçлӗç те вӗсем, паян кӑмӑла сивӗтрӗ вӑл. Тепри пулсан, хаяр сӑмахсем каласа хӑвармаллаччӗ ӑна. Шевле усал мар та, нимех те шарламарӗ ав.

Архип Лукич хӑйӗн мӑнукӗ ӑста та пулин тухса кайнӑ пулӗ тесе хӑранӑччӗ, çук иккен, Никодим килтех ларать.

— Ну, Никодим, кӳл-ха хӑвӑн лашуна,— терӗ старик, савӑнӑçлӑн калаçма тӑрӑшса.— Леçсе хӑвар мана хулана çитиччен.

— Мотоциклпа-и?

— Тата мӗнпе пултӑр? Ну, «Москвич» пулсан, «Москвичпа» леç, эппин.

— Халех-и?

— Халех, тӑванӑм. Çанталӑк аван паян, наччас çитетпӗр санпа.

Никодим хӑй тӗллӗн кулса илчӗ: старик ӑна пӗлтӗр мотоцикл туяннӑшӑн питӗ хытӑ вӑрçса тӑкнӑччӗ, вӑл çеç мар, пӗрре вӑрмана кайнӑ чух тунката çине пырса тӑрӑннӑ хыççӑн сан машину çине нихçан та лармастӑп тесе сӑмах панӑччӗ. Ак халь Яштайкинран командировкӑ илнӗ те асапланса кайма та хатӗр.

Архип Лукич кровать айӗнчен Никодимӑн пӗчӗк чӑматанне туртса кӑларчӗ, унта хӑйне кирлӗ ӑпӑр-тапӑра чикрӗ. Çимелли нимех те илмерӗ вӑл. Кинӗ: «Çул çине какай пӗçерсе памалла пуль сана. Унсӑрӑн мӗнле кайӑн ӗнтӗ?»—тесе ыйтсан, «Сухари типӗтмелле мар-и тата!»— тесе çеç тавӑрчӗ.

Кӑнтӑрла çитес умӗн мотоцикл Шевле кассипе кӗрлесе иртрӗ те колхоз правленийӗ еннелле пӑрӑнчӗ. Правлени тӗлне çитсе чарӑнсан, ларса пыракан икӗ çынтан пӗри, машинӑ çинчен анса, хӑвӑрттӑн алӑкран кӗрсе çухалчӗ, тепри хыçалти ларкӑч çинче ларса юлчӗ. Тата темиçе минутран пӳрте кӗнӗ çын тухрӗ те, мотоцикл çӗнӗрен тапранса кайрӗ, вӑл хула çулӗпе хӑвӑрттӑн сӑрталла хӑпарчӗ, унтан, пӗчӗклене-пӗчӗклене пырса, пачах курӑнми пулчӗ.

3

ЯЛТИ ЧИ ХАВАСЛӐ хӗрачашӑн — Элтюккашӑн — кичем те тунсӑх кунсем пуçланчӗç. Кунашкал усал кӑмӑл унӑн нихӑçан та пулманччӗ-ха. Хӗне кайнӑ çитмӗл çулхи карчӑк пурнӑçӗ пекех хӗрача пурнӑçӗ: тухса çӳреме юрамасть, кӗнеке вулама юрамасть. Хӑйӗн патне кам килессине çеç кӗтсе выртмалла унӑн çемçе вырӑн çинче. Çынсемпе калаçма мӗнле чараймарӗ-ха ӑна врач? Тата çак йӗрӗнчӗк эмел те тем пекех йӑлӑхтарса çитерчӗ. Çавӑн пекех чирлӗ-ши вара Элтюкка, ӑна сыватма эрӗм шывӗ евӗр йӳçӗ эмелсем кирлӗ-ши?

Хӗрача, чавси çине таянса, хӑйӗн патӗнчи чӳрече питӗркӗчӗсене вӗçертме тӑчӗ. Аялтине уçма вӑй çитерчӗ вӑл, çӳлтине нимпе те уçаймарӗ. Мӗнпе те пулин шаккама лекет, ал айӗнче нимӗн те çук. Тата алӑсем те чӗтреççӗ мар-и? Элтюкка вӑрӑм пӳрнисене куçӗ умне илсе пычӗ, вӗсене пӗрремӗш хут курнӑ пек, тинкерсе пӑхрӗ. Чӑнах, пӗр тумлам юн та юлман-çке, вилнӗ çын алли евӗр кӑнкӑвак.

Ӑна Николай Иванч мӑшкӑлласа каланӑ сӑмахсем аса килчӗç.

— Каллех пӳрнӳ шыçрӗ-и, Пигенешова?— терӗ вӑл Элтюккана пӑхма малтанхи хут кӗрсен.

— Каллех пӳрне касмалла,— шӳт тума пӑхрӗ ун чухне хӗрача, хӑйӗн сӗт пек шапшурӑ аллисене врач еннелле тӑсса.

Ак халь мӗн тӗслӗ пулса тӑнӑ вӗсем! Пӑхма хӑрушӑ.

Чир шала кайрӗ. Пӳрне шыççи мар, пачах урӑххи çапса ӳкерчӗ Элтюккана. Мӗн чирне вӑл хӑй те лайӑххӑн пӗлмест. Николай Иванч та татса каламарӗ. Вӑй çук, каççерентарлаттарать. Ӑшша писнӗ хыççӑн çӑл шывӗ ӗсни юрамарӗ-ши ӑна?

Хутран-ситрен пӳрте Сашӑпа Юркӑ чупса кӗреççӗ. Е хырӑм выçнӑ вӗсен, е вылямa кирлӗ пӗр-пӗр япала илсе тухмалла. Малтан ачасем кашнинчех ун патне пырса: «Элтюкка аппа, сывалтӑн-и?»— тесе ыйтатчӗç, халь ун пек ыйтма та пӑрахрӗç. Çимеллине вӗсем хӑйсемех шыраса тупаççӗ. Варук инке хушса хӑварнӑ тӑрӑх, Элтюкка валли кунне пӗрре сӗт лартса вӗретеççӗ.

Вырӑн çинче выртнӑ май Элтюкка ялан клуб пирки шутлать. Çамрӑксем пӗчӗккӗнех ӗçрен пушанса пыраççӗ ӗнтӗ, вӗсем каççерен йӑмрасен айӗнчи çерем çине мар, клуба пуçтарӑнаççӗ. Мӗн тӑваççӗ-ши унта Элтюккасӑр? Пӗр вӗçӗмсӗр ташлаççӗ пулӗ çав. Библиотекӑ хупӑ тӑрать пуль.

Каç кӳлӗм Элтюкка патне Кӗтерук кӗрсе тухрӗ.

— Сана кун пек выртса йӑлӑхтармарӗ-и, тӑванӑм?— терӗ вӑл, тантӑшӗн пуç вӗçне пырса ларса.—Мӗн, каччӑсем куçӑхтарчӗç-и сана е ӗçлесе хӗне кайрӑна?

— Чирлемелĕх ĕçлемен те эпĕ,— хуравларĕ Элтюкка.— Тем амакĕ пулчĕ кăçал. Çу кунĕнче çапла чирленине пачах астумастăп.

— Сывал часрах. Унсăрăн питĕ кичем клубра.

— Сана кичем мар пулĕ-ха, ăна суятăн...

— Кăшт кичемрех çав. Çамрăксем те пурте: «Эх, пирĕн Элтюкка хăçан тухать-ши!» — тесе кăна тăраççĕ. Ĕнер вĕсем сан патна киле килесшĕнччĕ, эп тытса чартăм.

— Чармалла марччĕ,— терĕ йăвашшăн Элтюкка.— Пўрте йатса каймастчĕç...

— Ара, вĕсем çирĕммĕн те пулĕ! Табак туртаççĕ, кăшкăрашаççĕ. Аннў вăрçать пуль, терĕм.

— Юрĕ, часах сывалатăп ак. Чаплă вечер ирттеретпĕр санпа иксĕмĕр. Киносем пулкалаççĕ-и?

— Пĕрре пулнăччĕ. Эп кайман.

— Саватти чарчĕ-и?

— Уншăн мар. Ĕç нумай халь пирĕн, Элтюкка. Эпир çурт лартма пикеннĕ. Саваттипе иксĕмĕр уйрăлса тухас тетпĕр. Сывлама та вăхăт çук халь манăн, иртен пуçласа каçчен ăшталанса кăна çўретĕп.

— Çапах та ман пата кĕркелесе тух,—сăмах хушрĕ тантăшĕ, ăна аларан вăйсăррăн чăмăртаса.— Çурт лартатăп тесе, хăвăн ĕлĕкхи тусна манса ан кай...

Элтюкка чирлесе ўкни çинчен Никодим хирте сахăр кăшманĕ кăларнă çĕрте илтрĕ. Малтан вăл ку хыпаршăн питех пăшăрханмарĕ-ха: тем чирĕ çаклантăр ялан ташласа та юрласа тăракан хĕрачана! Сунас ернĕ пулĕ-ха е каллех пўрни шыçнă пулĕ. Каç кўлĕм агроном урамра таçта васкакан Кĕтерука тĕл пулчĕ. Ыйтса пĕлмесĕр чăтаймарĕ вара клуб пуçлăхĕ пирки.

— Паян çеç пултăм, вырăнпах выртать, йăлт начарланса кайнă,— пĕлтерчĕ Кĕтерук.— Юлташ пулса кĕрсе тух ун патне, Никодим Федорович. Мĕнле каччăсем эсир? Чирлĕ çынпа кĕрсе калаçма та ўркенеççĕ.

Ав мĕнле сăмах çавăрттарса хучĕ Кĕтерук! Вăл Элтюкка патне калаçма кĕме ўркенсе тăрать имĕш. «Каччăсем» терĕ тата. Никодим ун каччи пулать-ши? Çук çав, вăл ун каччи пулма пăрахнăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Çапах та чирлĕ çын патне кайса килмеллех, тен, ăна пулăшу кирлĕ, тен, ăна мĕнле те пулин хаклă йышши эмел тупса памалла.

Тĕттĕм пуличчен агрономăн пушă вăхăт тупăнмарĕ. Хире кайса килчĕ вăл, правленире ыранхи ĕçсем пирки калаçса ларчĕç, аслашшĕ таврăнман-и тесе, киле тепĕр хут çитсе килчĕ. Юлашкинчен Никодим Федорович Варук инкен урам енчи кĕçĕн алăкне пырса уçрĕ. Ăна картишĕнче кĕтсе илекенсем Сашăпа Юркă пулчĕç.

— Элтюкка аппу килте-и?— пĕлмĕш пулса ыйтрĕ агроном.

— Килте, анчах ун патне кĕме юрамасть, вăл чирлĕ выртать,— терĕç ачасем.

— Сире никама та кĕртме хушман-и?

— Хушман.

— Эп сире тутлă пан улми паратăп, кĕртетĕр-и?

Сашăпа Юркă пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Кайса ыйтам-ха, Элтюкка аппа мĕн калать,— терĕ Сашă.

— Ан кай,— чарчĕ ăна Никодим Федорович.—Вăл мана ун пек ыйтмасăрах йышăнать. Ак сире пан улми, çийĕр шăлсем шанса кайиччен. Анчах астăвăр, улми питĕ йўçĕ вара, каялла сурса ан кăларăр.

Сашă чăтаймасăр пĕр пан улмине çавăнтах пĕчĕккĕн çыртса пăхрĕ.

— Суятăн, Никодим Федорович, тутлă, тутлă!— кăшкăрса ячĕ вăл.— Ме-ха, Юркă, тутанса пăх, манăн сахăр пекех пылак...

Элтюкка чăнах та вырăнпах выртать. Вăл пўрте çын кĕнине туймарĕ.

— Элтюкка!— майĕпен чĕнчĕ Никодим.— Çывратни эс?

— Кам унта?— терĕ хĕрача.— Володьă, эсĕ-и?

— Çук, ку эпĕ, Никодим...

— Ах, эсĕ-и ку, Никодим Федорович? Ак ман пуç вĕсне килсе лар. Ерекен чир çуккă манăн, ан хăра. Тин кăна çутă çутас тенĕччĕ, эс килсе кĕтĕн. Хыпашласа тупаятни çавăнта...

Никодим, çутă çутса, сеткăри пан улмие сĕтел çине кăларса хучĕ, вĕсенчен пĕр-иккĕшне, чи илемлисене, чи шултрисене, хĕрачана пачĕ.

— Тавтапуçах сана, Никодим Федорович,— терĕ Элтюкка.— Ну, пан улми çиес килетчĕ хамăн! Ыран Юркăна сирĕн пата юри ярас тенĕччĕ. Кур-ха, антоновкă та çимелле пулнă сирĕн, йăлтах çемçелнĕ...

— Пĕлмен, маларах кĕртсе параттăм,— именнĕ пек каларĕ каччă.

— Пачах килми пултăн пирĕн пата юлашки вăхăтра. Ĕлĕк çапах та теплере пĕрре кĕрсе тухкалаттăнччĕ. Сивĕнтĕн, Никодим Федорович. Çав таранах пушă мар-и вара эс? Анне час-часах асăнать сана, Никодим йăлтах манчĕ пире, тет.

Хĕрача ĕлĕкхи евĕр чăх сăхнă пек хăвăрт калаçмасть, шутласа, вăхăтăн-вăхăтăн чарăна-чарăна тăрса пуплет. Сасси те халичченхи пек янравлă мар унăн, аран-аран тухать. Вăйсăрланнă Элтюкка, пачах вăйсăрланнă, мĕн пулнă-ши ăна? Хăй çапах чĕмсĕр выртас-

шăн мар-ха, пурин ҫинчен те ыйтса пĕлме тăрăшать.

— Клуба ҫӳретни эс, Никодим Федорович?

— Нумай пулать унта кĕменни. Вăхăт ҫук, Элтюкка.

— Ху клуб совечĕн членĕ пулнине манса кайрăн пуль апла?

— Манман та-ха...

— Ну, сывалам-ха. Алла илетĕп сире. Аслаҫу таврăнмарĕ-и?

— Ҫук.

— Аҫта ҫухалчĕ вăл?

— Хам та пĕлместĕп. Йăлтах кĕтсе ывăнтăмăр ĕнтĕ. Паян-ыран килмелле пек те...

— Чăнах-и, Никодим Федорович, пирĕн атте ăна ҫавăнта кайма укҫа паман, тет?

— Чăнах, Элтюкка. Старик Новосиле хăй укҫипе кайрĕ.

— Ну, пач тĕлĕнтерет хăш чух пирĕн атте. Кур-ха, кама кӳрентерме шутланă вăл! Укҫа хĕрхенме мар, Шевле старике палăк лартмалла ялта. Хĕрлĕ Ҫыршăн унтан ытла никам та тăрăшман. Сывалсан, пĕрре хытă кăна вăрҫатăп-ха аттене...

Ывăннипе пулас, хĕрача пĕр вăхăт куҫне хупса чĕнмесĕр выртрĕ, унтан каллех калаҫма пуҫларĕ.

— Пĕлетĕн-и, Никодим Федорович, кăҫал эпĕ клубра халăх инструменчĕсен оркестрне туса хурасшăн. Шутласа выртрăм та, пирĕн темле инструментпа калакан ҫын та пур. Икĕ баян пулать оркестрта, гитарă, мандолинă, темиҫе балалайкă. Ҫӳретни унта хĕлле, Никодим Федорович? Сана художествăллă руководитель тăватпăр. Ман шутпа, эс музыкă енчен чи нумай пĕлекенни пирĕн.

— Ун пекех-ши вара?

— Ҫавăн пек, Никодим Федорович. Руководителĕ эсĕ пулатăн. Ан тавлаш, ан тавлаш!

Каччă тавлшма шутламасть те, вăл, Элтюкка каллех куҫне хупнине асăрхаса, киле кайма хатĕрленнĕ.

— Ну, сывал, эппин, Элтюкка.

— Тавах сана кĕрсе тухнăшăн. Чипер кай,— терĕ хĕрача. Ҫавăнтах ăна темшĕн кăшт тăхтама хушрĕ.— Итле-ха, Никодим Федорович. Эс Володьă Иварбеева кашни кун куратăн ĕнтĕ. Систер-ха ăна, ман пата кĕрсе тухтăр. Вăл баян илнĕ, тет. Эп унпа ҫав оркестр пирки калаҫасшăнччĕ. Хăратăп: тытĕ те сутса ярĕ баянне, эпир сиссе те юлайmăпăр.

— Юрĕ,— калăп,— терĕ Никодим, алăкран шăппăн тухнă май. Ăшра вăл хăй тĕллĕн кулса илчĕ: «Ак сана питех те кирлĕ ĕҫ хушса ячĕҫ, агроном. Володьăна чирлĕ хĕрача патне килме хушмалла. Ăнлантăн-и? Клуб пуҫлăхĕ унпа оркестр пирки калаҫасшăн. Шыраса тупатăн пулĕ ăна? Элтюкка патне килме калатăн пулĕ?»

4

АТĂЛ ХĔРРИНЧИ пысăк хулара Шевле старик темиҫе ҫул каялла пулнăччĕ. Ĕлĕкхипе, хăй вĕреннĕ вăхăтрипе, танлаштарсан, ун чухнех чапланса кайнăччĕ вăл, ун чухнех хула тулашĕнче ҫĕнĕ предприятисем нумай ӳссе ларнăччĕ, ҫĕнĕ урамсем сарăлса кайнăччĕ. Халь вара чăваш ялĕсем пекех ҫырма пуҫне, айлăма вырнаҫнă ҫак хулана палласа илме те йывăр. Хула варринчи ҫуртсем ҫавсемех темелле, айккинелле кайсан — пĕтĕмпех ҫĕнĕ проспектсем. Кашни ҫурчĕ — пĕр квартал, кашни урамĕ—пĕр хула. Ҫурчĕсем ҫав тери хитре тата, аякран пăхсан, Атăл ҫинчи шур пăрахутсем пекех курăнаççĕ. Пурăнма та питĕ хăтлă-тăр вĕсенче.

Анчах чи савăнтараканни урăххи пулчĕха Шевлешĕн. Вунă-вун пилĕк ҫул каялла кăна ҫав тери таса марччĕ ку хула, урамĕсенче ишсе тухма ҫук пылчăкчĕ. Ҫумăр ҫуса кайнă хыççăн тепĕр куннех машинă иртнĕ чух тусан мăкăрланатчĕ. Урампа пынă хушăра ҫавра ҫил пит-куҫа ывăҫĕ-ывăҫĕпе тусан пырса сапатчĕ, ҫăварта яланах хăйăр качăртатса тăратчĕ. Халь урамсем чылайăшĕ асфальтлă. Ик айккипе сарлака тротуарсем тунă. Йывăҫ нумай, чечек нумай. Чукун ҫул вокзалĕнчен инҫе мар граждан вăрҫи паттăрне палăк лартнă — ун ҫывăхĕнче йĕри-тавра чечек. Советсен площадĕнче тепĕр чаплă палăк пур — ун айккисенче те лаппăшпех чечек. Кăшт аяларах ҫĕнĕ театр лартнă — юнашарах ытарма ҫук чечек пахчи. Атăл хĕрринче те, ытти ҫĕрте те ҫавах. Архип Лукич астăвасса Атăлăн сылтăм ҫыранĕ ку тĕлте хăрушшăн курăнса выртатчĕ. Хĕп-хĕрлĕ тăм кăначчĕ унта, ҫырана кашни утăмрах шыв ҫурса анатчĕ. Вĕсен ялĕнчи пекех, ҫĕр ишĕлетчĕ. Халь ҫӳлĕ ҫырана симĕс кавир сарса тухнă тейĕн — тăршшĕпе ҫерем ешерет, пристань патне ҫатма пек такăр ҫулсем анаçҫĕ. Ĕлĕкхи лакăм-тĕкĕмлĕ, тăмпа ҫăрăнса тăракан бульвар хăйĕн илемĕпе куҫа ҫиет. Вăл пĕтĕмпех чечекре. Пин тĕрлĕ чечек кунта, кам кăна тăрăшса ӳстерме пĕлнĕ-ши вĕсене! Шевле пек ватăрах ҫын ывăнас-тăвас пулсан, вăл чечек йăранĕсем патне шаларах кĕрсе канса илме те пултарать— сăрланă вăрăм тенкелсем юнашарах. «Ну, ырă курса пурăнаççĕ те ку хула ҫыннисем!— шутларĕ Шевле хăй тĕллĕн.— Ав мĕн тума пултарать иккен этем алли. Тупата, хамăр Яштайкина илсе килсе кăтартасчĕ ҫакна».

Тăмлă тип варсем те, шăршлă çырма-çатрасем те, пылчăклă урамсем те юлнă-ха хулара. Хăйĕн хваттерне таврăннă чухне Архип Лукич вĕсене те асăрхамасăр хăвармарĕ. Анчах çĕрĕк вырăнсем пĕтсех пыраççĕ ĕнтĕ. Куç умĕнчи çак мĕн пур япала ĕçĕн пуçламăшĕ кăна пулĕ-ха, кунта пурăнакансем хулана ӳлĕмрен тата чипертерех тума шутлаççĕ пулĕ.

Тĕттĕм пулас умĕн Шевле старик хулана тепре тухрĕ, пĕр килнĕ чух ытларах курса çӳрес терĕ пулмалла. Тепĕр ĕмĕчĕ те пурччĕ унăн — автовокзала çитсе автобус пирки ыйтса пĕлесшĕнччĕ. Вăл площаделле пăрăннăччĕ кăна, хăйне пĕр çын ятран чĕннине илтех кайрĕ.

— Архип Лукич, Архип Лукич!— терĕ такам.

Лайăхрах пăхрĕ — урам леш енчен Яштайкин касать. Сăн-питĕнчен ытла чиперех уйăраймарĕ пулин те, уттинчен çийĕнчех палларĕ старик хăйсен председательне.

— Эс мĕн туса çӳретĕн кунта, старик?— хаваслăн алă пачĕ Аристарх Петрович Шевлене.

— Новосильтен таврăнатăп. Ху мĕн çăмăлпа килтĕн? Пĕр-пĕр канашлăва пулĕ-ха...

— Çук, урăх сăлтав тупăнчĕ. Ик-виç кун пурăнма лекет-ха манăн хулара. Васкавлă ĕçсем пур. Эс мĕн, киле каясшăн-и, Архип Лукич? Пирĕн машинă ман хваттер картишĕнче тăрать. Каяс тетĕн пулсан — васка, паянах çитме пултаратăн.

— Апла ыранччен те тăхтас мар-ши?— куларах ыйтрĕ Шевле.— Эп автобуспа кайма билет туянасшăнччĕ те...

— Халех япалусене илме чуп,— терĕ председатель, ун чеелĕхне туймасăр.— Хамăр машинă пур çинче мĕн автобуспа çӳремелле? Эп Витьăна калăп унта, сана кĕттĕр. Хăвăртрах, хăвăртрах, Архип Лукич!..

Архип Лукич вырăнтан та хускалмарĕ-ха, ниçта васкамалли те çук-ха тенĕ пек, пĕрре Яштайкин çине, тепре тротуарпа иртекен çынсем çине пăхрĕ. Çав вăхăтрах вăл вăрттăн кулма та пăрахмарĕ курăнать. Председатель вара çакна сисрĕ те:

— Эс мĕн, каясшăн мар-им, Архип Лукич?— тесе ыйтрĕ.

— Каясшăн та-ха, Аристарх Петрович, анчах сан машинупа мар. Эп ун пек çемçе машинăпа çӳреме хăнăхман-çке. Ĕнтĕ инçе юлмарĕ, автобуспах таврăнăп.

— Çилентĕн апла, старик?

— Кам пĕлет, тен, кăшт çилентĕм те пуль. Ма ыйтас ун пирки? Çынна çапса суранлатнă хыççăн нихçан та «ыраттартăм-и?» тесе ыйтмаççĕ.

— Касарма пултаратни, Архип Лукич?

— Пултармасăр! Пултаратăп,— хыттăн таврăнчĕ Шевле.— Эп ун пек кутăн çын мар, юнтаракан этем те мар. Çапах та машинупа хăвах кай ĕнтĕ. Ман урасем çирĕп-ха, Новосиле çитнине тăван яла мĕнле те пулин çитĕп унта...

Ку сăмахсем хыççăн Яштайкинăн старике сывлăх сунса пăрăнса каймалли ç ç юл ĕ. «Хăвăн кăмăлу, хăвăн кăмăлу» текел се, вăл урампа иртекен çынсем хушшине кĕрсе çухалчĕ.

Шевле председательпе кун пекех чăрк ш-са каласасшăн марччĕ. Таçтан хăй т ллĕн, шутламан çĕртен çапла пулса тухрĕ. Ялта тесен, юрать хăть, хула урамĕнче тĕл пулсан этемле каласма пултараймарĕç-çке в сем! Ыйтса пĕлмелли те нумайччĕ унăн, каласа кăтартмалли те пĕр лавччĕ. Усал-и, лайăх-и — такам мар-çке, тăван колхоз председателĕ. Киле те пыраймастăп терĕ ав, пĕр виçĕ кун пурăнмалла, терĕ. Ĕç вăхăтĕнче мĕн туса пурăнать-ши хулара вăл таранччен? «Пулаççĕ те тĕнчере айван пуçлăхсем,— шухăшларĕ Архип Лукич хваттерне васканă май.— Колхозра халь унăн йĕркеллĕ апат çиме те вăхăчĕ çук. Иртен пуçласа касчен йытă пек чупать вăл ял тăрăх. Кунта ăна ăсти-çукшăн виçĕ кун тытаççĕ. Эх, хăçан вĕренĕпĕр эпир этемле ĕçлеме? Çав путсĕр бюрократсене хăçан пĕтерĕпĕр? Нимĕн чухлĕ те хаклама пĕлмеççĕ вĕсем ĕçлĕ çын вăхăтне».

...Анчах Архип Лукич кунти пуçлăхсене ахалех вăрçрĕ. Яштайкин хĕрӳ ĕçрен татăлса хулана килнĕшĕн кунти пуçлăхсем те, бюрократсем те айăплă мар иккен.

Пĕр уйăх каялла Яштайкин арăмĕ Галина Михайловна çак хулана заочниксен сессине килчĕ те упăшки парса янă адреспа икĕ хутлă чипер кăна çурта хваттере вырнаçрĕ.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп Аристарх Петровича,—терĕ ăна йышăнакан мăнтăр карчăк,— ман патăмра пурăнчĕ вăл, сан упăшку, хулана килсен-тусан халĕ те кĕрсе тухать-ха пирĕн пата. Эсĕ унăн иккĕмĕш арăмĕ-и? Тархасшăн, ара, ырă çын валли ман яланах кĕтес пур. Ывăлпа кин отпуска кайрĕç ав, пĕр пӳлĕмĕ тахçантанпах пушă тăрать. Кĕртсе ларт чăматанна, тархасшăн, именсе ан тăр. Салтăнса çăвăн çул çинчен, килти пек пул. Душ пур пирĕн, ваннăй пур, питĕ меллĕ пулать сана кунта пурăнма. Мана та кичемрехчĕ-ха кунĕпе, упа пек, пĕччен ларма.

Пăшăлтатса вăл çакна пĕлтерчĕ: ывăлĕ унăн заводра пысăк начальник шутланать, ку коттеджа ун ывăлĕ валли тутарнă. Ав мĕнле çынсемпе туслă иккен Аристарх Петрович.

Ма пурăнас мар ыр курса уйăх çурă? Хуçисем килте çук пулсан, вĕсем çемйипех Хура тинĕс хĕрринче канаççĕ пулсан, тата лайăх. Сĕтел те пур ун пӳлĕмĕнче, лампă та пур, кĕтесре юман тĕсĕпе тунă кровать ларать. Урайĕ сăрлă, стенисем йăлтăртатса çеç тăраççĕ, чӳречисене пурçăнтан çыхса тунă чĕнтĕрпе карнă.

Пĕр япала çеç килĕшмерĕ Галина Михайловнăна ку çуртра: хуçа ытлашши каласма юратать. Пӳлĕме шаккамасăр-тумасăр кĕрет те темĕнччен пакăлтатать вара, ниепле те тухса кайма пĕлмест. Ну, ку малтанлăха кăна пулĕ-ха, терĕ Галина Михайловна, эп вĕренме тытăнсан, кансĕрлемест ĕнтĕ вăл, чĕрне вĕççĕн çеç çӳреме пуçлать. Карчăк вара шăпланма пĕлмерĕ. Пурин çинчен те каласа пама тăрăшрĕ вăл хăйĕн патне тин çеç хваттере кĕнĕ çынна. Ăçта тата мĕнле ӳснĕ вăл, кама качча тухнă, кинĕ мĕнле путсĕр хĕрарăм унăн, кӳршĕсем мĕнле кĕвĕç те куштан çынсем, заводра ывăлне мĕнле хисеплеççĕ унăнне — нимĕскере те манса хăвармарĕ пĕччен пурăнса тунсăхланă карчăк. Малтанхи кун мĕн çывăрса кайиччен тӳсĕмлĕн итлерĕ Галина Михайловна, кайран вара алла кĕнеке тытмассерен алăка питĕрекен пулчĕ.

Заочниксен пурнăçĕнче ăмсанмалли сахал: кăнтăрла кунĕпе лекцире, каçхине ялан — килте. Алăран кĕнеке кайма пĕлмест, конспект тенине вара куçпа та курас килми пулса çитет. Каларĕ-çке-ха ĕнер пĕр заочницă, конспект вăл заочникшĕн юратман упăшка пекех, терĕ. Галина Михайловна юрататъ-çке упăшкине. Тепĕр чухне ун патне вăл лекци вăхăтĕнчех çыру çырса пăрахать, эрнере пĕрре почтă çуртне çитсе телефонпа калаçать.

Хутран-ситрен заочниксем иккĕн-виççĕн пуçтарăнса кинона е театра каяççĕ. Ун пек чухне ялан пĕрле çӳрекен тантăшĕ, качча кайма ĕлкĕреймен Зинă, Галина Михайловнăна та килтен сĕтĕрсе тухать.

— Эс ытла нумай вĕренетĕн, Гальă,— тет вăл.— Çапла ялан кĕнеке çинче ларма юрать-и? Кур-ха, ик эрне хушшинче мĕнле начарланса кайрăн. Упăшку килсен паллаймасть те ак сана...

— Ара, темĕн те пĕр ыйтаççĕ те, ирĕксĕрех вулăн. Килте вĕренменнине кунта вĕренме тивет,— тавăрать Галина Михайловна.

Зинă кĕтмен çĕртен ахăлтатса кулса ярать те Галина Михайловнăна çапла калать:.

— Санпа пĕр каччă паллашасшăн, Гальă. Темиçе хут систерчĕ ĕнтĕ мана. Паллашма кăмăл çук-и?

— Кам вара вăл?— ыйтать Галина Михайловна, питрен хĕрелсе.

— Историк. Авланман хăй, пирĕнпе юнашар пурăнать.

— Кирлĕ мар, Зинă. Килĕшмест упăшкаллă хĕрарăма арçынпа паллашни.

— Ну, кинона пĕрле кайса килнĕшĕн мĕн пултăр вара? Эп сана паллаш та упăшкуна пăрахса тепре качча тух теместĕп вĕт.

— Кинона эпир санпа та кайма пултаратпăр.

— Çук çав, Гальă. Вĕсем иккĕн. Пĕлетĕн-и, тепри ман пата кĕркелет. Ну, ыран кăтартас-и сана?

Галина Михайловна кăтарт тесе те, ан кăтарт тесе те каламарĕ. Çапах та тепĕр кунне кинона тăваттăн кайрĕç вĕсем. Каччи чăнах та чипер иккен, йĕркеллĕ калаçать, пĕрре те çăмăлçак этем пек туйăнмасть. Ун пек йĕкĕте мĕнле хăваласа ярăн-ха хăвăн çумăнтан? Галина Михайловнăна хваттерне çитиччен ăсатрĕ вăл, çав сĕкĕнсех паллашнă каччă. Тепĕр кунне вĕсем тата тĕл пулчĕç, ун хыççăн, уçăлма тесе, каçни каç урама тухма пуçларĕç. Канмалли кун Зинă Галина Михайловнăна вăйпа тенĕ пекех Атăл леш енне илсе кайрĕ. Каçасса иккĕн çеç каçрĕç, таврăнасса вара тăваттăн таврăнчĕç. Тантăшĕ малтан калаçса татăлсах улталарĕ курăнать: паллакан арçынсем вĕсене лере çитсен çыран хĕрринчех шыраса тупрĕç.

Канмалли кун çав тери илемсĕр иртрĕ, ăна пĕлнĕ пулсан, Галина Михайловна тем парсан та килтен тухас çукчĕ. Халиччен хăйне йĕркеллĕ тытнă каччă Атăл леш енче ним виçине те пĕлмерĕ, эрех кӳпсе лартса чаракран тухса кайнăскер, темĕн те пĕр сӳпĕлтетрĕ, чăрсăррăн хăтланса, хĕрарăмсене кӳрентермеллипех кӳрентерсе пĕтерчĕ. Пĕр паром çине ларнă пулин те, вĕсем киле килнĕ чух ним çинчен те калаçмарĕç. Атăл ку енне каçсан каччăсем çамрăк учительницăсене хваттерĕсене çитиччен ăсатасшăн пулчĕç, анчах Галина Михайловна ӳсĕр заочниксене хăйĕнпе виçĕ утăм тума та ирĕк памарĕ.

Тата темиçе кун иртрĕ. Галина Михайловна каччăран яланлăхах сивĕнчĕ, Зинă урлă чĕнсен те, хапха умне темиçе хутчен килсен те, унпа тек курнăçасшăн пулмарĕ. Ăшра Зинăна çеç мар, хăйне те вăрçса тăкрĕ. «Айван,— терĕ вăл,— упăшкуна яла пăрахса хăвартăн та кунта каччăпа паллашрăн пулать. Ну, кĕççе пит те иккен эсĕ, заочницă! Çамрăкраххи, ăслăраххи тупас терĕн апла, хулара савăнăçлăрах пурăнма шутларăн? Кăтра çӳçне курса ытараймарăн-и эс ăна? Пĕлессĕн пулсан, вăл хăвăн Аристархун чĕрне хурине те тăмасть, ситменнине тата унран вунă хут ухмахрах. Упăшку, тем тесен те, сана юратать, вăл сана алă çинче йăтса çӳреме хатĕр.

Кăна мĕн кирлĕ? Çавна та чухласа илейместĕн-и? Ав хăех персе ячĕ Атăл леш енче, арăмĕ те пур унăн килте. Ултавçă вăл, ăстиçук этем».

Лекцисенчен кăшт пушаннă хыççăн Галина Михайловна упăшки патне вăрăм çыру çырса ячĕ. Пурин пирки те пĕлтереймерĕ-тĕр ĕнтĕ ăна, хăш-пĕр вăрттăн япаласене хăй тĕллĕн ўкĕнсе пурăнма чĕре тĕпнех хăварчĕтĕр, анчах кăмăллăрах çырас тесе, чунне ытларах уçса парас тесе нумай тăрăшрĕ. Систĕр Аристарх Петрович, тунсăхлать кунта çамрăк арăмĕ уншăн, зачетсене парса часрах киле таврăнмаваскать. Ĕнтĕ вăл киле пырса çитиччен тата миçе кун юлнине те шутласа хунă — тепĕр ик эрне пулĕ, унтан ытла мар.

Кăтра çўçлĕ каччă сĕмсĕрленнĕçемĕн сĕмсĕрленсе пычĕ. Каçхине вăл каллех хапхана килсе тўнлеттерчĕ.

— Зинă мар-и? Кам шаккать унта?— терĕ Галина Михайловна, чўречерен кармашса.

— Вăл мар, каллех пĕркунхи каччă,— илтĕнчĕ алăк хыçĕнчен хваттер карчăкĕн сасси.— Уçас-и?

— Çук, ан уçăр. Тем тусан та ан уçăр! Килте çук тейĕр.

Илтрĕ вăл, карчăк пуçтах заочнике киревсĕр сăмахсемпе вăрçсах хăваласа ячĕ. Куншăн пĕрре те кулянмарĕ-ха Галина Михайловна. Çав кирлĕ ăна, путсĕре, хăйне йышăнманнине пĕле тăркача çапла сĕтĕрĕнсе ан çўретĕр. Анчах халь ĕнтĕ пытарса тăрасси çук, хваттер карчăкне ку арçынпа мĕнле паллашса мĕнле уйрăлнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парас пулать. Унсăрăн юрамасть. Унсăрăн вăл ăна шанма пăрахать е, кирлĕ пулсан, хушса та элеклесе Аристарх Петровича каласа кăтартать.

— Асту, юрату таврашĕ мар-и сирĕн ку арçынпа?— терĕ карчăк пўрте кĕрсен.

— Çук, Матрена Ивановна, нимле юрату та çук пирĕн хушшăмăрта. Итлĕр, эппин, каласа парам сире ним пытармасăр...

Карчăк ăна юнашар ларса, пĕр пўлмесĕр, тĕнчере çав тери хăрушă ĕç пулса иртнĕ пек, хутран-ситрен ахлата-ахлата илсе итлерĕ. Юлашкинчен ассăн сывласа ячĕ.

— Савă çеç-и?

— Савă çеç пулмасăр!

— Э-э, апла пулсан, калаçмалăх та çук. Эп мĕн тесе, чăн-чăн юрату тесе.— Унтан çиллессĕн хушса хучĕ:— Эй, арçынсене шанмалли пур-и халь? Ан шан, йăмăкăм. Хăвăн Аристарх Петровичнах юрат. Вăл кăшт аслăрах ĕнтĕ санран, çапах та йĕркеллĕ çын. Çавăнпах пурăн, тăванăм. Пĕр çынпа пурăннине нимĕн те çитмест тĕнчере, ĕнен мана, ват çынна.

Кун хыççăн Галина Михайловнăпа хваттер карчăкĕ аппăшĕпе йăмăкĕ пек туслашса кайрĕç. Ĕнтĕ каçсерен те ирсерен апат пĕрле ларса çирĕç вĕсем, пушă вăхăтра, заочница каннă сехетсенче, хăйсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ тĕлĕнмелле «историсене» пĕр-пĕрне нумай каласа кăтартма ĕлкĕрчĕç.

Галина Михайловна каçсерен ялан килте пулчĕ. Зинă сивĕнчĕ унран, кăтра çўçлĕ заочник çулăхма пăрахрĕ. Вĕренсе ларма та, карчăкпа палкама та вăхăт нумай унăн. Юлашкинчен хваттер карчăкĕ пăсăлнă тесе пурçăн скатерть айĕнче усракан телевизорне ĕçе ячĕ, вĕсем каçсерен килтех кинокартинăсем пăхма тапратрĕç.

Пĕррехинче (вăл шăпах канмалли кун пулнăччĕ) çамрăк учительницă стена çумĕнчи йышлă сăн ўкерчĕксене пăхса тăратчĕ. Карчăк çавна асăрхарĕ те арчаран сĕтел çине темиçе альбом кăларса хучĕ.

— Ак вĕсем пирĕн тата нумай. Курса лар, кăмăлу пулсан.

Галина Михайловна унти сăн ўкерчĕксене васкамасăр йĕркипе пăхса кайрĕ. Пурте палламан çынсем. Пĕр альбомĕнче Аристарх Петровичăн çамрăкрах чухнехи сăн ўкерчĕкĕ те тухрĕ. Вăл ўкерчĕк килте те пурччĕ-ха. Анчах ку мĕскер? Ку кам тата? Галина Михайловна, хăйне такам йĕппе чикнĕ евĕр, сиксе илчĕ, унтан, альбома икĕ аллипе çатăртаттарса тытса, тепĕр хут сăн ўкерчĕкĕ патне пĕшкĕнчĕ. Çавă, тем тесен те çавă! Вăл хваттер карчăкĕ патне чупса пычĕ.

— Ку кам сирĕн, Матрена Ивановна?

Карчăк, куçлăх тупса, сăн ўкерчĕкĕ çине тинкерчĕ.

— Э-э, ку Валентин. Ман ывăлпа пĕрле ĕçлет. Мĕн, паллатним эс ăна?— Çавăнтах карчăк çамрăк учительницă еннелле куç хыврĕ те куçне-пуçне чарса пăрахрĕ.— Чимха, мĕн пулчĕ сана, Гальă? Сан питў вутла çунать. Эс пĕрре хĕрелетĕн, тепре кăвакаратăн?

Ун пек каласан, Галина Михайловна питрен тата ытларах хĕремесленсе кайрĕ. Вăл альбома сĕтел çине пырса хучĕ те хăй ик чўрече хушшинчи пысăк тĕкĕр умнелле ыткăнчĕ.

— Çук-çке, нимĕн чухлĕ те хĕрлĕ мар!— терĕ вăл хыттăн.

— Ан суй. Пĕрлĕхен пекех. Кала: паллатăн-им эс вăл Валентина? Манран ан пытар, хĕрĕм.

— Паллатăп, Матрена Ивановна. Тĕрĕсрех каласан, паллана,— темшĕн хурлăхлă сасăпа каларĕ çамрăк учительницă.— Эсир ăна ман ывăлпа пĕрле ĕçлет тетĕр-и? Çапла каларăр-и?— Галина Михайловна сасси чĕтрекен, хăрăлтатакан пулчĕ, хăй вăл, халсăр

юлнӑ ҫын пек, диван ҫине кайса таянчӗ. Матрена Ивановна, чунӗпе темле ырӑ мар япалана сиссе, ун умне пырса тӑчӗ.

— Ман ывӑлпа пӗрле ӗҫлет, Гальӑ, ман ывӑлпа пӗрле ӗҫлет. Нумай пулмасть килсе кӗчӗ вӑл кунта. Анчах сана мӗн пулчӗ-ха? Эс ҫавна кала.

— Нимӗн те ан чӗн, Матрена Ивановна, нимӗн те ан чӗн. Каҫар, эп кӗрсе вырӑн ҫине выртам-ха. Темскер, ывӑннӑ пек пултӑм.— Пӳлӗм алӑкне уҫсан, Галина Михайловна каялла ҫаврӑнса ҫапла ыйтрӗ:— Халь кунтах-и, хуларах-и вӑл?

— Кунтах-ҫке,—терӗ аптраса ӳнӗ хваттер карчӑкӗ.— Ак виҫӗ кил урлӑ пурӑнать. Пирӗнни пек ҫурт вӗсен...

— Апла пулсан, иртсе ҫӳренине курмаллаҫке эпӗ?

— Курма йывӑр ӑна. Вӑл ялан машинпа ҫӳрет.

— Машинпа тетӗн?

— Ара ҫав. Мӗн тӗлӗнсе пӑхатӑн? Кала ӗнтӗ тӗрӗссине, Гальӑ...

Ҫамрӑк учительницӑ сӑмах тавӑрса калас вырӑнне хыттӑн йынӑшса илчӗ те алӑка хупрӗ.

Хваттер карчӑкӗ ӑна килнӗренпе пӗрремӗш хут ҫиленнӗ пек пулчӗ. Мӗн пытармалли пур ӗнтӗ ват ҫынран? Тахҫанхи ача-пӑчалла юрату пулӗ-ха. Тупнӑ сехӗрленсе ӳкмелли! Упӑшка пур ҫинче арҫынпа паллашрӗ те ӑна тӗпӗ-йӗрӗпе каласа кӑтартрӗ, аван мар тесе вӑтанса тӑмарӗ, тахҫанхине, вун пилӗк-ҫирӗм ҫул ӗлӗкрех пулнине аса илсен, чӗтрене ерчӗ. Сӑнран та улшӑнчӗ пӗтӗм. Ҫук, кунта мӗн те пулин пурах. Юрӗ-ҫке, терӗ вӑл, пӑртак тӑрсан, чунна пусармалла йӑлтах каласа паратӑн ак. Хӗрарӑм хӗрарӑма шанаканччӗ вӑл...

Матрена Ивановна пӳлӗм алӑкне майӗпен ҫеҫ уҫрӗ те Галина Михайловна мӗн тунине пӑхрӗ. Ҫывӑрать. Простыньпе витӗннӗ те пӗр сассӑр ҫывӑрать. Тен, тӗлӗрсе, шухӑша кайса выртать пулӗ, пӗлме йывӑр. «Кӑштах канса илтӗр, эппин,— терӗ карчӑк.— Хавшак чӗреллӗскер пулмалла хӑй, шӑрпӑк пек тивсе каяканскер пулмалла. Ҫапах чунӗ таса унӑн, Аристарх Петровича улталаса курман, тет. Кӑтра ҫӳҫлӗ заочнике те йышӑнмарӗ ав, хӑваласа яма хушрӗ. Каччи чипер, тепри пулсан, ун ҫумне ҫилӗм пек ҫыпӑҫса лармалла. Тем тесен те, лайӑх арӑм тупнӑ Яштайкин. Хӑй чупкӑнрахчӗ ӗнтӗ, кунта хваттерте пурӑннӑ чухне те кашни каҫ тул ҫутӑласпа ҫеҫ таврӑнатчӗ, арӑмӗ пӑсалнӑ ҫын мар, йӗркеллӗскер. Валентинпа инкек ан тухтӑрах вӗсен, ҫамрӑк чухнехи юрату ҫӗнӗрен аманса ан кайтӑрах. Вара пӗтерет мана Аристарх Петрович...»

...Куҫ умӗнче этем мӗлки тӑрать. Пӗрре ҫухалать вӑл, тепре вырӑн патне ҫывхарать. Пӳртре тем кӗрлет пек, пуҫ тӑрринчи хӗрлӗ абажур вӗҫӗмсӗр мачча тӑрӑх кусса ҫӳрет. Пӳлӗмри ҫын хӑвалать-хӑвалать ӑна, анчах ниепле те ярса тытаймасть. Аллисем вӑрӑм унӑн, темиҫе метр тӑршшӗ те пулӗ. Ак вӑл аллисене вырӑн еннелле тӑсрӗ, Галина Михайловнӑна мӑйран пӑвма пуҫласшӑн. Кай, кай эс, усал этем, ҫывӑракан ҫынна кансӗрлесе ан ҫӳре. Чим-ха, этемех-и ку — унӑн тӑватӑ куҫ пек, тӑватӑ хӑлха пек. Этем мар пулас, темле виле кӗлетке кӑна. Ҫавӑнтах лампӑ кунталла ҫывхарать те, электричествӑ ҫутинче ку кӗлетке паллакан ҫын, хитре каччӑ пулса тӑрать. Тахҫан курнӑ пек ӑна, тахҫан калаҫнӑ пек унпа. Галина Михайловна ҫынна аллипе сӗртӗнсе пӑхасшӑн — алӑсем хускалмаҫҫӗ. Вӑл куҫне уҫасшӑн — вӗсем те уҫӑлмаҫҫӗ. Пулать те тепӗр чух тутлӑ ыйӑх! Ҫак мӗлке кансӗрлемесен, тата вунӑ сехет ҫывӑрӗччӗ вӑл пӗр вӑранмасӑр...

— Гальӑ, тетӗп, Гальӑ... Тӑр-ха ӗнтӗ пӗр минутлӑха. Курмасним эп килнӗ. Чирлӗ мар пулӗ те эсӗ, Гальӑ? Ман санпа пӗр-ик сӑмах та пулин калаҫассӑм килет. Вӑран-ха ӗнтӗ, Гальӑ...

Ҫын сасси. Паллакан ҫын сассиех тата. Галина Михайловна тем пек асапланса куҫне уҫать.

— Валентин! Ах, Валентин, Ӗненмелле-и манӑн хамӑн куҫсене, ӗненмелле мар-и? Тен, ку тӗлӗкре пулса иртет пулӗ? Матрена Ивановна, миҫе сехет халӗ? Эс ҫывратни?

— Ан чӗн ӑна, Гальӑ. Тӗл пулнӑ чух иксӗмӗр кӑна калаҫар-ха.

— Тӗлӗк мар-и вара ку, Валентин? Эп сана чӗррӗнех куратӑп-и? Кил-ха кунтарах. Ӗненместӗп, эсех-и ку, Валентин? Ку мӗскер санӑн? Ма патакпа эсӗ? Ах, мӗскӗн, ҫӳҫӳсем кӗл пекех-ҫке хӑвӑн. Кӳр-ха, алпа сӗртӗнем, ҫывӑхран курам сана.

— Гальӑ, эс чирлӗ мар пулӗ те? Ҫавӑн пекех хӑраса ӳкрӗн-и вара ман пирки илтсен?

— Валентин, кала, эсех-и ку?

— Эпех пулмасӑр. Эпӗ, Гальӑ, эпӗ. Санпа пӗрле вӗреннӗ Валентин.

— Эс вилмен-и?

— Вилесшӗнччӗ. Леш тӗнчере йышӑнмарӗҫ. Ят тухман, терӗҫ. Анчах эс ан макӑр, Гальӑ. Эп ыйтса пӗлтӗм, сан пурнӑҫу манӑнни пек мар. Ним макӑрмалли те ҫук.

— Ҫапах та, таврӑнсан ма шырамарӑн мана, Валентин?

— Ун пирки ан ыйт. Кама кирлӗ эпӗ ҫакӑн пек мӗскӗн ҫын? Хӑрах урапа сиксе, ӑҫ-

тан шыраса тупам ёнтӗ сана ҫут тӗнчере?

...Пӳртре ӗнӗк шӑрши кӗрет. Мӗн ҫунатьши унта? Газ тухса тулман пулӗ те? Матрена Ивановна ӑҫта-ши? Пӗр алӑка уҫрӗ Галина Михайловна, тепӗр алӑка уҫрӗ, пӑлтӑра тухрӗ. Ӑна тул енчен питӗрсе кайнӑ. Картишӗнче чӑхсем какаласҫӗ. Ирхи вӑхӑт-и халь е каҫ пулса килет-и? Миҫе кун, миҫе сехет ҫывӑрнӑ Галина Михайловна? Чирленӗ пулнӑ-и вӑл? Сӑнран пӑхма чиперех пек: куҫӗсем чӗрӗ, тути писев сӗрмесӗрех хӗпхӗрлӗ, утти — сывӑ хӗрарӑм уттиех. Вӑрӑм ҫивӗтӗ сапаланнӑ ёнтӗ, анчах вӑл ҫамрӑк учительницӑ кӗлеткине пӑсмасть, ытларах илем кӳрет ҫеҫ.

Пӑлтӑрта ҫӑраҫҫи кӗмсӗртетни илтӗнсе кайрӗ. Пӳрте сумкӑ тулли пахча ҫимӗҫ йӑтнӑ Матрена Ивановна килсе кӗчӗ. Алӑк патӗнченех сӑмах хушрӗ:

— Пурнӑҫсем мӗнле ёнтӗ санӑн, Гальӑ? Мӗнле ҫывӑртӑн кӗҫӗр?

— Чиперех ҫывӑртӑм, Матрена Ивановна.

— Ырӑ тӗлӗк куртӑн-и хӑть?

— Ан та кала, Матрена Ивановна...

Хваттер карчӑкки, сумкине сӗтел ҫине лартса, Галина Михайловна патне пырса тӑчӗ, тӳрех куҫран пӑхрӗ:

— Ак шыраса тупрӑр пӗр-пӗрне. Калаҫрӑр-и? Эп, кансӗрлес мар тесе, кӳршӗсем патне тухса кайрӑм.

— Калаҫрӑмӑр, Матрена Ивановна. Халь те тӑна кӗрсе ҫитейместӗп. Мӗнле пулса тухрӗ-ха ку?

— Асту, Гальӑ. Ырлӑха мар тӗл пултӑр эсир. Чун сисет манӑн, инкек пулать пурнӑҫунта. Куртӑм ёнтӗ, Валентин сан ҫинчен куҫне илме пӗлмест.

Галина Михайловна хваттер карчӑкне икӗ аллипе те ыталаса илчӗ те, пуҫне ун кӑкӑрӗ ҫине хурса, ёсӗклесе йӗрсе ячӗ.

— Ҫакӑн пек тӗл пулӑва инкек теҫҫӗ-и, Матрена Ивановна? Апла пулсан, телей мӗскер, пурнӑҫри савӑнӑҫ мӗскер?

— Каларӑм вӗт, ырлӑха мар ку тесе. Халь кашни каҫ ҫӳреме пуҫлать ёнтӗ. Халь пуҫланчӗ. Асту, сыхлан унран, Гальӑ. Сан упӑшку пур, куҫлӑ-пуҫлӑ этем. Чӑлах мар, уксах мар, мӗн тери ӑслӑ ҫын. Тата систерсе хурам, тӑванӑм: ёҫкелет вӑл пӑртак Валентин. Эп темиҫе хут ӳсӗр куртӑм ёнтӗ. Итле мана, чунна хытарнӑ пул. Яхӑнне те ан яр ӑна хӑвӑн патна. Урам аслӑ, ҫӳретӗр хӑйӗн машинипе кӗрлеттерсе...

Тата тем те пӗр калаҫрӗ хваттер карчӑкӗ. Ёнер Валентина кайса систернӗшӗн ӳкӗнчӗ вӑл, Аристарх Петровичпа хӑратрӗ, ун кӳрши эрехпе ашкӑнни ҫинчен сахалтан та пилӗк-ултӑ хутчен асӑнчӗ. Галина Михайловнӑн пуҫӗ ҫаврӑнса кайрӗ. Мӗн ҫинчен пит тӑрӑшса пуплет Матрена Ивановна? Кама вӗрентет вӑл ҫут тӗнчере таса та чыслӑ пурӑнма? Пӗр сӑмахне те хӑлхана чикмерӗ ҫамрӑк учительницӑ хваттер карчӑкӗ каланинчен. Чиперех итлесе тӑчӗ, анчах нимӗн те ӑнланмарӗ, ӑнланасшӑн та пулмарӗ. Юлашкинчен ун тӳсӗмӗ пӗтрӗ пулас, вӑл:

— Матрена Ивановна, каҫар, эп паян пит ҫума та ёлкӗреймен-ха,— тесе хучӗ.

— Тухса ҫӑвӑн, чӗппӗмҫӗм, тухса ҫӑвӑн. Анчах эп каланине ан ман, Гальӑ.

— Юрӗ, манмӑп, Матрена Ивановна. Тавтапуҫ сана вӑхӑтра асӑрхаттарнӑшӑн. Эсир пурӑнса курнӑ ёнтӗ, ун пеккине манран ытларах пӗлетӗр...

Тупата, тӗлӗнтерсех ярать вара тепӗр чухне хӑш-пӗр хӗрарӑм хӑйӗн кӑмӑлӗпе! Эс каланине йышӑнмасть-ха вӑл, пӗтӗм чунӗпе ӑна хирӗҫ тӑрать, эс хушни е ятлани тарӑхтарать ӑна, туллаштарать, чунӗ кӳтсе ҫитнипе ёнтӗ вӑл макӑрса яма хатӗр, анчах сӑмахпа пӗтӗмпе килӗшет санпала. «Юрӗ, манмӑп. Тавтапуҫ сана вӑхӑтра асӑрхаттарнӑшӑн...»

Галина Михайловна унпа тавлашма хӑйманнине кура, Матрена Ивановна хваттерте пурӑнакан ҫамрӑк хӗрарӑма пусмӑрласах ҫитерчӗ. Вӑл ӑна тӑршшӗпе вӗрентрӗ, тӑршшӗпе хӑтӑрчӗ, Галина Михайловна тӑван кинӗ пулнӑ пек, унӑн кашни утӑмне тӗрӗслесе тӑчӗ. Хӑйне ятланине айӑплӑ ҫын пек кӑшт вӑтанарах, пуҫне пӗксе итлекен учительницӑ ёнтӗ хваттер карчӑкӗ тапӑнмассерен пӗр япала ҫинчен ҫеҫ шутларӗ: часрах пӑрӑнмалла ку пурне те пӗлекен ватӑ хӗрарӑм куҫӗ умӗнчен, мӗнле те пулин сӑлтав тупса, пӳртрен тухса тармалла. Виҫӗм кун тупӑнчӗ-ҫке ун пек сӑлтав, ёнер тупӑнчӗ. Паян ма тупӑнмалла мар?

— Эп типме ҫакнӑ кӗпесене илсе кӗменччӗ унта, Матрена Ивановна. Илсе кӗрес-и?—тет вара Галина Михайловна.

— Илсе кӗр, чӗппӗмҫӗм. Вӑрласа кайӗҫ тата.

Е урӑхла май тупӑнать пӳртрен тухса сирпӗнме.

— Эп хапхана питӗрменччӗ унта, Матрена Ивановна. Тухса питӗрес-и?

— Тухса питӗр. Вара ҫывӑрма выртӑпӑр. Кӗҫӗр урама каймасан та пырӗ. Каймастӑн пуль?

— Каймастӑп, Матрена Ивановна.

Учительницӑ кӗпе вӗҫҫӗн, тутӑрсӑр-мӗнсӗр картишне чупса тухать. Хапхи питӗрӗнмест тата — ӑна ҫӗнӗрен уҫса хупмалла. Уҫӑ хапхаран тухса пӑхмасӑр мӗнле чӑтӑн? Ун куҫӗсем Валентина шыраҫҫӗ. Каччӑ ӑна

асăрханă ĕнтĕ, патаккипе тŭк! тŭк! пускаласа, кунталлаваскать.

Çур сехет иртет, пĕр сехет иртет, Галина Михайловна çав-çавах хапха питĕрсе кĕреймест. «Хам та ухмах,— вăрçать пŭртре карчăк.— Сисетĕп, юри чееленет, çапах хапха питĕрме кăларса яратăп. Кĕпе вĕççĕнех сиксе тухрĕ-çке тата хăй. Сивĕ те мар-ши ăна?»

Çук, Галина Михайловнăна сивĕ мар. Вĕсен икĕ çын валли пĕр пиншак пур, çитет. Мĕн вăл çуллахи кас сулхăнĕ, çумра чун савакан çын пулсан?

Анчах хваттер карчăкĕ хаярланнăçемĕн хаярланса пырать, ун сăмахĕсем чуна ытларах та ытларах çŭçентерме тытăнаççĕ.

— Куратăп, сирĕн ĕç шала кайрĕ, Галина Михайловна (халь ĕнтĕ Гальă мар, Галина Михайловна!) Эс, заочницă, йăлтах ухмаха тухнă пулмалла. Упăшка пур çинче кам çапла хăтланать? Эппин, ман сăмаха ним вырăнне хумарăн пулать, кашни кас, мана улталаса, хăвăн Валентину патне чупатăн. Пăх-ха хăвăн çине тĕкĕр витĕр, мĕн юлчĕ ĕлĕкхи сăнунтан? Йăлтах типсе-хăрса кайрăн. Ман шутпа, эс чирлĕ, Галина Михайловна, тупата туршăн чирлĕ.

— Чăнах, сывă мар пулмалла эп, Матрена Ивановна,— йăвашшăн калать çамрăк учительницă.

— Апла пулсан, Аристарх Петровича чĕнсе ил. Машинăпа килсе илсе кайтăр сана. Кунта сываласси пулмасть, ун çинчен калаçмалли те çук.

— Хам та çапла шутлатăп. Ыран телеграммă çаптарас та, килсе илсе кайтăр.

— Валентина мĕнле пăрахса хăваратăн ĕнтĕ?— ыйтмасăр чăтаймасть Матрена Ивановна.

— Валентин-и? Чиперех юлать вăл. Пирĕн хушшăмăрта нимĕн те çук, Матрена Ивановна. Калаçкалатпăр унпа эпир, хутран-ситрен киносене çŭретпĕр. Çавă çеç.

— «Çавă çеç»,— йĕкĕлтет хваттер карчăкĕ.— Ĕнер хапха умĕнче чуп туса тăракансем камсемччĕ? Эх, Гальă, Гальă...

Гальă мĕн калатăр? Вăл чĕнмест. Чуп тунине те тухса итлет эппин çĕр çăтман карчăкĕ! Мĕн-мĕн калаçнине те йăлтах пĕлет апла. Пĕлтĕрех, тепĕр тесен. Упăшкана та каласа патăр. Халь ĕнтĕ пытармалли çук. Куртăр хăйĕн арăмĕ мĕнле йĕрĕнчĕк хĕрарăм пулнине Аристарх Петрович. Арăмне çухатас мар тесен, часрах яла илсе кайтăр.

Пĕр ирхине хваттер карчăкĕ Галина Михайловнăна çыру пырса тыттарчĕ. Пŭлĕмне питĕрĕнсе, икĕ хутчен вуласа тухрĕ çамрăк учительницă çырăва. Аристарх Петрович арăмĕ хăй мĕнле пурăнни пирки нимле хыпар та туманнишĕн ŭпкелешет. Иртнĕ шăматкун, кĕтнĕ вăхăтра, телефонпа калаçма та пыман иккен Галина Михайловна. Çав терех вăхăт çук-ши вара унăн хулара? Ку сăмахсене вуласан, çамрăк хĕрарăмăн пичĕ пĕçерсе кайрĕ. Чăнах та аван мар кун пек. Ĕлĕкхи савнине тĕл пулнă тесе, упăшкана манмалла-и? Вăл ăна пăрахса Валентина качча тухма шутлать-и вара?

Галина Михайловна алăри сехечĕ çине пăхса илчĕ те часрах çыру çырма ларчĕ, анчах çырса пĕтерейменрĕ, лекцие васкамалла пулчĕ. Каçхине ун пушшех вăхăт тупăнмарĕ. Хăй те калама пултараймасть, мĕн пулса иртет унпа каççерен? Вăл лара-тăра пĕлмест. Алăка питĕрсе, пуçа минтер çине хурса макăрса илет, çавăнтах, çŭçне-пуçне тирпейлесе, куççуль тивнĕ вырăнсене писев сĕрсе, урама чупса тухать. Хваттер карчăкĕ тем кăшкăрать ăна, анчах Галина Михайловна вăл каланине хăлхана та чикмест. Çамрăк арăм ухмаха ернĕ. Вăл чунтан-чĕререн юратса пăрахнă. Унăн çак самантра Валентина курмалла. Вилет Галина Михайловна ăна курмасан, çак минутрах вилсе выртать.

Сĕтел çинчи кĕнекесемпе тетрадьсене маннă ĕнтĕ вăл. Лекцисене ячĕшĕн çеç итлет. Алчăранă, шухăша кайнă куççем чŭрече еннелле таçта аяккалла пăхаççĕ. Юлашкинчен, Галина Михайловна чăтаймасть, упăшки патне телеграммă çаптарать. Илсе кайтăр Аристарх Петрович ăна киле, унсăрăн пĕтет çамрăк арăм, пĕтет.

Яштайкин кăнтăрла тĕлĕнче çитрĕ. Вăл килсе кĕнĕ хушăра Галина Михайловна вырăнпах выртатчĕ.

— Мĕн пулчĕ, Гальă?— терĕ хыпăнса ŭкнĕ Аристарх Петрович.

— Хам та пĕлместĕп, темле чир тупăнчĕ маншăн.

— Больницăна кайрăн-и?

— Кайман.

— Леçес-и халь?

— Кирлĕ мар, Аристарх. Эс мана киле илсе кай. Эпĕ ĕнтĕ лекцисене нумай сиктернĕ, зачетсене пурне те параймастăп...

Упăшки ăна итлемерĕ.

— Çук, çук, ун пек юрамасть, Гальă. Кунтах сывалатăн. Зачетсене те чиперех паратăн ак. Ĕнтĕ сирĕн вĕренмелли те темиçе кун çеç юлчĕ, кун пек пăрахса кайма аван мар. Эп сана валли пыл илсе килтĕм, çу, пан улми. Халех врача чĕнтеретпĕр. Сывалатăн.

— Ну, кирек мĕн ту, Аристарх. Ан ятла, чăрмантартăм эп сана,— терĕ Галина Михайловна куççуль витĕр.

Тата икĕ кунтан вăл кăшт сывалнă пек пулчĕ. Тепĕр хут каласа пăхрĕ упăшкине

хăйне киле илсе кайма. Аристарх Петрович кунниче те ӳкӗте кӗмерӗ. Ку таранччен чунпа сисӗмлӗ пулакан Яштайкин хальхинче юратнă арăмсăр тăрса юлнине вăхăтра ăнланма пултараймарӗ.

Коттедж картишӗнчен машинă тухса кайнă-кайман Галина Михайловна пӳлӗмне Валентин сирпӗнсе кӗчӗ. Матрена Ивановна ун ҫулне пӳлме тăнăччӗ, анчах Валентин ăна хыттăн тӗртсе ячӗ те хăй тӳрех савниййӗ патне ыткăнчӗ.

— Гальă, Галечкă,—терӗ вăл аран-аран сывлăш ҫавăрса.— Мӗншӗн асаплантаратăн эс мана? Ху та асапланатăн. Кун пек эпӗ те чирлесе ӳкетӗп ак... Илтетӗн-и эс мана? Аннене каларăм. Килсе илетӗп, терӗ. Гальă, Галечкă... Атя, халех пирӗн пата каятпăр...

Галина Михайловна ҫакна йăлтах илтрӗ, анчах хирӗҫ сăмах чӗнме хăват ҫитерейменрӗ. Ун вырăнне Валентина тавăрса калаканни хваттер карчăкӗ Матрена Ивановна пулчӗ. Вăл пӳлӗме урисемпе юри хыттăн таплаттарса кӗрсе тăчӗ те пӗтӗм вăйпа кăшкăрса пăрахрӗ:

— Тасалăр ман пӳлӗмрен! Халех тасалăр кунтан! Ҫак минутрах илсе кай эс ăна хăвăн патна, Валентин. Спаҫҫипă калăр, эп Аристарх Петровича нимӗн те шарламарăм. Икӗ кун чăтрăм, халь ак тӳсӗм пӗтрӗ. Сирӗн юратăвăр-масарăр — мур тӗпне. Куҫăмпа курас килмест. Тасалăр!

Вăл урипе тăрст! тапрӗ, тухса каяс умӗн Галина Михайловна ҫине йӗрӗннӗ пек пулса куҫ хыврӗ. Ҫамрăк учительницăпа Валентин вырăнтан хускалмарӗҫ. Вӗсем пӗр-пӗрин ҫумне лăпчăннă та чарăлса кайнă куҫӗсемпе карчăк ҫине тӗлӗнсе пăхаҫҫӗ.

## ВУН ИККӖМӖШ СЫПĂК

### I

ХУЛАНА ПЫРАС-ТĂВАС ПУЛСАН. Архип Лукич хăйӗн тахҫанхи тусӗ патне кӗрсе тухмасăр, унпа калаҫса чунне пусармасăр тухса каймасть вара. Сайра пулкалать старик кунта, анчах килсен тӳрех юлташӗ ӗҫлекен учреждени еннелле ҫул тытать. Тахҫан паллакан ҫынна курма кăмăллă-ҫке ăна. Пӗрле районсене ҫӳренӗ чухнехи кунсене аса илетӗн, тантăш-пӗлӗшсенчен кам ăҫта пурăннине, мӗнле ӗҫре тăнине ыйтса пӗлетӗн. Унтан вăл сана чей ӗҫме килне илсе каять, хăйӗн ҫулсерен йышланса пыракан мăнукӗсемпе паллаштарать. Кил-йыш енчен Сидор Васильевич Шевле пек мар, ҫав тери хунавлă, мăнуксем унăн пилӗк-ултă пӳлӗмлӗ пысăк ҫурта та вырнаҫаймаҫҫӗ. Тата сад пахчи чаплă Сидор Васильевичăн, кунашкал пысăк та хитре сад хулипе те сахал пулӗ. Шевле ăна кашнинчех чунтан ăмсанса пăхса ҫӳрет.

Хальхинче Архип Лукичăн телей пулмарӗ. Ун тахҫанхи тусӗ района кайнă, вăл тепӗр эрнесӗр те таврăнмасть иккен. Садра ҫавракка сӗтел хушшинче калаҫса ларас ӗмӗт те, хăй Новосиле мӗнле кайса килнине каласа парас ӗмӗт те татăлчӗ. Мӗн тăвас тетӗн, палламан начальниксем патне кӗрсе тухмалла пулать. Килнӗ ярала, хулара юри ҫӗр выртнă ярала, Шевле хăйӗн капланса ҫитнӗ шухăшӗсене каласа паратех ӗнтӗ, ыйтса пӗлмеллине ыйтса пӗлетех. Ăна кирлӗ учреждени Атăл хӗрринчен инҫе мар, хула варринче, урам кӗтессинче ларать. Ҫурчӗ чаплă мар, анчах тем вăрăмăш. Ун картишӗнче яланах районтан килнӗ халăх кӗпӗрленсе тăрать. Хапхаран вӗҫӗмсӗр машинă кӗрет, машинă тухать. Пурте пуҫлăхсем-ши кунӗпе катаччи чупакан ҫак ӗҫлӗ ҫынсем? Хăшӗ вăхăт тупӗ-ши вӗсенчен Архип Лукичпа пăртак та пулин пуплесе ларма? Пурте ытла васкаҫҫӗ-ҫке. Колхозсене часрах ҫитесшӗн-ши е хуларах кирлӗрен те кирлӗ ӗҫсем пур-ши? «Саншăн пур пӗрех мар-и?— хăтăрса илчӗ старик хăйне.— Эс урлă-пирлӗ пăхкаласа ан ҫӳре, хăвăн ӗҫӳпе ӗҫлекен ҫыннуна шыраса туп та калаҫ унпа. Кансӗрлесе ҫӳрекенсем кунта сансăр та нумай».

Вăл ҫапла турӗ те. Вăрăм коридорти пӗр алăк патне ҫитсе чарăнчӗ те ăна майӗпен шаккарӗ.

— Кӗрӗр, тархасшăн,— илтӗнчӗ шалтан темле начальникӗн хулăн сасси. Шевле, пӳлӗме кăштăртатса кӗрсе, сӗтел хушшинче ларакан ҫынна сывлăх сунчӗ. Ҫавăнтах хăй кама шыранине пӗлтерчӗ.

— Вăл ҫук халь. Мускава кайнă.

— Эсир кам пулатăр апла?

— Ун вырăнне юлнă ҫын. Ӗҫ пурччӗ-и сирӗн?

— Ӗҫ пурччӗ. Калаҫасшăнччӗ унпа.

— Тархасшăн. Мӗн калас пеккине мана калăр. Пулăшма май пур таран пулăшăп,— терӗ сӗтел хушшинче ларакан пуҫлăх.— Хăш районран, хăш ялтан-ха эсир?

Архип Лукич хăй ăҫтан килнине, ку хулана мӗнле майпа ҫакланнине пӗлтерчӗ. Куна илтсен, пуҫлăх пит-куҫран чӗрӗлнӗ пек пулчӗ.

— Новосильтен таврăнатăр апла? Интереслӗ, интереслӗ.

— Ҫавăнта ҫитсе куртăм.

— Мӗн лайăххи пур унта? Кăтартса ҫӳрерӗҫ-и сире станци участокне?

— Директорӗ хăй кăтартса ҫӳрерӗ. Асăн-

малăх кĕнеке парса ячĕ тата. Акă...— Шевле пĕчĕк чăматанĕнчен кăвак хуплашкаллă кĕнеке кăларчĕ, ăна пуçлăх умне сĕтел çине хучĕ.

— Питĕ интереслĕ. Кур-ха, кĕнекесем кăлараççĕ! Хăйсен сăнавĕсене çырса тултарнă ĕнтĕ кунта. Çапла-и?

— Çапла пулма тивĕç. Эп çул çинче кăшт çеç пăхкаларăм-ха.

— Эх, вуласа тухасчĕ! Мĕнле, пĕр каçлăха панă пулăттăр-ши эсир ăна вуласа пăхма?

— Мана шел мар,— терĕ Архип Лукич.— Кĕçĕр вуласа тухăр та, ыран автовокзала каяс умĕн кĕрсе илĕп.

— Ыран каяс тетĕр апла?

— Мĕн туса пурăнас ман кунта? Ахаль те ĕç вăхăчĕ пулнине пăхмасăр пĕр эрне çӳрерĕм тĕнче тăрăх. Кĕнеке тĕлĕшĕнчен эп сире, юлташ, çапла сĕннĕ пулăттăм: çырăнса илĕр вăл брошюрăна Новосиль станцинчен. Ним мар ярса параççĕ. Çыру çӳрететĕр пулĕ-çке вĕсемпе?

Пуçлăх темшĕн аванмарланнă пек пулчĕ.

— Çӳретмен.

— Ан тĕлĕнтерĕр! Хăш станципе çыхăну тытатăр вара?

— Ман шутпа, нихăш станципе те çыхăну çук пирĕн. Тем тесен те, эп пĕлместĕп. Пирĕн çĕнĕ начальник çырса янă пулсан кăна. Вăл та аса илмен-тĕр ăна...

— Ну, куна эп ăнланмастăп, ырă çыннăм,— терĕ Шевле.— Пиртен инçе те мар çырма-çатрасем тĕпчекен, вĕсемпе кĕрешекен станци ĕçлет, вĕсем çав станципе çыхăну тытмаççĕ. Ун пек юрать-и вара? Эппин, кам та пулин пулса курнă пуль сиртен Новосильте?

— Ăна та илтмен. Тахçан ĕлĕкех ял хуçалăх институчĕн доценчĕ Семен Иванч кайса килнĕччĕ, ун хыççăн пĕр-пĕр специалист кайнине астумастăп. Кăна çырсах хурам-ха. Чăнах, Новосиле е урăх станцине çитсе курмаллах пирĕн...

— Çырса хурăр, унсăрăн манса кайăр тата,— куçкĕретех йĕкĕлтерĕ Архип Лукич.— Çакна ĕнтĕ сире ман пек ялтан килнĕ çын каламалла пулнă, ăна хăвăр тĕллĕн чухласа илме пултарайман, çапла-и?

Пуçлăх сăмах тупса калаймарĕ. Хăюллă старик килсе кĕчĕ ун патне! Ку этем пуçлăхсемпе сахал мар тавлашкаланă пулас, ав асăлисене питлесе калаçма та пĕлет. Чармалла мар-и ăна? Унсăрăн вăл виçерен те тухса кайĕ.

— Эс ытлашши ан шăртлан,— терĕ пуçлăх кăшт чĕнмесĕр ларнă хыççăн.— Кунти çынсем хăйсен ĕçне сансăрах пĕлеççĕ пулĕ-ха. Ун пекех ухмах этемсене лартса тултарман пуль пирĕн организацине. Тепĕр тесен, эс пире вăрçма кам пулатăн — Мускавран килнĕ инспектор-и е мĕнле те пулин ревизор?

— Çук, çук, эсир ан кӳренĕр,—йăваш сасăпа каларĕ Шевле.— Эп сире вăрçма та, вĕрентме те килмен. Пĕлетĕр-и, мĕншĕн кĕнĕччĕ эп сирĕн пата?

— Мĕншĕн?— çиллессĕн ыйтрĕ сĕтел хушшинчи пуçлăх.

— Хамăн ухмах пуçăмпа сĕнсе пăхасшăнччĕ: Чăваш республикинче çав Новосильти пек станци туса хума май çук-и? Çырма-çатри Орел таврашĕнчи пек мар йышлă пирĕн, ĕçĕ нумай тупăнмалла, станци тăвас тесе тăрăшса пăхман-и эсир халиччен?

— Тăрăшнă, нумай тăрăшнă. Темĕн чул докладной çырнă вăл тĕлĕшрен, анчах усси çук.

— Ма усси çук?

— Уçмаççĕ станци. Наукăсен Академийĕ çумĕнчи биологи уйрăмĕ вăрах тăсать ку ыйтăва.

— Лайăхрах ӳкĕтлесен? Тĕплĕнрех ăнлантарса парсан, мĕнле? Уçмĕç-и?

— Докладнойсем манра мар,— терĕ пуçлăх.— Кăтартнă пулăттăм та эп сире. Вăрçă умĕн те, вăрçă хыççăн та пĕр купа хут çырнă вăл станци пирки. Станцийĕ паян кун та çук.

— Сирĕн шутпа кирлĕ пек-и ун пек станци пирĕн таврара?

— Калама çук кирлĕ. Анчах пиртен килмест-çке ăна уçасси.

— Камран килет?—тĕпчеме пăрахмарĕ Архип Лукич.

— Пуçлăхсенчен килет.. Наукăсен Академийĕнчен килет, вĕсем темле институт çумĕнче тăвасшăнччĕ ăна.

— Ну, апла пуçлăхсемпе хытăрах калаçмалла сирĕн. Ăнлантарса памалла вĕсене, критиклесе илмелле. Мĕнле те пулин ĕç тума тытăнтăн пулсан, яланах çине тăмалла, юлташăм, куçа кĕмелле, çирĕм çул хушши докладнойсем çырса лармалла мар. Пирĕн колхоз председателĕ пек: тупнă пăшăрханмалли япала, çырма-çатрашăн эрленсе çӳретĕн, унпа кĕрешиччен лайăх çĕр çинче чипер тыр-пул çитĕнтересчĕ, тесе ларма юрамасть. Çырма-çатра вăл пирĕн республикăшăн хăйне майлă проблемă, уçнă çерем. Пирĕн условире çырма-çатрасемпе тип варсене хакламасăр тăни патшалăх умĕнче сăтăрлă ĕç тунипе пĕрех...

— Ытлашши калаçмасна, тăванăм? Чĕлхӳ пит çивчĕ-çке сан...

— Çук, пĕрре те ытлашши мар. Ĕлĕкрех тĕрĕссине калама хăраса тăраттăмăр. Халь уншăн тĕрмене лартмаççĕ.

— Ну, стари-ик!— тĕлĕннипе сăмаха тăсса каларĕ пуçлăх.— Ĕçре мĕнлине пĕлместĕп те,

сăмах çаптарма пултаратăн вара. Аслисем патне илсе каясчĕ сана, çавсемпе калаçтарасчĕ.

— Мĕн, хăраса тăрать тетнем? Вĕсемпе те çаплах сăмахлатăп. Тӳрех калатăп: эсир сырма-çатрасемпе кĕрешесси çинчен тĕрлĕ решенисем нумай йышăнатăр та çав, анчах вăл решенисен сирĕн чылайăшсем хут çинче кăна юлаççĕ, тетĕп.

— Эс унта станци пирки кала, станци питĕ кирлĕ пире,— хистерĕ пуçлăх.

— Ун пирки те çавнах калатăп: Новосильти пек станци тăвас пулсан, ăна çĕнĕ йышши машинăсем ытларах парас пулсан, çав станци темиçе район çĕрне хăех юсаса парать, тетĕп. Ун ĕçне кура, колхозсем мĕнле кĕрешме пуçлаççĕ тата сырма-çатрасемпе! Мĕн, тĕрĕс мар-им?

— Тĕрĕс, Архип Лукич, тĕрĕс. Нумайăшсем пирĕн республикă ял хуçалăхне эрози мĕнле сиен кӳнине хакламаççĕ-ха. Вăхăт çитĕ, ун çинчен калаçма пуçлĕç, анчах халлĕхе хакламаççĕ. Çавна пула эпир кашни çул туса илме май пур пиншер тоннă тыр-пула шывпа юхтарса яратпăр...

— Эп уншăн мĕн чухлĕ вăрçатăп ялта...

— Сире ăнланатăп. Новосиле ытахальтен тухса кайман ĕнтĕ эсир. Ну, унти микролимансене куртăр-и?

— Куртăм. Вĕсене хамăр колхозсенче те тума пуçлатпăр. Сырма-çатрасене пĕтерме май пур, эрозие пĕтерме май пур. Новосильте пулнă хыççăн эп кун пирки такампа сиксе тавлашма та хатĕр.

— Ну, мĕнле, аслисем патне чăнах та каятни?— куларах ыйтрĕ пуçлăх.

— Пĕччен аван мар,— терĕ Шевле.— Тата халь вăхăчĕ те çавăн пек-çке, авăн çапнă вăхăт. Пĕрле тесен, кайма пултаратăп. Эсир хăвăрпа эрози картти илĕр. Пуçлăхсем хăйсен куçĕпе курччăр пирĕн çĕршыв мĕнле сырма-çатраллă иккенне.

— Ăна вĕсем машинăпа çӳренĕ чух та курса тăраннă пулĕ-ха?

— Çук, карттă кирлĕ. Пур пуль сирĕн ун пек япала?

— Ăна лайăхах пĕлместĕп те,— стена çинелле пăхкаласа хуравларĕ пуçлăх.— Ав Совет Союзĕн картти пур пирĕн. Чăваш республикин картти пур. Çитмест-и сана?

— Эрози картти ăçта?

— Ăна куçпа курман. Тен, тăваççĕ пуль...

— «Тен, тăваççĕ пуль». Çук, тумаççĕ! Ку таранччен те туман пулсан, мĕн калаçмалли унта! Пасăрхи пек тӳрĕ каласан, каллех çиленетĕр ĕнтĕ эсир. Урăхла калаçма пĕлмелле те мар сирĕнпе. Эп тĕшмĕртнĕ тăрăх, ку учреждени ĕнтĕ сырма-çатрасемпе, тип варсемпе кĕрешекенсен штабĕ шутланать. Çапла-и?

— Ну, çапла тейĕпĕр.

— Сирĕн эрози картти те çук. Урăхла каласан, эсир пирĕн хăш тĕлте мĕнле сырма-çатра пуррине те тĕплĕ пĕлместĕр. Вăл карттăсăр эсир чăлахсем пекех пурăнатăр! Ай-ай, ĕçлеççĕ те, тупата! Пĕр çулталăклăх, пилĕк çуллăх е çичĕ çуллăх план пур-и тата?

— Мĕн тума кирлĕ вăл сана? Ма пурне те сана кăтартмалла вара пирĕн?— чăнах та каллех шăртланма тапратрĕ пуçлăх (вăл, Шевле пекех, тавлашнă май пĕрре «эсĕ», тепре «эсир» тесе калаçрĕ).

— Ахаль çеç ыйтатăп, ара. Мана вăл ним тума та кирлĕ мар. Сире хăвăра кирлĕ.

— Пирĕншĕн пит тăрăшатăн-çке эс, старик.

— Ну, ытлашшине каçар, çитменнине çитер, теççĕ чăвашсем. Çавăн пек пултăр. Сынсем лайăх ĕçленине курса таврăннăранши е нервăсем кивелнĕрен-ши, чăнах хивререх калаçрăм сирĕнпе. Айăп ан тăвăр ĕнтĕ. Малтанах ун пек пуплеме хушмаççĕ те-ха ăна. Юрĕ, тепринче туслăн сăмахлăпăр. Эп каям-ха, эппин.

— Ăçта?— тытса чарас пек, хыттăн ыйтрĕ пуçлăх.

— Ăçта пултăр? Эсир каланă çĕре — аслисем патне.

— Каятăнах апла?

— Кĕрсе тухас. Ху астартăн та, халь «каятăнах апла» тесе ыйтатăн.

— Ну, çапах та чипертерех калаç эс вĕсемпе, Архип Лукич,— асăрхаттарчĕ пуçлăх алă тытнă майăн.— Ытла чĕрре ан кĕр. Вĕсен сырма-çатрасемсĕр те ĕç нумай.

— Э-э, юрĕ-çке,— терĕ Шевле.— Эп çут тĕнчере санран ытларах çăкăр çинĕ, мĕнле калаçмаллине чухлăпăр унта.

— Пирĕн çинчен мĕн калатăн ĕнтĕ унта? Пире те вăрçатна?— пĕлесшĕн пулчĕ пуçлăх.

— Вăрçма, ятлама эп прокурор мар. Тата эпĕ сирĕн ĕçе пĕлсех те каймастăп. Анчах мухтама та сăлтав çук сире. Хăвăр ĕçĕре ырласса ан кĕтĕр. Эппин, пирĕн еннелле çитсе курăр, ырă пуçлăх. Тамăк сырми пур унта пирĕн, сырма-çатра нумай. Кĕркунне Тамăк сырминче пĕве тăвас тетпĕр-ха. Çитсе курăр. Сăра лайăх тăваççĕ пирĕн енче, кăпăкланса тăракан чăваш сăри ĕçтерĕпĕр...

Ку сăмахсене Шевле питĕ вырăнлă каларĕ темелле. Вĕсем хăй тӳрккессĕн калаçса çилентернĕ сын кăмăлне чылаях çемçетрĕç. Пуçлăх, Архип Лукича тепĕр хут алă тытса, вăрăм коридор вĕçне çитичченех ăсатса ячĕ.

## 2

НИКОДИМ ПĔРКУНАХ АСĂРХАРĔ: амăшĕ кашни каç темле хулăн тетрадь вулать. Ку тетраде вăл кĕнеке çӳлĕкĕ çинче те, шкапри хутсем хушшинче те, чăланта та курман. Туслă пурăнакан пĕр-пĕр хĕрача хăйĕн дневникне пăхса тухма сĕннĕ-тĕр-ха е амăшĕ Архип Лукичăн ял хуçалăх техникумĕнче çырса пынă конспекчĕсене туртса кăларнă.

Тепĕр кун ирхине Никодим, амăшĕ вулакан тетраде шыраса, аслашшĕ пӳлĕмĕнчи сĕтеле тĕрĕслесе пăхрĕ. Старик сĕтел сунтăхĕсенчен пĕрне питĕрмесĕрех хăварнă иккен. Унта çиелтех виçĕ хулăн тетрадь выртаççĕ. Ячĕсем çук. Хуплашкисем çине «Пĕрремĕш тетрадь», «Иккĕмĕш тетрадь», «Виççĕмĕш тетрадь» тесе паллă тунă. Мĕскер-ши ку? Дневник-и, çутçанталăка сăнаса пыни-и е çамрăк чухне çырнă роман?

«Кун хыççăн вара мана агрономран кăларчĕç. Эп хам сисмен çĕртенех саботажник, çӳлтен паракан кăтартусене ĕçе кĕртме кансĕрлесе тăракан çын, колхоз стройне вăрттăн сиен кӳрекен этем пулса тăтăм. Чăнах, айăплама нимле сăлтав та тупаймарĕç, кĕркунне эп тӳрре тухрăм: вĕсем хушнă вăхăтра акнă тырă шăтмарĕ, лачакарах пĕтрĕ, пирĕн колхозăн тырри йăтăнса пулчĕ. Анчах ĕнтĕ ку ман пурнăçа улăштарма пултараймарĕ. Эс пур пĕрех шанчăксăр çын, терĕç. Кайкаласа çӳрерĕм — ниçта та ĕçе илмеççĕ. Юрать, ун чухне учительсем çитместчĕç. Районти çут ĕç пайĕ кӳршĕ ялти пуçламăш шкула учитель туса ячĕ. Техникум пĕтернĕ эпĕ, вăтам пĕлӳ пур, нимĕн те тăваймастăн.

Вăл шкулта ун чухне питĕ ырă çын ĕçлетчĕ — Яруткин. Ман хăраххăм, сад ĕçне юрататчĕ хăй. Мана лайăх пĕлет, ĕçе илме нимĕн чухлĕ те хăрамарĕ. Эпир малтанхи çулах шкул пахчинче сад ĕрчетме тытăнтăмăр. Ун умĕн Яруткин шкулта питомник пекки тунăччĕ, çав питомникре Мичуринăнни йышши пан улми йывăççисем ӳсетчĕç. Вĕсене эпир кашни çул сыпаттăмăр, культурлă сортсене ялти çынсене нумай валеçеттĕмĕр.

Яруткин Иван Владимирович Мичуринпа çыру çӳрететчĕ. Вăрлăхсем ыйтса ярать унран, чăваш çĕршывĕнче сад ĕçĕ мĕнле сарăлса пыни çинчен пĕлтерсе тăрать. 1934 çулта Козлов хулинче (халĕ Мичуринск) мичуринецсен канашлăвĕ пуçтарăнчĕ. Канашлăва Яруткина та чĕнсе ячĕç. Пирĕн шкул пуçлăхĕ пĕччен каясшăн мар, Козлов хулине экскурси шучĕпе ачасене те илсе каясшăн. Ачасемпе пĕччен йывăр ăна, çавăнпа та вăл хăйĕнпе пĕрле мана та илме шутлать. Мĕн пур ушкăн валли укçа пуçтаркаларăмăр та, икĕ ещĕк пан улми илсе, Козлов хулине тухса кайрăмăр.

Мускавра пирĕн Яруткин кĕтмен çĕртен чирлесе ӳкрĕ, вăл сывалассине кĕтсе, эпĕ ачасемпе тĕрлĕ выставкăсем, музейсем тăрăх çӳретĕп. Темиçе кунтан шкул пуçлăхĕ сывалнă пек пулчĕ, анчах Козлов хулине эпир канашлу пĕтнĕ тĕле çеç çитрĕмĕр. Делегатсем пурте тенĕ пекех саланнă ĕнтĕ, Иван Владимирович верандă евĕр çап-çутă та пысăк пӳлĕмре ют çĕршывран килнĕ темле ученăйпа каласса ларать. Кайран пĕлтĕмĕр, ку ученăй Çурçĕр Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Илианăри университет профессорĕ Герман Джозеф Меллер пулнă иккен. Çынни хăй, тумтирне пăхсан, пуп пекех, тăсланкăскер, питĕнчен шуранкă, çу сĕрнĕ çӳçне кукша çамки урлă тураса хунă.

Эпир шкул ачисемпе картлашка патне çитсе тăрсан, Мичурин вырăнтан хускалчĕ те кĕленче алăкне яри-и уçса ячĕ.

— Ăçтан килнĕччĕ, юлташсем?— терĕ вăл, пире Яруткинпа иксĕмĕре алă парса.

— Чăваш республикинчен.

— Яруткин мар пулĕ те?

— Çавă, Иван Владимирович. Ку ак пирĕн учитель, сад ăсти.

— Питĕ хавас сире курма, питĕ хавас. Ак сĕтел хушшине иртсе ларăр.

Иван Владимирович, йăл-йăл кулкаласа, Америкăран килнĕ хăнана хирĕç пырса ларчĕ. Яруткин кăчăк туртса паллă пачĕ те, ачасем верандă пек пӳлĕме икĕ ещĕк илсе кĕчĕç.

— Ку мĕскер-ха сирĕн?— ыйтрĕ ученăй.

— Пан улми, Иван Владимирович. Эсир ярса панă вăрлăхран ӳссе пулнă çимĕçсем.

Яруткин çиелти çӳхе хăмасене туртса уçрĕ те икĕ ещĕке те Мичурин çывăхнерех куçарса лартрĕ. Ученăй, пĕшкĕнсе, вĕсенчен темиçе пан улми илчĕ, ку пан улмисене енчен-енне çавăркаласа пăхрĕ.

— Пипин-шафраннăй! Пăхăр-ха, ман пахчаринчен те чипертерех. Каласа парăр-ха, мĕнле ӳстертĕр вăл пан улми йывăççисене?

Яруткин кĕскен шкул сачĕ çинчен, унта Мичурин сорчĕсене мĕнле ӳстерни çинчен пĕлтерчĕ.

— Маттур çынсем апла эсир пурсăр та. Кур-ха, епле тăрăшса ĕçлеççĕ! Шкул пахчинче те унашкал пан улмисем туса илме пулать иккен. Савăнтартăр эсир мана.— Çав сăмахсенех вăл ачасене те каларĕ:— Пултаратăр, ачасем! Пысăк ĕç пуçланă эсир. Ӳлĕмрен те ан пăрахăр ăна. Сире хăвăр пултаруллă ĕçĕрте ăнăçу сунатăп,— терĕ. Америкă ученăйне, Герман Джозеф Меллера, Иван Владимирович пирĕн куç умĕнчех çапла каласа хучĕ:— Ак эсир пасăр мана Российăра ним сас-

хурасăр пĕтессипе хăратрăр. Шутласа пăхăрха, ăçтан пĕтем-ха эпĕ? Ав ĕлĕк чи тĕттĕм кĕтес пулнă чăваш çĕршывĕнче те ман ĕçе сарса, малалла туса пыраççĕ. Çук, эп тăрăшни харама кайма пултараймасть...

Вĕсен калаçăвне эпир Яруткинпа çапла ăнлантăмăр: Меллер Иван Владимирович Мичурина, суйса та илĕртсе, Америкăна илсе каясшăн пулнă курăнать. Ун пирки кайран хаçатсем те çыркаларĕç. Анчах Мичурин пек чаплă ученăй тăван çĕршыва пăрахса çичĕ юта тухса каять-и?

...Юлашки вăрçăра пулнă май эпĕ ют çĕршывсенче чылай çӳрекелесе куртăм. Çĕнтерӳ кунне мана Берлин çывăхĕнчи пĕр пĕчĕк хулара кĕтсе илме лекрĕ. Астăватăп, пĕррехинче эпир сăра завочĕн хуçи патнĕ кĕрсе кайрăмăр. Стена çинче унăн пысăк карттă çакăнса тăрать — тĕнчере ăçта сăра тунине кăтартакан карттă. «Чăваш республикĕ» тенĕ вырăнта «3» цифрă тăнине асăрхарăм та хуçаран ыйтатăп:

— Ку мĕне пĕлтерет?— тетĕп.

— Вăл çав çĕршыв хăмла ӳстерессипе тата сăра тăвассипе тĕнчипе виççĕмĕш вырăн йышăннине пĕлтерет,— хуравлать нимĕç.

— Пĕрремĕшпе иккĕмĕш вырăнта камсем?

— Нимĕçсем тата чехсемпе словаксем.

Малтан ĕненессĕм те килмерĕ. «Питĕ пĕчĕккĕ-çке пирĕн республикă, ăçтан виççĕмĕш вырăн йышăнтăр вăл?»— тетĕп. Кайран шутласа пăхрăм та, тĕрĕс пек туйăнчĕ. Чăнах та, пирĕн кашни килтех сăра тăваççĕ-çке. Хăмла та нумай ӳстеретпĕр эпир.

Тепĕр тĕрлĕ карттă эп ниçта та курман: чăваш çĕршывĕ сад ĕрчетессипе тĕнчере е хамăр Совет Союзĕнче миçемĕш вырăн йышăнать-ши? Халь малти вырăнтах мар-тăр эпир, анчах вăрçăччен тем тесен те чи паллă республикăсенчен пĕри пулнă.

Вăрçă пуçланиччен пĕр-ик çул малтан манăн хам ĕçпе Хусана кайса килмелле пулчĕ. Канашра пуйăс çине лартăм та чӳречерен савăнăçлăн пăхкаласа пыратăп. Илтетĕп, çынсем (пассажирсем ĕнтĕ) пурте Вăрмар станцийĕ пирки ыйтаççĕ. «Мĕн пулнă вара Вăрмарта? Ма пурте унта часрах çитме васкаççĕ?»— тетĕп. Станцине çитсе чарăнтăмăр та, çынсем миххи-миххипе пан улми йăтма тапратрĕç. «Э-э, кунта пан улми йӳнĕ иккен», тетĕп. Вăрмар хыççăн пассажирсем Тĕрлемес станцине ыйтма пикенчĕç. Чеерехисем, ку çулпа халиччен çӳресе курнисем, Вăрмарта пан улми нумай та туянман. Вĕсем ăна Тĕрлемесре ытларах илсе тултарма шутлаççĕ: унта пан улми ниçтинчен те йӳнĕ иккен. Хусана çитрĕм, пасар тăрăх çӳретĕп — пан улми сутакансем пурте тенĕ пекех чăвашсем. Чăваш мар пулсан та, вĕсем Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Вăрмар, Канаш районĕсенчен килнĕ. Çапла, ун чухне пирĕн пан улми хамăра çеç мар, кӳршĕсене те тăрантарнă.

1941 çулхи шартлама сивĕ садсене пĕтермеллипех пĕтерсе тăкрĕ. Вăл çулхи инкеке пулса çитнĕ тыр-пула хăрушшăн пăр çапнипе е чăтлăх вăрмана темле асар-писер çил-тăвăл аркатнипе çеç танлаштарма пулать. Миçе гектар сад, миçе гектар çырла пахчи пĕтмерĕ-ши вăл çулхине! Ал айĕнче цифрсем пулсан,эп çакна танлаштарса пăхăттăм: 1940 çул тĕлне пирĕн республикăра мĕн чухлĕ сад пулнă тата çав садсене паян куна миçе гектара çитернĕ? Эпир халĕ те 1940 çулхи цифрăна хăвалатпăр-ши е унтан иртсе кайнă-ши? Иртсе кайнă пулсан, тем пекехчĕ, анчах кӳршĕ ялсене тухса çӳренĕ тăрăх ку çапла иккенне пĕрре те ĕненес килмест-çке манăн.

...Çак сăмахсене çырса хутăм та васкавлăн хулана çутçанталăка сыхлакан обществăн конференцине тухса кайрăм. Эпĕ, ялта пурăнса никама шанман çын пулса кая пуçланă иккен, айванла: пĕр хам çеç çутçанталăк илемĕшĕн кĕрешетĕп, тесе шутлама тытăннă. Тĕнче пĕр вырăнта тăмасть-мĕн, ыттисем те ĕçлеççĕ, пиртен нумай лайăхрах ĕçлеççĕ. Конференцире çынсем калаçнине чунтан хĕпĕртесе итлесе лартăм. Садсем, çырла пахчисем енĕпе эпир 1940 çултан иртсе кайнă! Ун чухне пирĕн республикĕпе вунă пин сада яхăн пулнă, халĕ вĕсем вун икĕ пине çитнĕ. Нумай садсем çамрăк-ха пирĕн, вĕсем пан улмипе ытти çимĕç параймаççĕ, анчах калăпăшпе илсен, садсем халь ун чухнехинчен ытларах. Мĕн калассси пур, ку мана савăнтармаллипех савăнтарчĕ.

Çапах та эпĕ хам мĕн шутланине ним пытармасăр çырса хурасшăн. Вăрçă хыççăнхи çулсенче эпир сад ĕрчетес енĕпе начар ĕçлерĕмĕр. Каярахпа ăс кĕчĕ пире, вăй та ытларах пуçтарăнчĕ пуль пирĕн, анчах малтан 1941 çула вăрçса вăхăта нумай иртертĕмĕр. Йăлана кĕнĕччĕ: сад ĕрчетесси çинчен сăмах пуçарсан, тӳрех хамăра инкек кӳнĕ сивĕ хĕл çине переттĕмĕр. Çавăн чухне нумай пĕтрĕççке пан улми йывăççисем, унтанпа сад ĕçне ниепле те йĕркелесе ярайманстпăр, теттĕмĕр. Эсир çакăн пеккине курнă пуль: пĕр-пĕр ват çын йывăр чирпе хăрушшăн асапланса выртать те кайран çав чире тем вăхăтчен те манма пултараймасть. Ялан асăнать ăна, сывалнă чух та сывалса çитсен те, ун пирки çеç сăмахлать. Эпир те хамăра çав йывăр чирленĕ ват çын пекех тытрăмăр. Пирĕн ун пек мар, çамрăк çын пек тытмалла пулнă. Яш-кĕрĕм, йывăр чирлесен те, ăна çийĕнчех манать, час-

рах вӑй илсе, ӗçе пикенме, юлнӑ пек ӗçне туса çитермеваскать.

Пӑртак тӑрсан, ыйхӑран вӑраннӑ пек пултӑмӑр. 1941 çулхи инкеке вӑрçса ларни çителӗксӗр, вӑл хамӑра-хамӑр йӑпатни çеç пулать, пирӗн малашлӑх çинчен шутламалла, терӗмӗр курӑнать. Вара лозунг сиксе тухрӗ: кашни колхозӑн сад пулмалла, çырла пахчи пулмалла. Лозунгӗ начар мар-ха вӑл, анчах ӑна хӑш-пӗрисем тӗрӗс ӑнланмарӗç-ске. Пӗр гектар çине, ик-виç гектар çине пан улми йывӑççисемпе ытти йывӑçсем лартса хӑвараççӗ те часрах рапорт параççӗ: эпир ӗçе тытӑнтӑмӑр, пирӗн колхозӑн сад пур, çырла пахчи пур. Сачӗ хӑйсен правлени çурчӗ умӗнче кӑна. Вӑл ӳсмест, сарӑлмасть, колхоза пӗр пус усӑ та памасть. Районсене кайса çӳрӗр-ха, унта эсир пуканелле садсене нумай тӗл пулатӑр. Çук, пире ун пек садсем кирлӗ мар, вӑрман пек кашласа ларакан, колхоза пысӑк тупӑш паракан садсем кирлӗ.

Иртнӗ эрнере ман патӑмра хамӑр çывӑхри «Прогресс» колхозран пӗр çын пулчӗ. Эп вӑл çынна, Иван Андреевич Андреева, тахçантанпах паллатӑп-ха. Вӗсен колхозӗн сачӗ мӗн пысӑкӑш тетӗр? 93 гектар! Украинӑшӑн, Молдавишӗн е Курск облаçӗшӗн темех мар пуль 93 гектар, анчах пирӗн республикӑшӑн халлӗхе пысӑк-ха. Сӗнтӗр районӗнче манӑн тепӗр тус пурӑнать, Башмаков хушаматлӑскер. Вӑл виноград ӳстерет, арбуз акса тӑвать, сачӗ унӑн утмӑл виçӗ гектар. Канаш çывӑхӗнчи «Мотор» колхозӑн та пысӑк сад пур — 90 гектар, çав районри «Совет Çарӗ» колхозӑн— 70 гектар, Патӑръел районӗнчи «Гвардеец» колхозӑн — 60 гектар. Патӑръел районӗнчи «Рассвет» колхозра темиçе çул каялла сад тума шутланӑ. Вӗсем ик-виç гектартан пуçламан, тӳрех 61 гектар çине пан улми йывӑççипе тӗрлӗ çырла йывӑççи лартса хӑварнӑ.

Питех кирлӗ пулсан, эпӗ тата çич-сакӑр колхоз ятне асӑнма пултаратӑп. Çич-сакӑр колхоз ятне çеç. Чылайӑшне çитсе те курнӑ вӗсене, унти сад ӑстисене те пӗлетӗп. Ытти колхозсенче вара садсем пӗчӗк. Вӗсенчен хӑш-пӗрне ячӗшӗн çеç тунӑ. Мӗн, условисем çук-и колхозсен пысӑкрах сад тума? Пирӗн республикӑра сад ӗрчетме условисем питӗ килӗшӳллӗ: климат лайӑх пирӗн, çӗр (тӑпра) юрӑхлӑ, рельеф тесен, ӑна юри сад ӗрчетме туса панӑ тейӗн.

...Хӑш-пӗрисем, хӑйсен наянлӑхне тӳрре кӑларас тесе, çапла каласма пӑхаççӗ: пирӗн республикӑн хуçалӑх специализацийӗ пур, эпир пӗтӗм вӑя выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе хуратпӑр, теççӗ. Çавӑнпа вӗсен садпа аппаланма вӑхӑт та çук имӗш. Кунпа килӗшме çук. Тӗрӗс, тӗп ӗç пирӗн выльӑх усрасси, тӗш тырӑ туса илесси. Анчах сад е çырла пахчи, туни çак ӗçе чӑрмантарать-и вара, вӗсем, çак задачӑсем, пӗр-пӗринпе килӗшсе тӑма пултараймаççӗ-и? Пултараççӗ. Килӗштермелле те. Пурӑна киле сад ӗçӗ пирӗн колхозсемшӗн, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси пекех, вӑйлӑ тупӑш паракан ӗç пулса тӑмалла.

Хулара эпӗ çӗнӗ хыпар пӗлтӗм: патшалӑх пирӗн совхозсене сад ӗрчетес енӗпе пысӑк çӑмӑллӑх пама пуçланӑ. Йывӑççем ӳссе çитсе пан улми е ытти çимӗç паракан пуличчен совхозсем ку ӗçре тунӑ тӑкаксене патшалӑх йӑлтах хӑй çине илет, çав тӑкаксене саплама бюджетпа палӑртсах укçа уйӑрса парать. Ан ӳркен çеç, йывӑç ларт, сад ӗрчет. Кунашкал лайӑх постановленипе усӑ курмасан, мӗнпе усӑ курмалла совхоз çыннисен?

Конференцие кайсан эпӗ пӗр учреждение хамӑн авалхи туспа, Алексей Васильчпа, нумайччен калаçса лартӑм. Садсемпе çырла пахчисем пирки сӑмах хускатсан, вӑл мана тӗлӗнмелле хитре шухӑш каласа хучӗ.

— Пирӗн республикӑри мӗн пур çӗр лаптӑкӗн икӗ процентне садсем йышӑнмалла,— терӗ вӑл.— Ман ӗмӗт çавӑн пек. Тума пулать-и ӑна?

— Сан шутпа мӗнле?— терӗм эпӗ.

— Тума пулать. Садсене çитмӗлмӗш çулсем тӗлнех икӗ процента çитерме пулать.

Эпӗ халь Алексей Васильч сӑмахӗсене часчас аса илетӗп. «Эх, çав ӗмӗте пурнӑçа кӗртсен!»— тесе шутлатӑп вара хам тӗллӗн.

...Тӗрлӗ çӗртен килен-каянсем чӑваш çӗршывне çырма-çатраллӑ республикӑ, теççӗ. Çулпа е хир тӑрӑх пӗр çухрӑм каятӑн — темиçе тип варпа çырма-çатра урлӑ каçмалла, тепӗр çухрӑм каятӑн — тата темиçе çырма-çатра урлӑ каçмалла. Кӑнтӑрти Паснапа Карлӑ шывӗсенчен пуçласа Атӑл патне çитиччен çапла. Миçе тип вар, миçе çырма-çатраши республикипе? Ӑна паян кун никам та пӗлмест. Ӗнентерсех калатӑп: специалистсем те пӗлмеççӗ. Чуххӑмӑн калама пултараççӗ сире, кам та пулин пӗр-пӗр тетраде, справочнике е хальтерех тухнӑ кӗнекене уçса тӗрӗс цифрӑсем калассине ан та кӗтӗр. Эп хулана кайсан хамӑн çав енӗпе ӗçлекен пӗр тусӑмран ыйтса пӑхнӑччӗ. Вӑл хӑрушӑ цифрӑсем063 каларӗ: эрози тивнипе пӑсӑлса пыракан çӗр çав тери нумай пирӗн, çырма-çатра шучӗ те йышлӑ, вӗсене пула усӑсӑр выртакан çӗр лаптӑкӗ те калама çук пысӑк. Эп унран çапла ыйтрӑм: «Çапах та кала-ха, тип варсемпе çырма-çатрасен шучӗ чакса пырать-и е ӳссе пырать?»— терӗм.

Вӑл мана пӗр кулмасӑр çапла тавӑрчӗ: «Ӳссе пырать, Архип Лукич, çулсеренех ӳссе пырать»,— терӗ. «Мӗнле апла, вӗсем чакас

вырӑнне йышӑлӑнса пыраҫҫӗ-и? Тӗрӗс мар шута илетӗн пулӗ эсӗ, пуҫлӑхсене хӑратас тесе, ӳстерсе ҫыратӑн пулӗ? Кун пек ытла тӗлӗнмелле пулса тухать-ҫке-ха»...

Вӑл мана итлесе пӗтересшӗн те пулмарӗ: «Чакарса ҫырнӑ тесен, килӗшӗттӗм санпа. Пӗлессӗн пулсан, ҫав сведенисенче цифрӑсене нумай пӗчӗклетсе кӑтартнӑ. Ӗненмесни?» «Ӗне нетӗп»,— терӗм эпӗ. «Пӗр ҫӗрте симӗс ҫерempе е вӑрман катипе хуплатпӑр ҫырма-ҫатрана, ҫав вӑхӑтра вӑл тепӗр ҫӗрте ҫӗнӗрен сиксе тухать. Вӑтам шутпа илсен, республикипе ҫулсерен 300—400 ҫырма-ҫатра хутшӑнса пырать. Эс, айван этем, ӳстерсе ҫыратӑн пуль, тетӗн. 1959 ҫулта КПСС Чӑваш обкомӗпе Министрсен Совечӗ «Республикӑра тӑпрана шыв ҫисе кайнипе кӗрешесси ҫинчен» постановлени йышӑннӑччӗ. Унта тӳрех кӑтартса панӑ: юлашки ҫичӗ ҫул хушшинче республикипе тип ҫырмасен лаптӑкӗ 6 пин гектар ытла ӳснӗ, хальхи вӑхӑтра ишӗлсе пыракан ҫырмасем 19 пин гектар шутланаҫҫӗ, тенӗ. Ак ӗненмесен вуласа пӑх, постановленийӗ хаҫатра тухнӑ»...

Мӗн ӗненмелле марри пултӑр унта? Ӗненетӗп, паллах.

Эпӗ чӑваш ҫӗршывӗнчи ҫырма-ҫатрасем пирки темӗн чухлӗ шухӑшланӑ, халӗ те шухӑшласа пуҫа нумай ҫӗмӗретӗп. Вӗсемпе кӗрешесси ҫинчен каярах ҫырӑп-ха, хаљ ҫав мур тӗпне кайса кӗресшӗ эрозипе ҫырма-ҫатрасен сӑлтавне шыраса пӑхар.

Пирӗн республикӑ Атӑл тӑрӑхӗнчи тӳпеме (сӑртлӑ вырӑна) йышӑнса тӑрать. Ку тӳпем ҫӳллӗшӗ тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ. Чи ҫӳллӗ тӗлте (Шӑмӑршӑ районӗнчи Ҫӗнӗ Чукал таврашӗнче) вӑл, Балтикӑ тинӗсӗпе танлаштарсан, 260 метра ҫитет, ытти ҫӗрте кӑшт сахалтарах. Ҫавӑн пек сӑртлӑ вырӑнсенче тапранса каяҫҫӗ те ӗнтӗ пирӗн юхан шывсем. Шучӗпе вӗсем питӗ те нумай. Манӑн тахҫанхи тусӑм, Сидор Васильевич, пӗчӗкрех юхан шывсемпе усӑ курасси ҫинчен кӗнеке кӑларма хатӗрленет. Вӑл, ӗҫе яланах тӗплӗ тума хӑнӑхнӑскер, пӗтӗмпех шута илнӗ: мӗн чухлӗ юхан шыв пирӗн, вӗсен юппнсем миҫе, ҫав юхан шывсемпе вӗсен юппнсем тӑрӑх миҫе арман лартнӑ, миҫе пӗве тунӑ. Эпӗ ун алҫырӑвӗнчи хӑшпӗр цифрсене те астӑватӑп. Паллӑрах юхан шывсемпе вӗсен юппнсем пирӗн 54 иккен, унсӑр пуҫне тата вӗттисем те чылай. Пурне те пӗрле илсен, ҫав юхан шывсем хамӑр республикӑ территорийӗнче 2100 километр тӑршшӗ ытла ҫул тӑваҫҫӗ!

Юхан шывсем нумай, анчах эпир вӗсемпе усӑ курма пӗлместпӗр-ҫке. Сиенӗ куҫ умӗнчех ак, ӑна пурсӑмӑр та туйса тӑратпӑр. Нумайӑшсем: юхан шыв ҫынна сиен кӳмест, вӑл усӑ ҫеҫ парать, теме пултараҫҫӗ. Апла мар ҫав, тепӗр чухне юхан шывсем вӑйлӑнах сӑтӑр тӑваҫҫӗ.

Чи малтан ҫакна хисепе илмелле: пирӗн юхан шывсем пурте тенӗ пекех питӗ хӑвӑрт юхаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, ҫырмисем вӗҫӗмсӗр аналла, сӑртран айлӑмалла анса пыраҫҫӗ. Ҫапла, Кӗтне шывӗ 74 километр тӑршшӗнче аналла 55 метр анать, Кӗҫӗн Пӑла 34 километр тӑршшӗнче 82 метра яхӑн анать! Кӗҫӗн Ҫавалпа Аслӑ Ҫавал та, ытти юхан шывсем те хӑвӑрт юхаҫҫӗ. Таҫта вӑрманта е сӑртлӑ вырӑнта пуҫланса кайнӑ пӗчӗк ҫырма теприн- пе пӗрлешет, унтан тата теприппе, вара кӗрлесе пысӑк шыва юхса тухать. Вӑйлӑ шыв хӑйӗн ҫулӗ ҫинче пӗтӗмпех ишет, пӗтӗмпе ҫӗмӗрет. Ку сахал-ха, шыв тӑпран чи тулӑхлӑ пайне хӑйӗнпе пӗрле юхтарса каять. Специалистсем шутланӑ тӑрӑх, шыв пӗр ҫулталӑк хушшинче илсе кайнӑ тулӑх тӑпрана каялла тавӑрас тесен, пирӗн ҫав акмалли ҫӗре пилӗк ҫул хушши сиплесе, апат парса пурӑнмалла.

Чӑваш республикинчи климат ҫырма-ҫатрасене ӳссе йышлӑланма лайӑх май туса парать: хӗлле тип ВАРсене, ҫырмаллӑ вырӑнсене, вӑрмансене юр нумай ларать, ҫуркунне вӑл питӗ час ирӗлет. Ҫырмасем каллех тулли юхаҫҫӗ, ҫул ҫинчи ҫырансене, мӗн пур анаҫарансене ҫӗмӗрме тапратаҫҫӗ. Эсир курнӑ ӗнтӗ: ҫуркунне юр тӑпра ӑшӑниччен маларах ирӗлет, юртан пулнӑ шыв шӑн тӑпрана сӑрхӑнса кӗреймест, ҫавӑнпа капланса ним усӑсӑр аналла ыткӑнать.

Вӑйлӑ ҫумӑр ҫунӑ чухне те ҫавӑн пекех: ҫумӑр шывӗ тӑпран ҫиелти самаях тусанланса кайнӑ пайне (сухаланӑ пайне) лачкам йӗпетет те унти вӗтӗ-вӗтӗ шӑтӑксене питӗрсе лартать, ҫумӑр шывӗ вара, ҫӗре сӑрхӑнса кӗреймесӗр, аналла юхса анать. Вӑл каллех ахаль юхмасть, хӑйӗнпе пӗрле тӑпран чи кирлӗ пайне илсе каять.

КПСС обкомӗпе Министрсен Совечӗ «Республикӑри тӑпрана шыв ҫисе каяссипе кӗрешесси ҫинчен» йышӑннӑ постановленире ҫакӑн пек каланӑ вырӑн пур: ҫурхи шывпа ҫумӑр шывӗ 70—80 процент таран ним усӑсӑр пӗтет, вӑл тӑпран паха сийне кашни гектар ҫинчен 15—30 тоннӑ юхтарса каять. Шутласа пӗлнӗ тӑрӑх, тӑпрана шыв ҫисе юхтарса кайнӑ пирки колхозсем ҫулсеренех кашни гектартан 2—3-шер центнер тырӑ сахалтарах пухса кӗртеҫҫӗ. Эрози тыр-пул тухӑҫлӑхне мӗнле чакарнине ҫакӑн ган та лайӑх курма пулать: ыраша илсен, вӑл пирӗн республикӑра тӳрем вырӑнта 22 центнер таран тухать, сӗвек вырӑнта — 13 центнер, ҫырмаран ҫӗр метрта — 3,2 центнер. хӗрлӗ ҫыр хӗрринче 1,3 центнер.

Эрози пирки, ун сăлтавěсем пирки каланă чухне эпир тепěр япалана шута илмесěр тăма пултараймастпăр. Эрози вăйланасси, тип варсемпе çырма-çатрасем йышлăланса пырасси сăртлăрах вырăнсенчи, тип вар тăрăхěнчи вăрмана пěтернинчен нумай килет. Вăрман пулнă çěрте, ăна касса тăксан, акмалли çěр климачě йăлтах улшăнать. Çара вырăнта çěр кěркунне, юр лариччен, чылай тарăн шăнса юлать. Хěлле вăрман çук тěлте вăйлă çил алхасать, вăл сăртлă вырăнти юра пěтěмпе тенě пекех лапамсене, çырма-çатрасене шăлса антарать, çавна пула вара тăпра хěл кунěнче те шăнса тăрать. Çуркунне мěн пулса иртни пирки эпир каларăмăр ěнтě, ăна тепěр хут асăнмасан та юрě. Вăрман пур çěрте мěнле? Вăрман таврашěнче хěлле юр ытларах пулать, çуркунне вăл юр пěчěккěн ирěлет, çара вырăнти пек темиçе кун хушшинчех юхса анса пěтмест.

Çапла ěнтě, эрозипе çине тăрса кěрешес тесен, çырма-çатрасем йышлăланса ан пыччăр тесен, чи малтан шыв юххине чакармалла, шыв тăпрана çиелтен е аялтан çурса аннине пěтермелле. Пухăннă пек шыв — юр ирěлнěрен пулнă-и вăл, çумăр шывě-и — аякка юхса ан кайтăр, вырăнтах тăпрана сăрхăнтăр.

Шыв юххин хăвăртлăхне чакармалли, ăна хирсенче, çырмасенче тытса юлмалли майсем пирěн темěн чухлех: çырма тăрăх умлă-хыçлă темиçе пěве тума пулать, çырма-çатра тěпне юшкăна тытса чарма çатан картасем тытма пулать, акмалли çěре çырмана тăрăх сухалани те, микролимансем туни те пысăк усă кÿрет. Шыва тытса чарас ěçре пире уйрăммăнах вăрмансем вăйлă пулăшаççě.

Çырма çатрасем шыв çěре çурса кайнинчен пулнине пирěн асаттесем те лайăх пěлнě. Хăвăрт юхакан шыва чарас тесе, ăна ана-çарансене, çырансене ишме парас мар тесе, вěсем пěвесем нумай тунă, шыв арманěсем лартнă, çырма икě айккипе ÿсекен вěтлěхпе хăвалăха сыхласа хăварма тăрăшнă. Ял çывăхěнчи вăрмансене те питě сыхласа усранă вěсем, ишěлекен вырăнсене йывăç лартнă. Анчах ун чухне самани урăхла пулнă-çке. Хресченсем хěрхенсе тăнă вăрмана ун хуçи — пěр-пěр ухмах улпут е чиновник, е правительствă хăй — юлашки йывăç таран касса тăкнă. Çывăхри ялсенчи халăха вăл вăрмантан карта тытмалăх çапăпа тункатасем çеç çакланнă. Ялсем пěчěккěнех çаралса пынă, çěр суранěсем хăрушланнă, ěç хресченě ěлěкхи самана вăхăтěнче çав уйрăм харпăрлăх çинче тытăнса тăракан тискер строй кÿрекен суранcене сиплеме пултарайман. Ěнтě пирěн самани те урăх, условисем те урăх. Халь эпир ял хуçалăхне план тăрăх аталантаратпăр. Пирěн алăра вăйлă техникă пур, наукă пур. Эппин, тек эпир çырма-çатрасем йышлăланса пынине тÿссе тăма пултараймастпăр, вěсене пěтерме вăхăт çитнě!

Мана çакă тěлěнтерет: çырма-çатрасен сиенне пурте кураççě, пурте ăнланаççě, вěсемпе кěрешмелле мар тенине эпě ку таранччен никамран та илтмен, анчах ěçě малалла каймасть. Ěлěк пирěн ялсенче, нимрен ытларах ялсен тулашěнче, тем пысăкăш киремет йывăççисемларатчěç. Нумайăшсем хăрса кайнăччě, ним усси те çукчě, çынсем вара вěсем çине: эх, касса ярсан лайăх вутă пулмалла ку йывăççенчен, тенě пек ăмсанса пăхкалатчěç. Çапах пырса касса яма хăратчěç: ахаль йывăç мар-çке, киремет йывăççи, тем курса ларăн ăна пырса тěкěнсен! Халь пачах курмастăп çав киремет юманěсене, комсомолецсем йăлтах касса пěтерчěç пулас.

Çырма-çатра ěнтě киремет йывăççи те мар. Ишěлсе выртакан юрăхсăр çěр кăна. Çапах та нумайăшсем çырма-çатрасенчен киремет йывăççинчен хăранă пекех хăраççě пек туйăнать мана. Хăçанччен пырě-ши çакăн пек шиклenесси? Ыйтăва çивěчреххěн лартар: мěншěн çав тери «хисеплетпěр-ха» эпир çырма-çатрасемпе тип варсене? Ěç ма пěрре те вырăнтан хускаласшăн мар? Ыттисем мěнле шутлаççě те, эпě хам тěллěн ăна çапла ăнлантарса панă пулăттăм.

Чи малтанах, темшěн эпир ку таранччен те çěршěн кам ответ тытассине йěркелемен. Çěр — пирěн пуянлăхăн амăшě, тетпěр, анчах уншăн уйрăм çын никам та явап тытмасть. Çěр — халăхăн, колхозăн, апла пулсан, уншăн пěтěм халăх, пěтěм колхоз ответлă, тетпěр. Ку вăл пěтěмěшпе илсен тěрěс те-ха, ěçре ун пек юрамасть-çке. Ак бригадира илер. Вăл машинăсемшěн, вăрлăхшăн, выльăх-чěрлěхшěн, çуракине чипер е япăх иртернěшěн, тырă тухăçлăхěшěн — пуриншěн те явап тытать. Çав вăхăтрах çěршěн, ăна мěнле тытса усранишěн явап тытмасть. Ман шутпа, çěр участокěсене колхозри механизациленě отрядсене, звеносене, бригадăсене çирěплетсе памалла. Пěр-пěр çын, звено, бригадă тыр-пулшăн çеç мар, çěре мěнле тытса усранишěн те ответ тыттăр. Çырма-çатрапа тип варсем пур — пěтертěр часрах вěсене. Çěре чипер тытса усрамасть — ěç кунěсем тăрăх чакарса тÿлемелле тăвас пулать. Çěршěн ответ тытассине йěркелеме правительствă ку тěлěшпе ятарласа постановлени йышăнассине кěтсе лармалла мар, колхозсем ăна хăйсем тěллěнех тума пултараççě.

Иккěмěшěнчен. Кирек мěнле каласан та, паян куна çырма-çатрасемпе уйрăм çынсем—

энтузиастсем çеç кĕрешеççĕ-ха. Кун пек ĕçленипе эпир çырма-çатрасене нихçан та пĕтерейместпĕр. Ку вăл пĕтĕм халăхпа тумалли ĕç, эппин, пирĕн пĕтĕм халăха хускатмалла.

Эпĕ лайăх астăватăп, вăтăрмĕш çулсенче пирĕн республикă çулĕсем калама çук япăхчĕ. Виçĕ çухрăмри яла çитме те теме тăратчĕ. Вăрман çулĕсене асăнма та кирлĕ мар — урапа тĕнĕл таран йалтах пылчăк ăшĕнче пыратчĕ. Ун чухнехи руководительсем пĕтĕм халăха çĕклерĕç те, çулсене самаях йĕркелесе çитертĕмĕр. Чăваш республикинчи лайăх çулсене пур çĕрте те ырă ятпа асăнатчĕç, вĕсене таçтан аякран киле-киле куратчĕç.

Е тата Канашпа Шупашкар хушшинче шоссе çулĕ тунине, каярахпа чукун çулĕ тунине илер. Ку ĕçсене те пĕтĕм халăх тăрăшнипе тунă. Вăл çеç мар, шоссе çулĕн икĕ айккипе тăршшĕпех йывăç лартса тухнăччĕ. Кам курман пуль, кам савăнман пуль çул çӳренĕ чух: ку йывăçсем халь вăрман пекех кашласа лараççĕ. Вăл вăхăтри маттур руководительсене хисеплесе, çав çула теприсем халĕ те «Петров çулĕ», теççĕ. Тăрăшнă-тăр, Петров юлташ та хытă тăрăшнă-тăр вăл çулшăн, анчах нимрен ытла унта халăх вăй хурса ĕçленĕ. Ваттисем ĕлĕкех: пĕччен суран — типсе пырать, халăх сурать — кӳлĕ пулать, тенĕ. Тата сыннисем те питĕ ĕçчен пирĕн, хускатса ярсан, тем тума та пултараççĕ. Çырма-çатрасем тахçанах йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ пирĕн çынсене. Унтан та ытларах: тем пек тарăхтарса çитернĕ! Вĕсем тĕрлĕ специалистсем, колхоз председателĕсем, агрономсем, ытти пĕчĕк тата пысăк руководительсем çырма-çатрасемпе чăн-чăн кĕрешӳ пуçласа ярассине çеç кĕтеççĕ.

Виççĕмĕшĕнчен. Çак пысăк ĕçре çĕнĕ техникăпа çав тери начар усă куратпăр. Кĕреçепе чавнипе, наçилкка çине хурса çĕр йăтнипе пĕве пĕвелеймĕн, пысăк кӳлĕ тăваймăн, тип варсемпе çырма-çатрасене питĕрсе пĕтереймĕн. Чылай колхозсем халь бульдозерсем, скреперсем илеççĕ. Кусем вара чăннипех те хăватлă машинăсем! Бульдозер ĕçленине куртăм эпĕ, вăйлă чавать вăл çĕре хăйĕн сăмсипе. Пĕчĕкрех тип варсене, шырлансене, çырма-çатрасене колхозра бульдозерпах тикĕслесе тухма пулать. Çĕрĕн миçе процентне юсĕ вăл — ăна калама йывăр, анчах нумай юсама пултарать. Пытармастăп: хамăр колхоза бульдозер илтересси — манăн чи пысăк ĕмĕт. Бульдозер пулсан, эпĕ колхозниксене унпа мĕн тума май пуррине кăтартса панă пулăттăм.

Тăваттăмĕшĕнчен. Кирек мĕнле тыр-пул акса тусан та, пирĕн çĕр ĕçĕнче хамăр çырма-çатрасем çинчен пĕр минутлăха та манма юрамасть. Халлĕхе эпир ăна час-час манатпăр-ха. Ăçта мĕнле тыр-пул акмалла, çĕре мĕн таранăшĕ тата хăш майлă — урлă е тăрăх — сухаламалла, тислĕк мĕн чухлĕ тăкмалла, мĕнле им-çам сапмалла — çаксене пирĕн яланах лайăх пĕлсе тăрас пулать. Ку вăл нимрен малтан агрономсене пырса тивет. Агрономăн кăçалхи тыр-пул тухăçлăхĕ çинчен çеç мар, колхоз çĕрĕн ыранхи шăпи çинчен те, çав çĕр тепĕр çул, тата тепĕр çул мĕн пама пултарасси çинчен те шутламалла. Колхоз çĕрне çулсерен лайăхлатса пыман, ыранхи кун çинчен шутламан агроном, ман шутпа, агроном та мар, çĕре муталакан çын кăна.

Çак çулсенче эпĕ кӳршĕллĕ колхозсенче нумай пултăм. Вĕсенче çырма-çатра çывăхĕнчи акмалли çĕре çырмана тăрăх (шыв çулне урлă) сухаламаллине пурте пĕлеççĕ, анчах ĕçре çакна нумайăшсем хакламаççĕ. Апла сухаласан та, капла сухаласан та, уйрăмлăхĕ сахал теççĕ куранать. Çук, уйрăмлăхĕ пысăк. Çумăр вăхăтĕнче урлă йăрансем çумăр шывне чиперех тытса чараççĕ. Куна эп хам опытран илсе калатăп. Йăрансем ишĕлмеççĕ, тулăх тăпра юхса каймасть, çĕр лайăх нӳрленсе юлать — ӳкнĕ пек çумăр шывĕ пĕтĕмпе тенĕ пекех тăпрана сăрхăнса кĕрет.

Микролимансем тенине пирĕн республикăра чылайăшсем пĕлмеççĕ пулĕ-ха. Чăннипе вăл питĕ ансат япала. Çав пĕчĕкрен те пĕчĕк лимансене кĕрхи çĕртме вăхăтĕнче çĕре хăйне майлă сухаласа туса хăвараççĕ. Ун меслечĕ çавăн пек: тимĕр акапуçĕн виççĕмĕш корпусĕн çĕре çавăрса пыракан çӳлти пайне (вырăсла ăна отвал теççĕ) 15—17 сантиметр тăршшĕ вăрăмлатаççĕ тата 6—7 сантиметр чухлĕ сарлакарах тăваççĕ, çавна пула акапуçĕ сухаланă чух çӳлĕрех тӳпе (шăрт) хăварать. Акапуçĕнчен ятарласа тунă хатĕр кăкарса яраççĕ, çав хатĕр тăпрана пĕр çĕре пуçтара-пуçтара илет, трактор пынă май кашни икĕ метртан тӳпесене пĕрлештере-пĕрлештере хурать. Ана çинче шыва тытса чарма тăршшĕпе тăваткалсем пулса юлаççĕ. Шыв юхса каймасть, тăваткалсене çакланса, тăпрана сăрхăнса кĕрет. Çав сухаланă чух микролиман хăваракан хатĕре колхозсем хăйсемех тума пултараççĕ.

Сăлтавсем çинчен калаçма пуçланăскер, эпĕ кунта тĕрлĕ сĕнӳсем пама тытăнтăм пулас. Сăлтавĕсем пур-ха вĕсем, канаш пама та эпир пурте пĕлетпĕр, ĕçĕ вара малалла шăвасшăн мар. Пулать те пăтăрмахла ĕç — çырма-çатра! Мĕн чухлĕ хут çырнă ун пирки, мĕн чухлĕ постановлени кăларнă — вăл куç умĕнчен тасалмасть. Эппин, хут çине

çырни сахал, пухусенче шавлани сахал, темле организациллĕ мерăсем кирлĕ. Закон енчен, ял хуçалăх артелĕн уставĕ енчен мĕнле мерăсем тупса çирĕплетмелле — ун пирки пирĕн экономистсем, тĕрлĕ специалистсем, руководительсем шутлаччăр. Сăлтавĕ мĕскер? Сăлтавĕ хамăрта: эпир çутçанталăк пуянлăхĕсене упраса хăварасси, вĕсене ÿстерсе пырасси, çĕр питне илемлетесси çинчен нумай калаçатпăр, анчах хамăр алăпа ку тĕлĕшпе сахал тăватпăр. Тем тесен те, пиртен чылайăшсем çутçанталăка сăмахпа çеç улăштараççĕ-ха. Эпир çутçанталăкран нумай ыйтатпăр, анчах ун умĕнчи парăма хамăр ыйтни чухлĕ татса пыраймастпăр, тет Леонид Леонов. Çав пĕтерет те — парăма татса пыраймастпăр. Илемлĕхе те кивçен ыйтса илме юрататпăр. Анчах ăна ыйтса илме юрамасть, илемлĕхе хамăр алăпа тăвас пулать.

...Шупашкара кайсан каллех Сидор Васильч патне кĕрсе тухрăм. Вăл тин кăна Комсомольски районĕнчи ялсем тăрăх çÿресе таврăннă.

— Мăнтăр текен ялта пултăм, унти пуçлăхсемпе темиçе кун хушши çапăçрăм,— каласа кăтартать ман тусăм.— Çав ялта миçе кĕпер тесе шутлатăн эсĕ? Вун пĕр кĕпер! Çырмисем ÿссех, юпленсех пыраççĕ, темиçе тĕлте çĕр ишĕлет. Пуçлăхсем çакна курса макăрса лараççĕ, анчах хăйсем çĕре юсас тĕлĕшпе нимĕн те тăвасшăн мар. Хирти Турхан ялĕнче те çавах. Виçĕ çырма таçта çити алхасса, сарăлса кайнă. Çĕр ишĕлнипе колхозăн кашни çул 50 метр çаран пĕтет. Çыннисем: «Мĕн тума пултаратпăр-ха эпир çĕр ишĕлет пулсан?»— тесе çăвар карса лараççĕ. Шăхасан, Йăвашкел, Хирти Мăрат, Асанкасси, Вăрманхĕрри Чурачăк ялĕсенче те ĕçсем пит начар. Вăрманхĕрри Чурачăкри пĕр çырма (тип çырма) тарăнăшĕ 32 метра çитнĕ. Сарлакăшĕ те çавăн чухлĕ пулĕ. Мĕн каламалла ĕнтĕ унти çынсем пирки, Архип Лукич?

— Ятламалла, намăслантармалла,— терĕм эпĕ.— Ăçта та пулин илсе кайса кăтартмалла унти пуçлăхсене — çырма-çатраран мĕн тума пултарнине хăйсен куçĕпе курччăр.

— Ятларăм та, намăслантартăм та. Те усси пулать ĕнтĕ...

Пур, пур, ун пек ялсем ку таврара та сахал мар. Тен, ытларах та пулĕ, мĕншĕн тесен, пирĕн Çĕрпÿ районĕ, Сĕнтĕр, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Красноармейски районĕсем хыççăн, чи çырма-çатраллă район шутланать.

...Хамăра интереслентерекен ыйтупа каласса ларнă май, эпĕ пĕррехинче Сидор Васильчран çапла ыйтрăм:

— Эс ĕнтĕ, Дон-Кихот çил арманĕсемпе çапăçнă евĕр, пĕтĕм ĕмĕрне тип варсемпе, çырма-çатрасемпе кĕрешсе ирттеретĕн. Кала-ха: ак сана халь, пысăк начальник пулнине пăхмасăр, яла илсе кайса пĕр-пĕр тип вара пĕтерме хушсан, эс мĕн тăваттăн, хăвăн ĕçне мĕнрен пуçланă пулăттăн?— терĕм.— Бульдозер çук тейĕпĕр санăн, скрепер çук, тип вара кирек мĕнле пулсан та юрăхлă çĕр туса хума хушнă...

— Малтан сан йăнăшусене тÿрлетем,— пуçларĕ сăмахне Сидор Васильч.— Вĕсем санăн пĕр ыйтурах иккĕ. Дон-Кихот çил арманĕсене эс вырăнсăр илетĕн, ун пек танлаштарма юрамасть, ку пĕрре. Иккĕмĕшĕнчен, эп нихçан те пысăк начальник пулман, халĕ те нимле «шишкă» та мар эпĕ. Ну, ыйту патăн пулсан, ответлем сана. Эп хама панă тип вара чи малтан пусу çавранăшĕнчен кăларнă пулăттăм. Унтан курăк (люцернă, тимофеевкă) акса хăварнă пулăттăм. Эс пĕлетĕн, ку курăксем пусу çавранăшне кĕмеççĕ. Вара йывăç лартăттăм, карта тытăттăм. Выльăх çÿретме чарнă пулăттăм.

— Пирĕн выльăх çÿретмелли вырăнсем сахал-çке, ĕне-сурăха ăçта çÿретĕпĕр ĕнтĕ?— терĕм эпĕ.

— Ăна йĕркелеме йывăр мар. Кăçал пĕр çĕрте карта тытан, тепĕр çул — тепĕр тĕлте, вăл ĕçе черетпе туса пымалла. Вара выльăхчĕрлĕх валли тип вар юлать.

Тĕрĕс калать ман тусăм. Хамăр ял çывăхĕнчи икĕ тип вара эпир те çапла юсанăччĕ. Карта тытмасăр йывăç лартни вăл ĕç çукран ĕç шырани кăна: хÿтлĕхсĕр çамрăк йывăççене çулла мар-тăк кĕркунне, кăçал мар-тăк тепĕр çулхине пурĕ пĕр выльăхсем пĕтерсе тăкаççĕ.

...Пирĕн республикăра эпир хакламан тепĕр ĕç пур — кÿлĕсем тăвасси, вăл кÿлĕсенче пулă ĕрчетесси. Кÿлĕсем ку таврара час-час пулакан типĕ çулсенче тыр-пула çăлса хăварас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнаççĕ. Мăн çынсем çеç мар, пĕчĕк ачасем те лайăх пĕлеççĕ: пĕвери е кÿлĕри шыв кăнтăрла вĕçĕмсĕр пăсланса тăрать. Ир енне кайсан çав пăс, сывлăм пулса, ана-çарансем çине ÿкет. Сывлăм шывне мĕн пур ÿсен-тăран çăтать, унпа тăпра та нÿрленет. Эпир, ирхине курăк çинче урасене йĕпетсен, сывлăм халĕ те типмен, тетпĕр. Вăл ĕнтĕ сывлăмра шыв нумай пулнине пĕлтерет. Сиплĕ шерпет, тыр-пула куллен-кун кирлĕ шерпет! Пирĕн республикăра юхан шывсем йышлă пулнине эпĕ маларахах асăннăччĕ. Вĕсем тăрăх пĕвесем пĕвелесен, колхозсенче кÿлĕсем ытларах тусассăн, шывсем пирĕн тата пысăкрах лаптăк çинче сарăлса выртĕç, хирсемпе пахчасене ÿкекен сывлăм валли ытларах майсем пулĕç.

Анчах пĕвесемпе кӳлĕсен усси кунпа пĕтмест-ха. Хăш-пĕр колхозсем кӳлĕсенче пулăпа кайăк-кĕшĕк ĕрчетеççĕ. Майне пĕлсен, ку ĕçе ача ваййи вырăнне хумасан, вырăнта ĕрчетекен пулă колхоза пысăк тупăш парать иккен.

Пĕвесем пире çырма-çатрасене пĕтерес ĕçре те хытă пулăшаççĕ. Умлă-хысăлă тусассăн (эпир ăна каскад тетпĕр), пĕвесем шыв юххине нумай чакараççĕ, усăсăр юхса иртекен шыва хамăра валли тытса юлма май параççĕ.

Пĕлтĕр эпĕ çула май Канаш районĕнчи «Мотор» колхоза кĕрсе тухрăм. Пырасса сад ăстипе каласма пынăччĕ унта (вĕсен сад — 90 гектар чухлĕ!), анчах, хам телейĕме кура, ыттине те — ыррине, çĕннине — нумай пĕлсе килме тӳр килчĕ. Вĕсем хăйарлă çĕрсене пур çĕрте те хыр йывăççисем лартса тĕреклетеççĕ, ишĕлсе пыракан çырмасенче пĕвесем тăваççĕ. Вăл вăхăтра «Мотор» колхоз 80 гектар хыр лартнăччĕ, пĕвесенчи шыв çийĕн лаптăкĕ 44 гектар шутланатчĕ. Сахал-и ку, нумай-и? Тен, çав тери нумаях та мар пуль. Анчах пирĕн колхозсенче ун чухлĕ те çукçке, хăш-пĕр çĕрте ун чĕрĕкĕ те çук.

...«Кирек мĕнле вырăнти çĕршыв илемĕ чи малтан унта шывпа вăрман иккĕшĕ пĕрле пулнинчен килет. Çутçанталăкăн йăли çавăн пек: юхан шывсем, пĕчĕк çырмасем, кӳлĕсем таврашĕнче ялан тенĕ пекех вăрман ӳсет, вĕтлĕх пулать. Ун пек вырăн çара пулнине эсир сайра курма пултаратăр. Вăрманпа шыв пĕрле пулнинче çутçанталăкăн тепĕр чаплă енĕ, тепĕр тĕллевĕ палăрса тăрать. Вăрман вăл — шыва хӳтĕлекен вăй: йывăçсем çĕре çуллахи вĕри хĕвелтен хуплаççĕ, тăпрана çилпе типме памаççĕ; вĕсен айĕнче сулхăн та, нӳр те пур, йывăçсем юхса иртекен е пĕр вырăнта кӳлленсе тăракан шыва типесрен çăлаççĕ. Юхан шывсем пĕтĕм Российипе чакса пыни пурин шучĕпе те вăрмансене касса пĕтернинчен килет...»

Кам сăмахĕсем çаксем, калама çук чаплă сăмахсем? Вĕсене çутçанталăка чунтан юратакан çын Сергей Тимофеевич Аксаков çырнă.

Эпир сирĕнпе пурсăмăр та тенĕ пекех вăрман тăрăхĕнче, симĕс йывăççемпе юхан шыв пĕрлешсе çутçанталăка илем кӳрсе тăнă вырăнсенче ӳснĕ.

Чăваш çĕршывĕ авалтанпах вăрманлă çĕршыв пулнă. 18-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче пирĕн таврара вăрман мĕн пур çĕр лаптăкĕн 52 процентне йышăнса тăнă. Каярахпа вара тĕрлĕ мул хуçисем пирĕн вăрмана кам мĕнле пултарнă таран çаратма, касса турттарма пикеннĕ.

Хальхи вăхăтра вăрман республикă территорийĕн 30 процентне ытларах йышăнать. Сăр шывĕ тăрăх вăл мĕн пур çĕр лаптăкĕн 70 проценчĕ, республикă варринелле — 20 процент, Атăл çывăхнелле — 17 процент пулать. Хура çĕрлĕ районсенче вăрман 5 процентран та иртмест.

Калас пулать, хамăрăн «симĕс ылтăна» ĕлĕкхи пек ним йĕркесĕр пĕтерме пăрахнă пулин те, эпир вăрмана, ун мĕн пур ырлăхне хаклама вĕренсе çитеймен темелле. Чылай çынсемшĕн вăрман халĕ те пӳрт лартмалли, строительствă материалĕ тумалли, курăс кăлармалли, çапă касмалли япала кăна е кăмпа татса çырла пуçтармалли вырăн кăна. Çакна эпир час-часах манатпăр: вăрман — пирĕн пуласлăхăн çăлкуçĕ, вăл колхозсемпе совхозсене çулсеренех вăйлă тырпул çитĕнтерме пулăшать, мĕншĕн тесен вăрман пирĕн ана-çарансемпе тăпрана типĕтекен çилсенчен хӳтĕлет, нӳр тытать, климата çемçетет тата юхан шывсене типесрен сыхлать. Çавăнпа пирĕн вăрмансене пите асăрханса касмалла. Касас пулсан, ун вырăнне çийĕнчех йывăç лартмалла. Пĕр йывăç касрăн — иккĕ ларт, иккĕ касрăн — сахалтан та виççĕ лартса хăвар. Ку тĕлĕшпе урăхла йĕрке пулма пултараймасть.

Эрозипе кĕрешес ĕçре нимрен ытла çырма пуçĕсемпе сăртлă вырăнсенчи вăрмана сыхласа хăварни хаклă. Çаралса юлнă тӳпемсенче яланах çĕр ишĕлет, тăпрари климат улшăнма пуçлать.

Халлĕхе колхозсем хăйсене уйăрса панă вăрмана икĕ тĕрлĕ пĕтереççĕ: хамăрăн тесе, ăна ним шутламасăр касса тăкаççĕ тата унта выльăх çӳретеççĕ. Нумай çĕрте ĕлĕк сĕм вăрман кашласа ларнă участоксем çинче вĕтлĕх çеç тăрса юлнă. Ку вĕтлĕх те чакнăçемĕн чакса, сайраланса пырать, ăна çу касиччен выльăх çĕмĕрет.

Вăрман тăрăхĕсем пирки эпир пĕр вăхăт кĕр-р! кĕрлесе илтĕмĕр те ун хыççăн каласма та пăрахрăмăр. Тăвасса та ку ĕçе чылай колхозсем ячĕшĕн çеç турĕç. Апла пулин те, вăл çакна кăтартса пачĕ: çап-çара вырăнтах вăрман ӳстерме пулать, ку вăрманăн усси пысăк. Эппин, вăрман тăрăхĕсене çип пек тăсса каймалла мар, сарлакарах тумалла. Вăл çул çинчи маяк çеç мар, чăннипех çĕр хӳтлĕхĕ пултăр. Тата яланах çакна асра тытмалла: йывăççене нимрен ытла çырма-çатра çывăхне лартмалла, вĕсен ик енĕпе те 50—70 метр сарлакăш вăрман ӳстĕр. Çырма çывăхĕнчи йывăççене касма никама та ирĕк памалла мар.

Ĕлĕк, эпир çамрăкрах чух, хир енче вăрман шăпăр тумалăх та, пушă аври касмалăх

та çукчĕ. Çăпата тесен, ăна та лавĕ-лавĕпе кунтан турттаратчĕç. Вăрман пулманнишĕн тем пек тарăхсан та, хире е пахчана йывăç лартмастчĕç унти çынсем. Вĕсен ялан пĕр сăмахчĕ: ӳсмест пирĕн енче йывăç, лартсан та хăрса каять, çĕрĕ çавнашкал ку таврара.

Вăрçă умĕн, мичуринецсем, тĕрлĕ сăнавçăсем, энтузиастсем йышлăланса çитсен, тепре тĕрĕслесе пăхрĕç хайхи. Елчĕкре хура тăпра çинчех парк турĕç. Мĕн тетĕр эсир? Пур йышши йывăç та хунать. Пан улми йывăççисем лартрĕç — вĕсем те хăрмаççĕ. Халь Елчĕкри парка кайса курăр-ха, кĕрсен, тухас килмест унтан. Ытти колхозсем те сад ĕрчетеççĕ, çулсеренех йывăç нумай лартаççĕ.

Çапах та кăнтăрти районсенче вăрман сахалтарах-ха. Пилĕк процент вăл пачах çителĕксĕр. Ăна хир енчи чăвашсем хăйсем те ăнланаççĕ пулĕ, тетĕп эпĕ. Унти тулăх çĕре эрозипе ишĕлтерме, шывпа юхтарса яма пушшех те шел.

Специалистсем çапла калаççĕ: пирĕн республикă условийĕсенче юхан шывсене вĕсен çывăхĕнче вăрман пулни кăна çăлса хăварать, теççĕ. Эпир вăл юхан шывсене çăлса хăварма çеç мар, вăйлатма ĕмĕтленетпĕр пулсан, колхозсен йывăç ытларах лартмалла, вăрман тăрăхĕсем тумалла. Вăрман ăсти М. Яковлев шутласа кăларнă тăрăх, юхан шывсене сыхласа упрамалăх вăрман тăвас тесен, пирĕн тата 136 пин çурă гектар çинче йывăç ӳстермелле. Ку сахал мар. Шутласа пăхăр-ха, кашни яла мĕн чухлĕ тивет вăл.

Октябрь революцийĕчченхипе танлаштарсан, эпир вăрман ытларах лартатпăр, анчах вăл та çителĕксĕр иккен-ха, пĕтĕм халăха хутшăнтарса, ку ĕçе тата витĕмлĕрех туса пымалла.

Чăваш ялĕсем йăмраллă, ăна такам та пĕлет. Теплере пĕрре пилеш тĕл пулать, хурăн, тирек, çĕмĕрт. Ытти йывăççем çукпа пĕрех. Мĕн, вĕсем илемсĕр-и? Илемлĕ, ӳстерме те йывăр мар, эпир вĕсене пахчана е урама лартма хăнăхман çеç. Çырма тĕпĕсене, ишĕлсе пыракан çĕр çине те ялан йăмра кăна лартатпăр. Вăл аван-ха, йăмра тымарĕсем çырма-çатрасене ишĕлесрен лайăх сыхлаççĕ, ӳсессе те ку йывăç хăвăрт ӳсет. Анчах çырма тĕпĕсене питĕрнĕ, тикĕсленĕ чух, унта йывăççем лартнă чух йăмрапа çеç çырлахмалла мар. Унпа пĕрле тирек те, тĕмпе ӳсекен çӳçе те, хăва та, çĕмĕрт те лартмалла, тип çырма айккисенче, çӳçе, çăка, вĕрене, хурăн, чие, вăрман улми, вăрман груши, хурлăхан, çĕмĕрт, шĕшкĕ, крыжовник, хăмла çырли çитĕнтермелле. Эп вĕсене хамăр урамра чылайăшне лартнă, нихăшĕн пирки те ку йывăçпа ахалех асаплантăм тесе калас килмест.

Сарлака урамсенче йывăça урам пĕр еннех икĕ рет лартма сĕнеççĕ, ретсен хушшине çул, сукмак, тротуар тумалăх хушă хăвармалла. Анчах çакна шута илмелле: урамсене лартмалли йывăçсем сарăлса ӳсекенскерсем пулмалла мар.

...Пирĕн урамра, манран виçĕ кил урлă, аллăран иртнĕ пĕр хĕрарăм пурăнать. Сăнран пăхма халĕ те тĕреклĕ-ха, анчах сывлăх енчен самаях йăшнă ĕнтĕ. Эп астăвасса çав хĕрарăм качча кайнă хыççăн упăшкине чылай вăхăт хушши пĕр ача та туса параймарĕ, унтан вара кашни çул тенĕ пекех ача çуратма тапратрĕ. Вун пилĕк çул хушшинче вунă ача туса пачĕ маттур кин. Хырăм йăтман çулсенче ĕçкĕре-мĕнре çапла калатчĕ: «Шăмшак сурма пуçларĕ, çав тери ача çуратас килет»,— тетчĕ. Ăнланатăр-и: ача çуратмасăр пурăнсан, хĕрарăмăн шăмшак сурма тытăнать! Эх, арçынсенчен илтесчĕ çавăн йышши сăмаха, вĕсене чылай вăхăт хушши йывăç лартмасăр пурăннипе ал тупанĕсем ыратакан пулчĕç, хул сурма пуçларĕ, тесе калаттарасчĕ! Акăш-макăш ырă япала-çке вăл, йывăç лартасси, ху аллупа лартнă пан улми йывăççине, чиене, йăмрана, пилешпе хурăна çултан çул ачашласа пăхса ӳстересси. Тупата туршăн, ун пек пархатарлă ĕç пит сахал пек туйăнать мана çак çут тĕнчере. Хамăра валли илем тăвас тесе, çĕр питне юсас тесе, хамăра тăрантакан çĕр хăватне ӳстерес тесе, этем сывлăхне тĕреклетес тесе лартатпăр-çке эпир йывăçсене...»

*(Юлашки пулать)*




Геннадий **СИДОРОВ**

# Бирлик-Пӗрлӗх

НУМАЯХ ПУЛМАСТЬ эпӗ Казахстанра, Павлодар облаҫӗнчи Баян-Аул районӗнче, ӗмӗртен усӑсӑр выртнӑ ҫӗрсем ҫинче туса хунӑ «Бирлик» совхозра пулса куртӑм. Ҫакӑнта, вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑлса выртакан ҫеҫен хир варринче, 1961 ҫул пуҫламӑшӗнче брезентран тунӑ сакӑр палаткӑ пырса лартнӑ. Вӗсене лартаканнисем — пирӗн маттур землякcем, Чӑваш комсомолӗ ятарласа, ырӑ сунса ҫавӑнта янӑ 150 каччӑпа хӗр пулнӑ. Ҫак ҫӗр ҫине вӗсем иксӗлми хастарлӑ та ҫирӗп кӑмӑлпа пырса пуснӑ: плуг тавраш нихҫан пырса тӗкӗнмен тискер ҫеҫен хире Тӑван ҫӗршывӑмӑра пин-пин пӑт тырӑ парса тӑракан тумалла!

Казахсен «Бирлик» сӑмахӗ вырӑсла «Единство», чӑвашла «Пӗрлӗх» тенине пӗлтерет. Чӑнах та, ку совхоз валли ҫакӑнтан тӗрӗсрех те лайӑхрах ят тупма та пулман ҫав. Унта вунултӑ тӗрлӗ халӑх ҫыннисем ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ: казахсемпе вырӑссем, молдавансемпе украинецсем, тутарсемпе нимӗҫсем, Балти тинӗсӗ тӑрӑхӗнчи республикӑсенчен пынӑ ӗҫченсем...

Анчах совхоз коллективӗн тӗп чӑмӑрӗ, унӑн «тӗшши» вырӑнче чӑвашсем шутланаҫҫӗ. Вӗсем пурте кунта хӑйсен ирӗкӗпе — парти чӗннипе, чунӗсем хушнипе килсе, ҫав тери пысӑк хуҫалӑх никӗсне хывнӑ. Вӗсем халӗ кунта ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫуртсем тӑваҫҫӗ, автомашинӑсен рулӗсене тытса пыраҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх пӑхаҫҫӗ, вӑйлӑ кукурузӑ ӳстереҫҫӗ. Пиллӗкмӗш трактор бригадинче, сӑмахран, пурте анлӑ та хӑватлӑ Атӑл хӗрринчен килнӗ каччӑсем. Пирӗн землячкӑна, Вӑрмар районӗнчи Альменево ялӗнчен килнӗ Лидия Ильинична Мурашовӑна ял Совет депутатне суйланӑ.

Ҫак кӗске кӑна очерксенче эпир хамӑр республикӑран ҫӗнӗ ҫӗре кайнӑ патриотсен пурнӑҫӗпе пархатарлӑ ӗҫӗсем ҫинчен каласа парасшӑн...

## 1. Яланхи пек кун

ЧӲРЕЧЕ ВИТӖР пӳлӗме ирхи кӑвакрах ҫутӑ шуса кӗрет. Минутсерен пӳлӗмре ҫуталать, ҫуталать, лайӑхрах курӑнакан пулса пырать. Общежитинче алӑксем пӗрмай уҫӑлса-хупӑнса халтлатаҫҫӗ, вуншар ҫын пӗр харӑс утнипе урай хӑмисем нӑтӑртатаҫҫӗ. Спецовкӑсемпе ваткӑллӑ тумтирсем тӑхӑннӑ каччӑсемпе хӗрсем — вӗсем хушшинче пӑчпач ваттисем те курӑнкалаҫҫӗ — поселок урамӗсем тӑрӑх унталла та кунталла саланаҫҫӗ. Пӗрисем вӑрлӑхлӑх тырӑ складне, ҫитес ҫуркунне валли вӑрлӑх хатӗрлеме каяҫҫӗ, теприсем гаражсемпе мастерскойсене, тӗрлӗ йышши машинӑсене юсама-тӳрлетме (ҫуракиччен вӗсене пурне те «на ходу» тӑвас пулать!), виҫҫӗмӗшӗсем — фермӑсене, ӗнепӑру, кайӑк-кӗшӗк, сысна пӑхма, вӗсене тӑрантарма...

Анчах Софья Кариковӑн стройкӑна каймалла, вӑл — каменщицӑ. Ир-ирех вӑл хӑйӗн

хӗр-тантӑшӗ Лидия Мурашова патне чупса пычӗ те васкатма тытӑнчӗ:

— Ну, хатӗр-и эсӗ?

— Халех кайӑпӑр,— терӗ те Лидия, упӑшки еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ:— Людмилкӑна паян яслине эс кайса леҫетӗн. Анчах та асту, лайӑххах тумлантар, тулта каллех тӑсме ҫук сивӗ...

Тантӑшсем совхозӑн тӗп усадьбин тӳп-тӳрӗ те сарлака урамне тухаҫҫӗ. Пӗр ҫул та ҫурӑ каялла ҫеҫ ҫакӑнта палаткӑсем кӑна пулнине, вӗсем хушшипе хаяр ҫил ӳлесе ҫынсене сив чир тытнӑ пек чӗтретнине ӗненме те хӗн. Халӗ куҫ умӗнче — самаях пысӑк поселок ларать ӗнтӗ. Унти кашни ҫурта тунӑ ҫӗртех Софья Кариковӑпа Лида Мурашова чунтан тӑрӑшса ӗҫленӗ.

Урам вӗҫӗнче щитсенчен пухса тӑвакан ултӑ хваттерлӗ ҫурт. Ку — вӗсен хальхи объекчӗ. Шалта платниксем урай сараҫҫӗ, штукатурсем маччасемпе стенасене шӑлса якатаҫҫӗ. Каменщиксен хӑйсен ӗҫӗ: вӗсен тулти стенасем тавра силикатлӑ кирпӗчсем хурса тухмалла.

Бригадир Виктор Беляев, хаваслӑ та сӑпайлӑ йӗкӗт, хӑйӗн бригадинчи работницӑсене кӗтсе илсе, кӑмӑллӑн кулать:

— Ай тур-тур! Епле чӗркенсе лартнӑ вӗсем, шӑнса вилесшӗн мар курӑнать! Анчах та паян пӗтӗмпе те вӑтӑр икӗ градус кӑна вӗт-ха...

Шӳт тума юрать те-ха ӑна, ҫапах та кун пек температурӑра ватнике вӗҫертсе яраймӑн. Сиввине татах тӳсме пулать, вӑл ытлашши хӑрушах та мар, анчах ҫилне вара такам юри уртарса янӑ, тейӗн, витӗр шӑтармалла кастарать, пит-куҫа ӗнтет, хускалма памасть...

Епле пулсан та — ӗҫлемелле. Кунсем васкатаҫҫӗ. Кӗҫех акӑ эрни-эрнипе тӑсӑлакан ҫил-тӑмансем пуҫланма пултараҫҫӗ, ун чухне урама та тухаймастӑн. Ҫапла кунта!

Софйӑпа Лидия раствор тунӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ. Кирпӗч хывнӑ ҫӗрте пӗр вӑлашки пушаннӑ ҫӗре вӗсен иккӗмӗш замес хатӗр. Пуринчен ытларах, вӗсем раствора тасарах тӑвасшӑн, унта ҫӳп-ҫапӑ, вак чулсем лекесрен асӑрханаҫҫӗ. Вӗсен бригадирӗ шӳт тума юратакан ҫын пулсан та, ӗҫе лӑп-лап тунине тӳсме пултараймасть, вӑл-ку начар пулсан— хытӑ лектерет.

Кашни сехетренех бригадӑра ӗҫлекенсем ҫуртӑн туса ҫитернӗ пӳлӗмсенчен пӗрине пухӑнаҫҫӗ. Кунта ӑшӑ, вӑхӑтлӑх туса лартнӑ кӑмакара тип турпас, хӑма таткисем шатӑртатса ҫунаҫҫӗ. Тухас та килес ҫук...

— Кунта ӗҫлесе пӗтерсен, ӑҫта куҫатпӑр-ха ӗнтӗ?— ыйтать Софья Карикова.

— Ачасен садне тунӑ ҫӗре яраҫҫӗ пулмалла.

— Унтан санчаҫ ҫуртне купалаттараҫҫӗ пулӗ-ха,— тет тахӑшӗ.

— Малашне бригадӑ ӑҫта ӗҫлессине эп сире тӗп-тӗрӗс калама пултаратӑп,— тет Виктор Беляев.— Пурӑнмалли ҫуртсем, ачасен сачӗ тата совхоз больницине тунисӗр пуҫне, пирӗн кӑҫал магазин, котельнӑй, машинпа трактор мастерскойӗ, столовӑй, пекарньӑ тумалла...

— Столовӑйпа пекарньӑ тунӑ ҫӗре пире ямаҫҫӗ,— тет ӑна хирӗҫ Софья Карикова.— Ҫурчӗсене купаланӑ вӗт.

— Шалти ӗҫсене тӑватпӑр.— Бригадир сехечӗ ҫине пӑхса илет.— Ну, тусӑмсем, ӑшӑнса ҫитертӗмӗр пулӗ, кайрӑмӑр!

Каллех пӑр пек сивӗ сывлӑшра ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ каменщиксем. Ҫурт стенисем ӳснӗҫемӗн ӳсеҫҫӗ. Бригадир ҫав вӑхӑтрах шурӑ кирпӗч купи ҫине пӑха-пӑха илет: вӑл чакнӑҫемӗн чакать, лутралансах пырать. Кӑнтӑрлахи апатчен ӗҫлеме ҫиттӗрччӗ хуть, ун чух тиесе килӗҫ, тен.

Вӗсен тӗлӗпе ватӑ казах Муваш Жунуспаев иртсе пырать, кантуртан таврӑнать пулмалла. Ҫил ҫинче хӗп-хӗрлӗ сӑн-питлӗ пулса кайнӑ каччӑсемпе хӗрсен ӗҫне курмасӑр епле иртсе каятӑн-ха? Вӑл сурӑх тирӗнчен ҫӗленӗ алшишне хывать те чул стенана хыпашласа пӑхать. Унтан, ҫамрӑксен ӗҫне ырласа, куҫӗсене хӗсет те сылтӑм аллине ҫӳлелле ҫӗклет, чӗлхипе чаклаттарса илет.

— Епле, асатте, килӗшет-и?— ыйтать унран Софья.

— Ку пысӑк юрттӑра ӑшӑ нумай пулать...— тет те старик хӑй ҫулӗпе малалла каять. Муваш Жунуспаев — пенсионер, вӑл ҫитмӗл ҫулта ӗнтӗ. Хӑйӗн ӗмӗрӗ тӑршшипех ҫап-ҫара ҫеҫен хир тӑрӑх сурӑх кӗтӗвӗсем хӑваласа ҫӳренӗ ватӑ ҫын ҫамрӑксен ӗҫне пӗтӗм чунтан ырлать,— ытла та лайӑх, ҫирӗп ҫуртсем тӑваҫҫӗ-ҫке вӗсем!

Ҫапла ҫав, ҫак ҫынсем кунта, ҫеҫен хире, пӗр ҫуллӑх — ик ҫуллӑх кӑна килмен, вӗсем тӑвакан ҫуртсем те нумай-нумай ҫулсем хушши лармалла. Хӑйӗн бригадинчи каменщиксемпе ӑшӑ пӳлӗмре канса тӑнӑ вӑхӑтра Виктор Беляев пӗтӗмпех каласа параймарӗ. Вӑл мунча маччине тимӗрпе бетонран тунӑ плитасенчен хывассине те асӑнмарӗ — ӑна валли автокран кӑна илсе килмелле-ха. Тимӗрпе бетонран тунӑ изделисем пирки ӗҫ паллӑ: вӗсене Экибастри ЖБИ завочӗ хатӗрлесе парать. «Бирлик» совхозра кӗҫех икӗ хутлӑ ҫуртсем тума тытӑнасси ҫинчен те калаймарӗ бригадир. Епле пултӑр-ха тата! 1963 ҫулхи

строительствӑ валли совхоза 650 пин тенкӗ уйӑрса панӑ!

Иртнӗ ҫулта та каменщиксем, платниксемпе штукатурсем алӑсене усса ларман. Вӗсем ҫине тӑрса ӗҫленине пула ӗнтӗ ҫӗнӗ ҫӗре куҫса килнӗ ҫынсен ачисем кӑҫалхи вӗренӳ ҫулне вӗр-ҫӗнӗ шкулти партӑсем хушшине ларса пуҫларӗҫ. Шкулсӑр пуҫне, совхозри строительсем кайӑк-кӗшӗк усрамалли пысӑк ҫурт, тырӑ склачӗ, пӗр общежити тунӑ. Нумаях та пулмасть клуб ӗҫлеме тытӑннӑ, ӑна хӑвӑртрах туса ҫитерме комсомолецсемпе ытти ҫамрӑксем темиҫе хутчен те воскресниксем ирттернӗ.

Ҫапла, Чӑваш республикинчи Элӗк тӑрӑхӗнчен килнӗ Софья Карикова пек хастар, ылтӑн алӑллӑ ҫамрӑксем тӑрӑшнипе, «Бирлик» совхозра ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ҫуртсем ӳссе ларӗҫҫӗ, унӑн урамӗсем вӑрӑмлансах пырӗҫҫӗ.

Анчах кунта урӑхла шухӑшлӑ, кукӑр алӑллӑ ҫынсем те пыра-пыра кӗреҫҫӗ иккен. Пӗлтӗр ҫуркунне, ҫавӑн пек, «Бирлике» Армениерен сезонниксен бригади пырса кӗнӗ.

— Каменщиксем кирлӗ-и сире?

Кантуртисем ҫав шабашниксемпе калаҫман та пулӗччӗҫ те, анчах пурӑнмалли ҫуртсем ҫитменни хӑшкӑлтарса ҫитернӗ вӗсене. Укҫине ытларах тӳлемелле пулсан та, кӗр енне темиҫе ҫемье ҫӗнӗ хваттерсене куҫма пултарӗҫҫӗ. Йывӑр килсен, шабашниксемпе те килӗшме тивет — совхозӑн хӑйӗн строителӗсем ҫитмеҫҫӗ.

Ҫав аякран килнисем тӑватӑ хваттерлӗ икӗ ҫурт купаланӑ. Материалӗ — кирпӗч мар, ахаль чул. Мачча каштисем хывмалли тӗле ҫитме пӗр ҫур метр пек кӑна юлсан, сасартӑк калама та ҫук вӑйлӑ ҫумӑр пырса ҫапнӑ. Икӗ талӑк пӗр чарӑнмасӑр, витререн сапнӑ пек тӑкӑнса тӑнӑ вӑл, икӗ талӑк аҫа-ҫиҫӗм кӗмсӗртетнӗ, ҫак ахӑрсаманан вӗҫӗ-пуҫӗ те пулас ҫук пек туйӑннӑ...

Унтан, ҫанталӑк ҫапах та лӑпланкаласа йӗркене кӗрсен, совхозри ҫынсем акӑ мӗн курнӑ: ютран килнӗ ҫынсен веле-селе аллисемпе купаланӑ ҫуртсене вӑйлӑ ҫумӑр пӗтӗмпе тенӗ пекех ишӗлтерсе антарнӑ. Ҫавӑнтан вара совхозра ютран пынӑ «маҫтӑрсемпе» калаҫмаҫҫӗ те. Кунта ҫине тӑрсах хӑйсен кадрӗсене хатӗрлеме тытӑннӑ. Халӗ вӗсем ҫителӗклӗ.

...Бригадир шутлани тӗрӗсех пулнӑ: кӑнтӑрлахи апат хыҫҫӑн силикатлӑ кирпӗч пӗтӗмпех пӗтнӗ. Мӗн-ха ӗнтӗ, кирпӗч тиесе килессе кӗтсе, ӗҫсӗрех тӑмалла-и?

— Вӑхӑтлӑха чул кӑларнӑ ҫӗре кайса ӗҫлемелле пулать,— тенӗ Виктор Беляев, кантура кайса калаҫса килнӗ хыҫҫӑн.— Кам килӗшет манпа пыма?

— Эп пыратӑп,— тенӗ никамран малтан Софья Карикова.— Юратмастӑп ӗҫсӗр ларма. Кайрӑмӑр, хӗрсем!

Часах ҫамрӑк строительсем тиеннӗ грузовик инҫетри сопкӑсем еннелле, чул кӑлармалли карьералла ыткӑннӑ.

## 2. Пӗтӗм ӗҫ—ҫын кӑмӑлӗнче...

ПӖР ЭРНЕ ӖНТӖ ҫеҫен хирте кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман ҫавӑрттарать. Малта та, кайра та ним те курӑнмасть. Умри ҫул унӑн икӗ енӗпе ҫулла ӳснӗ хӑрӑк кӑлкан юлашкийӗсем курӑннипе ҫеҫ кӑшт палӑрать.

Хӑйӗн Т-75 тракторӗн рычагӗсене аллисенчен вӗҫертмесӗр, Николай Васильев вӑхӑтран-вӑхӑта каялла ҫаврӑнса, хыҫалти чӳречерен пӑхать. Пӗр вунӑ метр каярахра, кӑпӑк пек ҫаврӑнакан юр витӗр, тепӗр тракторӑн мӗлки палӑрать. Хӑш чухне вӑл пачах курӑнми пулать.

Унта, ҫакӑн пекех пӑчӑ та сӗрӗмлӗ кабинӑра, ҫирӗп аллисемпе рычагсене пӑчӑртаса тытса, Васильевӑн ҫывӑх тусӗ Николай Крицовкин ларать. Вӗсене ответлӑ ӗҫ хушнӑ: мӑйракаллӑ шултра выльӑх фермине волокушӑпа сӗтӗрсе пӗрер капан улӑм ҫитерсе памалла. Ҫулӗ ҫывӑх мар: каллӗ-малле аллӑ километра яхӑн...

— Аташса каймӑр-и?— тесе ыйтнӑ Георгий Денисов бригадир вӗсене ҫула кӑларса янӑ чух.

— Пӗчӗк ачасем мар вӗт эпир, мӗн эс кирлӗ мара калаҫатӑн?— тенӗ ӑна хирӗҫ трактористсем.

Кун пек пӳтсӗр ҫанталӑкра аташса кайма та пулать ҫав. Анчах Николай Васильев ку ҫула пит лайӑх чухлать, ун тӑрӑх сахал мар ҫӳренӗ, кунти кашни лакӑма, кашни кукрашкана пӗлет, темелле, ҫавӑнпа та хӑйӗн йывӑр машинине кӑнтӑрла та, каҫ та тӗп-тӗрӗс илсе пыма пултарать. Вӑл ҫӗнӗ ҫӗре килнӗренпе ҫулталӑк ҫурӑ иртнӗ ӗнтӗ, кашни тӗмеске уншӑн ориентир пулса тӑрать.

Малта — ытла сарлаках мар лупашка. Ку тӗлте питӗ тимлӗ пӑхас пулать. Кӑшт аяккарах пӑрӑнтӑн — вара питӗ тӗплӗ кӗрсе ларатӑн, темиҫе тракторпа пӗр харӑс килсе туртмасӑр та тухаймастӑн.

Пӗрмай пӑлханса пынӑ Васильев кабинӑри кайри чӳречерен пӑхать. Крицовкин курӑнмасть. Ҫав самантрах машинӑна чарать те тула сиксе тухать. Ҫил-тӑман шӑхӑрнипе пӗрлех, вӑл хӑйӗн юлташӗн трактор дизелӗ кӗрленине илтет те, аллине ҫӗклесе ӑна хирӗҫ чупса каять...

— Ан юл, тёзка, ман хыҫҫӑнах пыма тӑрӑш! Хӑрамалла кунта!

— Ӑнланатӑп, малта лупашка!

— Лайăхрах пăхса пыр эппин!

— Юрĕ, Коля!

Каллех çул çинче хурçă гусеницăсем чанкăртатаççĕ, каллех алăсем рычагсене пăчăртаса тытнă. Николай Васильев халь каялла çаврăнса та пăхмасть, мĕншĕн тесен хăйĕн тусĕ ун хыççăнах пынине пĕлет. Хушăран ăна Крицовкин хăйĕн ĕнси хыçĕнчех сывласа пынăн туйăнать.

Акă ĕнтĕ, лупашка урлă каçса кайрĕç. Анчах та çул çинче ун пек шикленмелли вырăнсем татах та пур-ха, тата нумай!

Йывăр, анчах кулленех çӳремелли çул ку. Йывăр пулин те, паянхи рейса никама та мар, Николай Васильева асли туса янă. Темиçе уйăх каялла ăна кун пек ĕç шанса паман пулĕччĕç.

Мĕншĕн яман пулĕччĕç-ши?

Пĕтĕм ĕç — çын кăмăлĕнче...

Малтанах Николай Васильевăн пурнăçĕ ăнса пыман, темелле. Ача чухнех вăл иртĕнме, алхасма юратнă. Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухсан, практикăра пулса механик квалификацине илсен, унăн характерĕнче киревсĕртерех япаласем тата ытларах палăрнă. Пулчĕ-пулмарĕ вĕресе кайнă вăл, çынна тем те пĕр каласа тăкма, тепĕр чух çын çине ал çĕклеме те пултарнă. Хăйне пуринчен те мăнна хунă, никама та итлес кăмăл пулман унăн. Хăйĕн ĕçне, техникăна пит лайăх пĕлнĕ пулин те, юлташĕсем хушшинче хисеп пулман ăна. Килĕштермен вăл никампа та.

Çавăн пирки килсе тухнă та вăл уçман çеремлĕ çĕрсем çине. Унăн аллисем пысăк, сулăмлă ĕç ыйтнă, анчах чунĕпе вăл чапа тухасшăн çуннă. Ĕçне ăна тӳрех панă, ку енĕпе унăн кăмăлĕ тулнă. Анчах тепĕр енĕпе вара урăхларах пулса тухнă. Чапне кунта ĕçе каймалли нарядпа пĕрле кăларса паман. Хăйне пысăк чыс тăвассине кĕтмелле пулнă. Николай кĕтме юратман. Çавăнпа та вăл хăй валли тивĕççĕр нумай ыйтма, чăкăрташма тытăннă.

Çĕнĕ çĕре килсе çитсен темиçе кунтанах совхоз кантурĕнче халь килнисене çул укçи тата подъемнăй тенине пама тытăннă. Совхозĕ пĕтĕмпе те виç-тăват эрне малтарахран çеç çуралнă пирки, унăн кассинче укçи çителĕклех пулман-ха. Ĕçлеме пынисене çавăн пирки укçине тăруках пĕтĕмпе парса татайман.

— Кайрăмăр директор патне! — тенĕ Николай Васильев механизаторсенчен пĕрине. — Пире тивĕçлине халех пĕтĕмпе паччăр!

Директор вĕсемпе лăпкăн кăна калаçнă:

— Укçана эпир пурне те пĕр тан валеççе панă. Халлĕхе урăх çук пирĕн. Анчах та сире çирĕплетсех калатăп: темиçе кунтан юлашкине паратпăр, никама та парăмлă пулмастпăр.

Николай вĕресе кайнă:

— Тивĕçлĕ укçана пĕтĕмпе илмесĕр çак пӳлĕмрен тухса каймастпăр! Эпир кунта çерем уçма килнĕ, пире пурне те чăн малтан памалла!

Директор вăл хăй те ĕç укçи илменни çинчен каласа панă. Унтан, çиленме пуçласа, çапла каласа хунă:

— Уçман çерем çине килнисем чăн малтан хăйсем мĕн те пулин параççĕ, сирĕн пек сĕмсĕрленсе ыйтса тăмаççĕ. Принцип мар, ăнланни малта пулмалла. Сирĕнни пек кăмăлпа килте, кăмака çинче выртмалла пулнă...

Сăмах çине — сăмах. Унтан кăшкăрашу та пулнă. Юлашкинчен вара Николая директор кабинетĕнчен хăйĕн Чăваш çĕршывĕнчен килнĕ юлташĕсемех çавăтса илсе тухнă.

Георгий Денисов бригадир, çак çамрăк механизаторăн характерĕ такана çинчи шыв пек вылянса тăнине унччен̈ех сиснĕскер, унпа уйрăм калаçса, майĕпе йĕркене кĕртсе пыма шут тытнă. Калаçмалли сăлтавĕсем сахалах пулман. Кашни кунах мĕн те пулин сиксе тухнă. Чăн та, ĕçре çитменлĕхсем пулман, анчах мотора ĕçлеме чарса алăсене çусанах тем те пĕр пуçланса кайнă: тавлашусем, харкашусем, жалобăсем...

Иртнĕ çулла мар, тепринче-ха вăл, бригадир пĕр васкавлă ĕçпе кĕске кăна отпуска кайнă. Унччен малтан, бригадир яланах «тĕллесе» тăнипе, Васильев кăштах лăпланнă пек пулнă-мĕн. Анчах бригадир тухса кайсанах вăл тепĕр хут иртĕнме тытăннă.

Пĕррехинче вăл Виталий Ягункин ятлă юлташĕпе пĕрле Майкаин хулине кайнă — «Бирликран» пĕр аллă çухрăмри пысăках мар хула вăл. Унта туссем ăна-кăна илкеленĕ, унтан ресторана кĕрсе ларнă. Какăриччченех ĕçнĕ вара. Киле таврăнма кая юлнă вĕсем, çавăнпа та гостиницăна кайса çĕр выртма шут тытнă. Тем çитменнипе-çке, ытлашшипех хĕрнĕ Николай Васильев питĕ хытă шăвшав пуçласа янă, чарса та чарăнман. Ирĕксĕрех вара дружинниксене чĕнтерме тивнĕ.

Вăхăт нумай та иртмен, совхоза милицирен хут пырса çитнĕ, унта çак Васильев хулиганла хăтланнисем, çынсене ним сăлтавсăрах кӳрентерсе пĕтернисем çинчен çырнă...

Бригадă членĕсем тек тӳссе тăма пултарайман. Вăхăчĕ хĕрӳллĕ — тыр-пула пуçтарса кĕртме хатĕрленнĕ вăхăт пулнă пулин те, каччăсем каçхине хирти станра пухăннă. Калаçу пысăк пуласса пĕлсе, вĕсем совхозăн виççĕмĕш уйрăмĕн управляющине, Николай Скрипкăна чĕннĕ.

Çакăнта вара механизаторсем Васильева чăннипех хупăрласа илнĕ, вăл ку таранччен

мĕн-мĕн хăтланнисене пĕтĕмпех аса илнĕ. Бригадă чысĕ, çерем уçма килнĕ çыннăн тивĕçĕ çинчен каланă, хăйсен землякне ним хĕрхенмесĕр намăслантарнă. Юлашкинчен, пурте пĕр кăмăллă пулса, ăна хăйсен бригадинчен кăларса яма йышăннă...

Анчах та пуху вĕçленес умĕн сăмах илнĕ управляющи Скрипка çапла каланă:

— Эсир тĕрĕс калаçрăр. Çапах та бригадир таврăниччен кĕтер-ха, вăл килсен вара пуçĕпех калаçса татăлăпăр...

Чăнах та, Георгий Денисов хăй таврăнсан, Николай Васильевпа питĕ хытă калаçнă. Юлашкинчен, ăна куçĕсенчен тӳррĕн пăхса, çирĕппĕн асăрхаттарнă:

— Эсĕ е характерна халех улăштар, пур кирлĕ-кирлĕ мар йăласене кăларса ывăт, е... Кĕскен каласан, эпир сана юлашки хут каçаратпăр. Ытти юлташсем те çавăн пек шутлаççĕ.

Тепĕр кунне Денисов ун патне Павел Никитинпа Николай Антонова илсе пынă. Ку йĕкĕтсем техникăна ытла çителĕклех пĕлсе кайман, çавăн пирки вĕсен ĕçĕсенче час-часах кăлтăксем пулнă.

— Çак юлташсене вĕсен машинисенчи механизмсене йĕркелеме пулăш, машинăсене мĕнле пăхмаллине вĕрент вĕсене,— тенĕ вăл Васильева.

Кĕçех тыр-пула пуçтарса кĕртмелли вăхăт та çитнĕ. Николай Васильев комбайнпа та ĕçленĕ, кĕрхи çĕртме те тунă, капансем тумалли çĕре улăм та турттарнă. Халь ĕнтĕ вăл хăйĕнчен каярах ĕçлекенсенчен, опыт сахаллипе йăнăшсем тăвакансенчен кулман, вĕсенчен мăшкăлламан, хăех пыра-пыра вĕсене канашсем панă, пулăшнă. Ĕçри ӳсĕмсене пула унăн чĕри савăнăçпа тулнă...

Пирвайхи савăнăç хыççăн—иккĕмĕш çитсе тухать, унтан татах, татах... Ĕнтĕ халь унăн ялан халăхпа пĕрле пулас килет, вăл хăйĕн çитĕнĕвĕсемшĕн çеç мар, пурин ĕçĕсем ăннăшăн та чунтан савăнать. Унтан сасартăк пĕтĕм чун-чĕрепе, ăс-тăнпа мăн кăмăллanмалли килсе тухать: 1962 çулхи августăн вун пĕрĕмĕшĕнче чăваш ачи Андриян Николаев космосри «çереме уçма» хăйĕн чаплăран та чаплă, юмахсенче те пулман «Восток-3» карапне илсе тухать. Çак космонавт хăйсен землякĕ, Чăваш çĕршывĕнче ӳснĕ паттăр пулнăшăн пиллĕкмĕш трактор бригадинче каласа памалла мар савăнаççĕ, унпа мухтанаççĕ, кăмăлĕсем тулса килнипе Атăл юррисене юрлаççĕ...

Çакăн хыççăн герой-космонавтăн паттăрлăхĕ Николай Васильевшăн пур ĕçсене те хаклamалли виçе пулса тăнă.

...Çил-тăман малтанхи пекех куç-пуç курми çавăрттарать-ха. Анчах Николай Васильев туять: ак халех сĕвек сăрт пĕтет те, унтан пĕр çĕр утăм малтарахра улăм капанĕсем тăраççĕ. Ик-виç минутранах вăл, двигателе ĕçлеме чармасăрах, трактора чăн хĕрринчи капан умне пырса тăратать.

Унпа юнашарах Крицовкин çитсе чарăнать. Вĕсем капана пур енчен те пăхса çаврăнаççĕ.

— Çул çинче арканса каймĕ-ши вăл?— ыйтать Крицовкин.

— Арканма тивĕç мар,— тет ăна хирĕç Васильев.— Йĕркеллĕрех, асăрханса илсе кайăпăр та...

Вĕсем кĕçех волокушăна йĕркене кĕртеççĕ. Малтан сăнамалла туртса пăхаççĕ — чиперех шăвать. Вара каялла кайма тухаççĕ. Тĕттĕм пулса ларичченех киле таврăнса çитес пулать!

Пĕтĕм ĕç — кăмăл мĕнле пулнинче...

Паллах, пур çын кăмăлĕ те пĕр пек пулма пултараймасть. Калăпăр, совхозри чи лайăх комбайнерăн, Павел Петровăн, кăмăлĕ çав тери сăпайлă, вăл кама та пулин сив сăмах каланине илтеймĕн. Анчах совхозри кайăккĕшĕк пăхакансем хушшинче хăйĕн ĕçĕсемпе уйрăмах палăрса тăракан Лидия Козловăн кăмăлĕ — вут-хĕм пек, вăл часах чĕрре кĕрсе кайма та пултарать. Ан тив, кашнин характерĕ-кăмăлĕ хăйне майлă пултăр вăл. Анчах темле пулсан та, çыннăн кăмăлĕнчен пурĕ пĕрле тăвакан ĕçе, халăха усă пултăр. Çынсене санпа ĕçлеме те шанчăклă, ансат пултăр.

Совхоза каялла таврăннă чух Николай Васильев пĕрмай çав характер тени çинчен шухăшласа пычĕ. Пĕтĕм ĕç — çавăнта... Вара чăнах та вăл хăйĕн характерне улăштарма вăй çитерчĕ. Пачах урăхла çын пулса тăчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ халĕ йывăр рейссене ăна, Николай Васильева, яраççĕ. Ахальтен мар ăна халь пиллĕкмĕш трактор бригадинче бригадир помощникĕ туса хунă.

### 3. Чĕрре кĕрсе каякансем

КАНТУРĂН ВĂРĂМ КОРИДОРĔ тăрăх Лида Козлова çăмăллăн, васкаса утса пырать. Халь кăна сивĕрен кĕнипе, унăн пичĕ хĕпхĕрлĕ, пăхма çав тери илемлĕ, анчах хурарах пысăк куçĕсенче вут-çулăм çиçнĕн туйăнать. Ăна тĕл пулакансем хăйсен ăшĕсенче кăмăллăн кулса пăрănса юлаççĕ: халех акă кама та пулин питĕ хытă лекет унран...

Лида рабочком председателĕ Николай Игнатьев ларакан пӳлĕмĕн алăкне карт! туртса уçать те тӳрех çунтарма тытăнать:

— Ларатăн эппин? Атя, лар, лар! Анчах эпир хуть те çурăлса кай! Кăвакалсем валли витаминсем çук... Мĕн тумалла? Кала!

Николай нимле мар пулса каять, ăна хирĕç тăруках пĕр сăмах та калаймасăр ура çине тăрать. Ку пўлĕме вăл висĕ кун каялла çеç кĕрсе вырнаçнă-ха, çын пырсан лартма тепĕр пукан та çук унăн. Çавăнпа та хăй пуканне çĕклесе тухса пўлĕм варрине вырнаçтарать.

— Лар, Лида...

— Ман ĕç нумай, ларса çўреме вăхăт çук!

Хĕр пичĕ тата ытларах хĕрелсе каять, анчах хальхинче сивĕ пулнипе мар, ăшчикки вĕресе кайнипе.

— Силос илсе пымарĕç, сахăр кăшманĕ çук. Çутă çук,— тет Лида малалла.— Кунта ларакансем мĕн çинчен шухăшлаççĕ-ши?

Игнатьев куçлăхне тўрлетсе лартать.

— Кайăк-кĕшĕк валли пирĕн апат-çимĕç нумай, Лида. Ала витĕр тухса ўкнĕ тулă та, вир те — тем чухлех. Пустуй вăрçатăн эс.

Рабочком председателĕ çак сăмахсене калать те çавăнтах ўкĕнет. Кайăк-кĕшĕк пăхакан хĕрĕн кун пирки малтанах хатĕрлесе хунă ответ пур. Вăл Игнатьев патне çывăхарах пырать те аллипе сĕтел çине çат! тутарать.

— Сана хăвна кашни кун пĕр йышши пăтăпа тăрантарса усрасан, эс мĕн калăн-ши, тăванăм?! Мăян шўрпи ыйтма пуçламăн-ши?

Николай, тутине пăркаласа, алла кăранташ тытать, таса хут татки тупать.

— Директор патĕнче пултăн-и эс, кун çинчен зоотехник пĕлет-и?

— Директор çук, зотехник пирĕнтен пытанса пурăнать...

Игнатьев, кулас килнине пытарса, хăй ăшĕнче шухăшласа илет:

— Эс çакăн пек çĕмĕрсе килессине пĕлнĕ пулсан, эпĕ те тарса пытаннă пулăттăм...

Лида, тăрук ывăннă пек пулса, пукан çине ларать те сасартăк лăпланнă сасăпа калаçма тытăнать:

— Эс ан çилен мана, Николай. Чун кўтсе çитнипе кăшкăрса тăкрăм. Чăнах та силос питĕ кирлĕ. Тата çутă пирки те ĕçе татса парас пулать ĕнтĕ. Хĕлле кунĕсем кĕске, кăнтăрла иртнĕ-иртмен тĕттĕмленме пуçлать...

— Силосне паян-ыранах илсе пырĕç сан патна,— тет рабочком председателĕ, кайăк-кĕшĕк пăхакан хĕр мĕн-мĕн ыйтнисене хут çине çыра-çыра.— Анчах çутă пирки... Электричествă пирĕн фермăсенче кăçалах пулаймасть пулĕ-ха. Тĕп усадьбăран инçерех вĕсем. Хунарсем ытларах туянмалла пулать, ун пирки калаçăпăр.

Хăй çав вăхăтрах шухăшлать: «Çивĕч хĕрача! Ахальтен мар малтан Патăръелĕнчи «Гвардеецра» ĕçленĕ. Вăл колхоз ячĕ пĕтĕм Чăваш çĕршывĕнче пысăк хисепре вĕт...»

Николай Игнатьев хăй — Канаш çывăхĕнчи Мăн Пикшик çынни. Чăваш республикинчен килнĕ кашни çамрăка хăйĕн тăванĕсене пĕлнĕ пекех пĕлет. Кунсăр пуçне, вăл совхозри комсомолецсен чăн пирвайхи секретарĕ пулнă.

— Эппин, калаçса татăлтăмăр?— ыйтать Лида.

— Тĕп-тĕрĕс, татăлтăмăр,— çемçен кулса ответ парать Николай.

Хĕр пусĕнчи тутрине хытăрах туртса çыхать. Кула-кула сывпуллашать:

— Астăвăр! Тепринче Мурашовăпа иксĕмĕр килсе кĕретпĕр, тўссе кăна тăрăр вара!

— Эс çурранах килтĕн-и?— тĕлĕнерех ыйтать Николай.— Чим-ха, вăл еннелле кĕçех машинă каймаллаччĕ. Тем тесен те, пĕр пилĕк çухрăм танккамалла. Сивви — çирĕм сакăр градус...

— Хăнăхнă эпир,— тет ăна хирĕç Лида, пўлĕм алăкне уçса.— Пырса курăр пирĕн пата!

«Чăн та чĕрре кĕрекен хĕр ĕнтĕ!»— шухăшлать ун çинчен Игнатьев, вăл тухса кайсан.

Çак ята кайăк-кĕшĕк пăхакан хĕрсене чăн малтан Садык Жайляубаев панă пулас. Ăна, мĕскĕне, çак хĕрсенчен яланах пуринчен ытларах лекет вĕт-ха. Должнăç енĕпе вăл вĕсен руководителĕ вырăнĕнче шутланать пулсан та, ăна, çирĕм çулхи каччăна, вĕсемпе калаçса вĕçне-хĕрне тупма йывăр çав. Вĕсем ăна фермă суртне хăвăртрах туса пĕтерессишĕн пĕрмай хистесе чуптарчĕç, халĕ те кулленех мĕн те пулин ыйтаççĕ. Паян вĕсене темле çĕнĕ йышши кормушкăсем пар, ыран кăмакасене лайăх купалакан маçтăр илсе кил. Хăйсем мĕн ыйтнине туса памасăр нимпле те лăпланмаççĕ. Анчах, тепĕр енчен илсе пăхсан, кайăк-кĕшĕк пăхакан хĕрсем условисем ыйтаççĕ кăна мар, вĕсем хăйсен кайăк хуçалăхне те лайăх тытса пыраççĕ: 1500 кăвакал — Пекин кăвакалĕсем — вĕсен яланах тутă, фермă кил хушшинче ĕлĕкхи улпут майрисем пек самăр, енчен енне сулăнкаласа утаççĕ...

Чултан купаланă фермă çурчĕ — сарлака, вăрăм çурт — Карасу (Хурашыв) тенĕ пысăках мар сырма хĕрринче ларать. Çынсем каланă тăрăх, вăл таçта питĕ инçетре, Караганда патĕнчех пуçланать те çеçен хир урлă темиçе çĕр километр тăршшĕ авкаланса килет. Казахстанри шăрăх çулла вăл типсе ларать. Анчах фермă çывăхĕнче пысăках мар лупашкаллă вырăн пур та, унта шыв пĕрмаях тытăнса тăрать. Халь тата кунта пĕве тунă та — кăвакалсемшĕн чăн-чăн ырлăх ĕнтĕ!

Малтанах Лида Козлова кунта Зоя Пагильдинăпа пĕрле ĕçленĕ. Иккĕшĕ вĕсем кайăксен «керменĕнчи» шăтăк-çурăксене питĕрсе ăшăтнă, хăйсене выртса тăмалли пÿлĕме те хăйсемех тунă. Чÿречесем таврашĕнчи çил кĕрекен çурăксене тăмпа шăлса хунă. Кăнтăрла кăвакалсене тула кăларса çÿретнĕ, каçхине çурта хупса лартнă.

Пĕррехинче, ир енне, вĕсем хăрушла шăвшав илтĕннипе вăранса кайнă. Тем пирки пăлханса кайнă кăвакалсем çунаттисемпе çапнă, такама чĕннĕ пекех нартлатнă.

— Мĕн пулнă кăвакалсене?— пăшăрханса ыйтнă Зоя.

— Кам пĕлет!— тенĕ Лида, хăвăрт тумланса.

Хĕрсем кайăксем патне чупса кайнă. Вĕсене курсан кăвакалсем кăштах лăпланнă, анчах çав самантрах Лидăпа Зоя урайĕнче икĕ кайăк вилли выртнине асăрханă.

— Пăсара пăвса пăрахнă,— тÿрех тавçăрса илнĕ Лида.

— Ну, пĕрре вĕреннĕскер, пĕтерет халь пире,— тенĕ Зоя.

Васкасах, хĕрсем кăвакалсене уçăлма кăларса янă, хăйсем фермă çуртне тĕрĕслеме тытăннă. Пĕр тĕттĕм кĕтесре пысăках та мар шăтăк асăрханă. Пăсара шăтăкĕ!

— Çакăнтан килсе кĕнĕ вăл эсрел,— пăшăлтатса каланă Зоя.— Часрах шыв илсе кил, эпир ăна халех мунча кĕртĕпĕр. Инçех тарайман пулĕ-ха...

Шăтăка вĕсем икĕ витре сив шыв янă, аллисене чул тытса, шăтăк таврашĕнчи çĕре çапма тытăннă. Унтан сасартăк хайхи шăтăкран тискер кайăкăн вăрăм кĕлетки ывтăнса тухнă. Ун шăтăкне хăвăрт кăна питĕрсе лартса хĕрсем пăсарана хăвалама тапратнă. Чупсан-чупсан, вăл икĕ алăк хушшине хĕсĕнсе ларнă та, унăн вилĕмĕ те çавăнтах пулнă.

Часах тата кайăк ашне юратакан тепĕр тăшман — чее тилĕ çÿреме тытăннă. Вăл фермă кил хушшинех пырса кĕме хăяйман, пĕве хĕрринчи сайра хăмăшсем хушшине пытанса выртнă та кунĕ-кунĕпе çăвара тутлă апат пырса лекессе кĕтнĕ.

Кайăксене пăхакан хĕрсем часах асăрханă: темшĕн, кăвакалсем шыв хĕррине пыма пăрахрĕç! Ку çеç те мар, вĕсем пĕве еннелле асăрханса, пĕр ушкăналла пухăнса, нартлатса пăхакан пулнă. Юлашкинчен, кайăксем мĕн пирки çавăн пек пулса кайни палăрнă— тилĕрен хăраççĕ! Лида совхозăн тĕп усадьбине кайса çакăн çинчен казах-сунарçăсене каласа панă та, икĕ кунтан, шăп кăнтăрла, фермă патĕнче пăшал сасси кĕрслетнĕ...

— Кайăксене лайăхрах асăрхас пулать,— тесе каласса татăлнă хĕрсем хăйсем хушшинче.— Çеçен хирте тилĕсем сахал мар, вĕсем пире питĕ нумай сиенлеме пултараççĕ...

Фермăра Лида Козловăпа Зоя Пагильдина комсомолкăсен аллине тăватă уралла сăтăрçăсем кăна мар, икĕ ураллисем те лекнĕ. Пулнă ун пекки, мĕн каласси пур ĕнтĕ!

Кĕркунне анлă хирсенчен пухса кĕнĕ пĕтĕм тырă тĕп усадьбăри складсене шăнăçман. Çавăн чух вара кайăк фермин çурчĕ çурри пушă пулнине аса илнĕ те тыррăн пĕр пайне унта хывма шут тытнă. Хĕрсене каласа хăварнă:

— Асăрхакалăр эсир кунта...

Пĕр тĕттĕм те вăйлă çил вĕрнĕ каçхине фермă çывăхĕнче автомашинă моторĕ кĕрлени илтĕнсе кайнă. Дежуркăра çывăракан хĕрсем çакна тÿрех илтсе вăранса кайнă.

— Грузовик пулмалла,— тенĕ Лида.

— Çил мар-ши? Тен, ахаль çавăн пек илтĕнчĕ пуль?— ĕненсех кайман ăна Зоя.

Лида хулпуççи çине ваткăллă пиншак уртса янă та алăк патнелле утнă.

— Тухса тĕрĕслем-ха эпĕ çапах та. Пирĕн кунта совхоз пурлăхĕ вĕт-ха — тырри те, ашĕ те...

Тепĕр минутранах вăл каялла чупса кĕрсе хĕр-тантăшне шăппăн пĕлтернĕ:

— Тĕп-тĕрĕс. Вăрăсем тырă тиесе кайма килнĕ. Грузовикпа.

Лампă çутмасăрах, вĕсем иккĕшĕ те хăвăрт тумланнă. Мĕн тăвас? Вĕсем патне тухса халех кунтан кайма хушас-и? Анчах та кам пĕлет, тем шут тытнă çынсем вĕсем... Виçĕ арçын. Шикленмелле. Тем те туса хăварма пултараççĕ çĕрле вăрра тухнăскерсем!

— Акă мĕн, тусăм,— тенĕ вара Лида хăйĕн тантăшне çирĕппĕн.— Халех лашасем тăракан витене чуп та, пĕрин çине утланса тĕп усадьбăна вĕçтер. Ĕлкĕрес пулать! Васка!

Зоя фермăран тухса çеçен хир урлă чупнă. Вите патне çитме пĕр километр пулать. Хирĕç вĕрекен çил ăна ураран ÿкернĕ, сывлама паман. Витене çитиччен хĕрĕн пĕр вăй та юлман. Анчах лаша тытса утлансанах, вăл сиккипе тăпăртаттарнă — тÿрех директор хваттерне.

Часах темиçе рабочи-дружинник лартнă «газик» фермă патнелле ыткăннă. Вăхăтра ĕлкĕрнĕ дружинниксем, вăрланă тырра тиесе каякан грузовике çул çинчех ярса тытнă. Хĕрсене çакăн пек сисĕмлĕ те хăюллă пулнăшăн дирекци ячĕпе тав тунă...

...Зоя Пагильдина тăван килне, Хĕрлĕ Чутая, отпуска кайнă. Лида Козловăна пĕччен ĕçлеме йывăр пулнă.

— Сана пулăшакан тупса паратпăр,— тенĕ зоотехник.— Ыранах кунта пулĕ вăл...

— Çук ĕнтĕ, хам валли помощниксем тупма эсир мана хама ирĕк парăр,— тенĕ ăна хирĕç Лида.

— Вĕсен кăмăлне пăхса-и?— куларах ыйтнă Садык Жаляубаев.

— Кайран куратăр унта.

Икĕ кунтан Зоя вырăнне Лидия Мурашова, Канаш районĕнчен килнĕ хĕр йышăннă. Ăна Лида Козлова унчченех пĕлнĕ. Килĕштернĕ вĕсем.

Пĕррехинче фермăна тырă патне Николай Ахметов ятлă çамрăк шофер-казах пынă. Рабочисем тырă тиенĕ вăхăтра вăл хĕрсем патне дежуркăна кĕрсе ларнă.

— Чей ĕçтермĕр-ши кăштах, ырă хĕрсем, шăнтăм...

— Тархасшăн ара, лайăх çыншăн шыв кам хĕрхентĕр?

Ăна чей ярса панă, анчах хăй вăл çав хушăрах кунта çĕнĕрен килсе кĕнĕ хĕр çинчен куç илмен. Маттур! Юлашкинчен, чылай пысăк пиалăри вĕри чее ĕçсе ярсан, вăл хĕрсене тав тунă та шӳтлеме пăхнă:

— Чейĕ тутлă та, савăчĕ пĕчĕккĕ...

— Апла пулсан, санăн тӳрех çак витререн ĕçмеллеччĕ, вăл кăшт пысăкрах,— юри тăрăхласа каласа хунă Лида Мурашова.

— Эс те чĕрре кĕрсе кайма юратаканскер пулмалла,— кулса илнĕ Ахметов.— Аптрамалла сирĕнпе!

— Çавăн пек çав эпир, мĕн тăвас тетĕн!— хĕрсем иккĕшĕ те пĕр харăс ахăлтатса кулса янă.

## 4. Çывăх çынсем

ЧĂН МАЛТАН вĕсем эшелонра, Чăваш çĕршывĕнчен Казахстана килнĕ чух паллашнă. Александр Николаева çак хурарах çӳçлĕ, питĕ çивĕч хĕрача тӳрех кăмăла кайнă. Анчах Галя Евсеева хăй те çӳллĕ, йăрăс пӳллĕ каччă çине куç хывнă — килĕшнĕ вăл ăна.

Вырăна çитсен вара вĕсем тата çывăхарах паллашнă. Унта Александр хĕрсене палаткă лартма пулăшнă. Çавăн чух калаçса кайнă та вĕсем:

— Эс Шупашкартан-и, Галя?

— Çапла. Анчах мĕншĕн ун пек шутларăн эсĕ?

— Çӳçне Шупашкар хĕрĕсем пек тураса хунă. Çавăнтан пĕлтĕм.

— Килĕшмест-им мана ун пек турани?

Александр, кăштах именсе, ăна мухтаса илнĕ. Галя хăй 21-мĕш стройуправленинче штукатур пулса ĕçлени çинчен каласа панă. Хромланă кельмине[1] те кăларса кăтартнă:

— Акă, Шупашкар комсомолецĕсем асăнмалăх парса ячĕç. Эсĕ ху... тракторист-и?

— Пĕлтĕн. Манăн хальччен хи кил Вăрнар районĕнчи «Звезда» колхозра пулнă...

Вĕсем малтанхи кунсенчех пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăннă. Александр механизаторсемпе пĕрле хирти стана куçса кайнă, Галя тĕп усадьбăра çуртсем тума юлнă. Çу каçа вĕсем пĕрререн пĕрре, комсомолецсен пухăвĕнче тĕл пулнă.

— Ну, çĕр те вара кунта! — каласа панă Александр.— Çав тери хытса ларнă, хуть те динамитпа сиктер ăна!

Каччă хăйĕн паллайă хĕрне суйса каламан. Пирвайхи çуркунне кунти çĕре сухалама питĕ йывăр пулнă. Вĕтĕ чулпа хутăш хăйăрлă тăпра механизаторсен чунне илнĕ. Пĕр сменă вăхăтĕнчех плугсен тимĕрĕсене икшервиçшер хут улăштарнă — вĕсем çав тери хăвăрт мăкалса ларнă. Çирĕпрех пулчăр тесе, вĕсем çине рессорăсем тăвакан хурçă пĕçерсе лартнă. Хирти станран нумай аякра пĕр-пĕр пылчăклă лакăма кĕрсе ларнă горючи цистернисене ал вĕççĕн çĕклесе тенĕ пекех туртса кăларнă. Сухаламалли çĕрĕ тĕп усадьбăран 25 километрта пулнă, унта час-часах шыв та вăхăтра илсе пырайман. Çавăнпа та радиаторсене çынсем ĕçмелли шыва яма тивнĕ, вара çыннисем хăйсем шывсăр тăрса юлнă.

Галя каччă каласа панисене тимлĕн, темле хавассăн пăлханса итленĕ. Ăна унăн хĕвелпе пиçсе ларнă, кăштах начарланса туртăннă сăн-пичĕ, унăн хăрăмпа машин çăвĕ кĕрсе ларнă хурарах аллисем кăмăла кайнă. Çак пуху хыççăн вĕсем чăн-чăн туссем пек уйрăлнă.

Кĕркунне трактор бригади поселока таврăннă. Пин те пилĕк çĕр гектар çинче çурхи тулă та, вир те аван пулнă. Уйрăм участоксенче кашни гектартан 17-шер центнер тĕш тырă илнĕ. Пĕр сăмахпа, пысăк ĕç пуçламăшĕ лайăх пулнă...

— Пăхатăп та, эсир те маттур ĕçленĕ кунта! Эппин, кăçал пĕлĕт айĕнче мар, ăшă çуртсенче хĕл каçатпăр,— тенĕ Александр Гальăна.

Çапла çав, кĕркуннеччен казахсен аулĕнчен кăшт аяккарахра щитсенчен пухнă темиçе çурт тата общежити туса лартнă. Общежитине совхоз гвардийĕ — трактористсем пырса вырнаçнă. Строительсем те çавăнтах пырса кĕнĕ.

Александрпа Галя пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулма пуçланă. Вĕсен туслăхĕ кулленех çирĕпленсе, илемленсе пынă. Ытти каччăсем

[1] Кельмă — çурт купаланă чух кирпĕч айне раствор илсе хумалли виç кĕтеслĕ калак.

çакна асăрханă та кулкалама та тытăннă: атьсемĕр, пăхăр-ха, ара, часах туй пулать вĕт, уçман çеремсем çинче тата тепĕр чăваш çемйи чăмăртанать! Аван, питĕ аван ку! Мухтамалла!

Анчах халлĕхе вĕсен уйрăлмалла пулнăха. Совхоз дирекцийĕнче тахăшĕ Галя Евсеева апат пит тутлă пĕçерни çинчен илтнĕ те, ăна кантура чĕнсе илнĕ.

— Акă мĕн, Галя,— тенĕ ăна,— сана Павлодара кулинарсен курсне каймалла пулать. Хирĕç пулмастăн пуль, тетпĕр. мĕншĕн тесен пире ун пек специалистсем те кирлине хăвах ăнланатăн...

«Бирлика» хĕр çуркунне тин таврăнса пынă. Унăн пĕчĕк чăматанĕнче, ытти хатĕр-хĕтĕрсемпе пĕрле, пĕр çыхă çыру пулнă, вĕсене пурне те Александр Николаев аллипе çырнă. Хĕлĕпех унпа тĕл пуласси çинчен шухăшласа пурăннă çамрăк хĕр, анчах халь те тĕл пулма май килмен — вăл таврăниччен трактор бригадисем хирти стансене тухса кайнă, сухалама, акма тытăннă.

Хытă тунсăхланă çамрăк хĕр хăйĕн савнийĕшĕн. Халĕ вăл хăйĕн шухăш-туйăмĕсене тантăшĕсенчен те пытарман ĕнтĕ. Хиртен, Геннадий Денисов бригадинчен, йăпăртлăха тĕп усадьбăна пырса тухнă трактористсенчен хăшĕ тĕ пулин столовăя кĕрсе Александрăн кĕске кăна çыруне тыттарсан, хĕр чĕри вутçулăмпах çунма пуçланă.

Çурхи тырăсене акса пĕтерсен Александр хăй те тĕп усадьбăна таврăннă. Сăпайлăн, ачашшăн калаçнă вăл. Галя вăл темиçе кунлăха çеç килнĕ пуль, тесе шутланă, анчах Александр шап-шур шăлĕсене кăтартса çемçен кулса илнĕ те хавассăн каласа хунă:

— Малашне ĕнтĕ пĕрле пулатпăр. Мана кунта комбайнсем юсаса пурăнма хушрĕç. Тимĕрçĕ пулса ĕçлетĕп ĕнтĕ.— Унтан шăппăн, йăвашшăн хушса хунă:— Сана çав тери курас килекен пулса çитрĕ...

Мĕн тери ырă çеçен хирти каçсем! Çўллĕ тўпере мамăк пек çемçе пĕлĕтсем шăваççĕ, вĕсене ансах ларайман хĕвел çути хĕретет... Ăшă та йăваш çил инçетрен сухаласа пăрахнă çĕр шăршине, тракторсем васкамасăр кĕрленĕ сасса илсе çитерет. Пурçăн пек çемçе кăлканпа витĕннĕ хир тăрăх утмастăн, ним сисмесĕр, сывлăшра вĕçнĕ пек пыратăн...

Александрпа Галя алăран алла тытăнса кашни каç çеçен хирте çўреççĕ. Тем çинчен те калаçаççĕ вĕсем, шўтлеççĕ, пĕр-пĕрне хăваласа çитмелле чупаççĕ, чăваш юррисене юрлаççĕ. Пĕррехинче каччă хĕре самаях çўллĕ сăрта илсе хăпартать те инçетри тусем çине кăтартать:

— Ав çавăнта пирĕн район центрĕ...

— Пĕлетĕп, Баян-Аул,— тет Галя.

— Баянĕ — хĕр пулнă вăл, çавна пĕлетĕн-и? Легендă та-ха ку...

— Мĕнле легендă? Каласа пар эппин...

— Авалхи ĕмĕрсенчен легендăсем нумай юлнă. Уйрăмах, юрату çинчен калаканнисем нумай. Çав легендăсенчи юрату питĕ илемлĕ, анчах кашнинче тенĕ пекех хурлăхпа вĕçленет...

— Кала, çавах кала!

—...Тахçан-тахçанах, казахсен пĕр аулĕнче Баян ятлă тĕлĕнмелле илемлĕ хĕр пурăннă. Хăйĕн пуян ашшĕ-амăшне вăл калама та çук савăнтарнă. Ун çине куç хывнисем, ăна качча илесшĕннисем пит нумай пулнă, анчах унăн çăткăн ашшĕ хĕрĕшĕн илме ĕмĕтленнĕ калыма — хулăм укçине — тўлеме пултараканзем тупăнман. Таврари пĕр питĕ вăйлă, Кодар ятлă çыннăн çеç хĕршĕн тўлемелĕх укçа-тенкĕ пулнă.

Ашшĕ часрах туй тăвасшăн васкатнă. Анчах Баянăн çамрăк та хĕрўллĕ чĕри хаяр кăмăллă Кодара юратман. Тен, ăна çав вăйлă çын юрттине ирĕксĕрлесех илсе кайнă пулĕччĕ,— шăп çав вăхăтра вĕсен аулĕ витĕр Козыкорпеш ятлă маттур юланут иртсе пынă...

Пĕр-пĕрине пĕрремĕш хут курсанах, Баянпа Козыкорпешăн çамрăк та вĕри чĕрисем пĕр пек тапма тытăннă. Леш вăйли кун çинчен пĕлсен хулăм укçине тата ўстернĕ. Ашшĕ хăйĕн хĕрне халех, çак самантрах Кодар юрттине куçса каймалла тесе хĕсĕрлеме тытăннă. Вара Баян, каçхине джигитпа пĕрле ларнăскер, унăн кăкри çинелле ывтăннă.

— Илсе кай мана кунтан, Козыкорпеш, телей пулмасть пире кунта,— тенĕ вăл.

— Ыран ирхине, хĕвел тухнă чух, манăн çивĕч утăм пире инçетри аула илсе кайĕ, юратнă Баянăм,— тенĕ ăна хирĕç хĕрўллĕ юланут.

Ĕçĕ çавăн пекех пулатчĕ пуль те — кун çинчен леш вăйлă çын темле майпа пĕлсе, çĕрле çав каччăна вĕлернĕ. Ахаль çынсем Козыкорпеша Аягус ятлă юхан шыв хĕррине пытарнă, вара çавăнтанпа Баян ăсран тайăлнă пек пулнă, тет. Çĕрĕ-çĕрĕпех ăна хăйĕн савнийĕ масар шăтăкĕнче йынăшнисем илтĕннĕ, хĕр ăна ĕмĕр-ĕмĕр никампа та улăштармастăп тесе тупа тунă.

Хайхи ашшĕ хăйĕн иртĕнчĕк хĕрне юрттăна питĕрсе лартать те, ăна пĕрре çурăм урлă пушăпа туртса илсе, хаяррăн каласа хурать:

— Эпĕ саншăн хулăм укçи илнĕ ĕнтĕ, пўтсĕр! Кай хăвăн тур çырни патне!

— Юрĕ, атте, кайăп,— сасартăк лăпкăланнă сасăпа калать ăна хирĕç хĕрĕ,— ыран ир хĕвел тухнă чухнех кайăп ун патне...

Анчах тул çутăлнă чух çынсем Баян кĕлетки Козыкорпеш масарĕ çинче ӳппĕн выртнине асăрханă. Ăна пичĕпе хĕвел еннелле çавăрса пăхнă та хăранипе кăшкăрсах янă: хĕр кăкринчен хурçă çĕçĕ аври курăнса тăнă. Çапла Баян хăйĕншĕн пур çынсенчен те хакли пулнă савнийĕ патне, хăйĕн пурнăçĕпе юратуне пама хатĕрленнĕ çын патне кайнă. Вара ăна та Аягус хĕрринех, савнипе юнашар пытарнă...

Александр калама чарăннă.

— Епле хăрушă легендă,— тенĕ Галя, хăйĕн çирĕп хулпуççийĕпе каччă çумне йăпшăнса.

— Питĕ хăрушă çав...

Вĕсем иккĕшĕ те çак вăхăтра ĕлĕк-авал пĕр-пĕрине юратакансем сахал мар çавăн пек пĕтни çинчен шухăшланă. Мĕн тери тĕрĕс мар пулнă вăл!..

Тепĕр эрнерен вĕсем пĕрлешнĕ. Совхозра пĕр-пĕринпе çав тери туслă пурăнакан чăваш çемйисем — Шупашкартан пынă Валерипе Нина Гавриловсен, Канаш районĕнчен килнĕ Владимирпа Рая Александровсен, Вăрнар çыннисен — Николайпа Галя Давыдовсен тата ытти чылай çынсен çемйисем çумне тепĕр çемье хутшăннă. Телейлĕ пултăр вĕсен пурнăçĕ!

## 5. Пĕтĕмĕшпе илсен...

ЮР-ТĂМАНЛĂ çил чарăнма пĕлмесĕр ахăрать, кантур чӳречисене чĕтретет, юрпа хутăш вĕтĕ хăйăрпа сапать. Манпа калаçакансем — совхоз директорĕ Михаил Павлович Юрьев тата совхоз парторгĕ Кабальхак Шаймарданович Абдиров пальтосемпех ларасçĕ: кабинетра сивĕ.

— Сирĕн республикă пирĕн пата çав тери лайăх çамрăксем ярса пачĕ,— тет директор.— Туслă, ĕçчен халăх...

— Вĕсем пирĕн тĕп шанăр пулса тăрассĕ,— хушса хурать парторг.— Комсомолецсем нумай. Коммунистсем те пур.

Совхозăн çĕр лаптăкĕ питĕ пысăк. Директор сăмахĕсемпе каласан, унта географире мĕн пурри пурте пур: сухаламалли çĕр, выльăх çӳретмелли вырăнсем, çарансем, кӳлĕсем, юхан шывсем, сăрт-тусем, тем те... Çитес çуркунне сухаласа акма халлĕхе 25 пин гектар хатĕрленĕ. Совхозра 121 трактор, 112 комбайн, 92 автомашинă. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен аллинче 10 пин сурăх, 653 ĕневыльăх, 150 сысна, 1500 яхăн Пекин кăвакалĕсем.

Ку хуçалăх çамрăк-ха, анчах унăн ӳссе пымалли майсем питĕ пысăк. Малашне тата нумай çерем уçмалла. Выльăх-чĕрлĕх хисепĕ те тем териех ӳсмелле. Хастар чĕреллĕ çынсем пысăк сад лартса ӳстерме, утар тума ĕмĕтленессĕ. Тепĕр 2—3 çултан ку хуçалăх çĕршыва темĕн чухлĕ тĕш тырă, аш-какай, сĕт тата ытти ял хуçалăх продукчĕсем паракан фабрикă пулса тăрать.

Çичĕ çуллăхăн пиллĕкмĕш çулне совхоз çирĕп утăмсемпе пусса кĕчĕ. Çуракине тĕплĕн хатĕрленессĕ, кăнтăрлахи ĕçрен уйăрмасăрах, механизаторсен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлессĕ. Политкружоксенче КПСС Центральнăй Комитечĕн Ноябрьти Пленумĕн материалĕсене çине тăрса вĕренессĕ. Пурнăç вĕресе тăрать...

Эпĕ совхозри хамăрăн землякcемпе сывпуллашнă чух вĕсем мана çапла хушса ячĕç:

— Хамăр республикă ĕçченĕсене хĕрӳллĕ салам калăр! Пĕлсех тăччăр вĕсем — пирĕншĕн, уçман çеремлĕ çĕрсем çине килнисемшĕн, вĕсен малашне те хĕрелмелле пулмĕ. Эпир хамăр республикăн чысне нихçан та ӳкерес çук, ĕç ялавне яланах çӳлте тытса пыратпăр!..

Ырлăх та сывлăх çак хастар çынсене!

«Бирлик» совхоз — Шупашкар.
Январь, 1963.

Валентина ПЕТРОВА

# ХИТРЕ ТĔРĔСЕН ĂСТИ

— Çапла вара, чипер пурăннă çĕртех эпĕ уншăн усал пулса тăтăм... Хирĕç пулсан, сывлăх сунма та пăрахрĕ вăл мана,— терĕ пĕррехинче Екатерина Иосифовна теменле кӳренчĕк сасăпа.

Тĕпчесе аптратма кăмăллах мар, ахаль те пăтранакан ăш-чик пушшех тулса каять вĕт-ха. Ун пек чух юлташна калас тенĕ сăмахне калама ирĕк парас гулать. Хальхинче те çаплах пулчĕ.

— Тĕрĕсемшĕн! Акă мĕншĕн çиленчĕ вăл...

— Пустуй япалашăн тăшман пулаççĕ-и вара, чипер калаçăр.

— Тĕрĕ пустуй япала-и? Йăнăшатăн! Тĕрĕре те ырăпа усала уйăрса илес пулать. Тĕрĕ вăл — искусствă. Искусствăра пурте виçеллĕ, вырăнлă пулмалла. Анютăна эпĕ начар çын теместĕп. Анчах çĕнĕ хваттерĕн стенисем çине çыпăçтарса, ăçта килчĕ унта сарса тухнă тĕррисене тиркес килчĕ. Розăсем, пионсем, кушаксемпе йытăсем, лаша пуçĕсем тĕрлесе хваттере тултарни мещенле япала,— терĕ Екатерина Иосифовна хĕрӳллĕн.

Çав Анютă, хăйĕн хваттерне çăтмахри пек илемлĕ тăвас тесе, çĕрĕçĕрĕпе ларнă, çук вăхăта пур туса, хура саттин е шурă катанпир çине пин-пин тăваткăл лартнă, çĕр тĕслĕ çип суйланă. Розăсем вара пахчаран тин татса кĕнĕскерсем пекех курăнаççĕ. Пĕр шутласан, çав тĕрĕсене те искусствă вырăнне хуманшăн кӳреннипе, сывлăх сунмасăр иртме мар, çурăлсах кайăн!

Анчах Екатерина Иосифовна тĕрĕ çинчен пачах урăхла шухăшлать. Вĕсем çинчен калаçма тытăнсан, вăл историе те кăштах аса илет. Ăçта çуралнă-ха куçа йăмăхтаракан розăсем, чармак куçлă кушаксем, вăрлантан кӳлĕ хĕррине шыв ĕçме тухнă пăлансем? Мăнастир хĕрарăмĕсем, улпутсен крепостнойĕсем ĕлĕкавал тĕрленĕ иккен вĕсене, вара çав тĕрĕсем чаплă керменсенче халăхран пачах уйрăм пурăннă çынсен çуртйĕрне куçнă. Халăх, чухăн хресчен хĕрĕ-хĕрарăмĕсем пачах тĕрлемен çав тĕрĕсене. Рококо стилĕ, идейă тĕлĕшпе содержанисĕр, халăх пурнăçĕпе çыхăнман аристократилле çак искусствă урăх аталанайман. Пирĕн пурнăçра та вăл, вăрлăх пек, шăтса тухса тымар яма тивĕçлĕ мар.

Чăн-чăн илемли, аталанса пыраканни — халăх тĕрри. Çĕнĕ пӳрте, хваттере, çи-пуçа илемлетмелли шăпах çавă — авалтан пыракан чи кăткăс искусствă пулса тăнă халăх тĕрри. Ахаль мар çав чăваш художници Екатерина Иосифовна Ефремова хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне çак искусствăна халаллать. Унăн ĕçне ăста композиторăн ĕçĕпе танлаштарас килет. Лайăх композиторсем халăх юррикĕввисене тирпейлĕн пухнă пекех, художницă та манăçа тухма тытăннă чăваш тĕррисене пĕрчĕн-пĕрчĕн, татăкăн-татăкăн шыраса тупать. Унтан вĕсене çутатса, капăрлатса, лайăхлатса тăван халăха çĕнĕрен парнелет. Уяв чухнехи сĕтел çине сармалли çивитти, арçын кĕписем, чаршавсемпе чӳрече каррисем тата ытти вуншар япала куçа илĕртсе тăраççĕ, пурнăçа илем кӳреççĕ. Ирхи шуçăм пек çутă, савăк юрă пек хаваслă тĕрĕсен авторĕ — пирĕн Екатерина Иосифовна. Мĕн чухлĕ ăшă туйăм, иксĕлми пултарулăх, чĕрери юрату сисĕнет çав тĕрĕсенче. Лайăх тĕрĕсене хаклама пĕлекен кашни çын вĕсем çине куç илмесĕр пăхать, этем алли мар, асамлă вăй тунă пулĕ вĕсене, тесе тĕлĕнет. Чаплă иккен пирĕн вăхăтри çынсен ĕçĕсем!

...Катьăн ача чухнехине питех аса илес килмест. Ашшĕ учитель пулнă, çамрăклах вилнĕ. Асламăшĕ патĕнче пурăннă вăхăт та халĕ юмахри пек туйăнать. Ирпе ирех тăрса вутă хутнă та кăмакана кукăль-çăмах хывнă. Тутлă пулнă-çке асламăшĕ пĕçернĕ типĕ шăмă яшки, пăрçа пашалăвĕпе уйран, кĕл çине пăрахнă çĕр улми! Тăвайкки ярăннă чухне алли-ури шăнса хытсан, пĕчĕк Кĕтерин асламăшĕ патне кăмака çине чăмнă. Шартлама сивĕ кунсенче хĕл мучи чӳрече кантăкĕсене пин тĕслĕ чĕнтĕрлесе тĕлĕнтернĕ.

«Çакăн пек кĕпе пултăрччĕ манăн»,— шăппăн ĕмĕтленнĕ хĕрача.

Вăрăм каçсенче кĕнчеле арланă чухне асламăшĕ хĕрачана йĕке тытма та, пир тĕртнĕ чухне çĕрĕ тума та, йĕппе тытса тĕрĕпе сĕмленме те чарман.

— Вĕрен, хĕрĕм, ӳлĕм кирлĕ пулĕ,— тенĕ вăл. Асламăшĕ тĕрлĕ-тĕрлĕ çипсенчен çыхса тунă пиçиххи Катя арчинче паян кун та упранать-ха. Ачалăхран юлнă ăшă хĕлхем пек...

Выçлăх çул Катьăна ача çуртне вырнаçтарнă. Хăй аллипе тĕрлесе эрешленĕ пир кĕпепе саппун та ун чухне тем пекех савăнтарнă хĕрачана. Шкултан таврăнсан, пушă вăхăтра Катьă ӳкерчĕксем тума та юратнă.

Учительсем асăрхаман пулсан, тен, Катьă урăх çулпа кайнă пулĕччĕ-и. Анчах ăна: «О, эсĕ ӳкерме ăста иккен, вĕрентес пулать сана», тесе хавхалантарнă. Каярахпа хĕрача художествă училищине вĕренме кĕрет.

Тĕп предметсемпе — живописçпе,

рисунокпа, композиципе «пилĕк» паллăсем илнĕ, çитĕнÿсем тунă пулсан та, тĕрĕ ăна ун чухнех канăç паман. Авалхи масмак, пĕркенчĕк, алшăлли, кĕпе çинчи тĕрĕсем çамрăк чуна тыткăнланă. Пуринчен те ытларах Катьăна тĕрлĕ халăх тĕррисен стилĕсене вĕренесси интереслентернĕ.

Пăхса тĕлĕнмелли пурах ĕнтĕ. Чăнах, ара, чăвашсен тĕррине курăрха, пĕр саспалли те пĕлмен хĕр тĕтĕм мăкăрлантаракан хăйă çутипех епле чаплă япаласем эрешленĕ! Çÿпçÿхе катанпир пĕрчисене суйласа, пĕр çип улăштармасăр тĕрленĕ вăл. Тÿнтерĕ те, пичĕ те пĕр пек, япали çĕтĕлсе пĕтсен те тĕрри юлнă. Икĕ енĕ те пĕр пекки хăш халăхăн пур? Патша вăхăтĕнче те Брюссельри выставкăра çав тĕрĕсене чаплă искусствă произведенийĕсене пахаланă пек хак панă...

Чăваш тĕррин çĕввисене те, хăйне майлă законĕсене те тĕпчесе вĕренме тăрăшнă çамрăк художницă. Хĕрарăм кĕпи тĕррине илер-ха. Çухи, умĕ, арки, çанни — пĕтĕмпех тĕрĕллĕ. Тĕррисем, уйрăммăн илсен, пĕр евĕрлĕ те мар пек, анчах вĕсем пĕрпĕрне «тытса», пуянлатса, илемлетсе тăраççĕ. Пÿрт никĕс çинче тытăнса тăрать, унăн тăрри, алăкĕсем, чÿречисем, темĕнле эрешĕсем тата ытти те пур. Тĕрĕре те çаплах: унăн та никĕсĕ, пури, тăрри, пурте пур. Анчах вĕсем пĕтĕмпех вырнаçуллă, тĕрлекен кашни хĕрарăм тĕс, гармони, виçе тенине чун-чĕрипе туйни палăрать...

Ширанă, шухăшланă, танлаштарса пăхнă ĕлĕкхи ятсăр художницăсем. Çĕнĕ тĕрĕ чун-чĕререн тухакан юрă пекех асаппа çуралнă. Чăваш хĕрарăмĕн алли-урине «турă» ытлашши тăлласа лартайманнипе килĕшес пулать. Унăн аллисем мĕн авалтанпах çип çăмхи-хутăрĕпе салтмалла мар тĕвĕпе çыхăнса ларнă. Екатерина Иосифовна Мускаври М. И. Калинин ячĕпе хисепленекен училищĕри тĕрĕ уйрăмĕнче, унтан прикладной тата декоративлă искусствăсен институтĕнче вĕреннĕ чухне те, Шупашкара килсе тĕрре пикенсен те, çав тĕввĕн вăрттăнлăхне шыраса тупасшăн паян кунччченех тăрмашать. Йĕпкĕн, йĕпула, кукăр-макăр, китай тĕрри, тимĕр шапа, эрешмен карти, çул сакки, шулам, шыв юххи, кулюкка çунатти, ханăс, тĕрмеле, хуршăлĕ, ухмах тĕрĕ — каласа та пĕтерес çук, вăтăр тĕрĕ ытла шыраса тупнă ĕнтĕ вăл! Çаксем пурте художницăна çĕнĕрен те çĕнĕ ÿкерчĕксем, композицисем тума хавхалантараççĕ.

Ай-ай, тĕрĕ шутласа кăларасси йывăр ĕç! Çын кĕлетки ÿкересси мар. Юратсах тăхăнаççĕ арçынсем тĕрленĕ кĕпене. Анчах тĕрри писсе çитиччен художницă пуç тавра пин хут кăна мар шутласа çаврăнать. Тепĕр чухне хут çине эрни-эрнипе те кирлĕ йĕр е тĕс ÿкеймест. Паян туса хунă композици çине Катьă ыран тепĕр хут пăхать те çурса пăрахать. Пĕрре те шел мар пулмалла! Юлашкинчен тин творчествă асапĕ вĕçленет те художницă чĕри самантлăха лăпланнă пек пулать. Эскиз хатĕр. Анчах вăл, композитор çырнă оперă клавирĕ пек, хут çинче çеç-ха. Халĕ ĕнтĕ оркестр валли партитурă хатĕрлемелле-çке-ха.

Екатерина Иосифовна та çавнах тăвать темелле. Лабораторие васкаса çитсе кĕрет те хăйне пулăшакан Нина Дрезина лаборанткăпа юнашар ларать. Нина стан çине шурă пир карăнтарнă ĕнтĕ. Çипписене суйласа хунă, умра эскиз. Иртен пуçласа касçчен ĕçлеççĕ икĕ тус. Хура йĕпкĕн çумне хĕрлĕ, симĕс, сарă, кăвак ханăс выртать. Майĕпенех пуçлаççĕ тĕрĕри тĕссем выляма, янрама, çиçме, сиксе ташлама тытăнаççĕ... Илтетĕн: оркестрти пĕрремĕш сĕрме купăс, гобой, кларнет, виолончель, бас сасă пама тытăнаççĕ...

Çапла куллен кунах. Ĕнер те, пĕлтĕр те, вунă, çирĕм çул каялла та çаплах пулнă. Пĕррехинче Екатерина Иосифовна темиçе альбом кăтартрĕ. Хулăн кĕнекесен страницисем çине художницă тунă тĕрĕсен эскизĕсене çыпăçтарса хунă. Альбомсем мар, чăн-чăн истори ку. Вĕсенчен нумайăшне ĕç çыннисем çав альбомсем çине пăхмасăр пĕлеççĕ: вăтăрмĕшхĕрĕхмĕш çулсенчех арçынсемпе хĕрарăмсем Катя Ефремова тĕррисемпе эрешленĕ шурă кĕпесем тăхăнатчĕç. Советсен II-мĕш съезчĕн делегачĕсем валли хатĕрленĕ пек сĕтел çи виттисем халĕ те çĕтĕлсех пĕтмен пулĕ-ха.

Нумай çулсем хушши ĕнтĕ Екатерина Ефремова çĕнĕ тĕрĕсен эскизĕсемпе тĕслĕхĕсене илет те хăйĕн йышлă тусĕсем патне — Алькешри «Паха тĕрĕ» фабрикине васкать. Малтанах кунта артель пулнă. Тĕрĕ цехĕн мастерĕ Мотя Гаврилова ача чухнех пуçланнă çак артель. Унăн вată амăшĕ те куç çути сÿнме тытăниччченех çакăнта ĕçленĕ, шурă катанпир çинче пĕрчĕ суйласа çĕрне-кунне ирттернĕ. Халĕ Матрена Гавриловăн хĕрĕ те пысăкланнă ĕнтĕ, амăшĕпе пĕрле вăл та фабрикăра паха тĕрĕ тăвать.

Екатерина Иосифовна куçĕ умĕнчех улшăнса çĕкленчĕ «Паха тĕрĕ» фабрики. Пĕчĕк пÿртсенче ĕçлесе ларма тиветчĕ вĕсене. Халĕ çав пÿртсене хăшне пăсса пăрахнă, лайăххраххисене юсаса хĕрсем валли общежити тунă. Шупашкартан Канаша каякан мăн çул хĕрринче, вăрман тăрăхĕ хысĕнче икĕ хутлă чул çурт ÿссе ларчĕ. Çутă та пысăк пÿлĕмре ăшă. Сарă чечек пек хитре хĕрсем стансем хушшинче пуç çĕклемесĕр ĕçлеççĕ. Поэт сăмахĕсем аса килеççĕ: «Сÿс хÿреллĕ хурçă йытă пĕр кĕрет те пĕр тухать...» Вĕлт те вĕлт тăваççĕ кĕмĕл тĕслĕ йăлкăшакан çинçе йĕпсем. Тĕрĕ ÿкет шурă пир çине. Хутран-ситрен юрă илтĕнсе каять те сÿнет. Юрлама та вăхăт çук, ханăсене шутлас пулать...

Екатерина Иосифовна хĕрсемпе калаçать, çĕнĕ ÿкерчĕк тĕрлеме вĕрентет. Уйрăлас умĕн хĕрсем çине ăшшăн пăхать вăл. Асту-ха, ĕнер çуралнă тĕрĕ паян цехра вăй илет, унтан çĕршыв тăрăх саланать. Вĕсене Мускавра, Ленинградра, Хусанта, Алтай крайĕнче, çĕршывăн ытти кĕтесĕсенче кĕтеççĕ. Суту-илÿ базисемпе договор тунă-çке-ха, ĕç çыннисен пысăк заказĕсене пурнăçлать фабрикă коллективĕ. Çапла пултăр тесе, Екатерина Ефремова Шупашкарпа Алькеш хушшинчи çулпа утма тытăнни чĕрĕк ĕмĕр! Пĕр çĕнĕ тĕрре те хĕрсем унсăр пуçламаççĕ, унăн ăслă сăмахне кĕтеççĕ. Çапла, пĕтĕм кун-çул, ĕмĕр тĕрĕ ăстисемпе çума-çумăн иртет.

Республикăн тепĕр кĕтесĕнче — Сĕнтĕр районĕнчи Пушкăртра та Ефремова пĕлмен çынсем сахал. Райпромкомбинатăн çак ялти тĕрĕ це-



— Вăт тутăр-тăк тутăр! Маттур эсир, пирĕн чăваш хĕрĕсем! — терĕ Андриян Григорьевич.

Ун-кун шутласа пăхать художницă. Анчах правительствă шанать пулсан, ма иккĕленмелле-ха?

...Акă вăл Каир... 640 çулта, Омар Халиф çарĕсен командующийĕ Амер ибн аль-Ас Александрийăна тата авалхи Египетăн тĕп хулине Мемфиса тытса илнĕ хыççăн, араб-воинсене хĕвелтухăç енне, Нил дельти пуçланнă çĕре ертсе кайнă. Çапăçусенче ывăнса çитнĕ шейхсен командующи вĕсене çак тулăх çĕртен, ем-ешĕл оазиссем патĕнчен каллех пуш хире ертсе каять пулĕ тесе хăраса ӳкнĕ. Анчах хăйăр айне варăнса ларма пуçланă юлашки пальмăсем патне çитсен, çар пуçлăхĕ чарăнма, тĕвесене тăварма хушнă.

— Аль-кахира! (Çĕнтерӳ!) Кунта пирĕн лагерь пулать,— кăшкăрса янă, тет, Амер ибн аль-Ас.

Çавăн хыççăн икĕ нубиец-чура пынă та ун умне тĕшĕрĕлсе анса çапла ыйтнă:

— Юхан шывăн хăш енче, о аслă сыннăмăр, хăвăр валли чатăр карма хушатăр?

— Сылтăм енче!— тенĕ Амер ибн аль-Ас. Унтан хаклă йышши чулсемпе илемлетнĕ хĕççине туртса кăларнă та хăйăр çинче йĕр тунă.

— Çакăнта ман чатăр пулать!

Арабсен легенди каланă тăрăх, шăп çакăнта хула ӳссе ларнă. Аслă çĕнтерӳ ячĕпе ăна Каир тесе ят панă...

Икĕ миллион ытла пурăнакан çак хулара тĕнчере чи малтан ĕçлеме тытăннă университет пур. Унта мусульман тĕнчинчи тĕрлĕ çĕршывсенчен пынă 12.000 студент вĕренет.

Художницă умне чăн-чăн Египет тухса тăрать. Пирамидăсем, сфинксем, Каир варринчи неон рекламăсем мар, пачах урăххи тĕлĕнтерсе пăрахать ăна. Чухăн пурнăç! Нил шывĕ мар, лаçсенче пурăнакан нишлĕ те выçă египтянсен куççулĕ юхать тейĕн.

Халăхĕ мĕн тери ĕçчен, çапах та çиме çитмест. Çапкаланса çӳрекен ача аллине тăснă, çиме ыйтать. Кĕсъере юлнă шоколадне Екатерина Иосифовна ачана парать. Анчах пĕчĕк Мухаммед шоколад çисе курман, ăна вăл çĕршывра хуçаланнă европеецсене кайса сутать. Укçа кирлĕ... Пилĕк хутлă чаплă çурт тăрринче тăмран çăрса хӳшĕ тунă. Авă, çыннисем те унтах, çуса çакнă кĕписем

хĕнче те унăн чаплă тĕррисем çунат туянса аякри çĕрсене саланаççĕ.

— Маттур хĕрсем, аллисем ылтăн вĕсен. Калама çук тирпейлĕ вĕсен тĕррисем,— тет вĕсем çинчен художницă.

Тăван çĕршывра çеç мар, пирĕн тĕрĕсене Çĕр çинчи нумай çĕршывсенче пĕлеççĕ. Алькешри «Паха тĕрĕ» фабрикин цехĕнче тĕнче картти патне пырса пăхма тӳр килнĕччĕ. Шупашкара пĕлтерекен пысăк мар пăнчă патĕнчен йĕрсем таçта та çитеççĕ. Европăри социализмла çĕршывсем, Париж, Брюссель, Вашингтон, Оклахомă, Китай, Инди, Австрали, Африкă, Япони, Канадă, Кубă... Хĕрĕхе яхăн çĕршывра ирттернĕ выставкăсенче чăваш тĕрри-çĕввине кăтартнă. Юлашки вăхăтра пирĕн ăстасен искусствине, вĕсемпе пĕрле Екатерина Ефремова тĕррисене те Африкăри колониализм пусмăрĕнчен ирĕке тухнă çĕршывсенчи халăхсем кураççĕ.

1956—1957 çулсенче Каирта Совет Союзĕн промышленноç выставки пулнă. Каира кайма хатĕрленнĕ чухне Екатерина Иосифовнăна Мускава пыма чĕннĕ.

— Выставкăра ĕçлеме тĕрĕ енĕпе нумай пĕлекен ăста специалистсем çитмеççĕ. Шутласа пăхрăмăр та сире сĕнсе пăхас терĕмĕр, Ефремова юлташ. Ют çĕршыв, кăткăс ĕç, шăрăх çанталăк... Пĕр сăмахпа каласан, килте мар. Мĕнле, килĕштерĕр-и Египета кайма?— ыйтнă унран.

кантра ҫинче типеҫҫӗ, ачисем ҫурт тӑрринче чупаҫҫӗ, качакисем те унтах... Пасарӗсенче урам сарлакӑш кавирсем сутаҫҫӗ. Вӗсене арҫынсемпе ачасем тӗрлеҫҫӗ иккен.

Выставкӑна курма ҫынсем йышлӑ пынӑ. Чӑваш тӗррисене курсан, экскурсоводран:

— Ку мӗн? Кам тӗрри?— ыйтнӑ ҫынсем.

— Чӑвашсен. Пӗлетӗр-и, Совет Союзӗнче пысӑках мар республикӑ пур. Пултаруллӑ та ӗҫчен унти халӑх. Ҫаксене хӗрсем тӗрлеҫҫӗ. Курӑр, акӑ, тӗррӗн икӗ енӗ те пӗр пек,— ӑнлантарса парать экскурсовод.

Курма пынисем хӑйсен чӗлхипе темӗн кӑшкӑрашаҫҫӗ, аллисене хӑлаҫласа, пуҫӗсене пӑркаласа ӑшшӑн кулаҫҫӗ.

— Ку арҫын кӗпи-и?

— Ара!

— Вӗсене фестивальте тӑхӑнаҫҫӗ-и вара?

— Ҫук, пӗрмаях тӑхӑнса ҫӳреҫҫӗ.

— Ун пек кӗпе кашни кун тӑхӑнсан, ытла хакла ларать-ҫке,— иккӗленеҫҫӗ хӑш-пӗрисем. Египет хӗрарӑмӗсем ҫавӑнтах, хутпа кӑранташ илсе, тӗрӗ ӳкерме тытӑнаҫҫӗ.

Пӗррехинче хӗрарӑмсенчен пӗри тӗрӗ авторӗ ҫинчен ыйтса пӗлет.

— Кунтах вӑл. Килӗр-ха, Екатерина Иосифовна, сирӗнпе калаҫас теҫҫӗ,— чӗнет экскурсовод.

— Хасан,— тет египтянкӑ хӑйӗн пӗчӗк ывӑлне.— Ҫак вырӑс хӗрарӑмне аллуна пар. Вӑл тӗлӗнмелле чаплӑ тӗрӗсем шутласа кӑларнӑ...

Халӗ пичетре-мӗнте Арабсен Пӗрлешнӗ Республики ҫинчен хыпар пулсанах Екатерина Иосифовна хумханма тытӑнать. Киносенче совет художници ҫӗнӗ Каир урамӗсенчи палланӑ сӑнсене тӗл пулма ӗмӗтленет...

Юлашки ҫулсем пирӗн Тӑван ҫӗршывшӑн питех те мухтавлӑ ҫулсем пулчӗҫ. Паттӑрсем тӗнче уҫлӑхне пӗрин хыҫҫӑн тепри вӗҫсе хӑпарчӗҫ. Чӑваш улӑпӗ Андриян Николаев космоса вӗҫсе кайсан, Алькешри тӗрӗ ӑстисем хӑйсен цехӗнчи радиоприемнике самантлӑха та чармарӗҫ. Ӑҫта ҫитрӗ-ши пирӗн каччӑ, сывлӑхӗ мӗнле-ши, епле ҫаврӑнса килӗ-ши Ҫӗр ҫине, тесе, кунӗн-ҫӗрӗн хумханчӗҫ. Ҫав кунсенче космос каччи валли лайӑх парне хатӗрлесшӗн Екатерина Ефремова та канӑҫа пӗлмерӗ. Парне тӗррисем Шуршӑл тӗлӗнчи ҫӑлкуҫсем пекех таса пулччӑр тесе тӑрӑшрӗ.

Акӑ, Андриян Григорьевич тӑван республикӑна курма килчӗ.

Ӗнтӗ кӗписем те, ытти япалисем те хатӗр, ҫӗрӗпе ҫывӑрмасӑр пиҫиххи те ҫыхса пӗтернӗ. Кӗтнӗ чухне вӑхӑт та иртмест-ҫке! Пӗлтӗрхи сентябрӗн 4-мӗшӗнче, сывлӑмлӑ ирхине пирӗн паттӑр «Паха тӗрӗ» фабрикинче ӗҫлекенсем патне пычӗ.

Ӑшшӑн сывлӑх суннӑ хыҫҫӑн космонавт пысӑк мар выставкӑ сӗтелӗ патне пычӗ. Художницӑ ҫак самантра ҫухалсах кайрӗ.

— Каласа кӑтартӑр, Екатерина Иосифовна. Мӗншӗн чӗнместӗр?— вӑратрӗ ӑна тахӑшӗ.

Андриян тӗрленӗ кӗпесене салатса пӑхрӗ, тӑваткӑл тутӑр ҫине куҫ хыврӗ.

— Ку акӑ — кӗрӳ тутри!— терӗ Ефремова чӗтрекен сасӑпа. Авалхи чӑваш йӑлипе ҫураҫма пырсан, хӗр хӑйӗн юратнӑ каччине кӗрӳ тутри парнелени ҫинчен хумханса каласа кӑтартрӗ.

— Вӑт тутӑр-тӑк тутӑр! Маттур эсир, пирӗн чӑваш хӗрӗсем!— терӗ паттӑр, хӗрсем ҫине ӑшшӑн пӑхса.

Ҫав кунхине тӗрӗ ӑстисенчен пӗри, Катя Арсентьева, Андриян хулпуҫҫийӗ ҫине кӗрӳ тутри хурса ячӗ. Тутӑр тӗрри чӑваш хӗрӗн таса юратӑвӗ, иксӗлми пултарулӑхӗ, ҫунатлӑ чӗри ҫинчен калать...

Юлашки вӑхӑтра художницӑ Мускаври промышленноҫпа суту-илӳ ярмаркки валли ҫӗнӗ тӗрӗсем хатӗрлес тӗлӗшпе нумай ӗҫлерӗ. Пурнӑҫ художниксем умне ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ыйтусем лартать. Ӗҫ ҫыннисене ку чухнехи ҫурт-йӗрпе килӗшуллӗ, илемлӗ те йӳнӗ, ҫирӗп япаласем, паха кӗпетумтир кирлӗ. Нумай пулмасть Вырӑнти промышленноҫ министерствин лабораторийӗнче сӗтел ҫивиттийӗ, ача костюмӗсем, хӗрарӑмсем валли блузкӑсем туса хатӗрленӗ. Авалхи чӑваш тӗррисемпе усӑ курса, художницӑ пачах ҫӗнӗ те интереслӗ, питӗ ҫӑмӑл, анчах илемлӗ композицисем тунӑ.

«Редина» ятлӑ йӗтӗн пир-авӑртан тунӑ япалисене ӗҫ ҫыннисем юратсах туянаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та суту-илӳ базисем заказсене пурнӑҫлама фабрикӑна васкатсах тӑраҫҫӗ. Тӗрӗ тӗрлеме юратакансем чӑваш ӑстисен продукцийӗ вӗсем патне ҫитессе те кӗтмеҫҫӗ. Акӑ, нумай пулмасть почтальон Екатерина Иосифовнӑна ҫырусем парса хӑварчӗ. Вӗсенчен пӗрне Архангельск облаҫӗнче пурӑнакан Е. Лабузова ҫырнӑ. «Сирӗн ҫинчен эпӗ Н. Ильбеков писатель статьинче вуласа пӗлтӗм. Статья «Паллашӑр: чӑваш ҫӗршывӗ» ятлӑччӗ. Хытӑ савӑнтӑм эпӗ сирӗншӗн. Тӗрлеме эпӗ те юрататӑп, анчах кунта кӑмӑла каякан ӳкерчӗксем тупма йывӑртарах. Тупӑнмӗ-ши сирӗн мӗнле те пулин лайӑх тӗрӗ? Чӑрмав пулин те ярса парсамӑрччӗ»,— тесе ҫырнӑ вӑл.

Ҫак кунсенче ӑна Екатерина Иосифовна пӗчӗк посылкӑ ярса пачӗ.

Узбекистанри Карши станцийӗнче телефонисткӑ пулса ӗҫлекен Н. Нагайченко та чӑваш художници ҫинчен хаҫат урлӑ пӗлнӗ-мӗн. «Кашни кун ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ савӑнӑҫ илсе килет. Нумай пулмасть мана ҫӗнӗ хваттер пачӗҫ. Шырарӑм, нумай шырарӑм магазинсенче лайӑх тӗрӗсем. Тупаймарӑм-ха. Ҫавӑнпа та сирӗн ҫинчен хаҫатра вуласа пӗлсенех ҫыру ярас терӗм. Фабрикӑна заказ парсан, мана тӗрӗсем туса памӗҫ-ши сирӗн ӑстасем? Пурин ҫинчен те ҫырса пӗлтерӗр»,— тет вӑл.

...Акӑ вӑл сӗтел хушшинче ларать. Хура куҫӗсем ҫутӑ ӗмӗтлӗн пӑхаҫҫӗ. Аллинче ҫинҫе кисть, умӗнче шурӑ хут. Мӗн ҫинчен шухӑшлать-ши вӑл?

— Телей! Ӑҫта вӑл? Ӗҫре ҫеҫ, творчествӑлла ӗҫре тупатӑн хӑвӑн телейне. Мирлӗ пурнӑҫра манӑн тӗрӗсем те кирлӗ. Ҫынсене илем кӳме,— тет чӑваш хӗрӗ.

Николай ЕВСТАФЬЕВ

# Хут купăс

*(Лирикăллă репортаж)*

*Купăсĕ — инçе чĕнет-çке,*
*Йыхăрать-çке, ертнĕçем*
А. ТВАРДОВСКИЙ

Пĕрре мар Çĕршывăма
Эпĕ утса тухрăм.
Ăçта куртăм-ши сана,
Ăçта сана тупрăм?
Янкăс кĕвĕ каласа
Санпала, хут купăсăм,
Ўсрĕм юрă юрласа,
Манăн çывăх тусăмçăм!
Эс пулсан,
Пуçа усман:
Ик ĕрет тўмеллĕ,—
Пўрнепе пĕлсе пуссан —
Эс юрлатăн меллĕн.
Сан сассў вара чĕнет
Ташă ташлама та,
Юрлама та илĕртет,
Савние савма та.
Пĕр каять вăл янраса,
Пĕр юхать вăтаннăн,
Чĕрене çунат хушса
Кĕвĕлет вăл анлăн...

* * *

Санпа эп фронтра та пулсаттăм —
Иртсеттĕм инçе çулсемпе,
Тата çирĕпрех туслашсаттăн
Ун чух эс салтак-туссемпе.
Кĕрхи сивĕ çумăр çăватчĕ,
Уратчĕ хаяр çил-тăман,—
Пулин те малта вăл пыратчĕ —
Хут купăс — ик ретлĕ баян.
Нимех те çук тейĕн пăхсассăн —
Пур сан чĕн çакку, пĕрмўсем.
Анчах та миçе тĕрлĕ сасă
Кăлармĕç-ши чĕлĕхўсем!
Мăнаç юхан шыв пек юхаççĕ,
Е шăнкăр çăлкуçĕ пек шух,
Ўкен çăлтăр пек çухалаççĕ
Янравлăн вĕçсе пынă чух...

* * *

Хут купăс пулмасассăн,
Апат çиме ларсассăн
Тăвар каламан евĕр —
Тем çитеймест, тем çук.
Мĕн каласси! Таçта та —
Ĕçре те, канура та
Хисеп хут купăса —
Чи шанчăклă туса.
Яла пырса кĕретĕп —
Сан сассунах илтетĕп:
Пĕтĕм çĕршывăм тăрăх
Кĕввў сан янăрать!..

* * *

Кирек хăш яла пырса кур эс
Каç сĕмĕ яла хупласан,—
Янратĕ çĕн çемĕ хут купăс
Сан çамрăк чунна лăпкаса.

Эс курăн хут купăслă йĕкĕт
Епле урампа иртнине,
Ун çепĕç кĕвви ирĕлтерĕ
Сан çамрăк, патвар чĕрўне.
Вĕçет, мамăк пек, лапка юрĕ,
Ларать куç харшийĕ çине.
Хут купăс пуçланă çĕн юрă
Парать вăй-хăват çынсене...

* * *

Ак май. Туратне юхан шыв çине уснă —
Шап-шур çеçкери çĕмĕрт тĕмĕ ларать.
Каçхи шурăмпуç анăçра кусне уçнă —
Ялав пек писевлĕн çиçсе ăсанать.
Хĕрсем чи илемлĕ тумне тăхăнаççĕ,
Пĕри хитререх, чаплăрах тепринчен.
Ик качча пек, ик вĕрене ав ларăççĕ —
Хĕрсемсĕр вĕсем тунсăхлаççĕ-и, тен?
Ялта çурт-йĕрсем йĕркипе ларса тухнă,
Пус-курăк ўсет хуралтсем хушшинче.
Çуртсен шифер витнĕ тăрри кĕмĕл юхнăн
Тăрать шуралса шурăмпуç çутинче.
Сада тенкелсем çĕклесе, ав, тухаççĕ,
Кашни чўречех кĕçĕр уçă яри.
Хут купăссăсем пĕр çĕре пухăнаççĕ,
Кашнин-çке тапать çĕкленўллĕн чĕри.
Вĕсен кĕввисем самантрах асилтерĕç
Качча чĕрери ăшă тунсăх çинчен,
Пике-хĕрсене кăшт вăтаннăн пĕлтерĕç —
Епле каччисем йăпатасшăн ирччен...

Тен, тухĕ ума тăван ялăн
Çеремлĕ, ансат укăлчи,
Пĕр маншăн анчах савăнмалăх
Савнийĕм — пускил хĕрачи:
Хавеслă пурнатчĕ, хитреччĕ,

Чупатчĕ çарран урампа,
Сатин кĕпене йĕпететчĕ
Ирхи йăлтăркка сывлăмпа.
Хут купăс туртса çеç ярсассăн,
Пăхатчĕ вăл чÿречинчен,
Асамлă шăнкрав евĕр саслăн
Юрлатчĕ илемлĕн, çинçен.
Халь те ав ун кантăкĕ уçă,
Унтан унăн амăш пăхать,
Хăй оперăра — хура кусăм —
Нарспи юррине янратать...

* * *

Эх, купăс!
Епле-ха юратăн,
Хут купăссăр, çамрăк хĕре!?
Хут купăслă сын вăййăра та
Хисеплĕ — ялта вăл пĕрре!
Кăштах аллипе вăл шăлать те
Хут купăс çинчи тусанне,
Унтан, тĕрĕсленĕ пек, меллĕн
Тĕртсе пăхать тÿмисене.
Вара васкамасăр, сăпайлăн
Пăхса çаврăнать хĕрсене,
Пуçлать чи илемлĕ, чи лайăх,
Шух пуйăс иртсе кайнă евĕр
Иртеççĕ çурхи лĕп каçсем:
Пĕрре чуп туса ĕлкĕрен те,
Пăхатăн — ирхи çутăсем.

Чăрик! хапхасем сас параççĕ,
Садра вăранаç шăпчăксем.
Хут купăс салхун та ытарлăн
Пуçлать ăсату кĕввисем...

* * *

Укаланнă, сарă, кăпăшка çÿçсем
Хул çине ÿкеççĕ — ылтăн юхнă пек.
Ирчченех ташлаççĕ ытарми хĕрсем,
Такмаксем каласçĕ çĕрĕ-çĕрĕпех.
Тăрăшса ĕçленĕ, кантăмăр ак кĕçĕр.
Купăсне маттуррăн купăсçă туртать.
— Пĕтĕм ялĕпе те кун пекки — пĕр эсĕ,—
Пĕтĕм хĕрипраç халь йĕкĕте мухтать.
Чун кĕнĕ пек, ăслăн янăрать хут купăс,
Инçете вĕçет ун ытарми сасси.
Тăрăшса пăхсам эс —
Шырасам эс,
Туп эс,—
Кун пек лайăх кĕвĕ — пулмĕ тупасси!..

* * *

Уява пухăнсан,
Кĕреке хушшине
Хамăрпа купăса эпир илнĕ ялан.
Кам юратмĕ сана чун-чĕре уççине?
Савăкрах янăра, икĕ ретлĕ баян!..

Аркадий ЛУКИН

# Куршанак

Ку пĕчĕкле.
Эп тухрăм ял пуçне
Çум çумлама йышпа пĕр ирпелен.
Уйри сар чечексем этем кусне
Илĕртмелле ларатчĕç йĕркерен.

Хир тăршшипе — пиçен те вĕлтĕрен,
Татсан — вута кĕрет пек çын алли.
Ахальтен мар, анне кив кипкерен
Алса тул туртнăччĕ мана валли.

Ун витĕр те тирейрĕ, мурилесшĕ,
Пÿрнесенчен кăларчĕ чăр-чăр юн.
Паян çеç тухнăран-ши, чун йĕресшĕн!
Çынсем йĕрмеççĕ —
Йĕрмĕ манăн чун!

Пуçа пĕксе пуплеççĕ кÿрше кÿршĕн,
Чĕлхе çинче —
Вăрçă инкекĕсем:
Пĕрин мăнукĕ, тепĕрин кĕрÿшĕ
Е упăшки килмен инкемĕрсен.

Инкемĕрсен инкекĕсем кăна-и —
Аслашшĕсен, хĕрсен, ачи-пăчин!
Айванларах пулсассăн та, çакна эп —
Ун чух кăштах ăнланнă — пĕчĕк çын.

Мăннисенчен юласшăн мар пачах
Пуç çĕклемесĕр пытăм çум татса.

Малта — сап-сарă.
Хыçалта калча
Юлать сип-симĕс пустав пек таса.

Çакна курсан-и чун-чĕре килленмĕ,
Çумран тасалчĕ çурхи тул пусси!
Ĕнтĕ юлать киле çеç каясси.
Йăтса тухатăп куршанак çĕклемĕ:

Ан тив, ирччен вăл кушăхтăр.
Ыран
Çынсем килеççĕ хамăр фермăран:
Утне те, ĕнине те çиме пырĕ,
Халь тиркемест нимскер те выльăх пырĕ.

Çук, уямастпăр хамăр та ытах:
Çум çумлакан хăйпех илет хурхух.
Сĕтелĕ пушă...
Хырăмĕ выйтать.
Хĕрхÿ хурхух, çăнăх ярсассăн чух.

Хĕрарăмсем, ав, таварнă саппун —
Яшка тумалăх пурте чикнĕ курăк!
Кăшт шуратмашкăн пултăр сĕт е турăх,
Вара телейлĕ кашниех çак кун.

Ĕшеннĕскер утатăп васкаса
Ĕç йышĕпе пĕрремĕш хут киле.
Çынсем умне ман курăнас килет
Тата кăштах кĕтетĕп мухтасса.

Пăхмаççĕ.
Ĕç — килте кашни инкен...
Анчах пĕри каларĕ курсанах:
«Ывлу хыçне те çыпçăнчĕ иккен
Пĕр пысăк куршанак».

Куçран тинкертĕм хăвăрт аннене:
Инке каларĕ — эпĕ ĕненеп.
Сисмесĕрех алла ярса хыça
Куршанака сиресшĕн шав хыçап.

Алла кĕмест нимскер те.
Çак самант
Тепри хушать: «Халь ерчĕ куршанак,
Хăв сисмĕн те, аппаçăм, курăн ак,
Ывлу ÿсет те хăвăрт авланать».

Тек тÿсме çук.
Хупларăм питĕме..
Вар тăрăх тапса сикрĕм çеç яла.
Тав тăвас чух, вĕсем пур, этеме
Мăшкăл туса çеç хуçрĕç кăмăла.

Киле эп çитрĕм шутсăр ывăнса:
Ăçта çав намăс кÿнĕ куршанак!
Шырарăм хăпăл-хапăл хывăнса:
Ăна татса перетĕп курсанах!

Çук, тупаймарăм.
Хăвăрт чупнипе
Тен, татăлса юлайрĕ çав варах!
Юлинччĕ...
Чунăм хытă кÿтнипе
Анне те таврăнать пек пит вăрах.

«Хире тухмастăп, терĕм аннене,
Пÿрте вăл кĕрсенех,— тек нихăçан!»
«Эс ăнланмарăн кăшт юптарнине,
Ай, ывăлăм, мĕскер эс калаçан!»
«Кирпĕч çапма каятăп ыранах,
Унта çум çук, лекмест те куршанак».

Анне çывхарчĕ.
Лăпкăн çумма ларчĕ:
«Килте ĕçре пĕртте хăравçă марччĕ,
Кăштах эс ăнланмарăн-иç паян,
Ку куршанаксăр эс ăçта каян!..

Таçта çитсессĕн те пĕрле çÿрет,
Санран юлмасть вăл, ывăлăм, асту!
Унпа этем — хастар кĕрешÿре,
Унпа пымашкăн ĕмĕр хавас ту!» —

Пуçран шăлать те
Тинкерет куçран;
Ачашшăн калаçма пуçлать вăл кĕç:
«Ман сăмаха эс ан кăлар асран:
Çав пысăк куршанак вăл —
ĔÇ!»

Тинех ăнлантăм ялăм-йыш шÿтне:
Эп тăнă-мĕн ĕçлекенсен шутне.
Анне халь тепĕр çунат ÿснĕ евĕр
Сăнать мана,
Сăнать куçне илмесĕр.

Ман кÿренÿ те иртрĕ çисĕм пек,
Эп хатĕр ушкăнпа хире тухмашкăн:
Писен-куршанакран йăлт тасатмашкăн
Çурхи пусса хастарлă ĕçĕмпе.

...Ĕç куршанакĕ пулăшнăран мар-и
Пĕтертĕмĕр уй-хир куршанакне!
Чи йывăр вăхăтра та пуç усмарĕ
Тăван ял-йыш,
Ямарĕ хăй ятне.

Эпир те ÿснĕ харсăр, çирĕп хуллă
Ĕçпе хĕрсе,
Чунпа-юнпа хĕрсе!
Тăван Çĕршывăн ывлĕ-хĕрĕсем
Хăюллă, ăслă, паттăр, пултаруллă!

Халь куршанак та сарă чечексем
Хирте курмастпăр.
Ял ĕçченĕсен
Мĕн пек хăватлă та ĔÇ куршанакĕ! —
Туяп: кашни çынна халь курсанах эп.

Çăва тухсан
Хура тăпра хăйми
Пиртен ыйтать те ылтăн пĕрчĕсем,
Шăтса тухать калча ытарайми —
Ĕçлен шанса,
Ĕçлен хĕпĕртесе!

Паян тыр-пул çеç мар мал тĕллевре,
Çав тырă çăкăрне çисе ÿссе
Тĕнче уçлăхĕнче —
Çÿл тÿпере
Андриян пек çÿреччĕр паттăрсем!

Сыхлаччăр Çĕршыва,
Ĕçе,
Мире!
Инкемĕрсем пичченĕрсем çумне,
Маттур хĕрсем яш каччисем çумне,
Сухаллисем мăнукĕсем çумне,
Телейлĕ çын телейсĕр çын çумне
Тăрçа кĕрешчĕр пĕтĕм тĕнчере!
Сыхлаччăр Çĕршыва,
Ĕçе,
Мире!

Çак шухăшпа сăнатăп эп паян
Ĕçе çыпçăнакан ачасене.
...Ĕç куршанакĕ пĕр ерсен, санран
Юлмасть.
Куллен кĕрешĕве чĕнет!

●

## Искусства

**Фаина САРРИ**

# К. С. СТАНИСЛАВСКИЙ

ВУН ТĂХХĂРМĔШ ĕмĕрти вырăс искусстви çинчен Белинскипе Чернышевский, Пушкинпа Толстой, Горькипе Чехов, Глинкăпа Чайковский, Репинпа Суриков ячĕсене асăнмасăр ниепле те калаçма май çук. Çав чаплă ятсем хушшинех тата пĕтĕм театр ĕçĕнче калама çук пысăк реформă тунă генилле художник Константин Сергеевич Станиславский ятне те кĕртмелле.

Станиславский ĕçĕ-хĕлĕ вырăс театрĕн аталанăвĕнче кăна мар, пĕтĕм тĕнчери театр культурин аталанăвĕнче те çав тери пысăк та паллă тапхăр пулса тăрать. Çакă вăл пурăнса ирттернĕ 75 çул хушшинче калама çук пысăк историллĕ событисем нумай пулса иртнинчен те мар (Станиславский Российăра крепостла правă арканнă хыççăнах çуралнă та Совет çĕршывĕнче Социализм çĕнтернĕ хыççăн вилнĕ), пуринчен те ытларах ку унăн творчествăлла ĕçĕ нумай енлĕ тата театр историйĕнче питĕ пысăк вырăн йышăннинчен килнĕ. Вăл Мускаври Художествăллă театра пуçарса яраканнисенчен пĕри пулнă, вăл сценă искусствине çав тери çÿлĕ пусăма çĕкленĕ, театрти реализмла туртăма аталантаракан чăн-чăн çулпуçĕ пулнă. Вăлах — çав тери пултаруллă та ăста артист, хăй вăхăтĕнче пуринчен те ирттернĕ режиссер-экспериментатор, театр искусствин теоретикĕ, актер творчествин «системине» туса хунă çын пулнă.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Станиславский çуралнăранпа 100 çул çитнине пĕтĕм тĕнчери общественноç хальхи культурăллă пурнăçри паллă событи вырăнне хурса кĕтсе илчĕ...

Константин Сергеевич Станиславский (чăн хушамачĕ — Алексеев) 1863 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче С. В. Алексеев фабрикант çемйинче



çуралнă. Çак çемье иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлăмĕш çулĕсенче çĕршыври культурăллă пурнăçа ытларах та ытларах хутшăнса пынă Мускаври буржуазин пĕр пайĕн шутне кĕрекен çемье пулнă.

Станиславский хăй пурнăçĕнче йĕркеллĕ вĕренсе пĕр аслă шкул та пĕтермен, ятарласа специальнăй шкулта та вĕренмен. Анчах унпа çывăх пулнă çынсем пурте вăл питĕ нумай пĕлекен, çав тери ăслă çын пулнине палăртаççĕ. Вăл калама та çук хастарлă ĕçчен пулни, мĕн ватăлса çитиччен ĕçлеме пăрахманни таврари çынсене чăннипех тĕлĕнтернĕ. Юлашки çулсенче, сывлăхĕ начарланса çитнипе, вăл вырăн çинчен те тăрайман, анчах апла пулин те вăл хăйĕн кĕнекисене çырнă, артистсемпе репетицисем туса ирттернĕ. Мĕн ачаранпах пурнăçа сăнама, курнине яланах астуса юлма хăнăхнăскер, вăл хăйĕн пурнăçĕ тăршшипех çынсемпе тачă çыхăнса, таврари пурнăçа тимлĕн вĕренсе, кĕнекесемпе, искусствă произведенийĕсемпе паллашнă. Искусствăпа вара вăл пĕчĕк чухнех интересленме пуçланă. Алексеевсен çемйинче вунă ача пулнă, ашшĕ-амăшĕ вĕсене пурне те ÿт-пÿ тата ăс-тăн енчен лайăхрах аталантарса пыма тăрăшнă. Çакна пула вĕсен ачисем хăйсене тĕллĕн шухăшлама, пуçаруллă пулма хăнăхса пынă.

Станиславский йĕкĕт шутне кĕнĕ çулсенчех, çамрăклах сценă искусствине юратакансене пухса драмă кружокĕ туса хунă. Мускав çывăхĕнче, Тарасовкă тенĕ станци патĕнче, халĕ те-ха Станиславскисен кивĕ çурчĕ тата икĕ хутлă флигель упранса юлнă, çав флигельте унăн кружокĕн «театрĕ» пулнă. Çавăнта вăл вуншар тĕрлĕ роль вылянă, сценă çинче ĕçлес опыт пухнă, актер вăййин техникине пуянлатнă. Анчах Станиславскин пулас ĕçĕсемшĕн ку çеç те мар паллă вырăн йышăнса тăнă. Уншăн чи пысăк шкул вăл — çав вăхăтри искусствăра ĕçленĕ чаплă ăстасемпе курнăçни, вĕсемпе çыхăнни пулнă. Алексеевсен çемйипе вырăссен театр музейне пуçласа янă А. А. Бахрушин çывăх пулнă. Пĕр хушă Вырăссен музыкă обществин директорĕ пулса, К. С. Станиславский П. И. Чайковскипе, С. И. Танеевпа тата Рубинштейн пĕр тăвансемпе тĕл пулнă. Станиславскин ăс-тăнне аталанса пыма ун чухнехи Мускаври Кĕçĕн театр (Малый театр) тата унти чи паллă артистсем — Федотов, Медведев, Ермолова, Ленский нумай пулăшнă. «Кĕçĕн театр манăн ăс-тăна аталантарма пур шкулсенчен те

ытларах пулăшрĕ. Вăл мана пурнăçри илемлĕхе курма вĕрентрĕ. Кĕçĕн театр пирĕн ăс-тăна, шухăш-кăмăла йĕркелесе пычĕ»,— тесе çырнă вăл кайран, хăйĕн «Моя жизнь в искусстве» ятлă кĕнекинче.

Унăн сценă çинчи пурнăçĕ, унăн артист ĕçĕ 1888 çулхи кĕркунне пуçланса кайнă, тесе шутланă вăл. Çавăн чухне Станиславский, А. Ф. Федотов режиссерпа тата Ф. П. Комиссаржевскипе пĕрле Искусствăпа Литературă Обществи туса хума май тупнă. Çак обществă пур йышши искусствăсен представителĕсене те пĕрлештернĕ. Ун çумĕнче сценăна юратакан актерсен труппине йĕркеленĕ, каярахпа вăл Мускаври Художествăллă театр труппин никĕсĕ пулса тăнă. Çав спектакльсенче выляса, Станиславский Мускаври артистсен кружокĕсем хушшинче ытларах та ытларах палăракан артист пулса тăнă. Мĕн пирки сарăлнă-ха унăн ячĕ? Ку вăл талантлă пулнинчен, сценă çинче вылянă чух кирлĕ ытти пур пахалăхсем те пуррипчен кăна килмен. Вăл хăйĕн пултарулăхне, пахалăхне çине тăрса, куллен аталантарса пынă, хăй умĕнчи пур чăрмавсене те сирсе янă. 26 çулта чухне вăл хăйĕн дневникне çапла çырса хунă: «Манăн хама воспитани парас, шухăш-кăмăл енĕпе ӳсес, ăс-тăна хускатсах тăрас пулать». Вăл искусствăра чăнлăх шыранă, пурнăçри пулăмсене пĕтĕмĕшпех тĕрĕс кăтартса пама тăрăшнă. Çак паха йăла унăн пурнăçĕ тăршшипех пăрахăçа тухман.

Çак тапхăрта вăл Писемскин «Горькая судьбина», Достоевскин «Село Степанчиково» пьесисенче, Шекспир комедийĕсенче ответлă рольсене вылянă, Отелло рольне ăста выляса та куракансене кăмăла кайнă. Хăйĕн актер ăсталăхне аталантарса пынипе пĕрлех вăл режиссер ĕçне хăнăхса, ăна вĕренсе пынă, кайран вара, чылай вăхăтсем иртсен, ку тĕлĕшпе чи çӳлĕ сыпăка çĕкленнĕ, хăй «режиссурă искусствине» çĕнĕрен туса хунă.

Станиславскин çак тапхăрти творчествине хаклама, вăл режиссер пулса театр искусствинче каланă çĕнĕ сăмаха ăнланма, чăн малтан, ун чухнехи театр мĕнлерех пулнине пĕлес пулать.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче вырăс театрĕ йывăр кризиса кĕрсе кайнă. Мускаври тата Петербургри «император театрĕсенче» идейăсăр, ремесленикла çырнă пьесăсем лартнă. Ик-виç репетици хыççăнах лартнă спектакльсенче артистсем ялан пĕр майлă, штамплă меслетсемпе вылянă, ĕнентерӳллĕ сăнарсем туса кăтартас вырăнне «куракансене килĕшме» кăна тăрăшнă. Ку вăл вырăс театрĕнче чăн-чăн творчествă пĕтсе ларасси патне çитнĕ тапхăр пулнă. Унччен чапа тухнă Кĕçĕн театрта та çав кризис питĕ сисĕннĕ. «Гогольпе Щепкин çĕклесе янă чаплă вырăс искусстви» ытларах та ытларах штамп тыткăнне лекнĕ, унта пурнăçран аякра тăни, сентиментализм аталаннă, вăл бухтăра нумай хушă тăнипе рак хуранĕсем сыпăçса тулнă броненосец евĕрлĕ пулса кайнă»,— тесе çырнă Станиславскин сывăх тусĕ тата унпа пĕрле нумай ĕçленĕ В. И. Немирович-Данченко. Вырăссен классикла драматургийĕнчи пьесăсене манăçа хăварнă, çĕнĕ драматургие куракансем йышăнман. Сăмахран, 1887 çулта Мускаври Корш театрĕнче А. П. Чеховăн пирвайхи пьесине — «Иванов» драмăна лартнă. Спектакле хатĕрлеме пурĕ те тăватă репетици кăна тунипе артистсем, паллах, А. П. Чеховăн пачах çĕнĕлле çырнă произведенине ăнланса илме пултарайман. Çавăнпа та спектаклĕн ним йĕрки те пулман. Реакциллĕ критикă пьесăна тем тĕрлĕ тиркесе тăкнă, пĕтерсех хунă.

А. П. Чеховăн иккĕмĕш пьеси — «Чайка» тăрăх Петербургри Александрински театрта лартнă спектакль те çавăн пекех ăнăçсăр пулнишĕн вара вăл ĕмĕр тăршшипех кулянса пурăннă. «Çавăн хыççăн унăн чирĕ палăрмаллах вăйланчĕ»,— тесе çырнă каярах унăн тăванĕ Михаил Чехов.

Чехов пьесисем — вырăссен классикла драматургийĕнчи ахах пĕрчисем — тăрăх лартнă спектакльсем ăнăçсăр пулнинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Ун чухнехи театр, штампсем тăрăх, кивĕ меслетсемпе ĕçленĕскер, Чехов драматургийĕ таран çĕкленеймен. Чехов драматургийĕ хăй те кивĕ театрти кивĕ йĕркесене йышăнма пултарайман...

1897 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Станиславский ун чухнехи паллă драматург, театр критикĕ тата педагог пулнă В. И. Немирович-Данченкопа тĕл пулнă. Çав тĕлпулу вырăс театрĕшĕн чăн-чăнах та историлле событи пулса юлнă. Вĕсем хушшинчи калаçу 18 сехет хушши пулса пынă! «Халăхсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕ те хăйĕн пысăк ыйтăвĕсене эпир ун чухне хамăрăн пулас ĕçĕн никĕсĕсене, тата искусствă ыйтăвĕсене, пирĕн художествăлла идеалсене, сценă çинчи этикăна, техникăна, организациллĕ плансене, пулас репертуарăн проекчĕсене мĕн тери тĕплĕн сӳтсе явнă пек явмасть пулĕ»,— тесе аса илнĕ кайран Станиславский.

Театр «Московский Художественный Общедоступный театр» ятлă пулнă. Шăп та унăн ĕнтĕ вырăссен тата пĕтĕм тĕнчери театрăн историнче çĕнĕ сăмах каламалла, вырăс халăхĕн мăн кăмăлланмалăх пуянлăхĕ пулса тăмалла пулнă.

Çак театра пуçласа яракансем хăйсем умне татăклă та уçăмлă задачăсем лартнă. Театра уçас умĕн Станиславский хăйсен актерĕсене çапла каланă: «Ан манăр, эпир чухăн класăн тĕксĕм пурнăçне çутатма, вĕсене хупăрласа илнĕ тĕттĕмлĕхре телейлĕ, эстетикăлла минутсем туса пама тăрăшатпăр. Эпир пирвайхи лайăх ăс-тăнлă, нравственноçа çĕклекен, пурте килсе курма пултаракан театр туса хума тăрăшатпăр та çак çӳлте тăракан тĕллеве хамăрăн пĕтĕм пурнăçа паратпăр».

Театр яланах хальхи пурнăçа кăтартакан пьесăсем лартма тăрăшнă та малтанхи çулсенчех Чеховпа Горький ятне тивĕçлипе илнĕ.

МХТ сцени çинче 1898 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче пĕрремĕш хут «Чайка» пьесăна лартнă хыççăнах А. П. Чехов пьесисем çав тери паллă вырăн йышăнаççĕ. Çавăн хыççăн вара театрăн чаршавĕ çине ĕмĕрлĕхех чайка — чарлан — эмблеми ӳкерĕнет.

Театрта ĕçлекенсене Чехов драматургийĕнче мĕн илĕртнĕ-ха? Мĕншĕн вĕсем Чехов пьесисене чунтан юратса лартнă?

А. П. Чехов хăйĕн пьесисенче интеллигентла çемçешкелĕхе, вăйсăрлăха ним хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларнă, вăл хăйĕн геройĕсен «позицийĕсем» салхуллă-кулăшла пулнине, вĕсем тулаш енчен пăхсан питĕ кăмăллă, йĕркеллĕ пек курăннине, анчах чунĕсемпе питĕ хавшак пулнине кăтартса панă. Максим Горький Чехов драматургине питĕ тĕрĕс хак панă: «Вăйсăр сынсен кичем те тĕксĕм ушкăнĕсем тĕлĕпе пысăк, ăслă, пурин çине те тимлĕн пăхакан çын утса иртнĕ те салхуллăрах кулăпа, çемçен, анчах пит те ӳпкевлĕн: «Япăх пурăнатăр эсир, господа!» тесе каланă».

МХТ лартнă Чехов спектаклĕсенче ун чухнехи обществăн пурнăçĕ тĕрĕс мар çулсемпе пыни, пурнăçра асаппа хурлăх нумайии, пуç пулса тăракан обществăллă строй сынсен талантне путарса пыни тата çакăнпа килĕшме май çукки çинчен калакан шухăш палăрса тăнă.

Чехов драматургине пула актер вăййин çĕнĕ шкулĕ йĕркеленсе çирĕпленсе пынă. Театрта режиссерсем йышăнса тăракан вырăн та ӳснĕ. «Режиссер искусстви» тенине çавăнтанпа çĕнĕлле, тарăнраххăн ăнланма пуçланă.

Анчах та Чехов хăйĕн пьесисенче çутă пуласлăхшăн кĕрешмелли çулсене кăтартса пама пултарайман. Ку ĕçе хăйĕн творчествинче Максим Горький тунă.

«Пирĕн театрта обществăллă-политикăллă çул-йĕре пуçласа яраканни тата ăна туса хураканни А. М. Горький пулнă,— тенĕ Станиславский,— çĕр патĕнчен килнĕ Горький театра çав тери кирлĕ пулнă».

Чăнах та çав, Горький хăйĕн драматургийĕнче ун чухнехи обществăна çивĕччĕн социаллă анализ тунă та куракансене активлă кĕрешĕве чĕннĕ. Горький никамран малтан Художествăллă театр пирĕн çĕршы

ьăн мăн кăмăлланма тивĕçлĕ пуянлăхĕ пулса тăнине ăнланса илнĕ. Çак шухăша вăл хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшипех улăштарман. Театр 30 çул тултарнă кунсенче Горький Художествăллă театр вырăс искусстви валли «ытармалла мар нумай» тунине, вăл «театра Российăра, Европăра, Америкăра аталантарма» хăватлă пулăшнине палăртса çырнă.

«Мещенсем» спектакльте Художествăллă театр Горькипе пĕрле мещенлĕхе питленĕ. Çав пьесăра вырăс сцени çинче пĕрремĕш хут пролетари сăнарне кăтартнă. Вăл — пьесăри Нил сăнарĕ.

«Мещенсем» пьесăна пирвайхи хут 1902 çулхи çуркунне лартнă та, вăл тӳрех обществăллă-политикăллă вырăн йышăннă событи пулса тăнă. Пьесăна лартма хатĕрленнĕ чух, генеральнăй репетицине пĕтĕм «правительствă çыннисем» пырса тулнă. Горький вĕсемшĕн «чăн-чăн клас тăшманĕ» пулнă. Станиславский кун çинчен çапла аса илет: «Полиципе цензурă пирĕн кашни утăма сăнаса тăчĕç, мĕншĕн тесен Художествăллă театр, хăйĕн çĕнĕ репертуарне пула, малта пыракан театр вырăнче шутланнă, Горькие хăйне полици тĕрĕслесех тăнă». «Театр çуртне шала та, ун тавра та полицин вăйлăлатнă нарядне тăратнăччĕ; театр умĕнчи площадьре утлă жандармсем каллемалле çӳретчĕç. Эпир генеральнăй репетицине мар, генеральнăй çапăçăва хатĕрленнĕ пек шутлама май пурччĕ».

Анчах буржуаллă строя тиркесси «Тĕпĕнче» («На дне») пьесăра «Мещенсем» пьесăринчен те вăйлăрах пулнă. Горький социаллă тĕрĕсмарлăха хирĕç кунта нихçанхинчен те хытăрах каланă: «Этем — акă вăл чăнлăх!.. Пĕтĕмпех этемре, пĕтĕмпех этем валли! Этем! Ку вăл пит те лайăх! Ку вăл мăн кăмăллăн янăрать!» Пьесăри геройсенчен пĕри, Сатин калакан çак сăмахсем пĕтĕм спектаклĕн тĕп кĕвви — лейтмотивĕ пулса тăнă. Станиславский ку спектаклĕн режиссерĕ кăна мар, Сатин рольне выляканни те пулнă.

Ку вăхăталла Станиславский актер ăсталăхĕ енĕпе питĕ пысăк ӳсĕмсем тунă. Вăл Чехов пьесисенчи тĕп рольсене вылянă — Тригорина, Астрова, Вершинина, Гаева. Кашни роле вылямассеренех унăн актер пултарулăхĕ вăйланни палăрнă.

1905 çулта Станиславский, Немирович-Данченкопа пĕрле, Горькин виççĕмĕш пьесине — «Дети солнца» лартнă.

«Халĕ, çĕршыври обществăлла вăйсем вăранса хускалнă вăхăтра,— тенĕ вăл 1905 çулхи май уйăхĕнче,— театрăн таса искусствăшăн кăна ĕçлеме тивĕç çук,— унăн обществăри кăмăлсене палăртас, вĕсене куракансене ăнлантарса парас, обществăн учителĕ пулас пулать». Çав çулхинех, Мускаври Литературăпа Художествă кружокĕнче цензурă çинчен тунă докладра вăл цензурă ытла та çулăхнă пирки театр сывлайми пулса çитни çинчен каланă, мĕншĕн тесен «сценă çинче вылякансене публикăн пуринчен малтан илтес килнĕ сăмахсене калама чараççĕ... Эпĕ сценă çинчен рабочи — рабочисен ыйтăвĕ, турра ĕненменни — тĕн çинчен, мужик — çĕр ĕç ыйтăвĕсем çинчен, студент — хăйсен пухăвĕсем çинчен калаçнине илтмен. Çав сынсем пурте, вĕсен тĕп тĕшшине кăларса илнĕ пирки, сценă çинче пĕртте пурнăçри пек мар, пушшăн курăнаççĕ».

1906 çул пуçламăшĕнче МХТ ют çĕршывсене гастроле тухса кайнă та вырăс театрĕн историйĕнче пĕрремĕш хут вырăссен театр культурипе ют çĕршыв çыннисене паллаштарнă. Çав гастроль калама та çук ăнăçлă пулнă: «Çĕлĕкĕмĕрсене хыватпăр сирĕн умăрта, Мускав çыннисем! Эсир паянхи кун никĕсĕ çинче тата иртнĕ историллĕ вăхăтсен никĕсĕ çинче ӳснĕ. Анчах сирĕнте ыранхи кун валли, пуласлăх валли темскерле хăват пур!» — çапла çырнă Европăри хаçатсем, Российăн театр культурине мухтаса. МХТ ют çĕршывсенче гастрольте пулни вырăс театрĕн чапне ӳстернĕ, вырăссен литературипе искусстви çине вĕсене тимлĕрех çаврăнса пăхтарнă. Çавăн хыççăн Станиславскин режиссер тата актер ăсталăхне пĕтĕм тĕнчери искусствă çыннисем пĕлсе ăна тивĕçлипех ырлакан пулнă.

1905 çулхи революцие патша правительстви юн ăшĕнче путарнă хыççăн пуçланнă хăрушла реакци обществă пурнăçĕн пур енĕсене те пырса тивнĕ. Искусствăра ӳкĕнĕçлĕ, декадентла туртăмсем пуçланса кайнă, Станиславский икĕ çул юппинче тăнă пек пулнă. Унăн чăн-чăн халăх театрĕ тăвас ĕмĕчĕ пурнăçланайман. Савăнăç кӳрекен творчествăллă вăхăтсем кая юлнă, çавăнпа та Станиславскин творчествинче питĕ тарăн кризис пуçланнă. Анчах вăл художетвăллă позицине çирĕплетме, творчествăллă ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене тĕплĕрех пĕлме тăрăшнă та актер творчествин «системине» йĕркелесе çырнă. Ку ĕçе вăл хăйĕн пурнăçĕ тăршшипех туса пынă. Ĕçленĕ май унăн шухăшĕсем сарăлсах пынă. Вăтăр çул хушши вăл профессиллĕ актер техникин никĕсĕсене, сценă çинчи ĕçĕн методикине туса çитерес тĕлĕшпе ĕçленĕ. Кунпа пĕр хушăрах унăн театр çинчен, артистсен этики çинчен калакан вĕрентĕвĕ, сценă çинчи реализм çинчен калакан теорийĕ йĕркеленсе çирĕпленсе пынă. Çаксене пĕтĕмĕшпе илсе халĕ «Станиславский системи» теççĕ.

Октябрьти революцие Станиславский ытла тӳрех ăнланса йышăнман. Анчах та вĕл нихçан та пассивлă пулман. Çĕнĕ саманара вăл хăйĕн художник тата гражданин шухăш-кăмăлĕпе ăс-тăнĕ хушнă пек ĕçлесе пынă.

«Театрăн хăйĕн алăкĕсене куракансен чи анлă сийĕсем валли, уйччен малтан культурăллă ырлăхсемпе усă курма пултарайман миллионсем валли уçса памалла пулнă,— тенĕ кайран Станиславский,— театра тăрук пырса кĕнĕ йышлă халăх умĕнче малтанах эпир çухалса кайрăмăр. Анчах та хамăрăн мĕн тери пысăк ĕçсем тумаллине туйнипе, чĕре пăлхануллăн та хавассăн тапатчĕ».

Пурăна киле вăл хăй чăн-чăн халăх театрĕ тăвасси çинчен ĕмĕтленни тинех пурнăçланма пултарнине ăнланнă. Часах театр репертуарне революци умĕнхи вунă çул хушшинче кĕрсе кайнă ăшăх та идейăсăр пьесăсенчен тасатнă.

Коммунистсен партийĕпе çамрăк Совет правительстви чаплă артистсемпе пуян пулнă театра çĕнĕлле творчествă çулĕ çине тăратма тăрăшнă. А. В. Луначарский, ун чухнехи çут ĕç халăх комиссарĕ, Владимир Ильич Ленин сăмахĕсене каласа панă: «Иртнĕ пурнăçран юлнă театрсенчен сыхласа хăварса упрама тивĕçлĕ театр пур пулсан — вăл, паллах, Художествăллă театр»,— тенĕ аслă çуллуç.

Çакăн хыççăн Станиславский хăйĕн пĕтĕм хĕрӳлĕхĕпе çамрăк артистсем хатĕрлеме тытăнать. Вăл артистсем хатĕрлекен темиçе студи уçать, çамрăк юрăçăсемпе нумай ĕçлет. Вăл çĕнĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçленине пула, каярахпа Вахтангов ячĕпе хисепленекен театр уçăлать, 1926 çулта Станиславский ячĕпе хисепленекен пĕрремĕш оперă театрĕ ĕçлеме тытăнать.

Горький çапла çырнă: «Станиславскине, пуринчен малтан, вăл тĕнчери чи лайăх театр искусствин артисчĕсене вĕрентсе ӳстерес тĕлĕшпе куçа курăнман анчах та калама çук йывăр ĕç тунăшăн тав тăвас пулать».

Художествăллă театр сцени çинче, Станиславский ертсе пынипе, чăн малтанхи совет пьесисене — Булгаковăн «Дни Турбиных» тата Вс. Ивановăн «Бронепоезд 14—69» ятлă пьесисене лартнă. «Дни Турбиных» пьесăра кивĕ тĕнче ишĕлнине кăтартнă, «Бронепоезд 14-69» — çĕнни киввине çĕнтернине сăнласа панă. Ăна Совет государстви вунă çул тултарнă кунсенче лартнă та вăл çав тери ăнăçлă пулнă. Çавăнтан вара Станиславский совет театрĕн малта пыракан деятелĕ ятне илтме тивĕçлĕ пулнă.

1928 çулта МХАТ 30 çул тултарнине пит те хаваслăн паллă тунă. Станиславский çав уявра тухса каланă сăмахĕнче театрăн иртнĕ кун-çулне пăхса тухнă тата театра малалла аталантармалли программăна па-



СССР тата ЧАССР халăх артисчĕ М. М. Тарханов Мускаври театр искусствин институтĕнче вĕреннĕ чăваш çамрăкĕсем хушшинче.

лăртнă. Уяв пулнă каçхине МХАТ лартнă тĕрлĕ спектакльсен сыпăкĕсене кăтартнă, Станиславский Чеховăн «Три сестры» пьесин сыпăкĕнче Вершинин рольне вылянă. Çакă вăл сцена çинче выляма юлашки хут тухни пулнă. Чĕре чирĕ тăрук тытса лартнипе, вăл хăйĕн рольне аран вылясса пĕтернĕ, вара çавăнтанпа сцена çине актер пулса тухман. Чирленĕ хушăра вăл хăйĕн теорилле ĕçне малалла туса пынă тата «Работа актера над собой» тенĕ кĕнеке çырма тытăннă. Станиславский хăйне профессиллĕ литератор тесе шутламан, анчах унăн литературă архивĕ питĕ пысăк. Нумаях пулмасть вăл çырса хăварнисене сакăр том туса кăларнă, анчах унта вăл çырнисен пĕр пайĕ кăна кĕнĕ.

Театра çÿреме пултарайман пирки, вăл куллен кун студиецсемпе хăйĕн килĕнче занятисем ирттернĕ, актерсемпе те килтех репетици тунă — хăш чух хăй вырăн çинчен те тăрайман. Çапла ĕçлесе, 1932—1933 çулсенче вăл ертсе пынипе МХАТ икĕ спектакль — «Мертвые души» тата «Таланты и поклонники» лартнă. Çак пьесăсене репетици туни актер ăсталăхĕн çав тери чаплă шкулĕ пулса тăнă.

1935 çулта çитмĕл çулхи Станиславский, хăйĕн сывлăхĕ начар пулнă пулин те, çĕнĕ йышши актерсем хатĕрлес шутпа оперăпа драмă студийĕ туса хурать. «Искусствă пĕр вырăнта тăма пултараймасть,— тенĕ вăл хăш-пĕр ăнланман çынсене,— унăн пĕрмаях, тăтăшах аталанмалла, малалла туртăнмалла, мĕншĕн тесен вăл ватăлма пуçлать, юлашкинчен вилме те пултарать. Тен, эпĕ хам çине ытла та пысăк, вăй çитми задачă илетĕп, анчах пĕр вырăнта тăма пултараймастăп».

Хăйĕн чирĕ вăйлансах пынă пулин те, Станиславский обществăран уйрăм пурнăçпа пурăнмасть. Ун патĕнче совет искусствин тата урăх çĕршывсен искусствин чи паллă представителĕсем пулаççĕ — Алексей Толстой писательпе С. Эйзенштейн кинорежиссер, Д. Шостакович композиторпа Китай артисчĕ Мей-Лай-Фань, обществăллă деятельсемпе ученăйсем, строительсемпе геройлетчиксем, рабочисемпе пионерсем.

Станиславский тăван искусствăна калама та çук пысăк усă кÿнине совет халăхĕпе правительствă тивĕçлипе хакланă. Ăна никамран малтан СССР халăх артисчĕн ятне панă (1936 ç.), Ленин тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе наградăланă.

Юлашки çулсенче Станиславский хăйĕн нумай-нумай çулсем хушши пухăнса пынă творчествăллă опычĕ çинчен çырса хăварма васканă. «Работа актера над собой» кĕнекине малалла çырнисĕр пуçне, вăл хальхи искусствă ыйтăвĕсемпе статьясем çырнă. Çак вăхăтра вăл театр халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетес, миршĕн кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен çырнисем пит те интереслĕ, усăллă. «Театр вăрçа хирĕç кĕрешмелли тĕп хĕç-пăшалсенчен пĕри тата пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăçшăн кĕрешмелли меслет пулмалла», тесе çырнă вăл.

1938 çулхи августăн 7-мĕшĕнче К. С. Станиславский вилнĕ. Вăл ĕçлесе пурăннă çуртра мемориальнăй музей тунă, Леонтьевски тăкăрлăка Станиславский урамĕ тесе ят панă. Унăн ятне Мускаври икĕ театра панă.

К. С. Станиславский пурнăçĕпе творчестви çын хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне тăван халăхне ним юлмиччен панине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать. Обществăллă деятель тата мыслитель, вырăс халăхĕн чаплă актерĕ тата генилле режиссерĕ, педагог тата актерсен темиçе ăруне вĕрентсе çитĕнтернĕ, таса чун-чĕреллĕ çын, Тăван çĕршывăн хĕрÿллĕ патриочĕ, вăл чăн-чăн совет художникĕ-гражданинĕ пулнă. Станиславский идейисем вăл пурăннă чухнех хăй нумай хушă ĕçленĕ театртан тухса анлăн сарăлнă. Станиславский вĕрентĕвĕ халĕ пĕтĕм театр культурин пуянлăхĕ пулса тăрать. Пирĕн ĕмĕрти пĕтĕм сценă культури унăн идейисемпе усă курса аталанать.

Станиславскипе МХАТ творчестви Совет Союзĕнчи нумай нациллĕ реализмла театр искусствине чечеклентерсе ÿстерес ĕçре паллă вырăн йышăннă, халĕ те йышăнать. Ку шута пирĕн чăваш театр искусстви те кĕрет.

Вăтăрмĕш çулсем — чăваш театрĕн историнче пит те паллă çулсем, пирĕн театр творчествă енĕпе уйрăмах пысăк çитĕнÿсем тунă тапхăр пулса тăраççĕ. Шăп çав çулсенче ĕнтĕ чăваш театрĕн коллективĕ тата Чăваш АССРĕнчи вырăс драмă театрĕн коллективĕ МХАТ творчествипе уйрăмах çывăх пулаççĕ, вĕсем вырăс театр культурин чаплă çитĕнвĕсене — К. С. Станиславскин актер системине вĕренеççĕ. Çак пархатарлă ĕçе пирĕн театрта К. С. Станиславскин вĕренекенĕсенчен пĕри, МХАТăн икмĕш студийĕн артисчĕ пулнă Е. А. Токмаков туса пынă. Чăваш тата вырăс театрĕн коллективĕсен художествăллă руководителĕ пулса, вăл пирĕн актерсене Станиславский системипе ĕçлеме вĕрентнĕ, вĕсен театр культурине çĕкленĕ. Чăваш театрĕн коллективĕпе М. Горькин «Тĕпĕнче» пьесине, вырăс артисчĕсемпе «Егор Булычев» пьесăна лартса, Е. А. Токмаков чăн-чăн профессилле меслетсемпе ĕçлесе социализмла реализм принципĕсене çирĕплетме хăнăхтарнă.

Хальхи чăваш артисчĕсенчен нумайăшĕ Мускаври театр искусствин государствă институтĕнче вĕренсе тухнă. Вĕсене МХАТри чи паллă артистсем вĕрентнĕ — СССР халăх артисчĕ М. М. Тарханов (1947 çулта вĕренсе тухнисене) тата СССР халăх артисчĕ В. А. Орлов (1961 çулта вĕренсе тухнисене). Совет театрĕн паллă деятелĕсем, К. С. Станиславскипе пĕрле ĕçлесе вĕреннĕскерсем, вĕсем хăйсен пĕлĕвĕсемпе опытне пирĕн çамрăк артистсене пама тăрăшнă. Эпир вĕсене уншăн чĕререн тав тăватпăр.

## Пирĕн календарь

# А. С. СЕРАФИМОВИЧ

*(Çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май)*

1887 çулта Российăн çурçĕр енчи Мезень ятлă пĕчĕк хулара унта ссылкăна янă çĕнĕ çын — пĕвĕпе çӳлĕ, сарлакарах сăн-питлĕ, витĕр шăтарас пек пăхакан кăвак куçлă çын пурăнма пуçланă. Ку вăл Александр Серафимович Попов пулнă.

Патшана вĕлерме тапăннă çынсене — Александр Ульяновпа унăн юлташĕсене арестленĕ хыççăн кăштах вăхăт иртсенех, Петербургри студент Попов правительствăна хирĕç кĕрешме чĕнекен прокламаци çырнă. Çак прокламацишĕн вара ăна столицăран çурçĕрелле кăларса янă.

Çакăнта, ссылкăра, Серафимовичăн пирвайхи калавĕсемпе очеркĕсем çуралнă,— Александр Попова вулакансем часах çак хушаматпа пĕлекен пулнă. Серафимович хăйĕн калавĕсенче çурçĕрти пурнăçа кăтартнă, анчах çав пурнăçра илĕртекен романтикă пулман — унта çынсем калама та çук чухăн, питĕ асаплă пурнăçпа пурăннă, çапах та капитализмла обществăри тискер кайăкла законсене хирĕç нимĕн те тăвайман.

Çамрăк писателĕн пирвайхи калавĕсене («Пăр çинче», «Сулă çинче»), Глеб Успенскипе В. Г. Короленко асăрхаса ырланă.

Ссылкăран таврăнсан, Серафимович пĕр хушă Усть-Медведицкая станицинче, унтан Мариупольре, Новочеркасскра пурăнать. Вăл çĕнĕ произведенисем çырать, Дон Çарĕн Облаçĕнче тухса тăракан хаçатсемпе журналсенче активлăн хутшăнса ĕçлет. Унăн очеркĕсемпе калавĕсен геройĕсем — шахтерсем, заводри рабочисем, ремесленниксем, пулăçсем.

Серафимович ĕç çыннисен пурнăçне питĕ лайăх пĕлнĕ. Вĕсен пурин те ĕçĕ тӳсме çук йывăр пулнă, вĕсем нихçан та нушаран хăтăлса тухайман, яланах вĕсемпе юнашар хуйхă-суйхă



çӳренĕ, ăнсăртран кăна, сайра хутра, пĕчĕкçеç савăнăçсем пулкаланă...

Серафимовичăн творчествăллă пурнăçĕнче вăл аслă писатель Максим Горькипе тĕл пулса унпа çывăхланни пысăк вырăн йышăннă. Унпа вăл 1902 çулхи кĕркунне Мускавра курнăçса паллашнă. Шăп та ĕнтĕ Горькипе паллашнă хыççăн Серафимович творчествинче çĕнĕ герой — революцилле пролетариат тĕп вырăн йышăнать. Шăп та çавăн хыççăн вăл 1905 çулхи событисем çинчен хăйĕн чи вăйлă калавĕсенчен пĕрне — «Пытару маршĕ» калав çырать. Çав калавăн тĕп геройĕ — çĕнтерӳçĕ-халăх сăнарĕ. Каярахпа вăл сăнар «Тимĕр юхăм» («Железный поток») романра тата анлăрахăн тухса тăрать, эпикăлла сăнар пулса тăрать.

Российăри пĕрремĕш революцие путарса лартнă хыççăн пуçланса кайнă реакци çулĕсенче çырнă произведенисенче Серафимович вулакансене харпăрлăхăн хăрушла вăйне, вăл çын чунне пăсса хунине, этем сăн-сăпатне çухаттарнине кăтартнă.

Октябрьти революци çĕнтернĕ хыççăн Серафимович чи пултаруллă совет писателĕсемпе пĕрле партин шанчăклă помощникĕ пулса тăрать. Вăл тăтăшах граждăн вăрçин фрончĕсене кайса çӳрет, хĕрлĕ армеецсене хавхалантаракан возванисем, очерксем, статьясемпе калавсем çырать.

1924 çулта унăн «Тимĕр юхăм» («Железный поток») ятлă роман-эпопейи тухать. Ку вăл — Тамански арми туса ирттернĕ чаплă походăн историйĕ. Писатель çак легендарлă похода çав тери тĕплĕн те тимлĕ, ним сиктерсе хăвармасăр тĕпчесе пĕлнĕ.

Вăтăрмĕш çулсенчи очерксемпе калавсенче тата çырса пĕтереймен «Колхоз хирĕсем» ятлă романĕнче Серафимович Совет çĕршывĕнче çĕнĕ пурнăç аталанни, çынсене савăнăç тата телей кӳрекен ĕçсем çинчен çырать. Çав вăхăтрах вăл çамрăк писательсемпе питĕ нумай ĕçлет.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çырнă произведенисенче пултаруллă писатель совет çыннисен иксĕлми паттăрлăхĕпе патриотизмне кăтартса панă.

«Писателĕн хăй пурăнакан пурнăçпа пĕр тан пымалла», тенĕ Серафимович яланах. Писатель-большевик, писатель-боец, вăл аслă социализм саманине тивĕçлĕ çын пулнă, çав саманашăн хăйĕн пĕтĕм вăйне-халне, пысăк талантне парса ĕçленĕ.

А. С. Серафимович кĕнекисем чылай çĕршывсене сарăлнă, Совет çĕршывĕнчи нумай чĕлхесене куçарнă. Ун кĕнекисем чăвашла та темиçе хутчен пичетленнĕ, вĕсене пирĕн халăх яланах юратса вулать.

Вăл 1863 çулта çуралнă, 1949 çулта вилнĕ.

А. С. СЕРАФИМОВИЧ

# ИКĔ ВИЛĔМ

*Калав*

Мускав Советне, штаба, пуçне тутăр çыхнă кăвак куçлă хĕр пырса кĕнĕ.

Октябрь уйăхĕнчи пĕлĕт тĕксĕм те хаяр сăнлă пулнă, çуртсен сивĕ те йĕпе тăррисенче, мăрьесем хушшипе, юнкерсем йăпшăнса çÿресе, Совет площадĕнчи асăрханман çынсене винтовкăсенчен перепере ÿкернĕ.

— Эпĕ революцие нимĕнпе те усăллă пулаймăп-ши? — тенĕ çав хĕр.— Манăн сирĕн штаба юнкерсем çинчен пĕлтерсе тăрас килет. Сестра пулса ĕçлеме пултараймастăп эпĕ, тата сирĕн сестрасем ахаль те нумай. Çапăçма та пĕлместĕп — алла нихçан та пăшал тытса курман. Анчах та эсир мана пропуск парсан, эпĕ сире валли сведенисем илсе килсе тăрăттăм.

Çулланса пĕтнĕ сăран пиншак тăхăннă, пиçиххийĕ хыçне маузер чикнĕ, нумай вăхăт çывăрман тата чахоткăпа чирлĕ пулнă пирки пичĕ-куçĕ путса ларнă юлташ, ун çине пĕрмай шăтарасла пăхса, çапла каланă:

— Пире улталасан, персе пăрахатпăр. Çавна ăнланатăр-и эсир? Сире лере палласа илсен, унта персе пăрахаççĕ. Пире улталасан, кунта персе вĕлеретпĕр.

— Пĕлетĕп.

— Эсир пур енчен те тĕплĕн шухăшласа пăхрăр-и-ха?

Вăл пуçĕ çинчи тутăрне тÿрлетсе илнĕ.

— Эсир мана пур постсене те пырса кĕмелли пропуск тата эпĕ офицер хĕрĕ пулни çинчен документ парăр.

Ăна уйрăм пÿлĕме кĕме хушнă та алăк патне часовой тăратнă.

Чÿречесем тĕлĕнче, плошадьре, каллех пăшал пенисем шатăртаттни илтĕннĕ — сасартăк юнкерсен броневикĕ ыткăнса пырса пенĕпенĕ те аяккалла ыткăннă.

— Шуйттан пĕлет ăна. Унтанкунтан ыйтса пĕлтĕм, анчах та мĕн вăл, ыйтса пĕлни,— тенĕ чахоткă пирки путса ларнă питлĕ юлташ,— паллах, вăл улталама та, сутма та пултарать. Çапах та юрĕ ĕнтĕ, пропускне парăпăр. Пирĕн çинчен вăл лере нумаях каласа кăтартма пултараймасть. Анчах лексен вара — шаккаса хуратпăр.

Хĕре суя документсем туса панă та, вара вăл Арбатра вырнаçнă Александровски училищĕне кайнă, кĕтессенче тĕл пулакан хĕрлĕ армеецсене хăйĕн пропускне кăтартса пынă.

Знаменкă урамĕнче вăл хĕрлĕ пропускне пытарса хунă. Ăна юнкерсем хупăрласа илсе хăйсен училищине, дежурнăй пÿлĕме тытса кайнă.

— Манăн сестра пулса ĕçлес килет. Ман аттене Германи вăрçинче, Самсонов чакса кайнă чух вĕлернĕ. Икĕ пиччем Дон тăрăхĕнче, казаксен чаçĕсенче. Эп кунта хамăн пĕчĕк йăмăкăмпа пурăнатăп.

— Питĕ аван, шутсăр лайăх. Эпир кунщăн савăнатпăр. Эпир аслă Российăшăн йывăррăн кĕрешнĕ чух пире кашни ырă кăмăллă патриот чунтан пулăшнăшăн хĕпĕртетпĕр. Эсир, авă, офицер хĕрĕ. Тархасшăн, пирĕнпе пулăр эппин!

Ăна пысăк пÿлĕме кĕртнĕ те чей илсе пырса панă.

Çав вăхăтра дежурнăй офицер хăй умĕнче тăракан юнкера çапла каланă:

— Акă мĕн, Степанов: халех рабочи пек тумланăр. Епле те пулсан Покровкă урамне çитĕр. Акă сире адрес. Çак пирĕн патра ларакан хĕр пирки тĕплĕнрех ыйтса пĕлĕр.

Степанов урăх пÿлĕме кайса кăкăр çинче юнлă шăтăк курăнакан пальто тăхăннă,—ăна халь çеç персе пăрахнă рабочи çинчен сĕвсе илнĕ-мĕн. Çавăн пекех унăн йĕмне, çĕтĕк аттине, çĕлĕкне тăхăннă та, тĕттĕм пулсан Покровкăна кайнă.

Унта ăна темле хĕрлĕ çÿç-пуçлă çăмламас гражданин, куçĕсене тĕлĕнмеллерех вылятса, çапла каланă:

— Тĕрĕс, иккĕмĕш номерте çавăн майлăскер пурăнать. Пĕчĕк йăмăкĕпе пĕрле. Шуйттан буржуй тавраш!

— Халь ăçта вăл?

— Тем, иртенпех çук-ха. Арестлерĕç пулинех. Штабс-капитан хĕрĕ вĕт, чăн-чăн йĕксĕк. Анчах сире мĕн тума кирлĕ вăл?

— Унăн прислуги пирĕнпе пĕр ялтанччĕ. Çавна курасшăнччĕ кăна. Ну, сывпулăр-ха эппин!

Çĕрле, постсенчен таврăнсан, юнкерсем çав кăвак куçлă хĕр çумĕнчен хăпма та пĕлмен, унпа йăпăлтатнă кăна. Пирожнăй, канфетсем тупса пынă ун валли. Пĕри хавасланса рояль калатнă, тепри, чĕркуççи çине тăрса, кулакула, чечек çыххи тыттарнă.

— Аркататпăр вăл сыснасене! Эпир паян вĕсене пит лайăх лектертĕмĕр-ха. Ыран каçхине акă Смоленски рынок енчен пырса çапатпăр та, вĕсен шăрчĕ те юлмасть!..

Ирхине çак хĕре вĕсем лазарета перевязкăсем тума ăсатнă.

Шурă стена тĕлĕпе иртнĕ чух, хĕр курах кайнă: стена çумĕнче кĕрентерех ситсă кĕпе тăхăннă рабочи аллисене саркаласа месерле выртнă,— аттисем тăп-тăр лапра, патушĕсем те çĕтĕлнĕ, сулахай куçĕ тĕлĕнче пĕчĕк кăна хура шăтăк курăнать.

— Шпион,— тенӗ юнкер, малаллa утнӑҫемӗн ун ҫине пӑхмасӑрах.— Тытрӑмӑр.

Хӗр кунӗпех лазаретра ҫав тери тӑрӑшса, пурне те кӑмӑла каймалла ӗҫленӗ. Аманнисем ӑна тав туса, унӑн хурарах кӑвак куҫӗсенчен ӑшӑ туйӑмпа пӑхнӑ.

— Тавтапуҫах сана, йӑмӑк...

Иккӗмӗш каҫхине вӑл хӑйне киле яма ыйтнӑ.

— Ой, ӑҫта каясшӑн вара эсир? Хӑрушӑ вӗт ку! Халӗ кашни кӗтес хыҫӗнчен сыхласа тӑраҫҫӗ. Пирӗн зонӑран тухсанах сире леш ирсӗрсем ярса тытаҫҫӗ те пӗр сӑмахсӑрах персе пӑрахаҫҫӗ.

— Эп вӗсене документ кӑтартатӑп, эп мирлӗ ҫын вӗт. Анчах каймасӑр пултараймастӑп. Унта манӑн йӑмӑк пӗр-пӗччен. Тур пӗлет, тем пулнӑ-ха унпа. Чун ыратать.

— Йӑмӑкӑр пулсан, пӑшӑрханмалла ӗнтӗ. Ку тӗрӗс. Анчах эпӗ сире икӗ юнкер парӑп, вӗсем ӑсатса ярӗҫ.

— Ҫук, ҫук, ҫук...— хӑраса аллисене ҫӗкленӗ хӗр,— эп пӗчченех каятӑп... пӗчченех... Эп нимрен те хӑрамастӑп.

Лешӗ ун ҫине тӗлӗнерех пӑхса илнӗ те:

— Ну... юрӗ эппин, кайӑр,—тенӗ.

«Кӗрен кӗпепе, куҫӗ тӗлӗнче хура шӑтӑк... пуҫне каялла янӑ...»— шухӑшласа илнӗ хӗр.

Вӑл хапхаран тухнӑ та тӳрех тӗттӗм ӑшне путнӑ—ниҫта та нимӗн те курӑнман, пӗр сасӑ та илтӗнмен.

Вӑл училище патӗнчен кӑшт кайсанах Арбат площачӗ урлӑ каҫса Арбат хапхи патнелле утнӑ. Тӗттӗмре вӑл хӑйӗн кӗлеткине ҫеҫ курнӑ. Урӑх нимӗн те пулман — пӗтӗм тӗнчере пӗр-пӗччен юлнӑн туйӑннӑ.

Хӑрасси пулман. Анчах кӗлеткинчи пур шӑнӑрсем те карӑннӑ.

Ача чухне, ашшӗ килтен тухса кайсан, вӑл кравать тӗлӗнче ҫакӑнса тӑракан гитарӑна пӑтаран вӗҫертсе илнӗ те, урисене хуҫлатса ларса, пӗр хӗлӗхне хуллен янратса, ӑна хытӑран хытӑ, хытӑран хытӑ карӑнтарнӑ, хӗлӗх сасси ҫинҫелнӗҫемӗн ҫинҫелнӗ, вӑл хурланса макӑрнӑн туйӑннӑ. Ҫав сасӑ ун чӗринех пырса тивнӗ: ти-ти-ти... Ак тӳсеймест, ак татӑлать... Ҫурӑм тирӗ сӳ! туса илет, ҫамки ҫине вӗтӗ тар пӗрчисем тапса тухаҫҫӗ... Анчах ҫакӑ ӑна ҫав тери, каласа памалла мар кӑмӑла кайнӑ.

Халӗ, пӑч тӗттӗмре пӗччен утса пынӑ чух та ҫавӑн пек пулнӑ. Вӑл хӑраман, анчах чӗрери сасӑ ҫинҫелнӗҫемӗн ҫинҫелнӗ: ти-ти-ти... Ҫав сасӑ илтӗннӗ те хӑйӗн кӗлетки курӑннӑ. Урӑх нимӗн те пулман.

Унтан сасартӑк вӑл аллине малалла тӑснӑ — ҫурт стени иккен. Тӑрук хӑраса кайнипе шӑмшакра пӗр вӑй та юлман, ҫамки ҫине — ача чухнехи пек — тар тапса тухнӑ. Умра — ҫурт стени, анчах ун шучӗпе кунта бульвар решутки пулмаллаччӗ. Эппин, вӑл аташса кайнӑ. Ну, мӗнех вара уншӑн, вӑл ак халех тӗрӗс ҫул тупать. Анчах шӑлсене ниепле те чарма ҫук — чӗре таппипе пӗрле шаккаҫҫӗ. Тахӑшӗ ун ҫумне йӑпшӑнать те мӑшкӑлланӑ пек пӑшӑлтатать:

— Ку вӗт санӑн вилӗмӳн пуҫламӑшӗ... ӑнланмастӑн-и ҫавна?.. Эсӗ аташса кайрӑм тесе шутлатӑн, анчах та ку...

Вӑл хӑйӗн пӗтӗм ӑс-тӑн вӑйне пухса тавҫӑрса илет: сылтӑмра Знаменкӑ, сулахайра бульвар... Вӑл ҫавсен хушшипе пынӑ пулас. Аллине тӑсать — юпа. Телеграф юпи-ши? Унӑн чӗри сиксе тухас пек тапнӑ. Вӑл кукленсе ларнӑ та ҫӗре хыпашлама тытӑннӑ, кӗҫех унӑн пӳрнисем йӗпе те сивӗ тимӗре сӗртӗннӗ... Решутка, бульвар... Ҫав тери пӑлханни тӳрех иртсе кайнӑ. Вӑл лӑпкӑн кӑна ура ҫине тӑнӑ та... чӗтресе янӑ. Таврара пӗтӗмпех хускалса тӑрать иккен— темле пӑтравлӑн, уйӑрса илмелле мар, пӗрре ҫухалса, тепре ҫӗнӗрен пуҫланса кайса. Пурте хускалса тӑраҫҫӗ: ҫуртсем те, стенасем те, йывӑҫсем те. Трамвай мачтисем, рельсӑсем — юн пек хӗрлӗскерсем, юн пек хӗрлӗ тӗттӗмлӗхре хускалаҫҫӗ. Тӗттӗмлӗхӗ хӑй те, пӑтранчӑк хӗрлӗскер, пӗрмай хускалать. Усӑнса аннӑ пӗлӗтсем те, юн тӗслӗскерсем, хускалса явӑнса тӑраҫҫӗ.

Вӑл ҫавӑнталла, ним сассӑр вут-ҫулӑм явӑннӑ ҫӗрелле утнӑ. Никитски хапха патнелле. Тӗлӗнмелле, мӗншӗн-ха ӑна ку таранччен никам та кӑшкӑрса чарса тӑратмарӗ? Пӗлет вӗт-ха вӑл, кашни тӗттӗм хапхарах, подъездрах, кашни кӗтесрех дозорсем пытанса тӑраҫҫӗ, ун ҫинчен куҫ та илмеҫҫӗ. Ӑна пурте кураҫҫӗ, ӑна, ҫак юн пек хӗрлӗ явӑнчӑк ҫутӑра пыракан ҫынна.

Лӑпкӑнах пырать вӑл,— пӗр аллинче унӑн шуррисен пропускӗ, тепринче — хӗрлисен. Ӑна кам чӗнсе илет, вӑл ҫавӑн йышши пропуск кӑтартать. Таврара пуш-пушах, пӗр сассӑр, шавсӑр хӗп-хӗрлӗ вут-ҫулӑм кӑна ялкӑшать. Ахӑрса кайнӑ вут-ҫулӑмӑн вӑрӑм чӗлхисем ҫӳлелле туртӑнаҫҫӗ, хӗрлӗ пӗлӗтсене тӑрӑнаҫҫӗ. Темӗн пысӑкӑш ҫурт вут-кӑвар ӑшӗнче витӗрех курӑнать. Ҫав хӗрсе кайнӑ ҫуртран сирпӗнекен хӗм ҫӑмхисем унталла та кунталла кайса ӳкеҫҫӗ. Ҫурт шатӑртатать, чашкӑрать, чӗтренет...

Хӗр каялла ҫаврӑнса пӑхать. Хула тӗттӗмлӗхе путнӑ. Хулара темӗн чухлӗ ҫурт, чиркӳ, площадьсем, скверсем, театрсем, юхха хӗрарӑмсен ҫурчӗсем, анчах вӗсем халь пӗтӗмпех ҫухалнӑ. Хыҫра — шӑп, ҫав шӑплӑхра — вӑрттӑнлӑх. Вӑрттӑнлӑхран кӗҫ-вӗҫ темӗн те пӗр сиксе тухма пултарать. Ҫавӑнпа та хӗре калама ҫук хӑрушӑ пулса каять.

Ҫунакан ҫуртран тӳсме ҫук вӗри ҫапать. Хӗр урам урлӑ чалӑшшӑн утса кайнӑ. Анчах та тӗттӗм кӗтессе ҫитсенех ун умне лутака кӗлетке тухса тӑнӑ та штык ҫинче ҫулӑм ҫути выляса илнӗ.

— Ӑҫта каятӑн? Кам?

Вӑл чарӑннӑ та тинкерсе пӑхнӑ. Хӑш алличе мӗнле пропуск вырттнине манса кайнӑ вӑл. Вӑхӑт шунӑ. Пӑшал кӗпҫи унӑн кӑкри таран ҫӗкленнӗ.

Мӗн-ха вара ку! Вӑл сылтӑм аллине тӑсасшӑнччӗ, анчах хӑй кӗтмен ҫӗртенех сулахайне уҫнӑ та ывӑҫ тупанне уҫса кӑтартнӑ.

Унта юнкерсен пропускӗ выртнӑ.

Тӗттӗмрен тухнӑ арҫын винтовкине ури ҫумне тӑратса хӑйӗн авӑнман пӳрнисемпе пропуска

тӳрлетме тытăннă. Хĕр вĕттĕн-вĕттĕн, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе тăнă. Кун пекки унăн нихçан та пулманччĕ-ха. Хыçалта çунакан çуртран темĕн пысăкăш вут пуççи вăркăнса тухса тавралăха çутатнă... Арçыннăн кушаланнă ал тупанĕ çинче юнкерсен пропускĕ... кутăн выртнă.

«Ухх.. пăх-ха эс ăна... хутла пĕлмест!»

— Ме.

Хĕр çак шуйттан хутне часрах пăчăртаса тытнă.

— Ăçта çити каятăн?—хыçалтан кăшкăрнă арçын.

— Штаба... Совета.

— Тăкăрлăксемпе кай, атту шаплаттараççĕ.

Штабра ăна кăмăллăн йышăннă: вăл илсе килнĕ сведенисем питĕ кирлĕскерсем пулнă. Унпа пурте ăшшăн калаçнă, ыйтса пĕлнĕ. Сăран пиншакли, лешĕ, чахоткăпа чирлекенни, ачашшăн каланă:

— Ну, маттур хĕр иккен эсĕ! Анчах та асту, сыхланарах çӳре, ан лек.

Каçхине, пăшал сассисем шăпланма пуçласан, вăл каллех Арбата кайнă. Лазарета пĕр вĕçĕмсĕр аманнисене илсе пырса тăнă. Юнкерсем Смоленски рынок патĕнчен пуçласа янă атакăна хĕрлисем путлантарнă иккен, юнкерсен çухатусем нумай пулнă.

Ыйăннипе сăнран ӳкнĕ хĕр çĕрĕпех лазаретра ĕçленĕ, аманнисене бинтсемпе çыхнă, ĕçме панă, минтерĕсене тӳрлетнĕ, аманнисем çавăншăн ăна чунтан тав тунă. Анчах тул çутăлнă чух лазарета сасартăк пĕр юнкер вăркăнса кĕнĕ,— вăл çара пуçăн пулнă, хăй çине рабочи тумне тăхăннă, унăн çӳçĕ-пуçĕ арпашса кайнă, пичĕкуçĕ тискеррĕн курăннă.

Вăл тӳрех хĕр патне ыткăнса пынă.

— Ак çак.. сĕтĕрĕнчĕк... сутнă пире...—хăрăлтатса илнĕ вăл.

Пир пек шурса кайнă хĕр каялла чакса илнĕ, анчах самантранах унăн пичĕ хĕп-хĕрлĕ пулса кайнă та вăл хыттăн кăшкăрса янă:

— Эсир... эсир рабочисене вĕлеретĕр! Вĕсем хăйсен хăрушла шăпинчен хăтăласшăн... манăн... эпĕ хĕç-пăшалпа çапăçма пĕлместĕп, çавăнпа та эп сире çак майпа вĕлерме тăрăшрăм...

Ăна шурă стена çумне илсе тухса тăратса икĕ хутчен чĕринченех пенĕ те, вăл унччен малтан ситсă кĕпеллĕ рабочи выртнă тĕле ӳкнĕ. Ун кĕлеткине илсе тухса кайиччене вара унăн кăвак куçĕсем пĕр вĕçĕм октябрьти салху та хаяр пĕлĕт çинелле пăхнă.


## *ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТУЛАШĔНЧЕ ПУРĂНАКАН ПОДПИСЧИКСЕНЕ ПĔЛТЕРЕТПĔР:*

*Юлашки вăхăтра пирĕн республикă тулашĕнче, ытти республикăсемпе облаçсенче пурăнакан подписчиксенчен тăтăшах ӳпкевлĕ çырусем килеççĕ. «Пирĕн патри почтă уйрăмĕсенче «Тăван Атăла» çырăнтармаççĕ, подпискă йышăнмаççĕ», тесе çыраççĕ вĕсем.*

*«Тăван Атăла» çырăнтарманни — почтă уйрăмĕнче ĕçлекенсен йăнăшĕ. «Тăван Атăла» («Родная Волга») пĕтĕм Совет Союзĕнчи хаçатсемпе журналсен 1963 çулхи Каталогне кĕртнĕ, вăл 80-мĕш страницăра, индексĕ 73392. Çавăнпа та никам та ăна çырăнтармасăр, подпискă йышăнмасăр тăма пултараймасть. Çырăнас текенсен почтăра ĕçлекенсене çакăн çинчен ăнлантарса парас пулать.*

*«Тăван Атăла» хуть те хăш номертен пуçласа та çырăнма пулать. Лимит таврашĕ çук, ăна хуть те мĕн чухлĕ сарма юрать. Унăн хакĕ: çулталăка 1 тенкĕ те 80 пус, 6 уйăха — 90 пус, пĕр номерĕ — 30 пус.*

*«ТĂВАН АТĂЛ» редакцийĕ.*

**Михаил ЮРЬЕВ**



# ÇEÇПĔЛ ТАНТĂШĔ

*(Н. Ваçанкка çуралнăранпа 60 çул тултарнă май)*

Никифор Тарасович Ваçанкка — чăваш совет литературин никĕсне хывнă паллă поэтсенчен пĕри. Унăн пултарулăхĕ пирĕн çĕршывра Аслă Октябрь самани çулĕсенче чечекленме тытăннă. Çав вăхăтра халăх хушшинчен шăтса тухнă писательсем кашниех литературăна хăйĕн çулĕпе пынă: пĕрисем çамрăк совет республикине хăрушă вилĕмрен çăлса хăварас тесе йывăр походсенче çÿренĕ вăхăтрах паттăр халăха мухтаса сăвă-юрă кĕвĕленĕ; теприсем тата, çĕршывăн вăрçăпа революци вăхăтĕнче юхăннă хуçалăхне ура çине тăратас тесе, тĕрлĕ çĕрте тар юхтарса ĕçленĕ вăхăтрах алла кĕнеке тытнă. Революци вăхăтĕнче шинель тăхăнма çул çитмен çамрăксем, Октябрь панă ырлăхпа хавхаланса, парттă хушшине ларнă, наукă никĕсĕсене вĕренме тытăннă, хăйсен чĕринче шĕл кăвар пек ялкăшса тăракан çутă ĕмĕтсем çинчен сăвă-юрăра калама тăрăшнă. Никифор Ваçанкка шăпах ĕнтĕ çавăн пек çамрăксенчен пĕри пулнă. Вăл революцин малтанхи çулĕсенчех литературăна хытă юратнă.

Элĕкри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ чух, 1918 çулта, унăн аллине 1908 çулта Чĕмпĕрте кăларнă «Чăваш халлапĕсем» кĕнеке лекнĕ. Çав кĕнекери «Нарспи» поэмăна тата «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» юмахсене ачасем чĕререн килĕштерсе вуланă, чылай йĕркесене пăхмасăр калама вĕреннĕ.

К. В. Ивановăн вилĕмсĕр произведенийĕсене нумайăшне пăхмасăр калама пĕлекен шкул ачисем хушшинче çĕмĕрт пек хура куçлă ача уйрăмах палăрнă. Вăл «Нарспи» сыпăкĕсене каланă чухне ун çине пурте тĕлĕнсе пăхнă. «Эх, пирĕн те çакăн пек вулама вĕренесчĕ!» Чун-чĕререн хавхаланса калакан сăвăсене итлеме ытла та кăмăллă пулнă, тепĕр чух ăна пĕр сăввах темиçе хут калаттарнă. Шкулти вечерсенче те сăвă калама чи малтан ăна чĕнсе кăларнă.

Вăл пулас поэт, Элĕк шкулĕнче алăпа çырса кăларакан «Вĕлле хурчĕ» журнал редакторĕ Никифор Ваçанкка пулнă.

Пĕррехинче шкулта çакăн пек ĕç пулса иртнĕ: вĕренекенсен комитечĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Вĕлле хурчĕ» журналăн черетлĕ номерĕпе паллашма ачасем уйрăм пÿлĕме пухăннă. Паллах, чи малтан журнал редакторĕ сăмах илнĕ ĕнтĕ. Ачасен çак журналта пичетленнĕ сăвви-юррисене вăл пĕлĕт çине вĕçсе каяс пек хавхаланса вуланă. Юлашкинчен хăйĕн пĕрремĕш сăввипе паллаштарнă.

Çурри хуçа, çур улпут,
Палламалла курсанах...
Кăпăрт-кăпăрт тутарса
Çÿрет сăран атăпа..
Çÿçне-пуçне тиакла
Шăлса хунă пĕр енне,
Чухăн вăйне сăрăхтарса,
Пуйнă, тет, вăл сутăпа.

Сăввăн юлашки сăмахĕсем пÿлĕмри ачасем пуртетăвăллăн алă çупнипе хутăшса кайнă. Ашшĕ-амăшĕсем чухăнсене макăртса пухнă мулпа мухтанакан çăмăлттайсене ачасем часах палласа илнĕ. Лешсем вара, ним тума аптранă енне, пÿлĕм алăкне хыттăн шатлаттарса хупса, тÿркессĕн тухса кайнă.

Çапла вара, шкулта поэт çуралнă. Юлташĕсем хавхалантарнăшăн савăнса, Н. Ваçанкка сăвă хыççăн сăвă шăрантарма тытăннă. Çуллахи каникул вăхăтĕнче вăл хăйĕн ялĕнчи тантăшĕсене «Çуллахи ир» сăвва вуласа панă. Вăхăт нумай та иртмен, вăл «Малалла», «Вырмара», «Çуллахи илем» ятлă сăвăсем çырнă. Вĕсенче пуринче те çамрăк поэт çанталăк илемне, хăй куллен курса йăпанакан уй-хирсемпе шыв-шурсене мухтаса юрланă. Тепĕр çултан вăл икĕ поэмă çырнă: пĕринче, «Муркавар» ятлинче, 1773 çулхи сентябрьте Уралти Яик шывĕ хĕрринче Пугачев пуçарса янă восстание хутшăннă ирĕк шухăшлă çынсем çинчен каласа кăтартнă; тепринче, «Тытамак» ятлинче, ялти чухăнсем патша вăхăтĕнче темĕн тĕрлĕ нуша тÿссе иртттерни çинчен, вĕсен ачисем мĕн пĕчĕкрен ял пуянĕсенчен хăраса пурăнни çинчен пăшăрханса çырнă.

Паллах, поэтăн çак тапхăрти сăвви-юррисене пурне те поэзи калăпне ларнă тесе йышăнма май çук. Пур енчен те пиççе çитнĕ произведенисем çырма поэтăн ун чухне пĕлÿ те, опыт та, пурнăçа ăнланасси те çителĕксĕр пулнă-ха. Çапах та тĕнчене кисретнĕ Октябрь кунĕсене, хăйĕн ытти тантăшĕсем пекех, вăл хĕрÿллĕн савăнса саламланă. Кĕрешÿре тупнă халăх кирек мĕнле йывăрлăха та хăюллăн çĕнтерме пултарассине вăл чун-чĕререн ĕненсе тăнă.

Пирвайхи сăввисенче поэт шăпах çакăн çинчен хавхаланса юрланă та ĕнтĕ.

«Вĕлле хурчĕ» журнала ун чухне Элĕкре çеç мар, Вăрнар тавраш̆ĕнчи шкулсенче те, Упи тăрăхĕнче те, Чурашра та, Хусанпа Чĕмпĕрти чăваш шкулĕсенче те юратса вуланă. Элĕк шкулĕнчи ачасем ăна, Н. Васанкка ертсе пынипе, пĕр харăсах 30—40 экземпляр кăларнă. Çак журналти сăвă-юрăсемпе калавсене çамрăксем кăмăлланă. Элĕкри çамрăксен ырă ĕçĕ ытти шкулсене те сарăлнă: Чурашри, Упири тата Хапăсри шкул ачисем те алăпа çырса литературă журналĕсем кăларма тытăннă.

1919 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче Васанкка комсомол ретне кĕнĕ. Çакăн хыççăн ăна, çамрăксем хушшинче ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине шута илсе, чăваш коммунисчĕсен Хусанта пухăнакан съездне кайма суйланă. Хусана çитсенех, чăваш çĕршывĕнчен пынă 16 çулхи ачана комсомолăн кĕпĕрне комитетне ĕçлеме илнĕ. Çав вăхăтрах вăл чăваш театрĕнче суфлер ĕçне туса пынă.

Çĕршывра революци тăшманĕсем шăл хăйранă вăхăтра, 1920 çулта, Хусанта комсомол чăваш секцийĕн пĕрремĕш съезчĕ пухăннă. Çакăнта вăл Çеçпĕл Мишшипе тата вырăссен паллă поэчĕпе А. Безыменскипе паллашнă. «Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхи çунтаракан çиçĕм» пулассине курма ĕмĕтленнĕ поэт съезда пынă ытти çамрăксем умĕнче хăйĕн сулăмлă сăввисене вуласа панă, чăваш чĕлхипе литературине хăвăртрах чечеклентерес тесе, çамрăк писательсене пĕтĕçтерессипи çинчен сăмах хускатнă. Çакă ĕнтĕ Элĕк тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Васанккана та чунтан хавхалантарнă.

Çеçпĕл Мишшипе тĕл пулни тата унăн çĕнĕ пурнăç тума йыхăракан сулăмлă сăввисене вулани Н. Васанккана çунатлантарнă. Октябрьте çĕнтернĕ паттăр халăхпа унăн ешерекен çамрăклăхĕ çинчен çĕнĕ сăвăсем кĕвĕлеме хаваслантарнă. Çав вăхăтри сăвăсенчен чи палли вăл — «Çамрăксене» ятлă сăвă. Вăл 1920 çул пуçламăшĕнче «Канаш» хаçатăн 10-мĕш номерĕнче пичетленнĕ. Поэт ку сăвăра çĕнĕ саманан çутă малашлăхĕ çинчен, çак ырлăха халăх хаяр та йывăр кĕрешӳре çĕнсе илни çинчен каласа кăтартать, çĕр çинче телейлĕ те çутă пурнăç пулассине чун-чĕререн ĕненме чĕнет.

Çав çулах унăн «Канаш» хаçатра «Паллă кун», «Съезда килтĕр — аса илĕр», «Тытăнăр-ха ĕçлеме», «Çамрăксен шухăшĕ», «Çамрăксем халь ĕçе тухăр» сăввисем пичетленсе тухаççĕ. Вĕсенче пуринче те поэт хăйĕн тантăшĕсене совет республики умне тухса тăнă хăрушă кунсем çинчен аса илтерет. Васанккан çав вăхăтри сăввисенче пуринче те тенĕ пекех «Ĕмĕт» сăмах паллă вырăн йышăнать. Ку ĕнтĕ çамрăк поэт çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте яланах малта пулма, ĕçре те, кĕрешӳре те ыттисене хавхалантарма ĕмĕтленнине пĕлтерет. «Тимĕрç лаççинче» сăвăра поэт хăй пекех хастар, хăй пекех çамрăк тимĕрçĕ çинчен каласа кăтартать.

Вăйпитти çамрăк,
    Хастар тимĕрçи,
Тĕллет те çапать —
    Вылять ун алли.
Тимĕре туптать,
    Вучĕ йăлт! тăвать,
Шĕвĕртет парать,
    Ĕçĕ час пулать.

Çĕршывра тĕрĕслĕх пур пĕр çĕнтерессине чунчĕререн ĕненсе тăнăскер, революцире халăх çĕнсе илнĕ çĕнĕ пурнăçа вăл ялкăшса тăракан вучахпа, çав пурнăçа юсаса ура çине тăратакан ĕçчен халăха хастар тимĕрçĕпе танлаштарать.

Калас пулать, çĕршывра революци çĕнтернĕ пулин те, халăх суранĕ хăвăрт тӳрленсе çитеймен-ха. Çамрăк совет республикине хĕвелтухăçĕнчен Колчак, анăçран Юденич, кăнтăртан Деникин юнаса тăни революци хыççăн тин кăна сывлăш çавăрма тытăннă халăха канăç паман. Çак хăрушă вăхăтра йывăрлăхсенчен шикленсе тăракан этемсем те тупăнма пултарнă. Васанкка çакна лайăх сиснĕ. Ун çинчен вăл «Çамрăксен шухăшĕ» сăвăра уçăмлăн каласа парать, тантăшĕсене хăюллăн кĕрешĕве тухма чĕнет.

Нумаях капла,
Пӳртре сыхăнса,
Кантăкран пăхса
Ман ларас-и-ха?

Ахалех, халех,
Çамрăк ĕмĕре
Ирттерсе ярса,
Ватăлас-и-ха?

Халăх умĕнчи
Чаплă ĕçсене
Кĕтсе çеç ларни
Вара аван-и?

Чĕрем сикнĕ чух,
Ĕçсем хĕрӳ чух
Вăрмана тарма
Намăс та мар-и?

Карчăкла килте
Çамрăк пуçпала
Кĕлленсе выртма
Ир пек мар-и-ха?

Пăшала-хĕçе
Таса алăпа
Килленсе тытма
Вăхăт мар-и-ха?

1920 çулта Н. Васанкка йывăр чирлесе ӳкет. Çавна пула унăн ирĕксĕрех яла таврăнмалла пулать. Анчах Хусанта пурăннă вăхăтра тăтăшах çамрăксем хушшинче пулма хăнăхнăскер, вăл лăпкăн пурăнма пултараймасть: ялти çамрăксене хăй тавра пĕтĕçтерет, вĕсемпе спектакльсем лартма, çĕнĕ улахсем йĕркелеме пуçлать, çамрăксен касĕсенче çĕнĕ сăввисене вуласа парать. Вăхăт нумай иртмест, поэт Вăрнарти педагогикă курсне вĕренме кĕрет. Кунта та вăл литературă ĕçне юратакан çамрăксен хăйне майлă штабĕ пек пулса тăрать, «Шуçăм» журнал кăларса тăма тытăнать. Вĕреннĕ вăхăтрах «Выçлăх çул» поэмă çырать, чылай сăвăсем пичетлесе кăларать. Çак сăвăсенче пуринче те, çĕнĕ çын çинчен каланă чухне, поэт ăна хăйĕн Тăван çĕршывне хӳтĕлеме хатĕр тăракан чăн-чăн патриот пек сăнласа кăтартать. Поэтăн чылай сăввисем Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» сăввине аса илтереççĕ. Çеçпĕл ун чухне, çĕр çинче тĕрĕслĕх çĕнтерессине пĕтĕм чун-чĕререн ĕненсе тăнăскер, йывăр пулсан та, çамрăксене кунçул уттипе тан пыма чĕннĕ:

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен.

«Тусăм, ан йĕр» сăвăра Н. Васанкка хăйсен ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрессине питех ĕненмен çамрăксене революци хыççăнхи йывăрлăхсем мĕнрен килни çинчен каласа ăнлантарать, хĕсĕк те ирсĕр пурнăçа «кĕрешӳре çунтарма» чĕнет. Çамрăксене вăл чăнласах çапла калать:

Эпир тăрăшни нихçан çухалмĕ,
Ĕçпе пăчăхни пурне çутатĕ.

Çеçпĕл Мишшин кивĕ пурнăçа хирĕç кĕрешме йыхăракан хăватлă сасси Н. Васанккан «Хĕрачасене» сăввинче те уççăн илтĕнет. «Чăваш арăмне» сăвăра Çеçпĕл, кивĕ пурнăçа ылханса, хĕрарăмсене «ирĕклĕ пурнăç тумашкăн» харăс тăма чĕнет. Васанкка сăвви вара çак чĕнÿ çумне хушса çырнă пекех илтĕнет:

Атьăр, васкăр, пĕрлешер,
Асталăха вĕренер,
Çамрăксемпе пĕр пулар,
Çаплах кая юлар мар!

Кăвар чĕреллĕ поэт Çеçпĕл Мишши, тăван чĕлхе хăçан та пулин кун курассине ĕненсе пурăннăскер, Васанкка сăввисене пысăка хурса хакланă. 1921 çулхи мартăн 22-мĕшĕнче Н. Васанкка патне Вăрнара янă çырура вăл çапла çырнă: «...кĕтмен çĕртен ху пата çыру çырнине, тен, эсĕ питех ырра хумăн. Çапах та Чăваш Чĕлхи ячĕпе çыратăп... «Канаша» пăххаласа тухрăм. Ырă сăвăсем, хастарлисем пит те сахал куртăм. Сан сăвăсенчен пуçне хастарлă сăвăсем çукпа пĕрех... Юлташăм Васанкка, ман санпа çывăхрах туслашас килет. Тиркев тумастăн пулсан, хут ярсах тăр...»

Кăвар пек хĕрÿ чĕринче тантăшлăх, тăванлăх тата юрату кăварĕ ачашшăн çулăмланнипе хавхаланнă поэтăн кăмăллă сăмахĕсене сывлăм кайăкĕ пулма ĕмĕтленнĕ Васанкка тăван çырулăха юратма чĕнекен йыхрав вырăнне йышăннă. Вăрнарти педагогикă курсĕнчен вĕренсе тухсанах, чăваш поэзийĕн пирвайхи шăпчăкĕсемпе çывăх пулас тата сăвă-юрă хайлама вĕсенчен вĕренес тесе, 1923 çулхи январь уйăхĕнче вăл Шупашкара куçать, «Канаш» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçлать. Н. Шелепи, Н, Шупуççынни, С. Эльгер, С. Лашман, Г. Алендей, Н. Золотов, Хумма Çеменĕ, Н. Патман, Иван Мучи, А. Золотов тата ытти паллă писательсемпе пĕрле чăваш литературин хăватне хăвăртрах çĕклес тесе пĕтĕм вăйран тăрăшать. Поэтăн çак тапхăрта çырнă «Иксĕлми вăй-хăват», «Çуллахи каç», «Сÿнми тумлам», «Сăвăç», «Тинех пире улталас çук», «Çĕнĕ çул синче», «Хĕллехи илем» тата ытти сăввисем тăван поэзире этеме тата унăн иксĕлми вăй-хăватне мухтаса юрлакан Çеçпĕл çеçкисем чечеке ларнине кăтартса параççĕ. Н. Васанккан лирикăллă геройĕ — тĕттĕм чăваш ялĕнче çуралса ÿснĕ каччă. Унăн ĕмĕчĕ—çĕршывшăн усăллă çын пуласси. Çамрăксене çĕнĕ пурнăç тума тата вĕренме чĕнекен поэт пекех вăл çутталла туртăнать. Октябрьте çĕнсе илнĕ телей хĕвелĕ çĕр çинче яланах ăшшăн ялкăшса тăтăр тесе, вăл кирек мĕнле йывăрлăха та чăтăмлăн тÿссе ирттерме хатĕр.

Ял çĕнелсе пыни çамрăксен куçне лайăхрах курăнтăр тесе, поэт çак тапхăрта хăйĕн чылай сăввисенче авалхи ялăн тертлĕ кун-çулĕ çинчен каласа кăтартать. Хăй те чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралса ÿснĕскер, пурнăç тутине вăл лайăх ăнланать ĕнтĕ. Авалхи чăваш ялĕн мĕскĕн сăн-сăпачĕ уншăн пĕтĕмпех паллă. Мĕншĕн тесен вăл унăн хуйхи-суйхине хăй тÿссе ирттернĕ. «Кантур таврашĕсем» чухăнсене хĕнени, куштансемпе кулаксем ял таврашĕнчи чи лайăх çĕрсене туртса илни, выçă куçлă пупсем çылăхпа хăратни, хĕрарăмсене çĕр паманни — çаксем пурте поэт куçĕ умĕнче пулса иртнĕ. Поэтăн ашшĕ-амăшĕ те, ялти ытти чухăнсем пекех, çăкăр-тăвар çитменнипе тертленсе пурăннă. Н. Васанкка тăван литературăра 15 çул хушши ĕçленине паллă тунă кунсенче, «Сунтал» журналăн 1934 çулхи 12-мĕш номерĕнче И. Тукташ кун пирки çапла çырса кăтартнăччĕ:

«Шурă шăналăкпа витĕнсе выртакан тарăн кĕрт-сем ăшне путса лапчăнса ларнă тĕксĕм хура пÿрт. Пĕчĕк чÿречисем унăн шур илнĕ путек куçĕ евĕрлĕн арантан-аран кăна шывланса лараççĕ. Ватăлса çитнĕ хапха, юр шăлса кайнă çара кил хушши...»

«Пÿрт пĕренисем хуп-хурах, сăрпа сăрланă пек. Мачча хăмисем çинче пĕр тĕрке хурама пушăчĕ выртать. Кăвакара пуçланă çÿçлĕ, хулăн куç харшиллĕ, туртăнса тăракан майлă, сарлакарах питкуçлă старик. Вăл пушăт тĕрки çумне хĕсĕнсе ларнă та, тĕтĕме пăхмасăрах, çăпата хуçать. Тĕпел кукринче — хутланарах кĕнĕ, вăтам çулсенчен иртнĕ хĕрарăм чашăк-тирĕксемпе тĕрмешет. Кăмака умĕнче — вĕтĕр-шакăрсем... Пĕри çăпата сапласа аппаланать, тепри çăпата кантри явать, пысăкраххи çуна çитти (ашăк) валли курăс чĕрет...»

Утмăл çул каялла, 1903 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче, тĕттĕм Ураскилтре кун çути курнă Васанккашăн та совет влаçĕ наукăсене вĕренме анлă çул уçса панă. 1924 çулта ăна, çирĕмрен тин çеç иртнĕ каччăна, Мускава — «Правда» хаçат ячĕпе хисепленнĕ журналистикă институтне вĕренме янă. Кунтă çамрăк поэтшăн пысăк телей пулнă. Кунта вăл, сăвă-юрă хăвачĕпе ахаль те хавхаланнăскер, вырăссен çав вăхăтри паллă поэчĕсемпе — В. Маяковскипе, А. Безыменскипе, А. Жаровпа, Д. Алтаузенпа, И. Уткинпа тĕл пулать, вĕсене чăваш поэчĕсен пирвайхи сăвви-юррисемпе паллаштарать. Çакă ăна çырас ăсталăха лайăхрах вĕренме, сăвăсене янăравлă та уçăмлă тума нумай пулăшать. Çакăнтах пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисен аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин вăхăтсăр вилнĕшĕн пĕтĕм халăхпа пĕрле хурланса, Н. Васанкка «Кăрлачăн 27-мĕшĕ» сăвă çырать. Этемлĕх валли çĕр çинче телей çулĕ уçса панă революци генийĕпе сыв пуллашнă кун поэт пирĕн парти унăн ялавне малашне те шанчăклăн тытса пырасси çинчен, аслă Ленин хушса хăварнисене халăх пĕтĕмпех пурнăçлама хатĕр пулни çинчен каласа парать.

Аслă Ленин çинчен çакăн хыççăн çырнă ытти сăвăсем поэт пултарулăхĕнче татах та сулмаклăрах янăраççĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă революци çинчен çырнă чухне вăл чи малтан Ленин сăнарне курать. Çу тĕлĕшпе унăн «Ĕçхалăх чĕри — Мускав», «Çил», «Çил-тăвăл» тата халĕ те хрестоматирен хрестоматие куçса пыракан «Октябрь çулĕ» сăввисем тăван поэзире халиччене паллă вырăн йышăнаççĕ. Тĕнчене ĕмĕрхи хĕн-хуртан ирĕке кăларнă Аслă Октябрь çинчен çырнă чухне поэт чи малтан В. И. Ленин ятне асра тытать. Совет халăхĕ тăвакан чаплă та паллă ĕçсем пĕтĕмпех унăн вилĕмсĕр ячĕпе çыхăнса тăраççĕ.

«Октябрь çулĕ» сăвăра поэт совет халăхĕ тÿссе ирттернĕ хăрушă кунсем çинчен чун-чĕререн хумханса каласа кăтартать:

Утсаттăмăр эпĕр,
Ыйтсаттăмăр çăкăр,
Ĕçе те илмеççĕ,
Чĕнсе те чĕнмеççĕ.

Çунать тыткăнри пек
Хыпчăкланнă кăкăр,
Анчах кармашсан та,
Ырлăхсем кĕмеççĕ.

Хăрушăччĕ, йывăрччĕ...
Кам чăттăр?
Чăтса çав, тÿссе çав, çавах!

В. И. Ленин никĕслене аслă парти ертсе пынипе, пирĕн халăх 1917 çулта хăйĕн ĕмĕрхи пусмăрçисене яланлăхах аркатса тăкрĕ, государствăна ертсе пырас ĕçе хăй аллине илчĕ. Çакăн çинчен çырнă сăвă йĕркисем аслати кĕрленĕ пек хăватлăн кĕрлесе илтĕнеççĕ, аслă Ленин халĕ те куç умĕнче тăнă пек туйăнать.

...пурнăçа
Ян-янратрĕ, вăратрĕ
Тулса тăвălланнă
Сулмаклă сăмах
— Ленин!
  Вучах чĕртсе патăн
Пире эс,
Вăй-хăват вĕрсе кĕртрĕн
Ĕç çын чĕрине.

Ăнлантăмăр, Ленин,
Каларăн чăнне:
Хĕç-пăшал тытмаллах, ĕнтмелле!
Тытăр, хĕç-пăшал, терĕн те,
Кĕрс! кĕрслетрĕ,
    Янрарĕ тĕнче,
Ирĕк пире куçрĕ,
    Çăкăр пирĕнте!

Аслă Октябрь çĕнтерне хыççăн та, пирĕн çĕршывăн тÿсмелли нумай пулчĕ. Хаяр кĕрешÿре халăх çĕнсе илнĕ ырлăха курайман тăшмансем татах тупăнчĕç. Анчах паттăр халăх вĕсене парăнмарĕ. В. И. Ленин ертсе пынипе вĕсене те тăван çĕр çинчен хăюллăн сирсе ывăтрĕ. Çамрăк пулнă пулин те, поэт çакна тĕрĕс ăнланнă:

Çапла туртса илнĕ
Ирĕк ĕç хĕвелĕ
Нихçан сÿнес çук,
Вăл пырĕ ĕмĕре.
. . . . . . . . . . .
Ялавĕ те, чап та
Пулас çут тĕнченĕн
Октябрь,
        Коммуна,
            Ленин!

Поэтăн сăвă-юрăпа çыхăннă малтанхи вунă çул хушшинчи пултарулăхне сăнласа кăтартакан сăвă кĕнекисем пурĕ виççĕ: «Хастарлăх» (1926), «Ирхи сывлăм» (1928), «Октябрь çулĕ» (1931). Пĕрремĕш кĕнекере поэт çамрăксене Октябрьти Социализмлă Аслă революцире çĕнтерне совет халăхĕ телейлĕ пурнăç туни çинчен, унăн çутă пуласлăхĕ татах та телейлĕ пуласси çинчен каласа кăтартать. Иккĕмĕш кĕнекере поэт чечекленсе ÿсекен Тăван çĕршыв илемĕпе савăнать. Çĕршывпа пĕрле çынсем те ÿсăллăрах пулас тесе вĕренме тăрăшаççĕ. Поэт вĕсен ĕçпе вĕренÿри хастарлăхне мухтаса юрлать. Виççĕмĕш кĕнекери сăвăсем çамрăксене Тăван çĕршыва юратма, унăн чиккисене чыслăн хÿтĕлеме, ăна пуян та хăватлă тăвас тесе пĕтĕм вăйран тăрăшма, авалхи пурнăçран юлнă кивĕ йĕркесене хирĕç хăюллăн кĕрешме чĕнеççĕ. Поэтăн лирикăллă геройĕ ку тапхăрта чылаях ÿссе çитет: вăл малтанхи пилĕк çуллăх стройкисенче ĕçлет, çĕнĕ заводсем лартать, колхозсем тăвать, кулаксене хирĕç кĕрешет. Унăн пурнăç йĕркисем те çĕнĕ: тĕшмĕшпе çылăх уншăн тек хăрушă мар. Пуянлăха та хапсăнмасть вăл.

Ĕлĕк тĕпел кукринчен тухма вăтаннă хĕрсем халĕ ĕнтĕ хĕрлĕ улаха çÿреççĕ, хĕрлĕ туй тăваççĕ. Хăйсене пуян каччă шырама хушакан амăшĕсене, пĕр шикленмесĕрех, хирĕçлеççĕ. «Кай, кай Ивана!» юрăри пĕр çамрăк хĕр, Хĕветĕр ятлă комсомолеца килĕштерекенскер, хăйне Иван ятлă пуяна качча тухма хĕтĕртекен амăшне тÿрех çапла калать:

Сарă кайăк ма пултăм?
Турат çине ма лартăм?
Анне мана, кайăк тесе,
Ивана сутасшăн.

Кай, кай!— темесен те,
Хам та кайма пĕлетĕп:
Мана савать, мана илет
Ялти комсомолец.

Шуçăм çутти килнĕ чух
Сар кайăксем юрлаççĕ;
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Акă çапла калаççĕ:

Комсомолец Хĕветĕр,
Чунăм савни Хĕветĕр,
Анне, çавнах каятăп та,
Чунăм çавнах юратать.

Поэт пур çĕрте те ĕçчен те хастар çамрăксемпе пĕрле. Вĕсенче вăл хăйĕн телейне çеç мар, пĕтĕм çĕршыв телейне курать. Çакăн çинчен поэт «Çурхи кунсем» сăвăра та лайăх каласа кăтартать:

Паха-çке çĕн ĕмĕр пурнăçĕ,
Çут ĕмĕтлĕ çамрăклăх,
Ытарма çук тантăшсем.
Ĕçре писнĕ ачисем —
Хамăр çĕршыв илемĕ.

Журналистикă институтĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, 1927 çулта, поэт Шупашкара таврăнать. Малтан вăл «Канаш» хаçатра, каярахпа «Сунтал» журналпа «Трактор» (хальхи «Тăван Атăл») альманах редакцийĕсенче ĕçлет, унтан Чăваш АССР кĕнеке издательствине куçать. Унтанпа нăл, юлашки вăтăр çул хушшинче, 500 ытла кĕнеке редакцилене. Чăваш литературине вăрçăччен пынă писательсен пирвайхи кĕнекисем пĕтĕмпе тенĕ пекех малтан ун алли витĕр тухнă.

Н. Васанккана поэзи хирĕнче тухăçлă тыр-пул çитĕнтерме пулăшнă чи паллă майсенчен пĕри вăл вырăс литератури пулнă. Сăвă-юрă хăвачĕпе килеме тытăннă хыççăнах вăл вырăс литературине юратса вĕреннĕ. Хамăр саманари чи паллă поэт В. Маяковский çырнисене чăвашла пуçласа куçараканни те Васанкка пулнă. Çавăн пекех вăл Д. Бедныйăн халăх юратса вулакан юррисене куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçлет. Вырăссен «Тăрна» ятлă кулăшла юррине, çăткăн пупсенчен тăрăхласа кулакан «Çеркей пуп» юрра чăваш çамрăкĕсем валли чи малтан Васанкка куçарнă. «Çамрăксен интернационалĕ» тата «Хĕрлĕ Çар» ятлă юрăсене те чăваш халăхĕ хушшине чи малтан Васанкка сарнă. А. Пушкинăн прозăлла произведенийĕсене чăвашла куçарса кăларас ĕçе те вăл пуçарса ячĕ.

Вырăс халăхĕн этем чун-хавалне çунат хушакан сăвви-юррисене чăвашла тăтăшах куçарни ăна тăван халăх валли çĕнĕ юрăсем çырма, чăваш халăхĕн авалхи юррисене çĕнĕ шухăш кĕртме май пачĕ. Унăн сăмахĕсем тăрăх чăваш композиторĕсем çырнă юрăсем халăхра нумай çул упранса пурăнаççĕ. Халăх вĕсене хăнара та, туйра та, вăйăра та, пĕтĕм халăх паллă тăвакан чаплă уявсенче те савăнса юрлать. Вĕсенчен чăваш халăхĕ «Октябрь çулĕ», «Килмен те курман Шупашкарне», «Колхоз ачисем», «Кай, кай Ивана» (В. Воробьев музыки), «Пи-

рён юрă янратăр ялан», «Ăмăртуллă çар», «Çурхи кунсем» (Г. Хирбю музыки), «Колхоз юрри» (Ф. Павлов музыки) тата ыттисене уйрăмах килĕштерсе юрлать.

В. Маяковскипе Д. Бедный пултарулăхĕ чăваш поэтне самана сиккипе пĕр тан пыма, халăх пурнăçĕнче чăрмав тăвакан тумхахсене сатирă çулăмĕпе çунтарма, халăх чун-хавалне шÿтлĕ юрăсемпе çĕклентерме нумай пулăшать. Халăх хушшинче тахçантанпах сăмах вĕççĕн çÿрекен сăвă-юрăсемпе анлăн усă курасси Н. Васанкка пултарулăхĕшĕн уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Вăл çырнă шÿтлĕ такмаксенчен чылайăшĕ халăх ăс-хакăлне яланлăхах кĕрсе юлчĕç. Çавсенчен чи паллисем çаксем: «Ăçта каятăн, шăрттан тус?» (1925), «Ванюк такмакĕсем», «Ай-хай, мăнтарăн ахтатурĕ», «Кучченеç» (1929), «Хăнкăрма» (1930), «Кахал Çимун юрри» (1933), «Пирĕн лаши хура тур» (1935), «Ачашларĕ ăш хĕвелĕ» (1941), «Атă-пушмак урара» (1952), «Колхоз такмакĕсем» (1953), «Уйăх çине хĕр пăхма» (1957).

Ачасем валли илемлĕ сăвă-юрăсем çырас тĕлĕшпе те Н. Васанкка сахал мар тăрăшрĕ. Юлашки çулсенче поэт кĕçĕн çулхи ачасем валли «Санюк сăввиюррисем» тата «Чакак хăнисем» ятлă тетте кĕнекесем çырса кăларчĕ.

Н. Васанкка — поэт-журналист. Хаçат-журнал ĕçне вăл мĕнле хутшăнни çинчен сăмах хускатас пулсан, тÿрех В. Маяковскипе А. Безыменский хаçат ĕçне хакласа каланă ăслă сăмахсем аса килеççĕ. Хăйсен сăввисене пĕчĕк тиражпа тухса тăракан альманахсемпе журналсене вырнаçтарма хăтланакан çамрăк поэтсене ăс панă май В. Маяковский: «Манăн трибуна — хаçат», тенĕ. Çав шухăшах А. Безыменский çапла каланă: «Хаçатран пăрăнма тăрăшакан поэт — пирĕншĕн ют çын. Хаçат валли ĕçлемен поэт — ÿссе çитмен этем... Хаçатра ĕçлекен писателе пулăшман критик — хăвăл çын е тăшман. Хаçатра ĕçленине тиркекен критик — сăтăрçă».

Çак сăмахсене вĕсем хăйсен пултарулăхне чи малтан хаçатра хастар ĕçленипе чечеклентернĕ писательсене хĕрÿллĕн хÿтĕлесе каланă. Хаçатпа яланах тачă çыхăнса ĕçленĕ М. Горький, Д. Бедный, Д. Фурманов, А. Фадеев, В. Вишневский, П. Павленко, М. Шолохов, Н. Погодин, А. Твардовский, Ф. Гладков, А. Сурков, Б. Горбатов тата ытти паллă писательсемпе поэтсем ку енĕпе ырă тĕслĕх пулмалла тесе шутланă.

Чăваш литературине илес пулсан вара, çак ятсемпе юнашар тăма тивĕçлĕ писательсенчен пĕри вăл — Никифор Васанкка. Хăйĕн сăвви-юррисене вăл ялан тенĕ пекех малтан хаçатра пичетленĕ. Çырасса та вĕсене малтан хаçатсенче хускатакан кирлĕ ыйтусене халăх хушшине хăвăртрах сарма пулăшас тесе çырнă.

Н. Васанккан хаçатра пичетленнĕ произведенийĕсем хушшинче уйрăмах фельетонсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Поэт вĕсенче халăха сĕмсĕррĕн ултаlama тăрăшакан пуп тавращĕсемпе бюрократсене, хăйсене мăнна хуракансене, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхекенсене, улталаçăсемпе йăпăлтисене, государствă пурлăхне çаратма юратакансене, çын аллипе кăвар туртакансене, çăмăлттайсемпе тÿрккес çынсене, тĕрлĕ тĕшмĕше тÿрре кăларма хăтланакансене тăрă шыв çине кăларать, халăх умĕнче çивĕччĕн питлет.

Н. Васанкка таланчĕ нумай енлĕ. Писательсен пултарулăхне тишкерсе çырнă статьясем те ун творчествинче хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Чăваш çыннисене А. М. Горький творчествипе паллаштарас тесе, вăл 1928 çулта аслă писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен икĕ статья çырнă: вĕсенчен пĕри «Канаш» хаçатăн 58-мĕш номерĕнче, тепри «Çамрăк хресчен» хаçатăн 14-мĕш номерĕнче тухнă. Пĕрремĕшĕнче автор пĕтĕм тĕнчипе чапа тухнă паллă писателĕн тÿрĕ кăмăллă этемлĕхе мухтаса юрлакан произведенийĕсем çинчен каласа кăтартать; иккĕмĕш статйинче Максим Горький çамрăксене вĕçĕмсĕр юратни тата вĕсене тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме чĕнни çинчен каласа парать.

Тăван литературăра Çеçпĕл Мишшипе Г. Тал-Мăрса тата Ф. Павлов ячĕсене тупас тата вулакансене вĕсен пултарулăхĕпе паллаштарас тĕлĕшпе те Н. Васанкка пархатарлă ĕç турĕ. Н. Васанкка — вĕсен пирвайхи редакторĕ. Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен вăл çырнисенчен çак статьясемпе аса илÿсем халиччен паллă вырăн йышăнаççĕ: «Çеçпĕл Мишши çинчен» («Çамрăк хресчен», 1926 ç.), «Çеçпĕл Мишши (Кузьмин) çинчен» («Сунтал», 1927 ç.), «Çеçпĕл Мишши çырнă сăвăсем» («Канаш», 1927 ç.), «Манмастпăрах вĕсене» («Çамрăк хресчен», 1927 ç.), «Çеçпĕл поэт 1921 çулта» («Чăваш коммуни», 1939 ç.), «Эпĕ поэтпа тĕл пулнисем» («Красная Чувашия», 1939 ç.).

Ф. Павлов пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясем те Н. Васанкка творчествинче паллă вырăн йышăнаççĕ.

Г. Тал-Мăрса ятне тăван литературăна чи малтан кĕртекенни те — Васанкка, «Тал-Мăрса (Г. В. Зайцев) çинчен» («Сунтал», 1927 ç.) тата «Актер-драматург» ятлă статьясем поэт, драматург, режиссер тата тăлмачă Г. Тал-Мăрса пултарулăхне тĕпчес ĕçре тăван литературăра чи хаклă документсенчен пĕрисем шутланаççĕ.

Паллах ĕнтĕ, Н. Васанкка çырнисем пурте яка, пурте илемлĕ, пурте чаплă теме çук. Тĕрĕсрех каласан вĕсем хушшинче ытлашши васкаса çырнисем те, пиçсе çитменнисем те, вулакансен кăмăлне тивĕçтерме хăват çитерейменнисем те пур. Çапах та, хĕрĕх çул ытла литературăра ĕçлесе поэт мĕн çырнине пĕтĕмпе пĕрле илес пулсан, чăваш литературинче вăл чăннипех ирхи сывлăм кайăкĕ пулчĕ. Унăн сăвви-юррисем çĕршывра совет влаçĕ вăй илсе тĕрекленнĕ тапхăрти пурнăça сăнласа кăтартаççĕ. Поэт совет çыннин вилĕмсĕр ĕçне мухтаса юрлать. Унăн паллă геройĕ — совет халăхĕ тата ăна коммунизм патне ертсе пыракан Коммунистсен партийĕ. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш совет поэзийĕн Çеçпĕл хыççăнхи аталанăвĕ çинчен калаçнă чухне Н. Васанкка ятне сиктерсе хăварма май çук. Вăл — Çеçпĕл тантăшĕ. Вăл — чăваш совет поэзийĕн никĕсне хурас енĕпе çанă тавăрса ĕçленĕ поэт.




**Николай НИКИТИН**

# Митрахван мучи патшаран тухни

*Калав*

Çăкалăхри Митрахван мучие эпĕ чылайранпа пĕлетĕп. Вăл тăрăхалла пырса çаврăнсан, ун патне кĕрсе тухмасăр чунăм чăтмасть. Пымассеренех вара унран мĕнле те пулин çĕнĕ хыпар-хăнар пĕлетĕп. Юлашки çулсенче тĕл пулма май килмерĕ те, кăçал ятарласах ун патне кайма шутларăм.

Хальхинче унăн килне ытла тăруках уйăрса илме май килмерĕ. Урамĕ ятне те, вырăнне те лайăх астăватăп хам. Ял варринчен аякра пирки сынсем вăл урама Камчаткă тесе ят панăччĕ. Вăт, çав «Камчаткăра» хам темиçе çул каярах асăрханă кукăр йăмра патне çитрĕм те — куратăп: йĕркипех çĕнĕ çуртсем. Уйăрса ил ĕнтĕ унта ху ĕлĕкрех пĕлнĕ çурт вырăнне!

Урамра вăрçăлла вылякан ачасене чарсах мучи çинчен хам ăна ĕлĕкрех мĕнле пĕлнĕ пеккĕн каласа ыйтрăм.

— Патша ăçтарахра пурăнатчĕха çав?

Ачасем пĕр-пĕрин çине чăр-чар пăхкаласа илчĕç. Пĕр хушă никăшĕ те çăвар уçмарĕ.

— Пакша? — тĕлĕнсе ыйтрĕ аслăраххи.— Пирĕн ялта пакша çук. Çăкалăх вăрманĕнче пур, тенине илтнĕччĕ...

— Пакша мар! Митрахван патша,— тетĕп хайхине.— Патшин мучи эппин.

Ачасем каллех шăпланчĕç. Тĕлĕнсех каймалла. Митрахван патша тесен, Çăкалăхра çеç мар, пĕтĕм тавралăхра пĕлетчĕç вĕт-ха ăна. Халĕ... хăйсен урамĕнчи ачасем те пĕлмеççĕ. Тен, вăл, харсăр чĕреллĕскер, ватлăхра ăçта та пулса кусса кайнă?

— Э-э, эсир Митрахван Митрахванча ыйтатăр пулĕ-çке!— терĕ çав вăхăтра урампа иртсе пыракан пĕр хĕрарăм, пирĕн калаçăва хăлхана чиксе.— Ара, эсир шăпах ун килĕ умĕнче тăратăр-иç! Ак çак, кăвак-симĕспе сăрлани, шăпах ун пӳрчĕ пулать ĕнтĕ. Тӳрех, крыльцаранах кĕрĕр...

...Пăхма питĕ лăпкă та сăпай сын вăл, Митрахван мучи. Сăнпитрен улшăнма пĕлмест. Шур пурçăн сухалĕ чакман, ӳсмен. Çамки çинче те карт хушăнман. Вăл эп кĕрес умĕн кăна мунчаран тухнă пулас. Пичĕ самаях хĕрелнĕ. Çӳçĕ те типсех çитеймен. Йăрăмлă-йăрăмлă вăрăм халат тăхăннăскер, мучи чей ĕçме хатĕрленет.

Ытти чухнехи пекех мана вăл питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕ. Анчах та эпĕ пĕр сăмах ытлашши персе яни пирĕн калаçăва кăштах йывăрлатрĕ. Эпĕ унпа виçĕм-тăватăм çул курнăçнă чухнехи пекех калаçма пуçланăччĕ:

— Патшин юлташа курмани питĕ нумай пулать! Сывлăхăрсем мĕнлерех, хаклă Митрофан Митрофанович?

Чăр-р! пăхрĕ вăл ман çине хăйĕн çивĕч куçĕсемпе.

— Мĕнле Патшин? Мĕн çӳпĕлтетĕн? — ыйтрĕ вăл.— Эх, эсĕ те çав! Хăвна ман юлташ вырăнне хуратăн тата...

Ак тамаша! Тĕлĕкре тейĕн. Урамри пекех пӳртре те пăтăрмах сиксе тухрĕ ман валли. Патшинахчĕ-çке вăл! Пĕтĕм ватти-вĕтти Митрахван патша тесе чĕнетчĕ. Эп ун килнех лекрĕм пулĕ-çке? Иккĕленнĕ май мана унăн малтан пурăннă пĕчĕкрех те кивелме тытăннă пӳрчĕ аса килчĕ. Тасаччĕ вăл. Малти стена çинче Васнецов художник ӳкернĕ «Виçĕ паттăр» картинăн репродукцийĕ çакăнса тăратчĕ. Çав паттăрсемпе юнашар, урам енчи чӳрече патĕнче, çамрăк Митрахван патшан сăнĕ пурччĕ.

Мучин хальхи çуртне пăхса çаврăнтăм. Кунта вара вăл ӳкерчĕксем пачах та курăнмаççĕ. Юмахри паттăрсене çамрăк та чăн-чăн паттăрсемпе ылмаштарнă: стена çинчен Юрий Гагаринпа Герман Титов тата Андриян Николаевпа Павел Попович питĕ кăмăллăн пăхса кулса лараççĕ. Çамрăк Митрахван патша ларас вырăнта — кĕмĕл сухаллă хальхи Митрахван мучи. Иртнĕ хутра курнă хатĕр-

хĕтĕрсенчен пĕрне кăна асăрхаса илтĕм: алăк енчи стена ҫинче кĕмĕл аваралă хĕҫ ҫакăнса тăрать. Ăна Митрахван мучие Василий Иванович Чапаев хăй парнеленĕ, тет.

Ҫапах та, темле пулсан та, эпĕ Митрахван мучи умĕнчех пулас. Акă, тепĕр пӳлĕмрен Ҫинук кинемей тухать. Мана алă тытнă хыҫҫăн вăл тӳрех чей ĕҫме ларма сĕнчĕ. Ҫитменне тата, ман хута кĕрсе, хайхи тарăхнă мучие те «алла илме тытăнчĕ».

— Э-эх, ҫак пирĕн ваттин чĕлхи ытла та юплĕ-ҫке!— юнанă пек пулчĕ вăл хăйĕн мăшăрне.— Эсĕ, юлташ, ăна тупмалли юмахсем шутласа лармалли пĕр-пĕр ĕҫ тупса парсамччĕ...

— Ĕҫлеме пăрахни нумай пулать-и тата? Апла вăл ĕҫсĕр тунсăхлать пулĕ,— сăмах тĕртрĕм эпĕ.

— Ĕҫлес енчен хурламалли ҫук-ха. Пенси сĕнсе пăхкаласҫĕ те — тӳрех отказ парать. Халĕ кăна пахчаран ҫитрĕ-ха, колхоза сад ӳстерсе парать мар-и! Хĕлĕн-ҫăвăнах садран тухма пĕлмест. Ун пирки каламастăп-ха эпĕ. Ара, ҫынсемпе йĕркеллĕ калаҫма пĕлни ҫук унăн! Мĕнле те пулса шутласа пуҫа ҫĕмĕрмелли сăмахсем тупса кăларать. Калас ăна тӳррĕнрех. Ара, сире вăл хăй патшаран тухни ҫинчен пĕлменшĕн сăмах тĕртет. Ҫав сăлтавпа мăн кăмăлланма пăхать. Эх, стариккупа!..

Тĕп-тĕрĕссипе каласан, Митрахван мучин хăйне тархаслаттарас йăла ҫук. Халĕ те, Ҫинук кинемей калаҫнă хушăрах, мучин куҫĕсем кулнă чухнехи пекех ҫуталма пуҫларĕҫ.

— Так точнă, амăшĕ, патшаран тухнипе мухтанма та юрать,— тесе тӳрленерех тăчĕ те, мана тепĕр хут алă тытрĕ.— Халĕ ĕнтĕ, тусăм, сан умăнта таккуй-ҫаккуй Митрахван патша мар, Митрофан Митрофанович Космический, гварди рядовой колхозник тăрать,—терĕ вăл куларах. Унтан Ҫинук кинемей ҫине тата ăшшăнрах пăхса илчĕ.— Ку вара, епле калас, текех патша майри мар, Зинаида Ивановна Космическая юлташ пулать. Патша таврашĕнчен тасалмаллипех тасалтăмăр...

Ҫинук кинемей хăй те кăмăллăн кулса хушса хучĕ:

— Ҫаплах, ара, саккунлах улăштартăмăр хамăр хушаматăмăра. Кайрăмăр та ĕҫтăвкома, хамăрăн малтанхи Патшин хушамата улăштарма ыйтса евитлерĕмĕр. Ара, хăвăрах шутласа пăхăр-ха. Хăйне, ашшĕне эппин, шатах аслă ĕҫсем шанса параҫҫĕ, темле-темле камиссисене те суйлаҫҫĕ. Пысăк пухусенче кам сĕтел хушшинче шурă сухалне каҫăртса ларать? Митрахван патша! Пит пĕҫермех пуҫларĕ вĕт. Ҫапла, пĕррехинче, иксĕмĕр килте ҫак ыйтăва тĕпрен каллĕ-маллĕ шутласа сӳтсе явăмăр та: «Пире валли тĕнчере ырă та ҫĕнĕ хушамат ҫук-им?» — терĕмĕр. Вара Патшинсенчен Космическисем пулса тăтăмăр.

Эпĕ тинех хамăн паянхи йăнăшсене ăнланса илме пуҫларăм. Ҫав вăхăтрах манăн ҫак мучи ҫинчен тата ытларах пĕлес килчĕ.

— Митрофан Митрофанович Космический юлташ, эсĕ патшаран мĕнле тухнине лайăхах ăнлантăм. Анчах та мĕнле майпа патша пулнине ку таранччен те пĕлместĕп,— терĕм.

— Чăн та хам патшара ларнă вăхăтсене паян аса илсен сылăх пулас ҫук,— ассăн сывласа илсе пуҫларĕ мучи хăйĕн пурнăҫĕ ҫинчен каласа пама.— Пĕлессӳ килеттĕк, эпĕ ун чухне Балтикă матросĕ



пулнă. Малтанах асăрхаттаратăп: эпĕ патша пуласси хамăн ҫамрăк чухнехи пĕр йăнăшран килсе тухрĕ...

— Ара, ытла та вĕҫкĕн пулнă мар-и ҫак! Атту пулсан эпĕ те патша майри ятне илсе намăс курас ҫукчĕ,— хушса хучĕ арăмĕ.

— Эсĕ, амăшĕ, мана труках пӳлсе лартма ан васка-ха. Вĕҫкĕн пулсан, ма вара чĕрнӳ ҫине ĕне пуссассăнах мана ĕмĕрлĕхе юратса пăрахрăн, э? Ма вун саккăртах мана, именнĕ мана, килсĕр-мĕнсĕр йĕкĕте тухма соклаҫ патăн? Ма ку тарана ҫитсе те пĕр сивĕ сăмах каламарăн? Тоттă! Вĕҫкĕн пулман эпĕ, правур тесен, татах ҫак, пыра та парĕ. Вăт, Зимний двореца илнĕ чухне те эпĕ инкек-синкек пулаҫран хăраса ҫынсем хыҫĕнче чĕтресе пыман. Ҫын ун пек чухне ҫав тери хĕрсе каять эппин. Вăт, амăшĕ, сан ҫавăн пек ҫĕрте пулса курасчĕ! Шăп та шай ҫавăн чухне манăн сулахай аллăпа сылтăм урана юнкерсем персе амантрĕҫ вĕтха. Ку ҫеҫ те мар. Зимнин пĕр капмар пӳлĕмне илнĕ чухне манăн ҫамкана тем хăямачĕ пырса шаплатрĕ те чутах персе анаттăм. Юрать, ҫав вăхăтра Замков хушаматлă вырăспа хамăр Етĕрне Петĕрĕ мана васкасах таҫта, темĕнле пысăк креслă ҫине илсе ҫитерсе лартрĕҫ. Ыттине вара тем тусан та астумастăп. Темиҫе кунтан пĕр шап-шурă пӳлĕмри койкă ҫинче тăна кĕтĕм... Госпитальре иккен. Унтан кăштах хаманланатăп. Хамăн ҫав тери революцие тухас килет. Ырă ҫынсем ырă влаҫшăн ҫапăҫҫĕ. Эсĕ пур—революци хыпарĕсене те пĕлместĕн. Чун вĕчĕрхенет. Пĕррехинче, ҫапла, сасартăк ман пуҫ умĕнче темĕнле хыттăн калаҫни илтĕнсе кайрĕ:

— Балтиец Митрофанов Митрофан Митрофанович-и ку?— теҫҫĕ.

Куҫсене уҫкаласа пăх та — ман койкă умĕнче хайхи Зимнинче хампа пĕрле ҫапăҫнă Замковпа Етĕрне Петĕрĕ тăра параҫҫĕ. Вĕсем мана, бинт-марльăсемпе урлăпирлĕ муталаса пĕтернĕскере, ытти аманнă ҫынсенчен уйăрса илеймен иккен. Сас патăм та — ҫаксем мана ыталама, мĕн тума! Кучченеҫсем сĕнеҫҫĕ. Унчченте пулмарĕ, ҫĕнĕ хыпарсем пĕлтерме пуҫларĕҫ.

«Микула патша текех ҫук»,— теҫҫĕ.

Тупнă мана мĕнпе тĕлĕнтермелли! Эпĕ ăна тахҫанах пĕлетĕп вĕт-ха. Ытти хыпарсене хăвăртрах каласа пама ыйтатăп.

Вĕсем, манран тăрăхланă пекех, каллех патша ҫине куҫаҫҫĕ.

«Микула патша вырăнĕнче халĕ урăх патша, анчах та Романовсен йăхĕнчен мар»,— тесе хучĕ Етĕрне Петĕрĕ.— Акă, кур ҫĕнĕ патша патретне!»

Ку сăмахсене илтсен, манăн чĕрене пульă пырса кĕчĕ темелле. Патша! Вăт мĕнле «ырă» хыпар пĕлтерме кĕнĕ вĕсем аманнă ҫын патне! Неушлĕ Замковпа Петĕр манпа пĕр шухăшлă ҫынсем пулман? Эпĕ ыратнине-мĕнне пăхмасăрах ҫаксене ҫурăм тăрăх «висме» костыль шырама пуҫларăм. Вĕсем эпĕ пăлханса кайнине асăрханă иккен. Замков хайхи патрета ман куҫсем умнех пырса тытрĕ те ахăлтатса кулса ячĕ:

«Мĕнле, Митрофан, ҫакнашкал маттур патшапа килĕшмелле пек-и?»

Пăхас мар тенĕ ҫĕртенех манăн куҫсем патрет ҫине тирĕнчĕҫ. Лайăххах пăх та—патша тронĕ ҫинче матрос ларать! Сулахай аллине шарăхпа ҫыхса ҫакнă, сылтăмминче — винтовкă. Хул пуҫҫи урлă — патрон лентти ҫыхнă...

«Тăвансем! Ара, эпĕ вĕт ку!— хам та асăрхамарăм, пĕтĕм госпитале илтĕнмелле кăшкăрса ятăм, патрета алла ҫавăрса илсе.—Кам, ăҫта кун пек ўкерме пултарнă мана?»

«Эсех ҫав, эсех, Митрахван патша,— ҫĕлĕкĕсене хывса мана пуҫ тайнă пек тăваҫҫĕ Замковпа Етĕрне Петĕрĕ.— Ăҫта ўкернĕ пултăр сана? Паллах, хăв юлашки хут ларнă пўлĕмре. Ĕҫ вăхăтĕнче...»

Кусен сăмахĕсене тинех ăнланса илтĕм. Аманнă хыҫҫăн мана патша тронĕ ҫине пырса лартнă та, ҫав вăхăтра тахăшĕ ўкерсе илме ĕлкĕрнĕ иккен.

— Митрофан Митрофанович, эсĕ кунта йăнăш тунинех курмастăп,— сăмах хушрăм эпĕ, вăл каласма чарăнсан.

— Э-э, вăл каярахпа пулчĕ ҫав. Пĕлессў килет-тĕк, эпĕ ҫав патрета тытрăм та киле, ҫак Ҫинук мăшăрăм патне ярса патăм. Ну, ҫамрăк хĕрарăмăн упăшкипе мухтанас килмест-и ара! Хам эпĕ тепĕр пилĕк ҫулсăр та киле таврăнаймарăм. Госпитальрен сывалса тухсан, граждан вăрҫине кайма тиврĕ-ҫке... Яла таврăнатăп та хайхискер—пĕтĕм халăх: «Митрахван патша килнĕ!» тесе кĕрлет. Ҫитменнине тата, эп патша вырăнĕнче ларнă хыпар сарăлсан, кунта манăн Митрофанов хушамата урăхлатса Патшин тесе ҫырма тытăннă.

Вăт ҫавăн хыҫҫăн хĕрĕх ҫула яхăн ҫакса ҫўреме тиврĕ ҫав усал хушамата. Халĕ, официальнă улăштарнă хыҫҫăн, ял ҫыннисем ăна манса кайрĕҫ курăнать. Тĕн, пурте манман пулĕ те, ҫапах та кивĕ хушаматпа чĕнме хăякан ҫук. Халĕ вĕсем тĕл пулаҫҫĕ те: «Митрофан Митрофанович Космические космосла салам!» — тесе пуҫ таяҫҫĕ. Ҫамрăксем «комсомолла», кĕҫĕнреххисем «пионерла» салам калаҫҫĕ. Паллах, ку маншăн чăн та чĕре патне пыракан салам,— юлашкинчен аллисемпе кăкăрĕнчен тытсах каларĕ Митрофан Митрофанович Космический, ĕлĕкрех Митрахван патша пулнăскер.

— Э-э, ашшĕ, сана ҫеҫ килĕшетим ку хушамат?! Ара, ăна эпир пĕрле шыраса тупрăмăр-иҫ!— хушса хучĕ сĕтел ҫинчи шăрттана ваклакан Зинаида Ивановна Космическая юлташ.— Ну, ларăр сĕтел хушшине, ҫĕнĕ хушамат туяннă ятпа хăналанар пăртак...

# ЁМĔТ, ЭС КУН-ÇУЛ ИЛЕМĔ...

Кĕвви Григорий ХИРБЮН.

Сăвви Юрий ПЕТРОВĂН.




1. Пирĕн ёмĕт-шухăш,
Пул эс вĕççĕр шухă,—
Шĕл кăвар çунтар чĕремĕрте.

**Хушса юрламалли:**

Чун çуначĕ, чун хĕлхемĕ,
Ёмĕт, эс кун-çул илемĕ,
Çĕн телейшĕн,
Çут тивлетшĕн
Ялкăш ĕмĕрех.

**Хушса юрламалли.**

2. Ĕçлеме хĕрӳлĕх,
Кĕрешме хăюлăх,
Çĕнтерме сӳнми вăй-хал чĕртен.

**Хушса юрламалли.**

3. Савăнăç, салхулăх
Е инкек тĕл пулĕ,—
Пурпĕр эс чĕнетĕн малаллах.

**Хушса юрламалли.**

4. Тăрăшар хастаррăн,—
Ёмĕт пархатарĕ
Хамăртан килет, туссем, ялан.

**Хушса юрламалли.**

Хакĕ 30 пус.